

Василий Гаврилович Кошкин (Кервен)
1949 çулхи нарăс уйăхĕн 18-мĕшĕнче
Патăрьел районĕнчи Упамса ялĕнче çуралнă.
Турханти вăтам шкултан вĕренсе тухнă,
монтажникра ĕçленĕ,
Совет Çарĕнче пулнă, Чăваш патшалăх
университетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ.
В.Г. Кервен тĕрлĕ çулта «Пионер сасси» хаçатра,
«Хатĕр пул», «Тăван Атăл» журналсенче,
Чăваш писателĕсен союзĕнче ĕçленĕ.
Вăл вун пилĕк çул ытла Шупашкарти кооптераци
институчĕн доценчĕ пулнă.
В. Кервен — Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ
культура ĕçченĕ, Трубина Мархви ячĕллĕ
преми лауреачĕ, поэт, прозаик,
критик, куçаруçă, журналист. Литературăри
çитĕнӳсемшĕн ăна РСФСР Писательсен союзĕн
Хисеп грамотипе чысланă.
Вăл 1987 çултанпа СССР (халĕ РФ)
Писательсен союзĕн членĕ.



Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2758-3
9 785767 027583

Василий КЕРВЕН

Аслати чечекĕ

Василий КЕРВЕН

# Аслати чечекĕ



Василий КЕРВЕН

# Аслати чечекĕ

Повеçсем,
калавсемпе тĕрленчĕксем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2018

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2=635.1)6-44
К 36

**Василий Кервен**

К 36 Аслати чечекĕ: повеçсем, калавсемпе тĕрленчĕксем / В.Г. Кервен. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2018. — 255 с.

ISBN 978-5-7670-2758-3

Кĕнекене Василий Кервенĕн повеçĕсем тата калавĕсемпе тĕрленчĕкĕсем кĕнĕ. Вĕсенче автор тĕрлĕ ыйту хускатать. Акă «Йăмăкĕ» повеçри Андрей Анастасов чипер сăн-сăпачĕпе, çепĕç чĕлхипе хĕрсен пуçне çăмăллăнах çавăрма пултарать. Кайран, чĕринче чăн-чăн юрату хыпса илсен, çакă ăна пысăк чăрмав кӳрет. «Чĕрне вĕççĕн» калаври Генриетта Раевскаяна вара чысĕнчен ытларах чап илĕртме пуçлать. Вăл тивĕççĕр меслетпе вăрттăн усă курма хăтланать.

Çаран çинчи ĕлккен çеçкеллĕ фиалкăна хăш-пĕр çĕрте аслати чечекĕ теççĕ. Вăл аça-çиçĕмлĕ çумăр хыççăн çеç тухать имĕш... Ку ĕненӳ мĕнпе çыхăннине «Аслати чечекĕ» халап ăнлантарса парать.

Тĕрленчĕксем прозăлла сăвăсем евĕр ытарлă. Çутçанталăка çыравçă илемлĕ те чĕрĕ сăнарлать.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84(2=635.1)6-44**

**ISBN 978-5-7670-2758-3**

© Кервен В.Г., 2018
© Алексеев А.И., ӳкерчĕксем, 2018
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2018

## Повеçсем



# ЙĂМĂКĔ

Хама та эпĕ упрайман
Йăл кулăллă чипер кунсемшĕн.
Сахал çӳрейрĕм те аван —
Нумай эп йăнăшрăм-çке темшĕн.

*Сергей Есенин*

Камшăн мĕнле те — шыв сыпнă пек шăппăн ларасси Çеменшĕн хырăм выççипе пĕрех. Акă эпир шавламанни ăна паян йăлăхтарсах çитерчĕ иккен. Малтан аптранă енне кĕпин татăлнă тӳмине лартма хăтланса пăхрĕ, анчах йĕп тупайманнипе шухăшĕ пăчланчĕ, унтан аллине хаçат ярса тытрĕ — ăна та тарăхнăн сĕтел çине печĕ.

— Эсир Вадима астăватăр-и? Авă пĕррехинче пирĕн ялти Людăн çуралнă кунĕнче анекдотсемпе

савӑнтарчӗ. Хӑш-пӗрне эпӗ ҫырса та хунӑччӗ. — Ҫемен тумбочкинчен тетрадь илчӗ те вуласа пама тытӑнчӗ. — Акӑ пӗри: *«Мӗн эсӗ питӗ кӑмӑллӑ?» — «Хуняма февралӗн 23-мӗшӗ ячӗпе спиннинг парнелерӗ». — «Вӑл сана кураймасть-ҫке». — «Пулӑ спиннингпа тытма юратмастӑп! Тур ҫӑлтӑр кам та пулин спиннинг парнелесрен тесе лӑркаса ҫӳресе хӑлхине ҫӗртрӗм-ҫке».* Тепри тата: *«Кукамай, эсӗ хӑвах килтӗн-и?» — ыйтать мӑнукӗ. — «Хамах, мӑнукӑм, хамах», — савӑнать ватти. — «Атте вара сана шуйттан илсе килчӗ тет».*

Эпир ӑна тӑнласах кайманнине сисрӗ Ҫемен.

— Теприне те вуласа парам-ха, — терӗ ҫапах та. — *Стюардесса хыттӑн ҫапла пӗлтерет: «Самолета ытларах тиеннӗ. Ҫавӑнпа пӗр-пӗр пассажирӑн сикме тивет. Унсӑрӑн пурте пӗтетпӗр!» — «Кирлӗ мар чухне хуняма пӗрмай явӑнса ҫӳрет. Кирлӗ чухне акӑ ҫук», — мӑкӑртатать пӗр пассажир.*

Пирӗншӗн кулӑшлиех тупӑнмарӗ. Ҫемен хӑй ҫеҫ хихиклетсе илчӗ. Вара вӑл тӑрса унталла-кунталла утса ҫаврӑнчӗ. Темӗн тивӗҫтерейменӗ ӑна.

— Эх, ахӑртӑмӑр-ҫке ун чухне. Мантӑр-им? — пире хавхалантарма хӑтланчӗ халапҫӑ. — Люда чӑтса тӑраймарӗ: «Рита, хаклӑ тусӑм, сана епле ӑнать. Юмах ҫапса ҫеҫ пурӑнатӑр ӗнтӗ», — тесе пырса ыталарӗ-ҫке чи ҫывӑх юлташне. «Вӑл хуняма ҫинчен кулӑшсем калама юратать. Эпӗ вара ӑна аннене юратма вӗрентетӗпех», — чӑмӑрккине кӑтартнӑччӗ Рита.

Мана сасартӑк ҫултӑлӑк каяллахи пӗр самант аса килчӗ. Эпӗ ку общежитие вырнаҫни уйӑх ҫеҫ ҫитнӗччӗ-ха. Ӗҫрен каярах юлса таврӑнма тиврӗ ун чухне. Гобелен тӗртекен пӗр станок чарӑнса

лара-лара тинкене кăларчĕ кунĕпе. Эпĕ, мастерăн пулăшаканĕнче тин çеç ĕçлеме пуçăннăскер, кăлтăкне ниçтан тупаймастăп. Ткачиха ман çине пĕрмай кăмăлсăррăн пăха-пăха илет. «Хам арçын мар — самантрах юсаса хурăттăм», — тесе калассăн туйăнать. Кунта чылай кĕрмешнĕ ĕçтешĕм пырса пăхсан сăлтавĕ часах тупăнчĕ. Хăшпĕр ăса çийĕннĕ те ыттисенчен çăмăлтарах иккен. Ĕçрен юлсах вĕсене мастерскойĕнче шайлаштарма тиврĕ. Самаях ĕшентĕм. Эпĕ таврăннă тĕле пӳлĕмрисем пурте çăвăнса тумланма ĕлкĕрнĕччĕ. Сĕтел хушшинче пĕр хĕр ларатчĕ. Сывлăх сунтăм ăна.

— Сирĕн пата хитре каччă вырнаçнă-çке, — тӳрех сăмах пуçларĕ чиперкке. — Тутине темскер тăснă пек-ха хăй.

Пĕлместĕп, хальхи хĕрсем ялтах çавăн пек хăюллă-ши е хулана килсен хăвăрт улшăнаççĕ? Эпĕ хам, такмакри пек каласан, каччă пулса çитсе те хĕр çавăрма пĕлмен те.

— Паллаштарам-ха сире, — хыпăнса ӳкрĕ Çемен. — Ку — кӳршĕ хĕрĕ Люда.

— Питĕ аван. Эпĕ Сергей ятлă, — куçран хăюллăн тинкерме тăрăшрăм хăнана.

— Сиренин. Хушамачĕ мĕне тăрать, — куç хĕсрĕ Çемен.

— Крысова мар ĕнтĕ. Хушамата пулах каччăсене адрес пама та хăратăп. Хĕр чухнехи хушамат хĕрĕхре те улшăнмасть пуль тесе пăшăрхансах пурăнма тивĕ ĕнтĕ, — чăнах та куляннă пек хаш-ш сывларĕ Люда.

Чухлатăп-ха, ăшĕнче вăл çапла шухăшламасть. Унсăрăн çавнашкал вылянчăклă пуплемен пулĕччĕ.

— Люда пире çуралнă кунне паллă тума чĕнет, — юлташĕсене ырă кӳме пултарнăшăн савăннăн пĕлтерчĕ мана Çемен.

— Кайса килĕр, — терĕм эпĕ.

— Эсир те ан юлăр ĕнтĕ, — ячĕшĕн çеç мар чĕнчĕ Люда. — Хĕрсем нумай, каччăсем çитмеççĕ.

Килĕшме тиврĕ вара.

Çакна эпĕ аса илсе ĕлкĕрме пултарнă вăхăтра та пиртен нихăшĕ ун енне çаврăнса пăхманни Çемене тарăхтарчĕ курăнать: «Вăл çав тери кăсăк япала çинчен каласа парасшăн — ыттисем итлеççĕ».

— Астăватăр-и, вăл сарă çӳçлĕ хĕрпе пĕрмай ташларĕ. Çапла-и? — сассине хăпартрĕ Çемен.

— Кам? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ те чăматанĕнче тем шырама пуçларĕ Юра.

— Вадим ĕнтĕ, ара, — анекдотсемпе култараканни.

— Вара мĕн? — ун калаçăвне ниме хуманçи пулса ăна чĕрре кĕртме тăрăшрăм. Хыпса илнĕ çулăма вăштăр çил пулăшнăнах туйăнчĕ çакă.

— Ан васка, васкакан вакка сикнĕ, арăмĕнчен савăнман, — пӳлчĕ вăл мана. — Çав сарă çӳçлĕ хĕр, Рита, Вадимпа ташлаканни, Людăн чи çывăх юлташĕ пулнă. Çавăн чухне çуралнă кунне паллă тăваканĕ çапла каланăччĕ-çке: «Ритăпа Вадим икĕ çула яхăн туслă. Вĕсем тепĕр уйăхран çырăнма та килĕшсе татăлнă», — тенĕччĕ. Анчах ĕнер мĕн куртăм-ха театрта! Людăпа Вадим çыпçăнса ларнă тейĕн, çавтăнса çӳреççĕ — хам куçа хам ĕненмерĕм вĕт, амикке. Чăтаймарăм пырса калаçмасăр. Вĕсем, хăяматсем, мăшăрланнă иккен. Тĕлĕннипе шалт хытса кайрăм çав. Люда, çакна асăрханăскер: «Мĕн тăвăн, шăпа», — тесе

хучӗ шăппăн. Вăт пыр та калаç, юлташ юлташа мӗн туса хурать!

Çак калаçăва тăнламан пекех вуласа ларакан Андрей кӗнекине хупрӗ те сӗтел çине хучӗ.

— Эх, тупнă тӗлӗнмелли. Çӗнӗ япала-им ку? Сахал-и пӗр-пӗр йӗкӗт салтака каякан юлташӗн савнине упрама йышăнса лешӗ таврăниччен качча илсе яни? Манпа та пӗр мыскара пулса иртнӗччӗ. Тен, пачах та мыскара мар — инкек. Эпӗ виçӗ пӗртăванпа... мӗнле каламалла... хăвăр шутласа пăхăр кайран...

Андрей пӗр самантлăха шăпăрт пулчӗ, сăмахне епле пуçласа ярасси пирки тытăнса тăчӗ ӗнтӗ.

— Нинăпа ăнсăртран паллашнăччӗ. Çав вăхăтра унăн качча кайса уйрăлнă аппăшӗпе чипер йăмăкӗ пулнине те пӗлмен-ха эпӗ. Палановăсемччӗ вӗсем. Аслин çеç çав вăхăтра улшăннă пуль хушамачӗ.

Андрей графин илчӗ те шыв ăсма кухньăна тухрӗ. Эпир тӳрех тавçăртăмăр: калаçу вăраха тăсăлмалла.

Çав хушăра çапла шухăшласа илтӗм: «Аван пӳлӗме çакланнă эпӗ». Пӗрле пурăнакансем авă кашни хăйне евӗрлӗ. Çемен яланах юптарма тăрăшать. Кăмăлӗ те уçă. Çурма артист теме пулать ăна. Шкул театрӗн сцени çине те пӗрре мар тухса курнă иккен. Пысăк рольсемех шанса панă-мӗн ăна. Хулара та кашни спектаклӗн премьерине çӳрет.

Пӗррехинче вăл çапла каланăччӗ: «Ман шутăмпа, калав çырасси нимех те мар. Малтан çутçанталăка сăнарла, унтан тӗрлӗрен пăтăрмах кăтарт. Семен Завьялов ятне, тӗрӗсрех, Çавьял

Çеменне, хаçат-журналта та курăр-ха хăçан та пулин», — тесе йăл кулăпа çиçнĕччĕ.

Юрăна вара шукăль тумланма пĕлнишĕн килĕштеретĕп. Галстук çыхмасăр хулана тухмасть вăл.

Андрей интеллигент майлăрах туйăнать. Çавна курах ăна чылайăшĕ хушаматран чĕнет. Комендантшăн та, воспитательсемшĕн те, паллаканĕсемшĕн те, тен, хăйне килĕштерекен хĕрсемшĕн те, Анастасов вăл. Пушă вăхăтра пĕрмай кĕнеке вулать. Унпа тем çинчен те калаçма пулать — нумай пĕлет вăл. Хĕвел çинче те пăнчă пур теççĕ те — çын пĕр çитменлĕхсĕр пулмасть ĕнтĕ. Мана унăн пĕр кăлтăкĕ канăç памарĕ: «Мĕншĕн вăл хĕрсем çине çаврăнса пăхмасть-ха? Авланма та вăхăт çитнĕ хăйĕн. Кама кĕтет-ши? — тесе пĕрре мар пуç ватнă. — Тен, пĕр-пĕр пирĕшти пĕлĕтрен татăлса анасса шанать», — тиркешеттĕм ăшра. Çак шухăшсем тӳрех сĕвĕрĕлетчĕç. Анастасовăн ăшчиккинче мăнкăмăллăх йăва çавăрман. Пĕр хĕр çинчен те вăл усал калани хăлхана кĕмен.

Шыв ăсма кайнă Андрей темшĕн вăрах тытăнса тăчĕ. Таврăнса сĕтел хушшине ларнă хыççăн çур стакана яхăн шыв ĕçрĕ.

— Итлĕр эппин, — терĕ вăл. — Хĕрсемпе çӳременшĕн мана чылайăшĕ ятласшăн. Çамрăклăх иккĕ килменни çинчен асăрхаттараççĕ.

Вăл вăрттăн шухăшăма вуланăн аванмарлантăм.

— Сăлтавĕ акă мĕнре, — çамкине аллипе сăтăрса илчĕ Андрей. — Пĕррехинче ĕçрен тухрăм та куçа чарса пăрахрăм. Тин кăна шалкăм çумăр çуса иртнĕ иккен. Йĕри-тавра шыв çап-çутă

йăлтăртатса выртать. Ирхине, ĕçе килнĕ чухне, çанталăк уярччĕ, çавăнпа халăхра çăпата тесе ят панă икĕ айккипе шăтăк-шатăк пушмак çеç тăхăннăччĕ урана. Комбинатăн аслă алăкĕнчен тухсан пĕр йĕпенмесĕр-вараланмасăрах утма пулать-ха, анчах унтан киле çитме çаврăнса çӳресси. Кĕçĕн алăкранах кайма шухăшларăм. Ăна ятарласах пире валли тунă тейĕн çав. Унтан тухсан общежити — çул урлă çеç. Цеха каялла кĕрсе шкапра тахçантанпах выртакан атта вăш-ваш тăхăнса тухрăм. Склад тĕлĕнчен иртрĕм кăна — хăрах ура çинче сиккелесе тăракан хĕре курах кайрăм. Пуçне хыçалалла çавăрса пăхать. Тӳрех тавçăрса илтĕм: ара, унăн пушмакĕ лапрара лакса юлнă-çке. Çавăнпа кам та пулин килессе тĕмсĕлсе кĕтет ĕнтĕ. Ывănса çитнĕ, пылчăк çине çара урипе халь-халь пусма пултарать. Эпĕ ун патне васкавлăн пытăм та пушмакне илсе пырса тăхăнтартрăм. Вăл мана ăшшăн тав турĕ. Савăк хĕр пулчĕ хăй. Тарăхни те хăвăрт иртсе кайрĕ унăн, питĕнче йăл кулă палăра пуçларĕ.

— Мĕн тума кунтан килтĕр? Тавраран çӳрекен пыл хыпнă, тӳрĕрен çӳрекен... — малалла калама аптраса тăтăм, мĕншĕн тесен юлташсемпе хамăр хушăра ăнсăртран персе яракан сăмахпа хĕр умĕнче усă курма аван мар пек туйăнчĕ. Эпĕ мĕн каласшăн пулнине ăнланнăскер, ахăлтатса кулса ячĕ вăл.

— Ĕçрен тухнă чухне пăт-пат кăна вĕтĕртететчĕ, киле çитсе ĕлкĕретĕп пуль-ха тесе шухăшларăм, анчах çурма çултах витререн тăкнă пек çума пуçларĕ, пĕр хуралтă айне тăрса çумăр чарăнасса кĕтрĕм, — хаваслăн хуравларĕ хĕр.

— Сăртпа сăрт тĕл пулаймасть, çынпа çын

курнăçаканччĕ. Тен, эпир те пĕр-пĕрне ăнсăртран пырса тăрăнăпăр. Ун чухне сире эй! тесе чĕнейместĕп ĕнтĕ, ятăра калаймăр-ши? — ытахальтен сăмах вылятрăм эпĕ. Вăл хуравласса кĕтмесĕрех: — Андрей, — терĕм.

— Нина, — аллине тăсса пачĕ хĕр.

Вăл пирĕн общежитирен инçе те мар йывăç çуртра пурăнать-мĕн.

— Сирĕн пата пырса курма юрать-и? — куçран пăхрăм ăна.

— Тархасшăн, алăк каснă, — йăл кулчĕ вăл.

...Ку таранччен итлесе те темĕн илĕртӳллиех тупăнмарĕ-ха пирĕншĕн. Упăшкинчен уйрăлнă аппăшĕпе чипер йăмăкне малтанах асăнни çеç малалла итлеме хĕтĕртрĕ. Андрей çавна сисрĕ пулас, çапах та калавне тавраран çавăрттарчĕ. Часрах пĕлме юратакан Çемене ыттисенчен ытларах вĕчĕрхентерчĕ çакă.

— Хам сăмаха тытаймарăм, — тутине чаплаттарса илчĕ Анастасов. — Икĕ-виçĕ эрне иртсе кайрĕ. Пĕр кунхине аптека умĕнче тăраттăм...

— Салам, Андрей! Чирлерĕн-им эсĕ? Тен, пĕр-пĕр путакан çынна пулăшма сивĕ шыва сикрĕн пулĕ-ха, — йĕкĕлтерĕ çумах пырса тăнă Нина. — Акă ĕнтĕ ун чухне çăлаканни, — пуç сĕлтрĕ вăл хăйĕнпе юнашар тăракан хĕрарăма. — Ку ман аппа, — унпа паллаштарчĕ хĕр.

— Андрей, — терĕм эпĕ.

— Джентльмена курма хавас. Эпĕ Катя ятлă, — тесе алне тăсрĕ мана чипер хĕрарăм.

Хăйсемпе пĕрле кинона чĕнчĕç. Килĕшрĕм. Кайран пĕрле вĕсем патне кайрăм. Катя пит таҫраватскер пулчĕ: чей вĕретрĕ, хистесех апат çиме

лартрӗ. Сисмен те — тёттӗмленнӗ. Нинӑпа иксӗмӗр урама тухрӑмӑр. Каҫӗ тӗлӗнмелле лӑпкӑччӗ ун чухне. Тирек мамӑкӗсем кӑпӑшка юр пӗрчисем пек вӗҫеҫҫӗ. Калаҫмалли пирӗн нимех те тупӑнмарӗ курӑнать. Ҫавӑнпа Нина ним тума аптӑрарӗ пулас.

— Эсир хвелчамӑш шӗкӗлчеме кӑмӑл тумастӑр-и? — ыйтрӗ вӑл.

Ҫук тесшӗнччӗ эпӗ урамра сурса ҫӳрени культурӑсӑрлӑха пӗлтернине систерсе.

— Ҫӗрле тӑкӑрлӑкра ҫисен те юрать пуль, — чеен асӑрхаттартӑм ӑна.

* * *

Вӗсем патне пырса кӗрсенех пӗр шухӑш канӑҫ паманччӗ: килӗнче мӗншӗн иккӗшӗ кӑна-ха? Унта ҫакӑн пирки сӑмах тапратма аван мар пек туйӑннӑччӗ, тӳрех пурне те пӗлесшӗн хыпаланать тесе шухӑшласран иментӗм. Халӗ вара, Нинӑпа куҫа-куҫӑн юлсан, тӗпчемесӗр чун тӳсмерӗ.

— Сирӗн ыттисем ӑҫта? — ыйтрӑм унран.

— Камсем?

— Аҫу-аннӳ...

— Эпир аппапа ҫеҫ пурӑнатпӑр... — унтан калас-и, калас мар-и тенӗ пек: — Вӗсем ялта, — тесе хушса хучӗ.

— Ҫуртне аппу хӑй илнӗ-им?

— М-м-м... мӗнле калас, вӑл качча кайнӑ пулнӑ... Халь уйрӑлнӑ, — хуравларӗ Нина шӑппӑн.

«Ҫавӑн пек хитре хӗрарӑмпа та пурӑнма пӗлмен», — ятласа илтӗм упӑшкине ӑшра, анчах хамӑн шухӑша пӗлтерме хӑяймарӑм.

Ҫакӑн хыҫҫӑн вӗсем патӗнче час-часах пулма пуҫларӑм. Те ҫӳреме инҫе марри илӗртетчӗ? Ҫук,

унта хĕр упраҫ пухăнни кăмăла ытларах кайнă пулас. Ҫамрăк ҫынна хапăл кĕтсе илсен епле хĕпĕртемĕн-ха?

Андрей стаканри шыва кăштах сыпрĕ те пирĕн ҫине пăхса ҫаврăнчĕ.

— Йăлăхтармарăм-и? — ыйтрĕ вăл.

— Ҫук! — терĕмĕр эпир харăсах.

Унтан вăл сĕтеле сылтăм аллин пӳрнисемпе тăкăртаттарчĕ те сăмахне тăсрĕ.

— Ун чухне эпĕ салтакран таврăннă ҫирĕм иккĕри каччăччĕ. Кĕнеке нумай вулани хĕрсене уйрăмах тĕлĕнтеретчĕ. Вĕсем мана вĕренме кайма та пĕрре мар ӳкĕтленĕ. Хам та ун пирки шухăшламан мар, анчах салтакран кĕркунне таврăнтăм та ĕҫе вырнаҫрăм. Унтан мана темиҫе уйăхлăха вĕренме ячĕҫ. Кайран ҫавна ĕҫлесе татма тиврĕ. Ҫапла вара вĕренессинчен юлсах кайрăм, — кăштах пăшăрханулăн калаҫрĕ Анастасов.

Эпĕ ниҫта та васкамастăп паян. Ҫавăнпа та пĕр хускалми итлесе ларатăп. Юра чăматанне те вырăн ҫинчен илсе хумарĕ. Ҫемен ҫеҫ пăрҫа ҫинчи пек ларать. Вĕҫне часрах пĕлес килет ĕнтĕ унăн. Вăл хăйĕн тĕрлĕрен юмахĕ-халапĕпе тăтăшах йăлăхтарса ҫитернĕшĕн Андрей ăна тавăрма шухăш тытнă тейĕн, сăмахне тăсать те тăсать...

Пĕр кунхине вĕсем патне пырсан тепĕр пӳлĕмрен палламан савăк сасă илтĕнчĕ. Унта кĕрсен ҫап-ҫамрăк хĕр шăпăрт пулчĕ. Вăл кил хуҫисем сăнлăраххине асăрхарăм та ун ҫинчен куҫа часах илеймерĕм пулмалла. Ҫакна сиснĕ Нина:

— Асту, ан куçăхтар. Ку — пирĕн йăмăк Полина, — терĕ. — Вăл лицейре физмат уйрăмĕнче саккăрмĕш класра вĕренет.

— Ку журнала вуласа тухрăм ĕнтĕ, сăвăсем çеç юлчĕç, вĕсемпе паллаштарма, Андрей, сана сĕнетпĕр, — йăлăнанçи пулчĕ сĕтел хушшинче лараканKатя.

Лайăх сăвăсемех тупăнчĕç, хавхаланса вуларăм. Катьăпа Нина малтанласа тăнланă пек шăпланчĕç те, часах кашниййĕ хăйĕн ĕçĕпе аппаланма пуçларĕ. Полина вара ман çума сикерех ларчĕ. Пĕр сăмаха та вĕçертесшĕн мар тейĕн, ăнтăлса итлерĕ. Ун çине вăрттăн пăха-пăха илнĕ май çапла шухăшларăм: «Ара, Полина лицейри физмат уйрăмĕнче вĕренет. Физиксемпе лириксене антиподсем пек кăтартасси йăлана кĕнĕ. Ку вара поэзие аванах чухлать иккен».

Сăмах тӳрремĕнех йăмăкĕ енне куçни Çемене савăнтарни сисĕнчĕ. Вăл, канăçсăррăн ларнăскер, кравать пуçĕ çине лăпкăн тайăнчĕ. Андрей ăна йĕкĕлтемест те пулас, йĕркипе çеç каласа парасшăн ĕнтĕ.

— Тепре пынă чухне Нина çукчĕ, — калава малалла тăсрĕ Анастасов...

Полинăн хăрах пит çăмарти хĕрелсе кайнине асăрхарăм.

— Мĕн пулнă сана? — ыйтрăм унран.

Катя ăна сăмах хушма памасăр:

— Аха, тытрăмăр «вăрра», ăна йĕкĕчĕ çыртса илнĕ пулĕ-ха, — терĕ юнам пекки туса.

— Асту, çыртма мар, мана хальччен никам та чуптуса курман, пите тăм иле пуçланă, — тӳрре тухма тăчĕ хĕрача.

— Апла, эсӗ унпа мухтанасшӑн-и-ха? — тесе йӗкӗлтерӗм те унтан вӑл тавҫӑрса иличчен пилӗкӗнчен тытса тутинченех чӑпӑрт чуптурӑм. Полина ытамран хӑвӑртрах тухса тарасшӑн вӑшт пӗшкӗнчӗ те, ман алла унӑн пан улми пек чӑмӑртанса ҫитнӗ кӑкӑрӗсем лекрӗҫ. Эпӗ ҫӳҫенсе илсе алӑсене хӑвӑртрах вӗҫертрӗм. — Чуптуман тесе калаймӑн текех, — тесе шӳтленҫи пултӑм.

Вӑл, хӑмач пек хӗрелсе кайнӑскер, тепӗр пӳлӗме кӗрсе ҫухалчӗ. Катя ҫакна ача вӑййи вырӑнне йышӑнчӗ. Нинӑна каласа патӑм та: «Асту, кӗвӗҫетӗп», — терӗ вӑл те шӳтлесе, те чӑнласах. Илтмӗше ҫеҫ петӗм эпӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Полинӑна сайра куркаларӑм.

Кама хӑшӗ те — качча кайса упӑшкинчен уйрӑлнӑ аппӑшӗ илӗртет-мӗн Юрӑна.

— Асли пирки кала-ха, — тӳсеймерӗ вӑл.

— Шӑпах унта пырса ҫитрӗмӗр те ӗнтӗ, — лӑплантарчӗ ӑна Анастасов.

...Пӗррехинче ҫапла вӗсен алӑкне пырса шаккарӑм. «Кӗрӗр», — тени илтӗнчӗ шалтан. Катя килӗнче пӗр-пӗччене икккен. Вырӑн ҫинчен те тӑмарӗ вӑл.

— Ҫӗрле темскершӗн ыйхӑ килмерӗ, халь ӗшеннӗ пек пултӑм, — терӗ анаслаcа.

— Нина ӑҫта кайнӑ? — ыйтрӑм унран.

— Ӗҫе.

— Ара, паян канмалли кунччӗ-ҫке унӑн.

— Пӗр юлташ хӗрӗн питӗ васкавлӑн яла каймалли сиксе тухнӑ. Нинӑна хӑй вырӑнне ӗҫе тухма ӳкӗте кӗртнӗ, — ӑнлантарчӗ Катя.

— Уттарас пуль апла, — алӑк патнелле утма тӑтӑм эпӗ.

— Кĕт, тепĕр сехет çуран тавранмалла та ĕнтĕ, — пĕлтерчĕ кил хуçи.

Эпĕ хаçат илсе тенкел çине кайса лартăм. Кăштах вуланă хыççăн пуçа çĕклесе пăхрăм та, Катя манран кулнăн туйăнчĕ.

— Мĕн пулчĕ? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Нина сана пĕрре те чуптутармасть пуль? — шелленçи пулчĕ мана Катя.

— Мĕншĕн?

— Эсĕ мăйăх ӳстерсе янă, вăл вара унашкаллисене кăмăлламастчĕ, — сăлтавне пĕлтерчĕ çамрăк хĕрарăм.

— Эпĕ пĕр сăмах та илтмен-çке кун пирки. Эсĕ вара мĕнле? — шӳтленçи каларăм ăна.

— Эпĕ... эпĕ пачах тепĕр майлă.

— Чăнах-и?! — хĕпĕртенĕн тухрĕ сассăм.

— Тĕрĕссипе каласан, мăйăхлисемпе çӳренине астусах каймастăп.

— Эппин, коллекци пух, — терĕм те ун патне пырса пĕшкĕнтĕм. Вăл куçĕсене хупрĕ çеç.

Эпĕ малтан унăн кăвар пек пĕçерекен питне сĕртĕнтĕм, кайран — тутине. Катя мана хăй ыталаса илсе чуптума пуçларĕ.

— Эпĕ чухлатăп, эсĕ Нинăна юратмастăн, хăнăхнăран çеç çӳрекелетĕн, — пăшăлтатрĕ вăл. — Унăн тепĕр хулара каччи пур. Эсĕуншăн «саппас хыçран тапмасть» çеç, — хыттăнрах калаçма пуçларĕ Катя.

— Сана ытларах килĕштеретĕп, — персе ятăм эпĕ. — Есенин калашле:

> Чăрсăр туйăма пырса тивсессĕн
> Тупаймастăн тĕрĕслĕх, паллах.

Ун чухне эпĕ те çак сăвăри пекех шухăшланăха. Ырă курса юлас килнĕ...

Пăлтăрта ура сасси илтĕнчĕ. Тенкел çине хăвăрт кайса лартăм. Полина пырса кĕчĕ. Куçа айккинелле тартма тăрăшатăп. Юлашкинчен чăтса тăраймарăм, юри сăлтав тупса:

— Пӳлĕм уççине хампа пĕрлех илсе килнĕ, юлташсем кĕтсе ывăнчĕç пуль, — тесе суйрăм.

Катя мана ăсатма тухрĕ. Эпĕ чĕмсĕррĕн пыни унăн кăмăлне хуçрĕ пулас:

— Мĕн эсĕ хăвна кӳрентернĕ пек тытатăн? — сăмсаран пӳрнипе тĕкрĕ мана. — Эпĕ çав териех япăх хĕрарăм-и? Тен, тепĕр хĕртен те кая мар пуль, ача çуратман, кăкăр ĕмĕртмен.

Çакăн хыççăн вĕсем патне ура та ярса пусмарăм...

— Сана, чăннипех те, мăйăх килĕшмелле, мĕншĕн ӳстерместĕн? — кăмăллăн кулчĕ Юра.

— Ăна эпĕ çав кунхинех хырса пăрахрăм.

Андрей малалла ним калама аптраса тăчĕ.

— Эсĕ вĕсен йăмăкне темиçе хутчен те асăнтăн. Унпа та урăх тĕл пулман-и? — ыйтрăм эпĕ.

— Тĕл пултăм, — хаш-ш сывларĕ Анастасов. — Вăрахран.

Эпир унăн сăн-пичĕ улшăннине асăрхарăмăр. Эппин, малалла чи пĕлтерĕшли пулать.

...Пĕррехинче хĕвел анас умĕн киле çуранах таврăнтăм. Кунĕпех сивĕ çумăр çунăччĕ. Халь вара, каç пулттипе, салху хĕвел хăйĕн çурма тĕксĕм пайăркисене мĕскĕннĕн сапалать. Ваттисем кун пек чухне каллех çумăр пуласса теççĕ. Ку çанталăк мана паян пĕр-пĕр хĕрарăм пуçĕ çине хуйхă-суйхă татăлса аннине тата унăн кулянăвне аса илтерчĕ: вăл чунĕпе хуçăлса йĕрет-

йёрет те темĕнле çутă шанчăк пур пек туйăнсан самантлăха лăпланать, унтан кĕтсе ĕмĕтленни кăлăхах иккенне пĕлсен питне каллех куççульпе çума пуçлать. Ун чухне ман кăмăл çанталăкпа мĕншĕн çапла килĕшӳ тунă — пĕлместĕп.

Пуçа усса пыраттăмччĕ.

— Андрей Петрович, эсĕ мăнкăмăлланса кайнă пулас тем, — терĕ такам.

Ман умра Полина тăра парать. Эпĕ ăна асăрхамасăрах иртсе кайма тытăннă-мĕн. Капла та аран палласа илтĕм. Вăл самаях улшăннă, тата чиперленнĕ. Пиçсе çитнĕ çырла пек теççĕ ун пек чухне. Тинех вăл пули-пулмишĕнех хĕрелсе каякан хĕрача мар ĕнтĕ. Ман кун-çул ăна чылаях кăсăклантарчĕ. Нина качча кайнине пĕлтерчĕ. Эпĕ тĕлĕнем пекки турăм. Хам ăна мăшăрĕпе пĕрле темиçе те куркаланăччĕ-ха. Вăл упăшки çумне юриех чăмăртанарах иртсе каятчĕ.

«Пăх-ха, епле хĕр пулса кайнă, пĕр кашăк пылпа çăтса ямалла вĕт», — тесе шухăшларăм та Полинăна урăх аса илмерĕм.

Калавне вĕçленĕ пек пат татса хучĕ Андрей.

— Çакă çеç-и? — хыпăнса ӳкрĕ Çемен.

Анастасов нимĕн те чĕнмерĕ. Кăштах тăхтасан сăмахне тăсрĕ: «Пĕррехинче кинотеатр умĕнче тăракан икĕ хĕртен пĕрне тӳрех палласа илтĕм.

— Полина, — чĕнтĕм ăна.

— Андрей Петрович! — хапăл пулчĕ вăл мана. (Манăн, паллах, атте ячĕпе чĕнтерес килмерĕха. Çулпа аслине тӳрех кăтартать-çке çакă. Çапах та ун пирки нимĕн те шарламарăм.)

— Кино курма шутларăр-им? — ыйтрăм хĕртен.

— Кĕрсе курсан юрать те, — татсах каламарĕ вăл.

— Атьăр апла, хăвăртрах, шăп та шай сеанса ĕлкĕретпĕр, — сĕнтĕм вĕсене.

Полинăн юлташĕ таçта каймалли пур тесе пиртен пăрăнма тăрăшрĕ. Вăл ман çине шăтарасла пăхнине малтанах асăрханăччĕ. «Ку ырра мар пуль, Полина темскер каласа паман-ши?» — шухăш вĕлтлетрĕ пуçра. Халь шутласа пăхатăп та, вĕсем ман пирки юмахланăн туйăнать. Анчах та усал-тĕселпе аса илме пултарайман.

Киноран тухнă çĕре таврана каç сĕмлĕхĕ карса илнĕччĕ. Хĕре, паллах, ăсатса ямалла. Çуранах ерипен утрăмăр. Полина сăмахшăн текех кивçене каяс çук ĕнтĕ. Вун çиччĕри хĕрĕн шухăш-туйăмĕ çирĕм виççĕри çыншăн малтанлăха пурте иллюзи евĕр туйăннă пулин те, хам сисмесĕрех хăпартланса калаçма тытăнтăм. Вăрăм çул та кĕске пек туйăнчĕ. Вăл кĕрсе каяс умĕн:

— Ыран та кинона каятпăр-и? — ыйтрăм унран хуллен.

— Вăхăту тупăнсан эпĕ хирĕç мар, — килĕшрĕ Полина. Унтан, манпа сывпуллашсан, акăш илемлĕн ишнĕ пек илĕртӳллĕн утса кайрĕ.

Тепĕр каçхине çул тăршшĕпех телейлĕн, аллаллăн çавтăнса калаçса пытăмăр. Виççĕмĕш хутĕнче, ун патне епле каяс килсен те, хама тытса чартăм».

— Çул çитмен хĕрпе темскер пулса тухас хăрушлăхран хăрарăн пулĕ-ха, — тӳрех тавçăрса илнĕн йăл кулчĕ Юра.

— Çук-çук, унашкал усал шухăш пуçа кĕмен, — пуçне сулкаларĕ Анастасов.

— Усал шухăш-и вара вăл? — ахăлтатрĕ Юра. — Хĕре ыталани...

— Ан чăрмантар-ха, — чĕрре кĕчĕ Çемен ăна пӳлсе.

«Ухмахланатăп-çке, унпа çӳренинчен мĕн усси пур? Пĕрре — вăл манран чылай çамрăк, тепре — унăн аппăшĕпе те варлă пулнă, — тĕрлĕ шухăш пăтрашрĕ пуçра. — Сăмахран, Лев Толстойăн «Анна Каренина» романĕнчи Левин, вăтăр çултан иртнĕ пулин те, çамрăк Китине юратса пăрахать. Вăл ăна качча иличчен икĕ аппăшне те черетпе вăрттăн юратнă. Вăрттăн çав, вăрттăн, эпĕ вара уççăн, ытла та уççăн», — çӳçенсе илтĕм. Çамрăк хĕр Полина пурнăçа илемлĕ литературăри геройсемпе танлаштарнине хăнăхса çитрĕм. Хам та сисмесĕрех çав енне туртăнма тытăннинчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕм.

Урасем ăс-тăна итлемерĕç тейĕн, тепĕр кунхине Полина патне илсе çитерчĕç. Вăл, эп сӳрĕккине асăрхаса-ши, уйрăмах хаваслă пулма тăрăшрĕ.

— Ху кĕтме хушрăн та — килмерĕн. Тен, каллех ĕçрен пушанаймарăн? — шахвăртрĕ вăл. Унтан, ытлашши сăмах персе ятăм тесе-тĕр, шăлне çыртрĕ.

Нинăпа ман хушăра пулса иртни тӳрех аса килчĕ. Театра кайма билет илсе хунăскер ĕçрен васкарах киле кайма пуçтарăннăччĕ. Çавăнпа хывăнса тăхăннăччĕ те ĕнтĕ. Çав вăхăтра пирĕн пата хĕрарăм мастер пырса тăчĕ.

— Паян шлифовщик чирлесе ӳкнĕ, ĕç тытăнса тăрать, — пĕлтерчĕ пăшăрхануллăн.

Çав профессипе салтакра тĕл пулма тӳр килнине тахçан персе янăччĕ эпĕ.

— Пулăш ĕнтĕ, миçе çын ырми-канми вăй хуни харама каять, — йăлăнчĕ вăл.

Кăмăлăм çемçе çав, килĕшрĕм. Тепĕр кунне Нина тутине самаях тăснăччĕ. Мĕн сиксе тухнине ăнлантарсан:

— Апла, саншăн ют хĕрарăм савнă хĕртен хисеплĕрех иккен. Унăн кăмăлне тупса мана пăшăрхантартăн. Ку вăл — улталани. Сана уншăн путсĕр тесен те çылăх пулас çук, — кӳренсе мăкăртатрĕ вăл.

Полина çавна аса илчĕ те ĕнтĕ. Хăй ун чухне ман хута кĕнĕччĕ-ха.

Кăмăлăм ерипен уçăлма пуçларĕ. «Мĕн вара, мана нимĕнле те каçарма çук-шим? Полина умĕнче нихçан та айăпа кĕмĕп», — лăпланма тăрăшрăм эпĕ.

Анчах кĕтмен çĕртен урăхла пулса тухрĕ. Общежитие ют çынна йăпăр-япăр кĕртменнине пĕлетĕр ĕнтĕ. Пĕрре Полинăна чĕнтертĕм те: «Вăл çук», — тесе пĕлтерчĕç. Тепрехинче те çапла каларĕç, виççĕмĕшĕнче вара мана, урамра тăраканскере: «Андрей, ан кĕтĕр, вăл тухмасть!» — тесе чӳречерен кăшкăрчĕ пĕри. Питне çеç курса юлтăм — таçта курнă пек туйăнчĕ. «Ăçтан паллать-ши? Ман ята та пĕлет», — тĕлĕнтĕм эпĕ. Унран та вăйлăрах вара Полина сасартăк хăвăрт улшăнни шухăша ячĕ. Шăкăл-шăкăл калаçса уйрăлнăччĕ-çке. «Тен, аслă аппăшĕпе мĕн пулса иртнине пĕлнĕ вăл? — çиçсе илчĕ шухăш пуçра. — Çук, пулма пултараймасть, — хама хам лăплантарма тăрăшрăм. — Катя хальччен каламаннине тинех шарлас çук».

Пирĕн пӳлĕм алăкне такам пырса шаккарĕ.

— Анастасов, сана телефон патне чĕнеççĕ! — кăшкăрчĕ вăл.

Андрей хыпаланса тухса кайрĕ. Эпир вăл таврăнасса вырăнтан хускалмасăр кĕтсе лартăмăр.

— Аппа патне ялтан тăвансем килнĕ. Унта чĕнеççĕ, — пĕлтерчĕ пире кĕнĕ-кĕменех.

Паллах, пурте кăмăлсăрлантăмăр, анчах ним тума та çук. Андрей кайсанах эпир те Юрăпа уçăлма тухма пуçтарăнтăмăр.

— Малалла мĕн пулса иртнине пĕлетĕп эпĕ! — сиксе тăчĕ Çемен.

— Ан суй, ху та çăварна карсах итлесе лартăнçке, — ĕненмерĕм ăна.

— Мана унăн юлташĕ каласа кăтартнă, — çине тăчĕ çурма артист тата Çавьял Çеменĕ, çыравçă пулма ĕмĕтленекенскер. — Вĕçĕ питĕ пăшăрханмалла. Çавăнпа хăйĕнчен тепре илтес килчĕ.

— Кала эппин, — кайма тăнă Юра та каялла çаврăнчĕ.

Хамăр вырăнах пырса лартăмăр.

«...Пĕррехинче Андрей тротуарпа пынă. Тормоз сасартăк хыттăн шăтăртатнине тата хĕрарăмсем çари! çухăрса янине илтнĕ вăл, — сассине пĕрре хăпартса, тепре пусарса калама пуçларĕ Çемен. — Пăхать — такама машина пырса çапнă. «Васкавлă пулăшу» чĕнме телефон будки патне тӳрех тапса сикнĕ вăл. Каялла таврăннă çĕре йĕри-тавра халăх кĕпĕрленнĕ. Хĕсĕне-хĕсĕне маларах тухса тăнă та акă мĕн курнă: Полина выртать! Чĕп-чĕр юн. Андрейĕн чĕри çĕçĕпе чикнĕ пек йăш туса кайнă. — Çак сăмахсене каланă чухне Çеменĕн куçĕсем шывланчĕç. — Часах «васкавлă пулăшу» та пырса çитнĕ. Хĕре,

тăнне çухатнăскере, илсе кайнă. Андрей вара Катьăн килне чупнă. Унта Нина та пулнă иккен. Тахçантанпах ура ярса пусманскер хашкаса кĕрсен хĕрарăмсем питĕ тĕлĕннĕ паллах. Мĕн пулса тухнине пĕлтерме Андрей сăмах та тупайман. Чĕлхи çăвар маччи çумне çыпăçса ларнă тейĕн...

— Полина... Полина... Полина... Машина айне... — тенĕ те — ним калама аптранă.

— Вăл кунтан тин кăна тухса кайрĕ-çке! — ĕненес килмен вĕсен самантлăха, анчах мĕнле хыпăнса ӳкнине калама та хĕн», — Çемен кĕсйинчен сăмса тутăрĕ кăларчĕ.

«Çемçе чунлă арçын», — шухăшларăм ăна тинкерсе.

«— Андрей больница картишĕнче тăнă, шала кĕме хăюлăх ниепле те çитереймен, — сасси чĕтревлĕн тухрĕ Çеменĕн. — Нина патне пынă, сăнĕ пир пек шуралса кайнă хăйĕн.

— Вăл темскер пĕрмаях аташать, сан ятна та асăнкаларĕ пулас, — тенĕ хĕрарăм хурлăхлăн.

— Апла, эсĕ пĕлетĕн-и? — шиклĕн пăхса илнĕ Андрей.

— Çапла...

— Анчах юлашки вăхăтра вăл манран сивĕннĕччĕ, тем пулчĕ ăна сасартăк, — пуçне уснă Андрей.

— Эпĕ айăплă пĕтĕмпех, эпĕ, — хаш-ш сывланă Нина. — Аппапа йысна тепĕр хут пĕрлешнĕччĕ, анчах каллех темскер çитмерĕ — уйрăлчĕç. Эпĕ аппана ятлама шут тытрăм: «Унччен ача çукки пирки хирĕçеттĕр, халь вăл пур ĕнтĕ, тата мĕн кирлĕ сире?» — «Тин санран пытармасан та юрать пуль. Эсĕ качча кайнă, лайăх упăшка тĕлне пулнă. Манăн ача... Андрейрен

вĕт», — хуравланă вăл. Унтан çакăн пек калаçу пулса иртнĕ. — «Мĕнле Андрейрен?» — «Санпа çӳренинчен». — Нина, паллах, хытă тĕлĕннĕ, çакна Полинăна та каласа параймасăр тӳсеймен. — «Суя ку, суя!» — ĕненесшĕн пулман йăмăкĕ.

Унтанпа чылай вăхăт иртнĕ хыççăн Полина хăйне хирĕç килекен Анастасова асăрханă та тĕл пулас мар тесе çул тепĕр енне хăвăрттăн каçма тăнă иккен.

Çав сăмахсене итленĕ чух шăтăк пулсан çĕр тĕпнех анса кайнă пулĕччĕ ĕнтĕ Андрей, — уншăн питĕ кулянчĕ Çемен. — «Ман чĕре йĕппе чикнĕ пекех ыратать, ытла та хытă асапланать», — Полина патне кĕме хушнă Нина тахçанхи савнине. Андрей палата алăкне шăппăн уçнă. Малалла иртме те шикленнĕ вăл.

«Андрей, — чĕннĕ çамрăк хĕр аран илтĕнмелле. Йĕкĕт ун умне чĕрне вĕççĕн пырса тăнă. Полина йăл кулançи тунă, анчах унăн хĕн-асапĕ тăнлавĕ çинчи юн тымарĕсем туртăна-туртăна илнинченех сисĕннĕ, ыратнине лăпкăн, йынăшмасăр чăтма хал епле çитернĕ-ши? Андрей çине ăшшăн пăхнă та: — Çапах та мана эсĕ кăна чуптунă вĕт, — пăшăлтатнă вăл. — Астăватăн-и, выляса... Халь пурпĕрех, эпĕ сана юрат...» — сăмахне каласа пĕтереймен çамрăк хĕр. Те «юратнă», те «юрататăп» теесшĕн пулнă. Унăн куçĕсем шывланнă, вĕсене хупнă та, куççулĕ шăрça пек хĕсĕнсе тухнă. Андрей ăна тутинчен çепĕççĕн чуптуса илнĕ. Хĕр куçне уçса пăхнă, унăн пуçĕ хăрах айккине лăшт усăннă...

Çавă вара ун ĕмĕрĕнче юлашки хут чуптуни пулнă та...» — Çемен куçне сăмса тутăрĕпе шăлкаларĕ.

Юра нимĕн те чĕнмерĕ. Ман пыра темĕскер чăмакки кĕрсе ларнăн туйăнчĕ. Çак хурлăхлă калава тин итлесе пĕтернĕрен хамăра синкерлĕ вилĕм умĕнче тăнăн туякансем пĕр-пĕрин çине чăр-р пăхса илтĕмĕр.

Çемен вăрт çаврăнчĕ те чӳрече каррине сирчĕ, ăна пӳлĕмре сывлăш çитмерĕ тейĕн, вăл чӳречене яриех уçрĕ. Кайăксен хаваслă юрри-кĕвви тата çамрăксен савăнăçлă сасси-кулли тăвăр пӳлĕме кĕчĕç. Пирĕн ума хире-хирĕçлĕх пĕтĕм кӳлепипе тухса тăчĕ: вилĕм тата пурнăç.

— Андрей ăна халь те манма пултараймасть эппин, — кулянчĕ Юра. — Питĕ шел. Çапах та виле хыççăн шăтăка сикеймĕн. Чĕррисен...

Сасартăк ăна Çемен пӳлчĕ:

— Полина пурнăçа юратнă, уйрăмах чунри тасалăхшăн çуннă, ырă ĕçсем тума ĕмĕтленнĕ. Андрей кĕске хушăрах ун майлă çаврăнса ӳкнĕ. Унччен пурнăç ăна шыв юхăмĕ пек кăна хăйĕнпе илсе кайнă пулсан Анастасов тӳрех чăн-чăн телейшĕн ăнтăлма пуçланă, ырă тĕллевпе çунатланнă, — хĕрӳленчĕ вăл.

Тухса çӳреме хăтлăрах пултăр тесе Юра сĕтеле куçарма тытăнчĕ те, мачча йăлтăр-йăлтăр турĕ. Сĕтел çинче тĕкĕр выртнă-мĕн, унта хĕвел пайăркисем ӳкнĕ; куç кĕски шевлесене малалла ăсатать. «Çапла çав, çутă япала хăй кăна çиçмест, ыттисене те урăх сĕм кĕртет, — ăс-тăнăн килĕшес килмерĕ хаяр вилĕмĕн витĕмĕпе, унăн хăрушă хатарлăхне кăштах та пулин хавшатма хăват шырарĕ. — Паллах, Андрее хуйхă вăхăтлăха хуçса хăварнă пулин те, Полина чĕртнĕ ырă туйăмсем чун-чĕринче сӳнеймен. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕрле пурăнма пуçланăранпа та

унра çăмăлттайлăх курмарăм», — йăпатма тă-рăшрăм хама.

Çакăн хыççăн Анастасов мана пач урăхла-раххăн туйăнма пуçларĕ. Хăйне вăл çын вĕлере-кен тесе айăпласа асапланнăн курăнать. Ăна лăплантарас тесе сăмах хускатма та шутланăччĕ, анчах майлă самант нимĕнле те тупăнмарĕ.

Пĕррехинче вăл теттесем туянса таврăннине асăрхарăм. «Ачи валли ĕнтĕ», — шухăш вĕлтлетрĕ пуçра. «Пепкеме пăрахмастăп, вăл — манăн юн-çке», — теессе шантăм.

Тепĕр темиçе кунран Андрей чечекпе тав-рăнчĕ. «Тĕшмĕртни тӳрре килчĕ иккен. Халь Катя патне каять ĕнтĕ», — сисĕмĕм вăйлишĕн хĕ-пĕртерĕм эпĕ. Çапах та унпа шахвăртсарах кала-çас килчĕ:

— Туя кайма хатĕрлентĕн-им? — терĕм.

— Çук. Масар çине.

Куçран кăн-н пăхрăм ăна. Кулмасть пачах та.

— Манаймастăн апла? Чăнах та, çап-çамрăк-лах çĕре кĕнĕ те...

Манăн пит пусăрăнчăк сасă Андрее хытă тĕлĕнтерчĕ курăнать.

— Кама? — пуçне ялт çĕклерĕ вăл.

— Полинăна ĕнтĕ.

— Мĕнле çыхăну пур кунта? — куçне чарсах пăрахрĕ Анастасов.

— Ара, ун вилтăпри çине каятăн пуль?

— Çу-у-ук, йыснан çулталăкне асăнма. По-лина пурăнать-çке. Вăл студентка ĕнтĕ. Пĕр эрне каялла çеç ăнсăртран куртăм. Лайăх хĕр. Шел, мана пӳрмен...

Эпĕ шалт тĕлĕнтĕм. Ĕнсе çинчи йывăр чула

сирсе пăрахрăм тейĕн, кăмăлăм çăмăлланса кайрĕ. Çемен пире «тыттарнине» кăшт-кашт каласа кăтартрăм. Питĕ тарăхсах.

— Арти-ист, — пуçне сулкаларĕ Андрей.

«Чăнах та, Çемен çурма артист-çке. Эппин, ăна кӳренме кирлех-ши?» — шухăшласа илтĕм эпĕ. Пĕр кулăш аса килчĕ.

Абитуриент театр институтне кĕме экзамен тытнă имĕш. Конкурс çав тери пысăк. Йышăнмаççĕ ăна, пултарулăху çителĕксĕртерех теççĕ. Вара уншăн йăлăнма экзаменаторсем патне асламăшĕ пырать.

«Манăн мăнукăм сцена валлиех çуралса ӳснĕ. Института кĕме тивĕçлĕ вăл», — тет ĕсĕкле-ĕсĕкле ӳкĕтлесе. Лешсем карчăка çапла ĕнентерме хăтланаççĕ: «Каçарăр та, сирĕн мăнукăрăн артист пулма пултарулăхĕ çук», — хĕрхенсе, хĕрсе кайсах ăнлантарма тăрăшаççĕ корифейсем, ăстасем. Тутăрне салтать те ку — экзаменаторсем шалт тĕлĕнсе каяççĕ: вĕсем умĕнче çав абитуриентах. Вĕренме илеççĕ вара.

Апла, каçарма пулать Çемене те. Пире вăл ĕнентерме пултарчĕ-çке. Халь, тĕплĕн шухăшласа пăхсан, вăл тăсса каласа кăтартнинче çыхăну та çукрах пек.

Вăхăт хăвăрт шăвать. Пирĕн пӳлĕмри пĕртен-пĕр пысăк улшăну çакă çеç пулчĕ: Анастасов маншăн темĕнле асамлă шăпаллă çын пек туйăнма пăрахрĕ тинех. Ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăманскерех иккен. Хама хам ятласа та илетĕп: «Полина вилнĕ пулсан лайăхрахчĕ-им? Çынна усал суннă пекех-çке ку...»

Çавăнпа чылай вăхăт татса паман ыйту канăçсăрлантарчĕ мана: «Мĕншĕн-ши пире ют çынсен

уйрӑмах темӗнле мыскаралла кӑткӑс пурнӑҫӗ питӗ илӗрттет? Хамӑр вара ыттисем пекех телейлӗ пуласшӑн...»

* * *

Пирӗн хула пысӑках мар. Эпир, пӗр пӳлӗмре килӗштерсе, тепӗр чухне ятлаҫкаласа пурӑннӑ туссем, тӗрлӗ ҫӗре куҫса пӗтнӗ хыҫҫӑн та ӑнсӑртран тӗл пулкалатпӑр.

Манӑҫӑннӑ Людӑпа Вадим ҫинчен те каласа хӑварас-ха. Анекдот юратаканскер халь култарма пӑрахнӑ-мӗн. Ҫуралнӑ кунра пире ахӑрттарнисене хунямӑшӗ патӗнче хӑнара каласа кӑтартнӑ та — лешӗ урсах кайнӑ имӗш. «Мана хисеплеменннине уҫҫӑнах пӗлтертӗн, пӗтӗм ял умӗнче намӑс кӑтартрӑн», — тесе пӑсӑрлантарнӑ тет. Людӑпа та чиперех пурӑнмаҫҫӗ курӑнать. Ритӑна пӑрахса йӑнӑш тунӑшӑн ӳкӗнет Вадим.

Андрейпе темиҫе хутчен те курса калаҫнӑ. Акӑ пӗррехинче мӗн илтрӗм унран.

Ӑна пӗр пӗлӗшӗ ҫапла пӗлтернӗ: студентсен клубӗнче час-часах концерт пулать иккен. Афишӑра Полина Анастасова ятпа хушамата асӑрханӑ вӑл. «Санӑн йӑмӑку-и вӑл?» — ыйтнӑ унран. Ку тӗлӗннипе кайса курмах шут тытнӑ. Концерт пуҫланас умӗн зала кӗрсе чи хыҫалти рете ларнӑ.

— Полина Паланова юрлать! Кӗтсе илӗр! — тесе пӗлтернӗ ертӳҫӗ хаваслӑн. Андрейӗн чӗри кӑкӑртан сиксе тухасла тапма пуҫланӑ — анчах сцена ҫине пач палламан хӗр тухнӑ.

«Мӗншӗн ҫав ятпа хушамат пӑлхантарса пӑрахрӗҫ-ха мана?» — хӑйне пӗрмай ыйту панӑ вӑл. Ҫавӑнпа юрӑҫӑн сасси хӑлхине те кӗмен.

— Полина Анастасова сире ҫӗнӗ юрӑ парнелет! — янӑраса кайнӑ уҫӑ сасӑ.

Тарӑн ыйхӑран сасартӑк вӑраннӑ пек, пуҫне вӑшт ҫӗкленӗ Андрей. Сцена ҫине хӗр акӑш ишнӗ евӗр утса тухни уяр ҫанталӑкра аҫа ҫапнӑ пекех пулнӑ каччӑшӑн. Унӑн юррине хӑлхапа мар, чӗрепе итленӗ тейӗн ҫамрӑк ҫын. Сцена ҫинчен пике ярӑнса ҫухалсан халӑх вӑйлӑн алӑ ҫупса янӑ. Зал шӑпланасса аран-аран кӗтсе илейнӗ Андрей. Унтан юнашар ларакан хӗртен ҫапла ыйтнӑ: «Ку Анастасова мар-ҫке, Паланова. Хушаматне мӗншӗн улӑштарнӑ вӑл?» — «Пӗр ятлӑ-хушаматлӑ икӗ юрӑҫ пулнӑран псевдоним илме килӗшнӗ», — ӑнлантарнӑ кӳрши.

* * *

Тепре ӑна Атӑл хӗрринче куртӑм. Ҫак аслӑ юхан шыв чаплӑ евчӗ пекех. Кама ҫеҫ тӗл пултарса мӑшӑрлантарман-ши? Мухтав анлӑ Атӑла, пысӑк тав ӑна! Ҫӗре ҫитичченех пуҫа таятпӑр унӑн ӑшӑ кӑмӑлӗпе ырӑ хӑватне!

Андрей пӗр хӗрпе сак ҫинче ларатчӗ. Мана асӑрхарӗ те пикене тем каласа ман пата пычӗ. Эпӗ ӑна савнипе курнишӗн савӑннине туйрӗ пулас. «Ӑна пӗрремӗш хут куратӑп. Вӑл манран каҫару ыйтать. Полинӑна эпӗ чӗнтерсен тухмасть текенни ҫакӑ иккен. Сӑлтавӗ — эпӗ Нинӑпа варлӑ пулнине пӗлнинче. Полина каласа кӑтартнӑ ӗнтӗ. Пӗрре курсах юратса пӑрахнӑскер ман шӑпа пӑсӑласран хӑранӑ имӗш. Аппӑшӗн савнине йӑмӑкӗ качча кайни нонсенс пек туйӑннӑ. Вӗсем хӑҫан та пулин хирӗҫсе каяҫҫех тесе шухӑшланӑ.

* * *

Андрейпе Полинăна мăшăрлантарасах килсен те çакăнтан вăйлăрах пăшăрхантараканни пур манăн. Ку — вăл хăраххăн пурăнма хăнăхса çитессинчен хытă хărани. Хĕрсемшĕн илĕртӳллĕ йĕкĕтсемех ватта сулăнса хусаха юлни те тăтăшах тĕл пулать.

Пĕр пӳлĕмре пурăннă чухне вăл мана хăйсен ялне илсе кайнăччĕ. Ашшĕпе амăшĕ питĕ сапăр çынсем. Андрее кĕрӳ тума юншăхлакан хисеплĕ çынсем нумаййине вăрттăн систерчĕç вĕсем. Хăнана илсе каякан кил-йыш чылай пулчĕ. Кашни килтех чипер хĕрĕсен илемлĕ рамăри сăнӳкерчĕкĕсем пире ăшшăн тинкерчĕç.

Улăхра утă çултăмăр. Андрей çави курăка туламасть, ун хыççăн паккуссем илемлĕ хумсем пек юлаççĕ.

Амăшĕ вара пĕрмай манпа пăшăлтатасшăн. Ыйтса пĕлет, тĕпчет ывăлĕ çинчен.

— Ĕçмест-и? — тесе ыйтрĕ вăл.

— Ĕçмест кăна мар, туртмасть те, — куна илтсен хуравпа питĕ кăмăллă юлчĕ хайхискер.

— Хĕрсене ан улталатăрччĕ, çылăха ан кĕтĕрччĕ, — хытă пăшăрханчĕ амăшĕ.

— Арçынна тытма тилхепе кирлĕ. Тилхепи вăл — арăм, — ăнлантарчĕ ашшĕ.

Ватăсем ăсатнă чухне пире иксĕмĕре те чипер хĕр тĕлне пулса авланма сунчĕç.

* * *

Эпĕ Анастасовран тахçантанпах çакнашкал йыхрав кĕтетĕп: «Хисеплĕ Сергей Сиренин! Сана хамăр туя чĕнетпĕр. Андрей тата...» Пулас арăмĕн ятне пĕлейместĕп ĕнтĕ. Кĕтсе илейĕп-ши?

## ÇУХАТУ

Кĕлет айĕнчен Хветут мучи пĕчĕк ача пек тăватă уран упаленсе тухрĕ те шăлавар пĕççи çумне çыпăçнă чăх каяшне турпаспа хырса пăрахнă май хаш-ш сывларĕ.

— Ăçтан ман тĕле пулчĕ ку? — шăтăкалла тинкерчĕ вăл, хăй унта миçе хутчен кĕрсе тухнине аса илме тăрăшнă евĕр.

Инкек куçа курăнса килмест тесе ахальтен каламан çав. Тупнă япала телей памарĕ ăна. Тен, янттине нихçан та ăмсанманран-ши?

Пĕррехинче Хветут мучи кӳршĕ ялтан ир-ирех таврăнатчĕ. Çул айккинче тăваткал кĕтеслĕ хура япала юр айĕнчен кăштах курăнса выртнине асăрхарĕ. Урипе тĕксе пăхрĕ те — ун умне пĕчĕк арча тухса тăчĕ. Тĕлĕнсе кайрĕ ватă çын. «Ăпăр-тапăр хума юрĕ, ара», — тесе шутларĕ вăл. Ăна çĕклерĕ те хул хушшине хĕстерсе килелле утрĕ. Çутăлманччĕ-ха ун чухне.

— Ну, карчăк, пуйрăмăр эпир, çĕтĕк çĕлĕкĕме кăмакана пăрах, — шӳтлерĕ пӳрте кĕнĕ-кĕменех. — Пĕр арча ылтăн тупрăм.

— Пирĕн телей мар пуль вăл унашкал çăмăллăн пуясси, — мăкăртатрĕ Укахви кинемей. — Асăрханарах тыткала, çӳп-çап юхса ан тухтăр. Урайне ĕнер çеç çуса кайнăччĕ.

Ун ăшĕнче ăпăр-тапăр кăна пуль тесе шутланăччĕ вĕсем малтан. Уçрĕç те — купăс, вĕр çĕнĕ купăс тухса тăчĕ куç умне.

«Ак тамаша!» — юпа пек хытса кайрĕç ватăсем. Пăсăк мар-и тесе тĕрĕслесе пăхма шутларĕç. Шакăлчине кăларсан укçа сиксе тухрĕ. Аллă тенкĕ!

— Камăн-ши кусем? — тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ

кинемей. — Çын япали кирлĕ мар. Хуçине тавăрса парар.

Мучи çав кунах колхоз правленине васкарĕ. Тĕрлĕрен сăмах-юмах çаптараççĕ унта. Кирлĕ сас-хура çеç илтĕнмерĕ. Тепĕр кунхине те килти ĕçне пăрахсах ял хушшине уттарчĕ вăл.

— Маюк Илюкĕн купăсне вăрланă, — сăмах пуçарчĕ пĕри.

— Кам?! — тĕлĕнчĕç пурте.

— Камне кам пĕлет? Вăрă аллине хурса хăвармасть.

«Тупрăм эпĕ ăна», — тесе çăварне уçасшăнччĕ Хветут мучи — Пракух, ялти кашни хыпарах тĕплĕн пĕлекенскер, çапла каласа хучĕ:

— Купăсĕ ăшĕнче пин тенкĕ пулнă тет.

Шатăрт çыртрĕ шăлне мучи. Килне хăвăрттăн таврăнчĕ те арăмне васкавлăн хытарчĕ:

— Çăварна уçнă ан пултăр ун пирки. Купăсĕ ăшĕнче пин тенкĕ пулнă тет.

Карчăкĕ сехĕрленсе ӳкрĕ.

— Пĕлсен ăçтан тупса парăпăр? Нарастаран айăплама пултараççĕ. Иксĕмĕрĕн пенси укçипех тӳлесе татаймăн. Намăсĕ тата?!

— Эпĕ киле таврăннă чухне кӳршĕ Хветĕрĕн калинкки чĕриклетрĕ. Вĕсем курман-ши çавна йăтса килнине? — пăшăрханчĕ мучи. — Кирлĕ-кирлĕ маршăн çынсемпе ятлаçатăн, — хăтăрса илчĕ карчăкне. — Кайса калĕç ак.

— Кĕркунне пирĕн сысна вĕсен умĕнчи йăмра айне чавнă та, Хветĕр арăмĕ çапла çуйхашнине илтрĕм: «Сысни те ăнман, тăрантараймаççĕ, йăмра тымарне килсе кăшлать». — «Сысна сыснах вăл. Хăвăрăн кĕçĕнни пирĕн пахчана вăрра кĕркелет авă. Ăна та чараймастăр», — чăтса тăраймарăм эпĕ.

— Мĕн чул каланă сана пули-пулмишĕн çынпа урлă ан пул тесе, — лач! сурчĕ урайне Хветут мучи.

Тепĕр чухне пулсан Укахви кинемей уншăн ватсупнăна: «Арăму вун çиччĕре мар, çитмĕлти пуçăмпа урай çуса тинкеленетĕп», — тесе аванах тустарĕччĕ те — халĕ вăхăчĕ ун çинчен шутламалли мар-çке.

— Çаратаканĕсем укçине кăларса илнĕ те купăсне ывăтса хăварнă ĕнтĕ. Темле майпа аллăшĕ юлнă. Ашшĕ, халех пытарса хур. Кĕлет айне, кĕлет айне, — ăс пама хыпаланчĕ карчăкĕ усал хыпарпа таврăннă упăшкине ун чухне.

Пĕтĕм яла сас-хура хăвăрт сарăлчĕ. Вăрра, курман-илтмен вăрра, питлерĕç çынсем. Хветут мучине шанманни ун-кун туйăнман пек-ха та... Лăпланма вăхăт ĕнтĕ. Çук çав, чунĕ вырăнта мар. Кĕлет айне кашни кун кĕрсе пăхать. Усăсăр выртакан купăс пăшăрхантарать ăна. Çурма тăлăха та шеллет.

* * *

Илюк купăсшăн пайтах ăнтăлнăччĕ. Ашшĕсĕр ӳснĕскерĕн аллине сасартăках кĕмерĕ çав вăл. Арçын ача мĕн чухлĕ ăмсанман пуль кил урлă çеç пурăнакан Толике. Хăйĕн купăсĕпех чипер Марука, Илюк вăрттăн юратнă хĕре, çавăрса ячĕ. Пĕрмине епле тăсса туртать — хĕрсем çапла ун тавра шăкăрин пухăнса лараççĕ. Эх, çав купăса епле кураймарĕ вăл. Ăна чиксе шăтарса пĕтерес килетчĕ унăн. Майĕ те пулнă. Çитменнине, пĕрпĕр уяв каçĕ хыççăн купăсне Толик ăна парса: «Çула май киле кĕртсе хăвар», — тетчĕ. Хăй вара — хĕр патне. Çавăн пек чухне çĕре çĕклесе

çап та — ӳкерсе çĕмĕртĕм теесси çеç пур. Çук, ун пек хăтланмарĕ вăл.

Илюк Марукăн юратнă юррине пĕлет. Ăна районти пĕр сăвăçпа музыка учителĕ çырнă теççĕ. «Çутă ĕмĕт» кĕввине Толик тăсса ярсанах хĕр ун çумне сикерех ларать. Илюк туять-ха Толик Марука тивĕçлĕ маррине, анчах ним тума та çук. Ара, пĕр хĕр пур чухне теприн пуçне çавăракана ăçтан ырлăн? Толикпе вăл çывăх туссемех мар пулин те, хăйĕнпе пулни-иртнине мухтанса каласа кăтарткалать лешĕ. Хулара унăн чаплă хĕр пур-мĕн. Чиперккепе вăл пиччĕшĕ патне хăнана кайсан паллашнă. Марук унпа танлаштарсан нимех те мар имĕш... Çаксене хĕре каласа парсан-и? Питрен сурать Толике, анчах...

Эх, Илюка Марук юратас пулсан вăл никам çине те çаврăнса пăхмĕччĕ. Çук çав...

Вăхăт пĕрмай юртать. Вĕсем сакăр класс пĕтерчĕç. Марукпа Толик тăххăрмĕшне çӳреççĕ. Илюкăн урăхла тума тиврĕ. Фермăна ĕçе кĕчĕ вăл. Амăшне кансĕр-çке. Çурт лартмалла. Шкул директорĕ те чĕнтерсе калаçрĕ унпа. Арçын ача каçхи шкула çӳрессине пĕлсен çеç аран-аран килĕшрĕ.

Илюк лайăх вĕренет тесех калама çукчĕ унччен. Халь вăл кунта — пултаруллисенчен пĕри. Чи кĕçĕнни пулин те, хисеплеççĕ ăна. Камсемпе пĕрле пĕлӳ илет-ха çамрăк ĕçчен каççерен? Унпа ялан юнашар ларакан Шурик — ирĕк пурнăç шыраса килтен тухса тарнă хыççăн темиçе çултан каялла таврăннăскер. Тата çамрăках мар темиçе техничкăпа шофер пур. Вĕсене директор ĕçе те каçхи шкула çӳремелле килĕшсе татăлса илнĕ. Мĕн тăвăн, пĕр-икĕ çыншăнах уроксем

ирттерес килмест пуль. Учительсем шкул ачипе калаçнă пекех калаçаççĕ-ха Илюкпа.

Вăл тăххăрмĕш класран аван вĕренсе тухрĕ — вуннăмĕшне çӳрет ĕнтĕ. Ĕçлесе те аван илчĕ кăçал. Хĕле кĕрес умĕн çав укçапа купăс туяннăччĕ. Темиçе кĕвĕ вĕренме ĕлкĕрнĕччĕ çак вăхăтчен. «Çутă ĕмĕте» те ĕнĕрлекелет, анчах ăна пуринчен лайăхрах калама хăнăхмалла унăн. Хăвăртрах, васкарах. Хĕрарăмсен уявĕ тĕлне. Ун чухне ялти çамрăксем концерт лартса параççĕ-çке.

Кăçал Марукпа пĕр чĕлхе тупмаллах Илюкăн. Кĕркунне Толике салтака илсе кайма пултараççĕ. Çулĕпе те аслăрах, чире пула вĕсемпе вĕренме юлма тивнĕ. Вăл çук чухне Марукпа çӳреме пуçласан: «Эпĕ салтакрипе усă курчĕ», — тейĕ. Тĕрĕссипе, вăлах мар-и Марука Илюкран сивĕтекенни? Пĕрмаях унран кулма тăрăшатчĕ. Амăшĕ сыпкалани пирки те сăмах тиветчĕ ăна самаях. Пĕр урамра пурăнаççĕ-çке. Амăшĕн мыскарисене, Илюк ăна çавăтса таврăннисене курсан ачасене кула-кула каласа кăтартать. «Амăшĕпе пĕрле Илюк ĕçке-çике çӳрет», — тесе хăйĕнчен хушса хума та именсе тăмасть çитменнине. Юлташĕн чĕрине çакă йĕппе чикнĕ пек ыраттарнине чухласчĕ.

...Çапла, Мартăн 8-мĕшĕ тĕлне «Çутă ĕмĕт» кĕввине шăрантарма вĕренмеллехчĕ унăн. Систĕрччĕ Марук. Тепĕр тесен, тĕрĕсех те мар-çке ку: пĕрин икĕ хĕр таран, теприн — пĕрре те çук.

...Ĕмĕчĕ татăлчĕ Илюкăн, кăмăлĕ хуçăлчĕ. Купăсне вăрларĕç унăнне.

* * *

Пӳртне Мирун çиçĕм пек вирхĕнсе кĕрсе тăчĕ те арăмĕ çине сиввĕн пăхса илчĕ.

— Чăмласа панине çăтса яма пĕлмерĕн, — ятлаçма пуçларĕ вăл кĕтмен çĕртен.

— Мĕн пулчĕ, ара, мĕн пулчĕ? — сехĕрленсе ӳкрĕ Кĕтерук. Ку уншăн уяр кун аçа çапнă пекех туйăнчĕ.

— Чĕнсе тăратăн тата! — кăшкăрса тăкрĕ Мирун çиллине шăнараймасăр. — Сана пула виçĕ пин тенкĕ укçа çухатрăмăр. Виçĕ пин тенкĕ!

— Ан калаç кирлĕ мара! Ăçтан пултăр пĕччен хĕрарăмăн çавăн чухлĕ?

— Вăл ачине амăшĕ патне хăварсах пулă тытма тухса кайнă вĕт. Унта, чухлатăн пуль хăвах, хĕрарăмсем сахал, арçынсем нумай. Майне пĕлнĕ пулас теççĕ. Виçĕ пин тенкĕ вĕçерĕнчĕ вĕт, çăварти чăмлак тухса ӳкрĕ. Кунашкал мăшкăл ăçта пур?!

— Такам тупса савăнать ĕнтĕ, — сăмах хушрĕ арăмĕ, — такам ырă курать. Пĕр машина илмелĕх.

Иккĕшĕ те çакăн хыççăн шыв сыпнă пек шăпланчĕç. Енчен те çав тупнă телей çилпе вĕçсе кайман пулсан, тăпрас ăшĕнчи кĕленче банкăна укçа мĕнле çăмăллăн кĕрсе ӳкме пултарни пирки шухăшларĕç ĕнтĕ.

* * *

Пĕррехинче Мирунпа Кĕтерук, кӳршĕ ял çумĕнчи картунра пурăнакан вăрман хуралçи патне лашапах çĕр каçмалла кайнăскерсем, ир-ирех килне таврăнма тухнăччĕ. Мухмăрĕ иртсе пĕтменнине пула арçыннăн ăш хыпрĕ кĕç. Вăл пĕр çурт умĕнче лашине чарчĕ те тилхепине арăмне тыттарса:

— Эпĕ шыв ĕçсе тухам-ха наччас, — терĕ.

Никам та пулмарĕ пӳртре. Те выльăх пăхма

тухнă? Сахал-им кил-çурт таврашĕнче ĕç? Шыв витринчен малтан тенкел çинче ларакан купăса асăрхарĕ арçын. «Ывăлăм тахçантанпах илсе пама юншăхлать, — шухăш çиçсе илчĕ пуçĕнче. — Укçана та сая ярас çук». Мирун пĕр курка шыв лăнкăртаттарчĕ те купăса арчипе пĕрлех хул хушшине хĕстерсе тухрĕ.

— Ăçтан тупрăн? — пăшăлтатрĕ арăмĕ ют япалана утăпа васкавлăн витсе.

— Хуçи хĕрĕнкĕ выртать. Мухмăр чĕртмелĕх укçалла купăсне тархасласах сĕнчĕ, — кĕскен çеç хуравларĕ Мирун лашине сиккипе чуптарнă май. — Хăвах пĕлетĕн вĕт, Славик купăс тесе хăлхана çĕртет.

Кĕтерук ырă мара, тĕрĕссипе, упăшки суйнине, сисрĕ-ха, анчах шарламарĕ, йăл кулса илчĕ çеç. Мăшăрĕ унран нимĕн те пытарманнине пĕлет вăл. Ахальтен мар вĕсене ăмсанса «пĕр çăвартан пурăнаççĕ» е «çӳпçипе хупăлчи» теççĕ.

Чăннипех те, тату пурăнаççĕ Мирунпа Кĕтерук. Ял çинче ят яман. Пуянлăхĕ те пур. Хăйсем калашле, майне чухлаççĕ. Кĕтерук столовăйран ачипăчи валли кучченеç хĕстермесĕр таврăнмасть. Мирун колхоз машинипе усă курма пĕлет. Сыпкалама хушăран сыпкалать ĕнтĕ. Уншăн ăна айăплама çук. Вăл хăй кĕсйинчен кăлармасть. Арăмĕ те ăна хĕрарăмсен йăлипе çеç кăштах ятлам пекки тукалать. Çапла, лайăх пурăнаççĕ Мирунпа Кĕтерук, килĕштерсе. Пурнăçĕ кал-кал пырать, вĕсене нимĕнле хуйхă-суйхă та пырса тĕкĕнмен-ха...

Тĕкĕнменччĕ те — тĕкĕнчĕ çав.

Купăса утă ăшне йăпăр-япăр чиксе хучĕç. Çуна кăпăшка çĕнĕ юр çинче тикĕссĕн ярăнса çеç пыратчĕ. Çĕрĕпе каннă лашана хăвалама кирлех мар.

Мирун чăпăрккине çĕклет кăна — ут юртма та пуçлать. Ялтан тухсан, хĕреслĕ çул тĕлне çитеспе, юр хырса хирĕç килекен трактора тĕл пулчĕç. Хунар çутисенчен хăраса çул айккине тапса сикрĕ лаша. Çав вăхăтра тухса ӳкнĕ те ĕнтĕ купăс. Арăмĕ ăна сыхлама мар, хăй те аран-аран тытăнса юлчĕ. Тракторисчĕ юр ашакансем çине çăвар карсах пăхса пынипе ăна асăрхаман пулас. Купăс, тракторăн кĕреçине çакланса юр айне пулнăскер, пырсан-пырсан çул айккине варшăнса юлнă.

Лашине каялла çавăрса та шырарĕç Мирунпа Кĕтерук — тупаймарĕç. Ăçтан тупăн-ха çук япалана? Çул юппинчен тухнă Хветут мучи ăна илсе кайма ĕлкĕрнĕ иккен. Пĕр-пĕрне курман та вĕсем.

«Темех ĕçлесе илнĕ япалах мар-ха», — чунĕ вĕчĕрхенчĕ пулин те, хăйне хăй лăплантарма тăрăшрĕ ун чухне Мирун. Пĕлмен-çке унта виçĕ пин тенкĕ пулнине.

— Мĕн тума укçине унта тытнă-ха вĕсем? — шăплăха пăсрĕ шалт тĕлĕннĕ Кĕтерук.

— Маюкĕ юлашки вăхăтра йăлтах ĕçке ерсе кайнă тет. Ывăлĕ шутласа пăхнă та — чакнă. Перекет кассине хума шутланă вара. Унччен амăшĕнчен пытарас тенĕ. Купăс вăл енчĕк мар-ха та — кам тавçăртăр? Тен, никамах та тупайман пуль-ха. Юр айĕнчех-тĕр, — çапах та шанчĕ Мирун.

Вăхăт çур енне кайсан кашни кунах тĕрлĕ сăлтав тупса хăй «телейне çухатнă яла» çӳреме пуçларĕ вăл. Çуранах ланккать, пĕр-пĕр машина е лав хăваласа çитсе ларма сĕнсен каллех тĕрлĕ сăлтав шыраса тупма лекет. Курăнмасть те курăнмасть купăс. Вăл кирлех мар-ха — укçи! Ун

чухне чаплă аккордеонне те илме пулĕ. Аккордеон çеç-и?..

Пĕррехинче Мирун лачкам тар пулса таврăнчĕ. Салтăннă май кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ:

— Пĕтĕмпех çав эсреле пула...

— Çĕлен эсĕ ху, вĕре çĕлен! — чăтса тăраймарĕ арăмĕ упăшки тракториста вăрçнине пĕлмесĕр, хăйне ятлать тесе шутлаканскер. — Хăçантанпа чашкăрса çӳретĕн! Пĕрех хут ма хама таптаса каймарĕ-ши? — ӳлеме пуçларĕ Кĕтерук.

— Луччĕ пулатчĕ, — те арăмĕ ахалех хăйĕнпе хирĕçсе кайнишĕн, те шӳтлесе каласа хучĕ Мирун.

— Аха, Çерçи Анюкĕпе çавăн чухлĕ укçапа савăнса пурнасшăнччĕ-тĕр. Калап, арçынсăрмĕнсĕр кермен пек çурт туса лартрĕ. Пĕрмай ун патĕнчен ĕçсе таврăнатăн.

— Эпĕ путевкăсăр пĕртте кайман, — чĕрре кĕчĕ упăшки.

— Вăрмана ик-виçĕ рейс тăватăн та — пĕрре тесе çыратăн. Çавăнпа кăçал ĕçлесе сахалтарах илтĕн, — парăнмарĕ арăмĕ.

Татах ятлаçатчĕç пуль — калинкке сасси чăрмантарчĕ.

* * *

Кашни кун кӳршĕ яла танккакан Мируна куракансем (уйрăмах почтальон) тĕлĕнмесĕр чăтаймарĕç. Сахрун Мирунĕ пăсăлнă е ухмаха ернĕ текенсем те пур. Арăмне куçранах систерекенсем те тупăнкаларĕç. Упăшки хутне кĕрсе çăвар уçмарĕ вăл. Мирун савăнчĕ çеç: ун пирки темĕскер усал шутлакансем пулмаççĕ эппин.

Кунĕпех çухалса çӳрекен Мирун пĕррехинче сĕм çĕрле те килне таврăнмарĕ. «Çерçи Анюкĕ

патёнчех пуль-ха», — тавçăрчĕ Кĕтерук. Унтах иккен вăл.

— Çын упăшкине хапсăнатăн, — siksе ӳкрĕ авăрланса килнĕ Кĕтерук.

— Хăвна пĕл. Арçынсене хыçалти хапхаран сахал кăларса ятăн-им? — сăмахшăн кивçене каймарĕ Анюк та.

Мирун вĕсем хушшине кĕрсе тăман пулсан ĕç-пуç çӳç тăпăлтарасси патнех çитетчĕ паллах. Аран-аран уйрăлчĕç. Урамра мĕнле чăтса пычĕç-ши «çӳпçипе хупăлчи»? Килне çитнĕ-çитменех тытăçса ӳкес пекех вăрçса кайрĕç.

— Аха, сан пата арçынсем кĕркеленĕ, уйрăмах Павăл пуль-ха. Эсĕ унпа хĕр чухнех ейкеленнĕ, — касса татрĕ Мирун.

Мăшăрĕ çын çумне ахалех хушни калама çук хытă тарăхтарчĕ Кĕтерука. Вăл упăшкине пăсăрлантарнă чухне çĕрти-çӳлтине хăвармарĕ.

Мĕн пулчĕ-ха капла? Мирун пĕлмен мар арçынсем ун арăмĕ патĕнчен аншарли йатнине. Кĕтерук та упăшкин «ĕçри çыхăнăвĕсем» çинчен чухланă. Анчах нихçан та пĕр-пĕрин пирки усал шутламанччĕ. Иккĕшĕ те çемьешĕн тăрăшнă, хĕпĕртенĕ хăйсен «пултарулăхĕсемшĕн».

Çак кунран пуçласа Кĕтерук кăвакарнă куçпа çӳреме тытăнчĕ. Мирунăн çи-пуçĕ — хуп-хура. Çынсем умĕнче çиме пикенчĕç пĕр-пĕрне. Шалт тĕлĕнчĕ ял-йыш. Анчах çав вăрланă купăс, тĕрĕсрех, укçа, пирки нихăшĕ те çăвар уçмарĕ-ха. Кĕтерукăн кăшкăрас — хăйĕн çылăхĕ сахал мар. Унăн «тимĕр шывне» ĕçсе лартса Çĕпре Симунĕ автансăр яла ăсаннăччĕ.

Пурăнчĕç çапла Мирунпа Кĕтерук, çынсем ăмсаннă мăшăр, яла култарса.

* * *

Кашнин нуши хӑйне май, Хветут мучи те аптрасах ҫитрӗ. «Мӗн тумалла?» — ҫак ыйту канӑҫ памасть ӑна.

— Карчӑкӑм, ват пуҫӑмпах чуна сутас мар-ха. Таврӑрса парас купӑса, таврӑрса парас.

— Эпир укҫине илсе юлнӑ тесе яла ят кайӗ тата…

Миҫе хутчен пулса иртмен-ши ҫакнашкал калаҫу ватӑсем хушшинче?

Купӑс хуҫи те пайтах пӑшӑрханчӗ. Чун савнине вӗҫертрех иккен вӑл.

Илюк купӑс туяннине Марук таҫтан илтнӗччӗ.

— Илсе пыр-ха клуба пӗр-пӗр шӑматкаҫ, — йӑлӑнанҫи пулчӗ вӑл. — Ташлаттар, юрлаттар пире, хӗрсене.

Ҫапла, хӗрсене тесех каларӗ вӑл. Вуннӑмӗш класра вӗренекенсем пымасан клубӗ пуш-пушах темелле. Ҫамрӑксем ялта сахал. Шӑматкаҫ уяв пекех вара. Хуласенчен таврӑнкалаҫҫӗ.

— Иртерех-ха хальлӗхе. Вӗренем-ха лайӑхрах, — кӑмӑллӑн хуравларӗ каччӑ.

— Халӗ тин ӑста вӑйӑҫӑ пулайӑн-ши? Тен, ахалех илнӗ купӑсне? — те чӑнласах каларӗ Марук, те шӳтлерӗ.

— Пӗрле вӗреннӗ Мишша калашле, хам тӑрӑшсан, тен, эсӗ те ман кӗввӗме килӗштерсех тӑнлӑн-ха, — пысӑк туйӑм сисӗнчӗ Илюк сассинче.

— Эппин, сана ятарласах хушам-ха. «Ҫутӑ ӗмӗт» юрӑпа савӑнтар мана, — ыйтрӗ Марук, каччӑ шухӑшне тавҫӑрса илнӗ тейӗн.

Илюк ҫав юрра хӑй ялти хора хутшӑннӑ май

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе кăтартакан концертра купăс каласа юрласа парасшăнччĕ. Парасшăнччĕ те...

* * *

Хветут мучи Илюка тĕл пулман мар-ха. Кашнинчех куçĕнчен пăхма именет. Сăмах тапратмах шутларĕ паян.

— Илюк, çав... купăс... мĕнлерех? — такăна-такăна ыйтрĕ вăл.

— Тупăнмарĕ, Хветут мучи, — хаш-ш сывларĕ çамрăк çын.

— Укçи те нумай пулнă темеççĕ-и?

— Нумайĕ-масарĕ — аллă тенкĕ.

— Мĕн чул тетĕн?! — хăй хăлхине ĕненмерĕ мучи.

— Аллă.

— Эй, Илюк мăнукăм, тавах Турра. Сан купăсна сыхласа халтан кайрăм вĕт. Шăши-тавраш кăшламасть-и тесе кашни кунах кĕлет айне упаленсе кĕре-кĕре шăлавар пĕççисене çĕтсе пĕтертĕм. Ара, пин тенкĕ терĕç те. Сехĕрленсе ӳкрĕмĕр укçине эпир кăларса илнĕ тесрен, намăс курасран. Атя хăвăртрах пирĕн пата, — сасартăк хавхаланчĕ ватă çын.

Старикĕ пӳрте Илюкпа пырса кĕрсен Укахви кинемей хăраса кайрĕ. «Чăтса тăраймарĕ иккен, мур илесшĕ», — шутларĕ вăл. Чăннине пĕлсен мĕн тери хĕпĕртерĕ! «Тупнă телей» вĕсене епле нушалантарни пирки тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартрĕ:

— Çăварни тĕлне хатĕрлесе хуни кăшт пурччĕха, — тесе чăланаллаваскарĕ вăл, ытти кунсенче упăшки пăртак сыпсан та чăркăшакансker.

— Çук-çук, чăрманма кирлĕ мар, — яхăнне те ямарĕ Илюк.

— Тутанса пăхсам ĕнтĕ ячĕшĕн, — ӳкĕте кĕртме пăхрĕ Хветут мучи.

— Пĕр тумлам та юрамасть, — çар çынни пек çирĕппĕн каларĕ каччă. — Паян шкула каймалла.

Хветут мучи хупăлчăка вăхăтлăха хăварма сĕнчĕ. Сĕвĕнсе пĕтнĕ вырăнсене çыпăçтарма пулчĕ вăл.

Илюк купăса çĕклерĕ те ватăсене тав туса тухса утрĕ.

— Амăшне хуман, — ырламасăр чăтаймарĕ кинемей.

Хĕвеллĕ çанталăк. Юр ирĕлет. Ăшă. Илюк çав тери хаваслă. Килне вăл таврăран, тĕрĕсрех, Маруксен умĕнчен, кайма шутларĕ. Çул çинче Пракуха, ял хыпарçине, тĕл пулчĕ.

— Тупăнчĕ-им? — пĕлме васкарĕ лешĕ.

— Çапла, — кĕскен хуравлама тăрăшрĕ Илюк, Пракухĕ мĕнлереххине пĕлекенскер.

— Кам пĕçертнĕ?

— Хветут мучи паян тупса таврăннă, — суйрĕ Илюк. — Юр айĕнчен тухнă.

— Укçи те пинĕпех пуль?

— Аллăран пин таран ӳсме пултарайман ĕнтĕ! — çиллессĕн кăшкăрчĕ каччă çаврăнса пăхмасăрах.

Пракух хăйĕнпе тĕл пулнă ушкăна Маюк ывăлĕн купăсĕпе пин тенки тупăннине калама пуçларĕ.

Илюк илтмĕш пулса малалла талпăнчĕ. Чунĕ хăпартланса кайнăран вăл чăтаймарĕ-тӳсеймерĕ — Маруксен тĕлне çитеспе «Çутă ĕмĕт» çеммине шăрантарса ячĕ.

Чун савниййĕ урамалла пырса пăхрĕ те Илюка курсан чӳречене асăрхануллăн кăштах уçса кантăк карри хыçне тăрса тăнларĕ илĕртӳллĕ кĕвве. Хăй те пĕрле шăппăн-шăппăн юрларĕ:

— Çур çитсессĕн çĕмĕрт
Çурнăн çеçкине
Çупăрларĕ ĕмĕт
Çамрăк чĕрене...

Темшĕн хĕрĕн сасси кăштах чĕтререх тухрĕ. Тен, юратнă юрă чунне пырса тивнĕрен-ши ку? Е сăлтавĕ татах пур?

— Çынсене юрасчĕ
Ырă ĕçĕмпе.
Телее курасчĕ
Ĕмĕр вĕсемпе, —

хăюланчĕ Марук вăйăç аякка кайнăçемĕн ăна илтеймессине чухласа.

Хĕр юррине сасартăк пăлхавлă шухăш татрĕ. Ара, Илюкăн купăсне вăрланă тесен вăл та вăрттăн пайтах пăшăрханчĕ. «Апла пулин те кĕвве вĕренме ĕлкĕрнĕ. Епле майпа? Нумаях пулмасть тупăнман тетчĕç-çке купăсĕ», — шалт тĕлĕнчĕ хĕр.

Ăçтан пĕлтĕр-ха вăл кирек мĕн пулсан та юрра Мартăн 8-мĕшĕ тĕлне калама вĕренме Илюк тупа тунине, çав тĕллевпе Чĕлĕх Куçми патне тăтăшах çӳренине?

«Тĕнче хĕсĕр мар, пулаççĕ ырă кăмăллă çынсем», — шухăшларĕ çав кунсенче инкек тӳснĕ çамрăк вăйăçă ăна ăшшăн йышăнмассерен, часчасах килсе çӳреме ыйтмассерен. Купăсне те концерта илсе кайма сĕнчĕ. Эппин, хăйĕнни паян тупăнман пулсан та çынсен ырă кăмăлĕ пулăшнипе «Çутă ĕмĕтсĕр» пĕрех юлмастчĕ концерт.

Каччă хăйĕншĕн тепĕр çĕнĕлĕх тупрĕ, çирĕппĕн ăнланчĕ: пурнăçра хуçăлса ӳкме васкамалла мар, инкек-синкеке çĕнтерме тăрăшмалла чи малтан.

* * *

Ырă хыпар çуран çӳрет, усал хыпар утпа çӳрет тесе ахальтен каламан çав. Купăс тупăнни Мирунпа Кĕтерук хăлхине те кĕчĕ. Ку чăн-чăн усал хыпарах пулчĕ вĕсемшĕн.

— Эх, Мирун, — ӳпкелешрĕ арăмĕ, — хамăрăн пинĕ-пинĕпе укçа пур чухне аллă тенкĕшĕн яла култартăмăр пулать.

— Кам пĕлнĕ ăна? — пуçне усрĕ упăшки.

Ваттисем ăс вĕрентсе янтти янахран пырса çапать тесе каланине аса илтересшĕнччĕ çеç арăмĕ — купăс сасси илтĕнсе кайрĕ.

«Кам вара унта ир-ирех савăнса çӳрет?» — кăн-н пăхса илчĕç иккĕшĕ пĕр-пĕрне харăсах. Чӳречерен курасшăн урам енчи пӳлĕме васкаса кĕчĕç.

Радио-мĕн. Кӳршĕ ялсен уяв ячĕпе кăтартнă концертне çырса илнĕскере районти кăларăмра параççĕ иккен.

Çепĕççĕн те ăшшăн янăрать «Çутă ĕмĕт» юрă. Вăл вĕçленес умĕн Мирунпа Кĕтерук репродуктор патнех пырса тăчĕç.

— Çăлтăр евĕр çунтăр
Çутă юрату.
Пĕтĕм пурнăç унсăр —
Пысăк çухату, —

питлерĕ тейĕн вĕсене уçă сасă çывăхрах. Юлашки йĕркене солист темиçе хут юрларĕ-ши, е Ми-

рунпа Кĕтерук хăлхисенче çеç «...пысăк çухату... пысăк çухату... пысăк çухату...» тени хăй тĕллĕнех вĕçĕмсĕр янăрарĕ, — çавна вĕсенчен çийĕнчех ыйтас пулсан та, нихăшĕ те татса калаймĕччĕ.

## ÇĂЛА ПĂРАХНĂ ÇИВĔЧ ÇĔÇĔ

Уйăх тухманран тавралăх сĕм тĕттĕм. Виçĕ çамрăк, килĕшсе татăлнă пекех, урам вĕçĕнчи карта çумне купаланă пĕренесем патне пырса тухрĕç. Сывлăх сунчĕç пĕр-пĕрне, алă тытрĕç. Пурте салтакран тинтерех кăна таврăннăскерсем. Пĕр нуша канашлама хистет вĕсене: икĕ çул хушшинче тумтирĕсем тăвăрлансах çитнĕ. Хуçисем патварланнăран тăвăрланнă ĕнтĕ. Чипертерех çӳрес тесен пĕр-пĕр çĕре темиçе эрнелĕх калăма кайса укçа туса килмелле. Хăйсен колхозĕнче кирек мĕн чухлĕ пилĕк ав — тӳлемеççĕпе пĕрех. Ял çыннисене ниçта та кăларса ярасшăн мар тата пахча касса илессипе хăратаççĕ. Çĕр улмисĕр тăрса юлсан мĕнле пурăнмалла? Иккĕмĕш çăкăр — хресчен шанчăкĕ. Ку виçĕ çамрăкшăн хăрушлăх çук-ха. Юратнă Тăван çĕршыв салтакран таврăннисене пĕр вăхăт канма саккунлă ирĕк панă. Ирĕкне парасса панă-ха та — укçине парса яман. Ялта ӳснĕ çыннăн вара ашшĕ-амăшĕн ĕнси çинче ларас йăла çук.

Киле çаврăнса çитнĕ çамрăксем ик-виçĕ кун хăнана çӳрерĕç-ха. Патшалăх умĕнчи парăма татнă çынна ялта хисеплеççĕ. Вăл хурăн тăрринчен те хурăнташ ан тивтĕр — пĕрех сумлăн сăйламалла ăна. Унсăрăн ху хисепрен тухатăн. «Ах, намăс, çав салтакран килни темиçе кун иртрĕ ĕнтĕ, çапах хамăр тĕпелте чыс кӳреймерĕмĕр, —

хыпаланаççĕ кӳршĕри хĕрарăмсем. — Ашшĕ (упăшкисене çапла чĕнеççĕ кунта) пĕрмай ятлаçать».

Салтакра хăй те тахçан пулнă «ашшĕн» ятлаçма та сăлтавĕ пур. Вăл сумлă çамрăкпа пĕр сĕтел хушшинче ларса унпа пĕр тан тытасшăн хăйне. Çарти лару-тăрăва ыйтса пĕлмелле, иртнĕ кунсене аса илмелле: вăл та маххă паман-çке хăй вăхăтĕнче.

Ялта тата тепĕр лайăх йăла хуçаланать: çартан пĕрле таврăннисене хăнана пĕрле чĕнеççĕ. Илменевсен, Викторăн ĕнтĕ, тăванĕ-пĕтенĕ йышлах мар-ха. Çапах Петĕр, Çемен, Рома тантăшĕсемпе пĕрле ялта кĕмен кил те юлмарĕ темелле. Хырăм çурăлса кайиччен апатне çи, сăйлан. Çамрăка килĕшсех кайман йăла та пур ялта: «Хисеплесен шалттин! туса пар», — хистеççĕ хуçисем. Ай хистеççĕ! Пысăк стаканпа ярса параççĕ тата. Тăррине çеç татса пани ниепле те тивĕçтермест. Юрать-ха, Виктор çирĕп тытма пĕлет хăйне. «Юрасах каймасть мана, салтакра вархырăм сиенленчĕ», — суять вăл ялта усал хыпар хăвăрт сарăласса пĕлсе тăрсах.

Петĕр те сыпсах каймасть. Упа пек тĕреклĕ Ромăшăн ним те мар, ярса панă кашни куркана çăварне ӳпĕнтерет, çапах хăнк та тумасть, тăнк кăна тăрать ура çинче, сулланкаламасть те. Çемен вара икĕ-виçĕ киле çитсен çемçелсех каять, кăштах канма тесе вырăн çине вырттарнăскер кĕçех хуп турттарма пуçлать. Хăйсем патне хăнана илсе кайма черет çитнĕ тăванĕ вăратать-вăратать — усси çук. Хайхи ырана хăварма тивет. Килне çитсен арăмĕ мĕскĕне, ним айăпсăр çынна, пĕçерккĕ парать ĕнтĕ. Ара, апат-çимĕçне тăрăшса хатĕрлесе хунă — тепĕр кунччен техĕмĕ

пĕтет. Хăш чухне çакăн пек пăтăрмахсем сиксе тухаççĕ: упăшкине мăшăрĕ: «Паян илсе килнĕ пултăр, ху часрах кӳпсе ан ларт», — тесе шаккасах кăларса ярать. Салтак ачисене куçран вĕçертес мар шутпа килтен киле çӳрет хайхи. Пынă çынна мĕнле хăналамăн? Малтанхи стаканне яхăнне те ярасшăн мар-ха вăл. Хăтăлайăн-и тарават хуçаран? «Пĕр стаканпа аптрамастăн», — ӳкĕте кĕртме пĕлет лешĕ. Акă иккĕмĕш сăпатри «аптрамастăн, аптрамастăн, аптрамастăн» сăмах ерипен «аптрамастăп, аптрамастăп, аптрамастăп» текен пĕрремĕш сăпата куçать. Унтан пăхăнтаракан виççĕмĕш сăпат черечĕ çитет систермесĕрех: аптрать этем. Юрать-ха, Рома тĕреклĕ — вăл çавăтса пынипе чиперех çитеççĕ чĕннĕ çĕре. «Мĕн каларăм сана? Хăнасене пăхас вырăнне кӳпсе лартнă», — тустарать арăмĕ. Çапах та ăшĕнче савăнать: хатĕрленĕ апат-çимĕç кивве юлмасть, тăрăшни сая каймасть.

«Эрех-сăрапа хистесех хăналасси — япăх йăла, унран пĕчĕккĕн хăтăлса пымалла, — шухăшларĕ Виктор. — Сĕтел хушшинче чей ĕçсе шăкăлшăкăл калаçса чуна уçма хăнăхмалла».

Çемен паян юнашар ялтан ырă хыпар илсе килнĕ: ĕç пур, вите пураласа хăпартмалла иккен. Виктор хулана çитсе килсенех унта тухса кайма килĕшсе татăлчĕç.

Урамĕ тĕттĕм. Виçĕ çамрăк тăракан тĕлти юпа çинче çеç лампочка çунать. Йăр та яр çаврăнать ун тавра тĕрлĕ хурт-кăпшанкă. Кăпăш юра лăпкă çил вĕçтернĕ пекех туйăнать. Тата аслă урам леш енчи тарасаллă çăл тĕлĕнчи юпа çинчи лампочка çутă сарать хăй тавра. Виçĕ тантăш килĕсене саланма пуçтарăннăччĕ ĕнтĕ — тĕттĕмре мĕлке

паларчĕ, вăл шыв айĕнчен тухнă пек çывхарчĕ. «Хам тăйăççан, туйă пуйăççан» — Рома — утать иккен кунталла: тӳрех палласа илчĕ ăна Виктор. Мĕне пула ача чухнехи витлев аса килчĕ-ха — çав шухăш пуçне те кĕмерĕ. Вĕсем хушшинче тахçантанпах усал-тĕсел пулман. Чикан темеллеччĕ хăть. Çак хушма ят ун çумне çыпăçнин сăлтавĕ чăн ятĕнченех килнĕ-ши? Чикансем хăйсене рома теççĕ-çке. Тен, сăн-пичĕ парнеленĕ çак хушма ята: çӳллĕскер вăл, йăм хура çăра çӳçлĕ те хуп-хура куçлă. Рома тантăшĕсене ăшшăн сывлăх сунчĕ, алă тытса тухрĕ.

— Пирус тиверттерĕр-ха, — терĕ вăл.

Виктор, хĕрарăмсем калашле, çав сысна та çимен япалана çăварне хыпманнине пĕлет-ха. Çавăнпа ун енне çаврăнса та пăхмарĕ. Çемен пачка кăларса тыттарчĕ. Рома пирусне тиверт-рĕ те темиçе хут ĕрехетлĕн ĕмсе илнĕ хыççăн тан-тăшĕсене йăлăнуллă сăнпа пăхса çаврăнчĕ.

— Камăн çĕçĕ пур? Питĕ кирлĕ мана, — терĕ вăл куçне йăлтăртаттарса.

Пурте ун çине кăн-н пăхса илчĕç.

— Çĕр варринче çĕçĕпе мĕн тăватăн ара? — ыйтрĕ унран Петĕр. — Сурăх пусмастăн пуль те? Е сысна чикетĕн-и?

— Кĕçĕр çĕçĕ илсе тухма манса кайнă. Катя унпа юмăç пăхма юрататъ. Экстрасенс вăл. Ша-баш килĕшет ăна. Вара унăн раж пуçланать те, стриптиз кăтартма тытăнать, — пĕр именмесĕр сăлтавне пĕлтерчĕ вăл.

Ялти хитре те хисеплĕ хĕр çинчен çапла калаç-ни никама та килĕшсех каймарĕ пулас. Арçын пуçпа мĕн тума пĕтĕм вăрттăнлăха уçса памалла такама? «Катя çав таранах пăсăлса кайнă-ши?

Ёненме те май çук», — ыйту çиçсе илчĕ тантăшсен пуçĕсенче.

— Мĕн тăвас çĕçĕпе пирĕн? — пуриншĕн те хуравларĕ кăштахран Петĕр.

Виктор сисмен те — чĕри кăлт-кăлт тапать иккен. Суять-çке вăл пĕрле вĕреннĕ тантăшне. Унăн кĕсйинче çĕçĕ пур, паян ирхине çеç хăйранăччĕ, питĕ çивĕч.

— Салтакран илсе килнĕ кинжалу çумра марим? — Виктор енне çаврăнчĕ Рома.

— Мĕн тăвас ман унпа? Шыв ĕçес килет-ха темĕн, — терĕ те пичĕ хĕрелнине туйнăскер аслă урам леш енчи тарасаллă çăл патне утрĕ.

Алăкне уçса кĕчĕ те сăнчăра хăвăл çумĕнчи пăтаран вĕçертме çеç ĕлкĕрчĕ — патьен пурана чăнкăр-чанкăр çапăна-çапăна çӳлелле вирхĕнчĕ. Аран тытса чарма ĕлкĕрчĕ ăна вăр-вар йĕкĕт. Такам ăна шыв ăсмасăрах çаклатса хăварнă-мĕн. Виктор шыв ăсса кăларчĕ. Чăнах та, унăн ăшĕ хыпсах çитнĕ иккен. Кана-кана ĕçрĕ вăл. Чĕри çаплах лăпланмарĕ-ха унăн. Мĕн пулнă ăна? Кĕсьери çĕççи пĕççине пĕçертнĕн туйăнчĕ. Алли хăй тĕллĕнех ун патне кĕчĕ, хĕрсе кайнăскере сивĕтес тенĕ пек йĕннинчен кăлармасăрах патьене пăрахрĕ. Чăнах, чăш! тунăн туйăнчĕ. Виктор ăшне кантарма тепĕр хут шыв ĕçрĕ те патьене тăкмасăрах çăла антарса сăнчăра пăтаран çаклатрĕ. Пăшăрханăвне палăртас мар шутпа шăхăркаласа ушкăна таврăнчĕ вăл. Рома тем каласа кăтартнă пулас, ахăлтатса кулаççĕ Петĕрпе Çемен. Тен, Чикан Виктора кĕтсе тăнă, вăл çитсенех пуринпе те алă тытсах сывпуллашрĕ.

— Шыв ĕçес килет, те мухмăра кăштах кайрĕ, — тесе тарасаллă çăл патне утрĕ хайхискер.

Йăш-ш туса илчĕ Викторăн ăшра. Ара, çĕççине патьенрех манса хăварнă-çке! Ним те тăваймăн халĕ.

Ромăна тĕттĕм ерипен çăтичченех куçран вĕçертмесĕр ăсатса ячĕç тантăшĕсем. Хĕрарăмсем çеç мар, кирек мĕнле арçын та вăл хитрине чухлать, ăнланать, ăмсанать те.

— Ирех тăмалла, — хыпаланчĕ Çемен. Пĕрпĕрне алă пачĕç те уйрăлчĕç.

«Аван мар пулса тухрĕ, — ӳкĕнчĕ Виктор тĕттĕм урампа танкканă май. — Çĕççине эпĕ пăрахса хăварнине чухлать ĕнтĕ. Кĕвĕç чунлă-çке тесе шутлĕ тата».

Вăл килне кĕме васкамарĕ, тăкăрлăк енне пăрăнчĕ.

Виктор çапăçса çӳрекен ача пулман, никама та хăмсарса та курман темелле. Ял пĕлет çакна. Çĕçĕпе çĕрле урама тухасси çапларах пулса тухрĕ.

Вăл, вăрман варринчи ялта çуралса çитĕннĕскер, мĕн ачаран çутçанталăка юратнă. Тен, хăш тăрăхра кун çути курнинчен те килмест çакă. Сăмахран, ача чухне таврари вăрмана, унти тарăн варсене тантăшĕсене хăйĕнпе пĕрле пыма чĕнетчĕ — килĕшекен сахалччĕ. Укçа çырминче, виçĕтăвата чиркĕве пĕрин çине теприне лартсан та çӳлтин тăрри те курăнман тарăн варта, авалхи япаласем тупни пирки те калатчĕç ваттисем. Хурахсем пытанса пурăннă имĕш. Унта никамах та пымастчĕ унпа. Укçа тавраш Викторăн куçĕ тĕлне лекмен, анчах пĕррехинче кăткă упине, пĕчĕкскере, курнăччĕ аякран. Тĕрмешсех хăмла çырли çиетчĕ. Çын пекех татса илет те çăварне хыпать. Юрать-ха, Виктор енне çаврăнса та пăхмарĕ. Çавăн хыççăн арçын ача вăрмана пекĕ-

пе çӳреме тытăнчĕ. Ӳсерехпе те çак йăлана пăрахмарĕ. Çук, пĕр-пĕр тискер чĕрчунран шикленнипе те мар — вăрманта кĕпçе касса илет те шăхлич ăсталать. Кĕвви мĕнле илемлĕ! Пĕр-пĕр флейта айккинче тăтăр. Чĕрĕ сĕткен витĕм кӳрет пулас. Пӳрнесемпе пусса каламалли шăтăкĕсене пĕлсе тусан тем тĕрлĕ хитре çемĕ те шăрантарма майĕ пур. Кĕтӳçсен чуна тивекен тунсăхлă кĕввисем вăрмана ытакласа илсе ачан пуçне те çавăратчĕç. Темĕскер çитмен пек е ытлашши пулнăн туйăнатчĕ ăна. Çав асамлăха вĕçертесшĕн мар Виктор кĕтӳ хыççăн вăрттăн утатчĕ. Ăсталатчĕ-ăсталатчĕ шăхличсем, сасси-кĕввипе кашниех тепринчен уйрăлса тăратчĕ. Упрас килетчĕ вĕсене ĕмĕрлĕхех. Шел пулин те, кĕпçисем типсе ларсанах çав асамлăх çухалатчĕ, хитре кĕвĕ-çемĕ тухмастчĕ.

Виктор салтакра тăван ялне, ачалăхне аса илмесĕр пĕр кун та иртмен пуль. Çавăнпа та киле таврăнас умĕн çар лавккинче сăран йĕнĕллĕ пĕчĕк çĕçĕ туянчĕ асăнмалăх.

Паян ирхине вăл вăрманта ачалăх йĕрĕпе уçăлса çӳреме шутларĕ. Тин çеç хăйранă çивĕч çĕççине шăлаварĕн сылтăм кĕсйине чикрĕ. Тепринче — шурă пир татăкĕпе чĕркенĕ çăкăр чĕлли: çырма урлă каçсан хырăм выçать теççĕ.

Çак кунхине таçта та çитрĕ вăл. Авă çул хĕрринчи ватă юман тăрри хăрма ĕлкĕрнĕ-мĕн. Айлăмри капмар хыр, пĕлĕтсене пӳлес пек çӳллĕскер, чĕрĕ-сывах ларать иккен. Çулçăллă вăрмана мĕнле çакланнă вăл пĕр-пĕччен? «Касса ярса çуртарсан мĕн чухлĕ хăма тухмалла!» — тесе йăрăсскере ăмсанакансене пĕрре мар курнă Виктор. «Илеме курма пĕлмеççĕ», — тарăхатчĕ

арçын ача. Шел, йӗри-тавра урӑх пӗр хыр та ӳсмест. Вӗсем хӑйӑрлӑ вырӑна юратаççӗ çав.

Виктор кӳпчесе çитнӗ çамрӑк кӗпçене çивӗч çӗççипе касса илсе шӑхлич ӑсталарӗ. Ача чухнехи пекех мӗн чухлӗ кӗвӗ-çемӗ шӑрантармарӗ-ши? Тен, кайӑксем те юрлама чарӑнса тӑнларӗç, чӗпписем те апат шухӑшне манса кайрӗç. Салтакри пӗтӗм йывӑрлӑх манӑçрӗ. «Çутçанталӑк — чун уççи» тени суя сӑмах маррине вӑл пӗрремӗш хут вӑйлӑн туйса илчӗ-тӗр. Чун уççиех çав, унпа хавхаланма пулать.

Чылайччен çӳрерӗ йӗкӗт вӑрманта. Тахçан кӑткӑ упипе тӗл пулнӑ тарӑн вара та анчӗ. Хӑмла çырли халӗ те хӗп-хӗрлех. Чӑтаймарӗ: кӗсйинчи çӑкӑр чӗллипе вӗсене тӑраничченех çирӗ. Хал хушӑннӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Çав ача чухне тӗл пулнӑ кӑткӑ упипе вӑй виçес килчӗ. Кӗçӗн командирсен курсӗнче вӗреннӗскер унран йӑрӑрах пулнӑн туйрӗ хӑйне. Мӗн упи пултӑр халӗ? Вӑрман патшине, утамана, тахçанах тӑхлан çӗнтернӗ. Кашкӑрсем çеç яла кӗни халӗ те хушӑран пулкалать.

Сисмен те — каç сӗмӗ çапнӑ таврана. Виктор ялалла васкарӗ. Юлташӗсемпе тӗл пулма килӗшсе татӑлнӑччӗ-çке. Килне кӗрсе тӑмасӑрах палӑртса хунӑ вырӑна васкавлӑн утрӗ.

Халӗ унтан пусӑрӑнчӑк кӑмӑлпа киле таврӑнать.

Шухӑшӗ самантлӑха татӑлчӗ унӑн.

* * *

Ӑшӗ вӑркать те вӑркать Викторӑн. «Хам тӑйӑççан, туйӑ пуйӑççана» улталанӑшӑнах-ши? «Уроксене хатӗрленсе килместӗн, эх, мӗнле вӗренсе

тухăн?» — тенĕччĕ ăна пĕррехинче хĕрарăм вĕрентекен. «Хам тăйăççан, туйă пуйăççан вĕйенсе тухăп-ха», — тесе хуравланăччĕ вăл, селĕпскер. Ахăлтатрĕç вара класĕпех.

Шӳт тума юратаканни пĕлмĕше персе час-часах унран çапла ыйтнă: «Эй, ачи, эсĕ мĕн ятлă?» — «Йома», — хуравланă ку чăнласах. — «Хăлхи манăн япăхрах илтет. Мĕн?» — хăпман лешĕ. — «Йома!» — кăшкăрнă вара ача.

Аптраса ӳкекенскерех марччĕ вăл. Таçта та çитме ĕлкĕретчĕ. Пĕррехинче юлташĕсемпе «мина» тĕрĕслесе пăхма шутланă вĕсем. Консерв банкине тар тултараççĕ те тунката хăвăлне чикеççĕ, çапă хурса чĕртсе яраççĕ ăна. Хăйсем йывăç хыçне пытанаççĕ. Кĕтеççĕ-кĕтеççĕ — çаплах сирпĕнмест тунката. Чăтăм пĕтсе çитет хайхисен. Пуçĕсене çĕклесе йывăç хыçĕсенчен пăхаççĕ — кăвайчĕ сӳнсе ларнă иккен. Унта пырса вĕрсе тивертме тытăнаççĕ. Кĕрĕслетет тунката, пичĕ-куçĕ пиçсе, çӳçĕ пурин те ĕнсе каять. Икĕ эрне шкула çӳремерĕç, сыватмăшра выртса тухрĕç. Кайран директор патне чĕнтерсе пĕçерккĕ панă пулсан та, Рома хăнк та тумарĕ. «Манăн пит шатраллăччĕ, халь тап-таса», — мухтанчĕ вăл. Тепĕр темиçе çултан селĕплĕхĕ хайхискерĕн пач пĕтрĕ. Килте уроксене хатĕрленсе тинкеленмесĕрех лайăх вĕренме пуçларĕ. Тăнлă теççĕ-и-ха унашкаллисене? Пурте ăнланчĕç: ăслă çын тухать унран. Тен, пĕр пăтăрмах сиксе тухман пулсан тӳр килетчĕ çакă. Уншăн Виктор паян кунчченех хăйне айăплă туять. Пуç тавра лайăхрах шутласа пăхас, хăвна хăюллăрах тытас çавăн чухне — унăн шăпи те пăсăлмастчĕ, юнашар яла шкула çӳресе Викторпа пĕрлех вăтам пĕлӳ илетчĕ.

Çапла пулатчĕ-тĕр, анчах пĕррехинче, тăвата çул каялла, урамра иртсе пыракан Виктора клуб заведующийĕ асăрхарĕ те чĕнсе илчĕ.

— Эсĕ лайăх ӳкеретĕн. Стена хаçачĕ кăларма пулăш-ха, — тархасларĕ вăл. — Ак кунта кулăш кĕтесĕ валли вырăн юлнă. Ӳкерсе хур-ха туртакан арăш-пирĕш виçĕ ачана.

Йывăр мар ку. Самантрах пирус паклаттаракан виçĕ тăсланкă сăнарланчĕ.

Каçхине клуба пырсан акă мĕн курчĕ Виктор: фойере стена хаçачĕ умне пухăннă та яшкĕрĕм — ахăрать.

— Рома, чăн та сана ӳкернĕ вĕт кунта, мĕн мăшкăллаттаратăн çав Виктора? — тет вĕçкĕн Ваççа. — Силлесе ил ăна пĕрре!

Виктор чавсисемпе тĕрткелешсех стена хаçачĕ умне тухса тăчĕ. Ӳкерчĕкĕ айне çапла çырса хунă иккен: «Кармалов Роман, Михайлов Владимир, Сергеев Иван клубра туртма юраманнине пĕлмеççĕ».

— Акă хăех килчĕ кунта, — терĕ тахăшĕ.

— Тăн кĕрт-ха ăна, — хĕтĕртрĕ вĕçкĕн Ваççа, çулĕпе чылай аслăрахскер. Хăй кăштах хĕрĕнкĕ те пулас. Тен, Ромăна та аншарли ярса панă. Вĕсем нимере пулнă-çке. Утă капанĕ хăпартса панă пĕр карчăка.

— Эсĕ мĕн кулатăн манран? Эпĕ туртнине курнă-и? — çухаран ярса тытрĕ «художника» «прототип». Айăпсăрскер унран хăтăлма тăрăшрĕ, алли вĕçерĕнсе кайрĕ те Рома янахне пырса çапăнчĕ. Ку, хĕрсе кайнăскер, кулакана сăмсаран тăхăнтартрĕ. Тытăçса кайрĕç вĕсем. Юлташĕсем Рома хутне кĕчĕç, Виктора урапа тапатапах хĕнеме пуçларĕç. Юрать-ха, çав вăхăтра

Катя пырса кĕчĕ. «Мĕн тăватăр эсир?» — тесе сиксе ӳкмен пулсан вăл — тем пуласси пур.

Такам участковăя пĕлтернĕ. Пырса çитрĕ яла. Виктора правление чĕнтерчĕç.

— Камсем хĕнерĕç?! — ыйтрĕ капитан хыттăн.

Вăл, суйма хăнăхманскер, пĕр хушă çăварне шыв сыпнă пекех тăчĕ.

— Никам та, çĕрле такăнса ӳкрĕм, — тунчĕ арçын ача.

— Мĕн тыттаратăн?! Эпĕ йăлтах пĕлетĕп! — кăшкăрчĕ капитан. Хут кăларчĕ.

Виктор йĕркипе каласа пачĕ вара, лешĕ çырса пычĕ. Юлашкинчен ăна алă пустарчĕ. Ун хыççăнах Ромăна правление чĕнтернĕ, тĕрмене хуптарассипе хăратнă. Унтан амăшне чĕнсе килме хушнă. Пĕччен хĕрарăмăн сехри йăлтах хăпнă. Йăлăнма пуçланă вăл. Ывăлне хăтарсан укçа парассине те систернĕ. Капитан, мухмăрласкер, «çуттине» илсе килме хушнă. «Çăлăнтăмăр!» — хĕпĕртенĕ хĕрарăм. Савăнни кăлăхах пулнă. Çавăн хыççăн вăл тăтăшах Ромăсем патне «хăнана» çӳреме пуçланă. Эрех ĕçтерни çеç çитмест — çыртмалли кирлĕ. Пуçарнă ĕçе хупма кансĕррипе хăратать. Кашни пымассерен пĕр чăх каталать. Вара Рома амăшне çапла калать: «Училищĕне тухса тарас пулать хăвăртрах».

Çавăн пек хăталать вăл милици капитанĕн пусмăрĕнчен. «Çав пăтăрмах чăрмав кӳмен пулсан Рома та университета вĕренме кĕрес шутпа ыран манпа çула тухатчĕ пуль, — ӳпкелешсе утрĕ Виктор. — Чим-ха, мĕншĕн çав териех ăшăм çунать-ха? — хăйĕнчен хăй ыйтрĕ йĕкĕт. — Рома умĕнче айăпа кĕнĕшĕнех-ши? Апла, мĕншĕн Катя ячĕ чĕлхе вĕçне килесшĕн?»

Çав ят миçе çул ун чĕлхинчен кайма пĕлмен! Кăнтăрла та, çĕрле те. Тĕлĕкре те каç сиктермесĕр курнă çав илемлĕ ятлă хĕрачана.

* * *

Шкула та çӳреместчĕ-ха ун чухне Виктор. Хурсене çитерме ăна вырса илнĕ хире кăларса яратчĕç. Иртен пуçласа каçчен вĕсене куçран вĕçертмелле марччĕ. Пĕррехинче ĕççĕр аптранăран чулсемпе шакмакла выляса ларатчĕ. Пăхать — сăртран пĕр хĕрарăмпа хĕрача анаççĕ. Ун тĕлне ерипен çывхарчĕç. Асли тин çулнă курăк çĕклемне хул хушшине хĕстернĕ. Кĕçĕнни хулпуççи çине кăвак кофта уртнă, ун çине икĕ çурла хунă. Хальччен ниçта та курман чечеклĕ хӳхĕм кĕпепе. Мĕнле чипер хăй, куçĕсем епле хитре! Чĕри йăшт туса илчĕ арçын ачан. Вăтанчĕ. «Вăл авă çурлапа вырма вĕреннĕ, эпĕ вара пĕчĕк хĕрача пек шакмакла выляса ларатăп», — хĕрелсе кайрĕ Виктор. Вĕсем ăна асăрхаман пекех шăкăл-шăкăл калаçса иртсе кайрĕç. Ура çине сиксе тăрса мĕн курăнми пуличченех ăсатса ячĕ вĕсене арçын ача. Унтанпа ялан-ялан куçĕ умĕнче çак ӳкерчĕк.

Кил-йышĕ те сисрĕ пуль вăл сасартăк улшăннине, шухăшлăн çӳренине. «Виктор, эсĕ чирлеместĕн-и? — ыйтрĕ пĕррехинче амăшĕ ывăлĕн çамкине аллипе тытса пăхса. — Вĕриех мар пек», — лăпланчĕ вăл. «Ан пĕлчĕрех сăлтавне», — шикленчĕ арçын ача. Тĕлĕкре ятне персе ярас хăрушлăх çук-ха, мĕншĕн тесен ăна хăй те пĕлмест. Тĕлĕк тенĕрен, пĕррехинче акă мĕн курчĕ вăл.

Вăл туса лартнă ӳплере иккĕшĕ лараççĕ пек. Чиперскер таканран хуран çакса янă та яшка пĕçерет. Виктор кăвайтне хурсах тăрать. Тавра-

на тутлă шăршă сарăлнă. Пĕр-пĕрне куçран пăхса йăл-йăл кулаççĕ. Анчах ăна сĕртĕнме те именет арçын ача. Телейлĕ вăл, телейлĕ çав тери. Юрататъ ăна, юрататъ — çапах кун пирки калама хăяймасть. Чĕри сиксе тухасла тапать. Сиксе вĕрет хуран. Яшка пиçет. Таврана тутлă шăршă сарăлнă... Вăранса каять — чăнах та тутлă шăршă кĕрет. Ăçта вăл? Чăнах та ӳплерех-ши? Куçне уçма та хăрать.

«Яшка часах пиçет, аслисене вăратмалла пуль, çиччĕр те ĕçе кайма хатĕрленччĕр», — хăлхине кĕчĕ амăшĕн сасси. Телейĕ вара чĕрĕлсе ĕлкĕреймен кăвайт пекех самантрах сӳнсе ларчĕ, чĕрине темĕскер хĕсрĕ. Сасартăк тата темĕнле улшăну пулса иртрĕ: хуранта яшка лăкăртататъ, пӳртре сухан шăрши сарăлатъ.

Çакăн хыççăн çав тĕлĕке тепре кăна курасчĕ тесе мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши? Çук, курăнмарĕ урăх. Чылайччен тĕмсĕлсе çӳрерĕ вăл.

Çанталăк кĕр енне кайрĕ. Çулçăсем те сарăхма тытăнчĕç. Вĕлтĕртетсе çĕре ӳкекеннисем те кунсерен йышлăлансах пыраççĕ. Викторăн пĕрремĕш класа каймалла. Шкула каяс та килет, каяс та килмест. Шкула каясах килменнин сăлтавĕ — килтисем çĕнĕ тумтир туянса паманнинче. Сумкине те, пиччĕшĕ шкула çӳресе çĕтсе пĕтернĕскере, чăлантан илсе кĕрсе пачĕç.

Ăсатма ăна, пĕрремĕш класа каякансекере, никам та пыраймарĕ. Ашшĕпе унран аслисем (çулĕсен хушши пысăкчĕ вĕсен) ир-ирех йĕтем çине тухса утрĕç, амăшĕ ăна тумлантарчĕ те фермăна васкарĕ.

Вăл çитнĕ çĕре шкул кăткă йăви евĕрлех хĕвĕшетчĕ. Ниçта кайма пĕлмесĕр аптраса тăчĕ

Виктор. Юрать-ха, пӗрле хур пӑхнӑ Петӗр чупса пычӗ ун патне.

— Мӗн туса тӑратӑн кунта? Ҫавӑнта пухӑнмалла пирӗн, — терӗ аппӑшӗ енне кӑтартса.

Ачасене класӑн-класӑн йӗркипе тӑратса тухрӗҫ. Вӗсем — сулахайра, чи хӗрринче. Директорпа вӗрентекенсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ ятпа саламларӗҫ. Унтан ачасене сӑмах пачӗҫ.

— Халӗ Кетмелина Екатерина пӗрремӗш классене сӑвӑпа саламлать, — терӗ пӗр палламан аппа.

— Катя, вӗренекенсем ҫывӑхнерех пыр, — илтӗнчӗ хавхалантаракан сасӑ. Ҫаксен ҫумӗнчи ушкӑнран пӗр хӗрача тухрӗ те Виктор умнех пырса тӑчӗ.

«Вӑл-ҫке!» — палласа илчӗ ӑна арҫын ача. Кутӑн чакса хӑвӑртрах пытанас килчӗ унӑн. Шак хытса тӑчӗ мӗскӗн. «Асӑрхать вӑл манӑн кивелсе шӑтнӑ пушмака, — шухӑшӗ ҫиҫӗм пек ҫиҫсе илчӗ пуҫӗнче. — Тӗрлӗрен тӳме лартса тултарнӑ костюма, чӗркуҫҫи тӗлӗнчен ҫӗтӗлме пуҫланӑ шӑлавара курать». Катя (ятне пӗлет ӗнтӗ халӗ) сӑвӑ вуларӗ — арҫын ачан хӑлхине нимӗн те кӗмерӗ. Пичӗ ҫеҫ кӑвар пек ҫунать. Вӑйлӑн алӑ ҫупнипе ҫеҫ тӑна кӗчӗ Виктор. Палламан аппа вара мухтаса хыттӑн ҫапла каларӗ:

— Пӗрремӗш класс ачисем, Катя Кетмелина питӗ лайӑх вӗренет, эсир те унран тӗслӗх илӗр!

Каярах Виктор ҫакна пӗлчӗ: Катя унпа пӗр ҫулхискерех иккен, вулама-ҫырма пӗчӗклех вӗренсе ҫитнӗрен ӑна шкула иртерех янӑ.

Тӳрех тепӗр инкек татӑлса анчӗ арҫын ачан пуҫӗ ҫине. Катя класӗ вӗсеннипе юнашарах. Коридора тухма та шикленчӗ Виктор, тӗрӗссипе, кивӗ тумтирне асӑрхасран хӑрарӗ. Катя, шукӑль

тумланса çӳрекенскер, унран йĕрĕнессĕн туйăнчĕ. Чунĕ мĕн чухлĕ çунмарĕ-ши? Мĕншĕн пурнăçĕ çав тери йывăр-ши? Вăрçă пĕтнĕренпе темиçе çул иртнĕ пулин те, начар пурăнаççĕ. Пĕтĕм çемье (вăл та çав шутрах) тăрăнса ӳкесле ĕçлет, тар тăкать — пурнăçĕ пурпĕр ураланаймасть. Ĕнине кашкăрсем вăрманта çурса тăкнă, сысни чирлесе вилнĕ, чăххи-чĕппине курак йăтса кайнă. Инкек те синкек, инкек те синкек. Йывăр пурнăç та Катьăна манăçтараймарĕ. Кунĕн-çĕрĕн ун çинчен шухăшлатчĕ арçын ача.

Шкулта яланах мухтатчĕç хĕрачана. Ырă-ырă пулса каятчĕ Виктора. Ун çине сывлама та юраман таса асамçă пек туйăнатчĕ вăл.

Пĕррехинче иккĕшĕн амăшĕсем урамра калаçса тăнине асăрхарĕ. Пĕр-пĕрне питĕ лайăх пĕлеççĕ иккен вĕсем.

— Илле куштанлансах çитрĕ. Мĕн кăна каласа хăртмасть мана, — тарăхать Катьăн амăшĕ. — «Хĕрӳ те хăвнах хывнă, йăмпăлкка пулать ĕнтĕ», — тесе вăрçать.

— Хăвна хывнă, хăвна хывнă тесе кала, — ăс парать ăна Виктор амăшĕ.

«Эх, аннеçĕм, пĕлместĕн эсĕ Катя мĕнле лайăххине!» — кăшкăрас килчĕ арçын ачан. Хăйне аран-аран тытса чарчĕ.

Пĕр ирхине ашшĕ правленирен таврăннă та амăшне çапла каласа кăтартать:

— Çав Илле питĕ чее-çке. Пĕтĕм ачи-пăчине тăраттайккăна* кӳлсе вутă турттарса правлени умĕнчен иртсе кайрĕ. Хăй туртаран çаклатнă пăявне кăкăрĕ тĕлĕнчен çавăрса çыхнă, костылĕсемпе танклаттарса пырать малта. Çакна

* Тăраттайккă — çăмăл урапа.

хиртисем* курчӗҫ те тӗлӗнсех кайрӗҫ: «Мӗнле намӑс мар сирӗн пуҫлӑхсене? Инвалида лаша та памаҫҫӗ вутӑ турттарма», — пуҫӗсене суллакаларӗҫ вӗсем. Илле темиҫе кун хушши икшер-виҫшер лаша илсе вутӑ турттарнине пӗлмеҫҫӗ, — тарӑхрӗ ашшӗ.

Лайӑх хӗрачан ашшӗ усал пуласса ӗненес килмерӗ Викторӑн. Ҫапах та ҫакна чухларӗ: вӑрҫӑ инвалидне, хӑрах урине вӑрҫӑра ҫухатнӑскере, патшалӑх укҫа парса пулӑшать-мӗн. Ҫавӑнпа вӗсен ҫемйи ытлӑ-ҫитлӗ пурӑнаять, Катя та чипер тумланаfive.

* * *

Пилӗк ҫул тертленсе-ҫунса, вӑрттӑн юратса, савнӑ Катьӑран май килнӗ таран тарса ҫӳресе иртсе кайрӗ. Куҫӗ тӗлне пулма хӑратчӗ Виктор, аякран е хыҫран та пулин ӑна курсан питӗ савӑнатчӗ.

Пӗррехинче ҫурхи уява ял хӗрринчи уҫланка илсе тухрӗҫ вӗсене. Пӗтӗм шкулӗпех. Вӗрентекенсем саламларӗҫ, унтан ачасене сӑмах пачӗҫ. Чи малтан — Катьӑна, паллах. Унтан вӑйӑкулӑ пуҫланчӗ. Ӑмӑртакансем вара пушмакӗсене, чӑлхисене хывнӑ. Ҫарранах чупаҫҫӗ вӗсем. Хуралҫӑ пек тӑчӗ кунта Виктор. Катя ун умнех пырса тухрӗ. Ӑна пачах асӑрхаман пекех, таса шурӑ пӗр чӑлхана тытрӗ те пылчӑкпа вараланнӑ пушмакне шӑлса тасатрӗ.

Мӗншӗн Викторӑн куҫӗ тӗлне пулчӗ-ши ҫакӑ? Ах, пӗлесчӗ, ах, пӗлесчӗ, чӑлхапа мар, пушмакӗсене ун чунӗпе шӑлса тасатнӑн туйӑнчӗ! Чӗри ыратса килчӗ. Чӑтса тӑраймарӗ — айккинелле

---

* Хиртисем тесе вӑрмансӑр тӑрӑхра пурӑнакансене калаҫҫӗ.

чупса кайрĕ те татăлса йĕчĕ. Куççулĕ шăпăртатрĕ те шăпăртатрĕ. Юратупа курайманлăх хушшинче пĕр утăм тесе ахаль каламаççĕ çав. Пуш сăмах мар вăл. Куççульне шăлса типĕтрĕ те хăй улшăнса кайнине тӳрех ăнланчĕ. Чĕринче нимĕнле Катя та юлман.

Малалла вăл унран тарса çӳреме пачах пăрахрĕ. Юриех çапăнса та иртетчĕ ăна. Тумтирĕ япăхрах пулин те, чунĕпе вăл унран чылай тасараххине туйрĕ.

Çиччĕмĕш класа çитсен Виктор чиперех тумланса çӳреме тытăнчĕ. Хĕреснашшĕ комбайнерччĕ, çулла хăйĕн пулăшаканĕ пулма илчĕ. Укçи усса пычĕ.

Катьăпа иккĕшĕн час-часах тĕл пулма тиветчĕ, лайăх ӳкерме пултарнăран стена хаçачĕн редколлегине суйланăччĕ Виктора, «сӳннĕ юратăвĕ» унăн ĕçне пыра-пыра тĕрĕслетчĕ.

Катя ялти шкултан вĕренсе тухсан тӳрех педучилищĕне кĕчĕ, Виктор тепĕр çул юнашар яла çӳреме пуçларĕ.

Йĕкĕт аттестат илнĕччĕ ĕнтĕ, Катя килне каникула таврăннăччĕ. Клубра тĕл пулчĕç вĕсем, питĕ ăшшăн калаçрĕç. Хĕрĕн çепĕç сасси, илемлĕ сăн-пичĕ, хумлă-хумлă çӳçĕ, йăрăс пĕвĕ, çинçе пилĕкĕ, çӳллĕ кăкăрĕсем, йăрăс урисем йĕкĕтĕн чун хĕлĕхне сĕртĕнмесĕр иртеймерĕç. Ăна ăсатма каяс кăмăлĕ те пурччĕ — май килмерĕ. Кайран салтака илсе кайрĕç. Ун çинчен шухăшлама пуçланăччĕ инçетре. Çыру çырас кăмăлĕ те пурччĕ — адресне пĕлмерĕ. «Çартан таврăнсан тĕл пулатпăрах», — ĕмĕтленчĕ вăл. Салтакран маларах килнĕ Рома çавăрса илме те ĕлкĕрнĕ иккен ăна. Питĕ кулянчĕ уншăн — анчах ним тума та çук.

* * *

Иртнĕ кунсен асаилӳ çăмхине сӳте-сӳте килне çаврăнса çитрĕ Виктор. Салтăнчĕ те кравачĕ çине кĕрсе выртрĕ. Çывăрса каяс тесе тем пекех тăрăшрĕ — ыйхи килмест те килмест. Унталла-кунталла йăраланать йĕкĕт. Юлашкинчен сĕнк пулнă. Унта та пулин усал тĕлĕк курăнчĕ ăна. Çĕççине такам тупнă пек. Ăна шыраса килеççĕ авă. «Ман çĕçĕ мар, — тесе шарт та март тунма шухăшлать Виктор. — Ара, шывра алă йĕрри çухалнă», — лăплантарать пек хăйне. Ăна шырама килекенсем шак-шак! шаккарĕç чӳречерен. Хăраса вăранса кайрĕ йĕкĕт.

— Виктор, тăр-ха, тăр, — илтĕнчĕ урамран амăшĕн сасси. Вăл ĕнене кĕтĕве кăларнă та тӳрех хурсене улăха ăсатма шутланă ĕнтĕ. Пӳрте кĕрсе те тăман.

Йĕкĕт салтакла сиксе тăчĕ те апат çырткаларĕ, унтан докуменчĕсене илсе çула тухрĕ. Чи пысăк тĕллевĕ унăн — аслă пĕлӳ илесси.

Тарасаллă çăл патĕнче виçĕ хĕрарăм тăнине асăрхарĕ Виктор. Кăшкăрсах калаçаççĕ хăйсем.

«Çĕçĕпе... çĕçĕпе...» — хăлхана кĕчĕ пĕр хĕрарăмĕн сасси.

«Мĕншĕн хытă тарăхаççĕ?» — тĕлĕнчĕ Виктор, çапах та чарăнса тăмарĕ, укăлча еннелле васкарĕ. Автобуса ĕлкĕрмелле унăн. Юнашар яла çитме çичĕ çухрăм.

Ĕнерхи шухăш халĕ те сĕвĕрĕлсе пĕтеймен иккен-ха. «Катьăн адресне тупса çыру ямаллах пулнă çав, — ӳкĕнчĕ. — Вăл манăн пĕрремĕш вăйлă юратăвăм пулнине пĕлтермеллеччĕ. Мана салтакран кĕтсе илме те пултарнă Катя. Тен, Рома çав усал сăмаха мана кĕвĕçтересшĕн çеç

сарать? — иккĕленчĕ йĕкĕт. — Çĕçĕ. Юмăç. Экстрасенс. Шабаш. Раж. Стриптиз. Ытла та нумай мар-и ку пĕр çыншăн? Эпĕ унăн шăпине пăснишĕн тавăрасшăн-тăр». Икĕ çул каялла ăна пулах Катьăна ăсатма каяймарĕ-çке. Ун чухне иккĕшĕн патне пычĕ те Виктора айккинелле илсе кайрĕ.

— Петĕр пĕрле вĕреннисене çуралнă кунне чĕнет, — терĕ Рома.

— Ман паян вăхăт çукрах-ха, — хирĕçлеме тăчĕ вăрттăн тĕллевлĕскер.

— Чухлатăп мĕншĕн вăхăту çуккине. Художник темерĕн, чиперккесене юрататăн иккен, — йĕкĕлтерĕ иртнине аса илтерсе. — Ыран та кун пур, — хистерĕ вăл.

Телейлĕ «ырансем» пулмарĕç çав. Нимĕнле çуралнă кун та уявламан ун чухне. Ахаль ĕçкĕ-çикĕ çеç тунă.

Сăрт çине хăпарса çитсен вăрмантан милици машини тухнине асăрхарĕ Виктор. «Мĕн тума ирех килет кунта?» — тĕлĕнчĕ йĕкĕт. Çывăха çитсен «васкавлă пулăшу» пулса тăчĕ. «Мĕншĕн тата ку ирех вĕçтерсе килет?» — ыйту сиксе тухрĕ каллех.

Хытă пыраканскер Виктор тĕлĕнче тăпах чарăнчĕ.

— Аван-и, салтак! — кăшкăрчĕ шоферĕ уçă чӳречерен. Валентин иккен, Виктортан икĕ çул аслăскер. Ăçта кăна ертсе çӳреместчĕ вăл хăйĕнчен кĕçĕнреххисене!

— Ăçта каятăр капла ирех? — чăтаймасăр ыйтрĕ Виктор.

— Ара, сирĕн кӳршĕри Хветуç ача çуратма пикеннĕ тет-и, — ним пулман пекех йăл кулчĕ

те Валентин машинине хускатрĕ. — Тĕл пулса калаçмалла-ха пирĕн! — илтĕнсе юлчĕ тусанпа хутăшса кайнă сасă.

Хветуç, вĕсен кӳрши, кĕç-вĕç çăмăлланас пекехчĕ çав. «Хырăму ытла пысăк, кай больницăна», — тенине ялан çапла хурав паратчĕ: «Иккĕшне килте ура çинчех çуратрăм, виççĕмĕшне çуратаймастăп-и? Çак хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче каçăрăлса выртас-и?»

«Те ĕнер йывăр йатнă ĕнтĕ», — ятлаçса илчĕ Виктор канăçсăр кӳршине.

Вăл тӳрĕрен утма шутларĕ, çултан вăрманти хĕсĕк сукмак енне пăрăнчĕ. Вăтам шкула çӳренĕ унпа.

Çулçăсене сывлăм сыраннă. Йывăçсем хушшипе хĕвел шевли хĕсĕнсе кĕнĕ çĕрте хĕм сирпĕнет. Йăлтăркка сывлăм та савăнăç кӳмерĕ, кашни пăт-пат тумламĕ çут тĕнчен пăчăртаннă куççулĕ пек туйăнчĕ ĕнерхи салтака. Ăшĕ çунать те çунать. Унăн ăнман юратăвĕшĕн çутçанталăк та йĕрет тейĕн.

Виктор сукмакран çул çине тухнă çĕрте милици машини тăра парать. Ăна асăрханă капитан алăка уçрĕ те çĕре анчĕ.

— Кил-ха кунта, — кăчăк туртрĕ вăл аллипе. — Ку санăн-и? — хăй патне пырса тăнă йĕкĕте çĕçĕ кăтартрĕ.

— Манăн, — тунмарĕ хăйĕн япалине палласа илнĕскер.

— Лар машинăна! — çирĕппĕн хушрĕ милици капитанĕ.

Виктор вăрт çаврăнчĕ те шалта такам пуррине курчĕ...

* * *

Виктор алăка уçрĕ те Микулана тата ун çумĕнче ларакан вун виçĕ-вун тăватă çулти арçын ачана асăрхарĕ.

— Ырă ир пултăр! — терĕ вĕсене.

— Ырă ир пултăр, — илтĕнчĕ хулăнрах пусăрăнчăк сасă.

Амăшĕ каласа пани сасартăк аса килчĕ. Ачасăр Микуласен интернатран усрава илнĕ ывăлĕ питĕ ăнăçсăр-мĕн. Çын япалисене вăрлать, шыв хĕрринчи хур-кăвакала тытса пусса çиесси йăлана кĕнĕ. Çĕрле те хапха айне илсе кил картишне кĕрет те каштари чăхха пăвса илсе тухать, вăрманта тĕкне иртсе ăшне кăларсан йĕпе хаçатпа чĕркет, унтан кăвайт чĕртсе кĕл ăшĕнче ăшаласа çиет-мĕн. Хула ачи пулин те, чăх кăтиклетсен вăл çăмарта тунине хăвăрт тавçăрса илет, йăвасене йăпăр-япăр пушатать имĕш.

Çул тăршшĕпех пĕри те сăмах чĕнмерĕ. Машина чарăнсан милици капитанĕ алăка уçса пурне те тухма ыйтрĕ. Виктора чĕнтерессе кĕтсе тăма хушса Микулапа усрав ывăлне милици уйрăмне илсе кĕчĕ. Шалт аптраса юлчĕ Виктор: «Ăçтан çакланма пултарнă манăн çĕçĕ çак ача аллине?» Чухларĕ-ха, мĕн те пулин хăтланнă çав шăпăрлан. Милиционер яла ахальтен ирех персе çитмен.

Ăçтан йĕркипе пĕлес-ха унăн çакна? Рома патьенрен шыв ĕçнĕ хыççăн ăна валашкана тăкнă чухне темĕн шăмпăрт! тухса ӳкнине илтсен кĕпе çаннине тавăрнă та аллипе хыпашласа çĕçĕ туртса кăларнă.

— Ха-ха, — кулса илнĕ вăл. — Кĕсйине тĕрĕслесе пăхасран хăрана-ши? — мăкăртатнă хăй тĕллĕнех.

Питрав иртсен çамрăксем вăййа тухмаççĕ. Çавăнпа Рома Катьăн килĕ еннелле утнă. Çитет — çутă та çук вĕсен. Кӳршĕре Рудик текен усрав ача пур. Ăна çеç хуш — темĕн те тума пултарать. Илтнĕччĕ: Микула арăмĕ чĕрепе аптракалать, укол тума пыма фельдшер патне урам вĕçнех чупма тивет час-часах. Катя ялта чухне ăна, педучилищĕре санитар ĕçне вĕреннĕскере, чĕнсе каçаççĕ.

Микуласен кантăкĕнчен пырса шакканă Рома. Усрав ача, каçхи сасса хавасскер, чӳречене йăпăр-япăр уçнă.

— Тух-ха, — чĕннĕ аслă юлташĕ.

Кĕсйине темскер чикнĕ те уçă чӳречеренех çĕр çине вăр-вар сикнĕ арçын ача, тем парасса кĕтнĕ йытă çури пек, куçран пăхнă каçхи хăнана.

— Аннене укол тумалла тесе чĕнсе кăлар-ха Катьăна, — куç хĕснĕ çакă.

— Анне çыврать, — пуçне пăркаланă йăлтăр-ялтăр куçлăскер.

— Çывăртăрах. Эпĕ Катьăна сирĕн пата ямастăп, — çине тăнă Чикан.

— Çук, юрамасть, — килĕшмен кĕçĕнни.

— Чĕнсе тух ĕнтĕ, — йăлăннă асли.

— Улталанă хыççăн малашне пыма пăрахĕ. Пĕлетĕн вĕт эсĕ кĕтӳçпе кашкăрсем çинчен. Арçын ача икĕ хутчен ахалех кашкăр! кашкăр! тесе кăшкăрса ял çыннисене ура çине тăратнă. Виççĕмĕшĕнче кашамансем чăнах та пырса тухнă. Темле кăшкăрсан та никам та пулăшма васкаман. Сурăх кĕтĕвне кашкăрсем йăлтах пăвса пăрахнă вара. Ултавăн ури кĕске, вăт, — сăмахне татăклăн вĕçленĕ кĕçĕнни.

«Мĕнле ӳкĕте кĕртмелле? — чеелĕх шыранă

асли. Аса илех кайнӑ. Ара, утӑра кӑнтӑрлахи апата ларсан Виктор хӑйӗн ҫӗҫҫипе нумай ҫынна консервсем уҫса панӑччӗ. Кнопкине пуссанах чӑлт! ҫеҫ авринчен сиксе тухаканскер чылайӑшне килӗшрӗ. Уйрӑмах Рудик ӑна хапсӑнни сисӗнчӗ, аллинчен те вӗҫертес килмерӗ тӗлӗнтермӗше. Ҫав ҫӗҫӗ, питӗ ӑмсантарнӑскер, ҫумрах-ҫке.

— Итлесен ҫакна паратӑп, — кӑтартнӑ Рома тин ҫеҫ тупӑннӑ «астармӑша».

Аллине хаклӑ япала ҫаклансан тӳрех тапса сикнӗ те тул ҫутӑлма пуҫличченех киле таврӑнман Рудик. Унӑн ырана хӑварма юраман ӗҫ-пуҫ пулнӑ. Хула хӗрачи Дарья аслашшӗпе асламӑшӗ патне хӑнана килнӗ-ҫке темиҫе кун каялла. Чиперскер. Тем пекех калаҫса йӑпанасчӗ унпа! Вӑл пур, Сергейпе, ветеринар ывӑлӗпе, пӗр чӗлхе тупма ӗлкӗрнӗ. Яхӑнне те ямасть ӑна. Тӗрӗсмарлӑх пур-ҫке кунта! Рудик арҫын ачасене тӳрех асӑрхаттарса хунӑччӗ: «Дарья манӑн пулать, вӑл яла килнине чи малтан эпӗ курнӑ!» Сергей ҫавна хӑлхана чикмест. Кӳрши пулнӑ май ун патне пӗрмай йӑрккать. Ӑна хӑратма «пистолетлӑ» та пулчӗ, ашшӗ-амӑшӗ патне курма таврӑннӑ пӗр шахтертан кӗтӳ кӗтсе памалла илчӗ. Тетте ҫеҫ-ха. Чӑнни пекех курӑнать. Тӗттӗмре вара уйӑрса илме те ҫук. Халь вара чӑнчӑн ҫӗҫӗ пур аллинче. Кнопкине пусатӑн ҫеҫ — авринчен йӑкӑлт! сиксе тухать. Такамӑн та сехри хӑпӗ.

Вӑл Катьӑна амӑшне укол тума чӗннӗ те тӳрех хула хӗрӗ патне васканӑ, Дарйӑн аслашшӗ-асламӑшӗн ҫурчӗн чӳречинчен ӳкекен ҫутӑра Сергей тӑнине асӑрханӑ.

— Тасал кунтан хӑвӑртрах! Дарйӑна чи малтан

эпӗ йышӑнни ҫинчен асӑрхаттартӑм вӗт пурне те! — каланӑ вӑл хаяррӑн.

— Ӑна йышӑнма вӑл япала мар вӗт, — хирӗҫленӗ Сергей.

— Эсӗ апла-и?! — ҫӗҫҫине туртса кӑларса кнопкине пуснӑ хайхискер. — Пыршу-пакарту йӑтӑнса тухать! Кур, питӗ ҫивӗч! — тесе чӑр! ҫурса антарнӑ Сергейӗн кӗпе ҫаннине. — Кирлех пулсан манӑн пистолет та пур, — силлесе кӑтартнӑ ӗнер ҫеҫ ун аллине ҫакланнӑскере. — Салтакран килнисенне вӑрларӑм.

— Мӗн эсӗ? Мӗн эсӗ? Тилпӗрен ҫирӗн-им? — кутӑн чакнӑ Сергей. Вӑл сулахай хулӗ чӗпӗтсе ыратнипе ӑна сылтӑм аллипе ярса тытнӑ та юн сӑрхӑннине туйнӑ. Ҫакна асӑрханӑ Рудик тӳрех тапса сикнӗ кунтан.

Сергей килне ахлата-ахлата таврӑннӑ. Юнланнӑ ывӑлне курсан ашшӗ-амӑшӗ хыпӑнса ӳкнӗ ӗнтӗ. Суранӗ тарӑнах мар иккен, ӳтне ҫеҫ чӗрсе янӑ. Ӑна ҫыхнӑ май мӗн пулса иртнине ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн милицие васкавлӑн шӑнкӑравланӑ, кинжалпа вӑрланӑ пистолет ҫинчен те пӗлтернӗ. Ҫавӑнпа ирех милиционер килсе ҫитнӗ те яла.

Рудика килӗнчех тытнӑ. Ҫӗҫҫине хӑвӑртах шыраса тупнӑ. «Манӑн нимӗнле пистолет та пулман. Хӑравҫӑн куҫне ҫеҫ курӑннӑ вӑл», — тӗрӗссине каламан усрав ача. Тен, хӑйӗншӗн «хаклӑ япалана» тавӑрса памасран шикленнӗ, ҫавӑнпа никам тупмалла мар ҫӗр айнех чӗркесе чикнӗ.

— Суятӑн. Ӑна та тупатпӑр. Ҫӗҫҫине кам панӗ? — тӗпченӗ милиционер.

— Урамра тупрӑм, — куҫне пач тартман йӗрке хуралҫинчен хайхи.

— Тӗрӗссине кала!

— Тĕрĕссине калатăп, — шарт та март туннă пурнăçĕнче тем те пĕр курнă арçын ача.

Ашшĕпе калаçса пăхма шутланă милиционер.

— Çакă камăн? — çĕççе кăтартнă вăл.

— Таçта курнă пек... — аса илме тăрăшнă Микула. — Салтакран тинтерех таврăннă Виктор утăра унпа консервсем уçса панăччĕ çынсене.

— Хушамачĕ мĕнле?

— Илменев.

Вăл ирех ялтан тухса кайнине çиййĕнчех пĕлнĕ милиционер. Хăвăртрах Рудикпа ашшĕне машинăна лартнă та Виктора хăваласа çитме çил пек вĕçтернĕ.

Арçын ачана тимĕр решеткеллĕ пӳлĕме вăхăтлăха хупса лартнă хыççăн Виктора чĕнсе кĕртсе тĕпчеме пуçларĕ капитан.

— Пистолету ăçта? — шахвăртрĕ вăл.

— Мĕнле пистолет? — аптраса кайрĕ каччă.

— Юрĕ, юрĕ, хальлĕхе айăпламалли япали алăра çук-ха. Йышăнтаратпăр. Çĕççӳ тата мĕнле майпа Рудик патне çакланнă?

Çакăн хыççăн шăплăх вăраха тăсăлчĕ.

Çĕçĕ мĕнле майпа ку ача аллине лекнине вăл пачах та пĕлмест. Йăлт аптрамалла. Ăна, салтакран асăнмалăх илсе килнĕскере, ăсла-пуçлă çын çăла пĕр сăлтавсăр пăрахнине кам ĕнентĕр? Мĕншĕн çапла пулса тухнине каласа кăтартаймастăн-çке...



## ЧĔРНЕ ВĔÇÇĔН

Сасартăк янăраса кайнă шăнкăрав, икĕ çын туртса карăнтарнă çинçе çиппе çивĕч çĕçĕпе касса татнă пекех, Аркадий Нилович Тевель художник мастерскойĕнчи пĕр савăнăçлă та тепĕр кулянчăк кулла шăплăха ӳкерчĕ. Çăварĕсене арçынпа хĕрарăм харăссăн хупларĕç, пĕр-пĕрне çеç хытăрах та ыйтуллăн тинкерчĕç. Алăка пӳрнепе темиçе хутчен тăкăртаттарни илтĕнчĕ тул енчен. Çакăн хыççăн Аркадий Нилович мольберт умĕнчен чиперкке патне чĕрне вĕççĕн утса пычĕ те хăлхинчен çапла пăшăлтатрĕ:

— Гета, Аюлов ку.

Икĕ тус пĕр-пĕрне «питĕ ерçӳсĕр вăхăтра»

чăрмантарасран çапла паллăсемпе хăй камне пĕлтерме килĕшсе татăлнă ĕнтĕ.

Хитре хĕрарăм, хăш-пĕр çĕршыври нудистсен пляжĕнче пекех тăраканскер, диван çинчи кĕпине илсе хул хушшине хĕстерчĕ, пушмакне йăтса арçын аллипе тăсса кăтартнă алăк кукринчи пĕчĕк пӳлĕме шăппăн кĕрсе çухалчĕ, питĕ сисĕмлĕ сăмсаллă этемшĕн çеç «Париж» духи шăрши варкăшса юлчĕ пуль.

— Кам унта? — юриех васканçи турĕ Аркадий Нилович алăка уçнă май.

— Сан патăнта паян гетера çук-им? — кĕнĕкĕмен ыйтрĕ Аюлов.

— Шăп!.. — хăнана пӳрнипе юнарĕ мастерской хуçи.

«Гетера» сăмах Генриеттăшăн ытла та тĕлĕнмелле пулчĕ. Пĕлтерĕшĕ çеç иккĕлентерет-ха. Хăйне ĕненмешкĕн хал çитерейменĕ, арçынсем ун тĕлĕнчен иртсе кайсанах шăппăн тумланчĕ те сĕтел çинче выртакан энциклопеди словарьне ерипен уçрĕ.

«Гетера, — ăшра вуларĕ вăл, — Авалхи Грецири пĕлӳллĕ, качча кайман, ирĕклĕ, никама пăхăнман пурнăç йĕрки тытакан хĕрарăм. Каярахпа гетера тесе проституткăсене те каланă».

«Апла, вĕсем мана çавнашкал ят панă», — шухăш çиçсе илчĕ ун пуçĕнче. Вара вăл ура çине йывăррăн çĕкленчĕ те мастерскойĕнчен чĕрне вĕççĕн тухса картлашкапа аялалла чăмăр çиçĕм пек йăрăлтатса анчĕ. Ниме те уямасăр ешĕл газон урлă каçса кайрĕ Генриетта. Унччен пулсан çавнашкал тирпейсĕр çынсене хăй ятламалла. Ăшра та пулин. Халĕ ури нӳрленнине туйсан çеç каялла çаврăнса пăхрĕ, сип-симĕс курăка тĕшĕрсе

хăварнă иккен вăл. Йĕр юлнă. Сип-симĕс курăк çинчи хура йĕр. Вăйлă çумăр тинтерех кăна çуса иртнĕ май тăпра шӳсе тачкаланнине пула ури пута-пута кĕнĕ-мĕн. Чĕрне вĕççĕн мар, ытла та лăп-лап пусса каçса кайнă-çке газон урлă. Йĕр çине вăл тепре çаврăнса пăхрĕ те — йĕрес килсе кайрĕ унăн. Çутă ĕмĕтлĕ ачалăхне çеçкене ларас çамрăклăхĕ таптаса каçнăн туйăнчĕ ăна.

Ачалăх... Вăл чылайăшĕн телейлĕ пуль. Камăн-камăн та — Генриеттăн ăна ӳпкелеме сăлтавĕ çук. Ытлă-çитлĕ пурăннă вĕсем. Ашшĕ художникчĕ. Çавăнпа та хĕрача аллинчен мĕн пĕчĕкренех сăрă-кăранташ татăлман, ӳкернĕ вăл, сăрланă, тантăшĕсене хăй ăсталăхĕпе ăмсантарнă. Пĕлсех тăр, Генриетта илемлетнĕ стена хаçачĕ конкурсра ялан малти вырăна тухать. Çиччĕмĕш класра вĕреннĕ чух Культура çуртĕнче унăн ӳкерчĕкĕсен куравне йĕркелерĕç. Шкулта халĕ те астăваççĕ çавна. Хĕрачан ĕмĕт-шухăшĕ тухса тăнăччĕ ăнланулла кураканăн куçĕ умне. Уйрăмах улăхри юлан утçă хĕр сăнарĕ килĕшрĕ пурне те. Вăл шурă лашапа, Жанна д'Арк тейĕн. Орлеан хĕрĕ, Çĕр çулхи вăрçăра тăван халăхне тăшмана хирĕç çĕкленĕскер, Генриеттăн чунне пăлхатса чĕрине кĕрсе ларнăччĕ. Ăна чиркӳ сучĕ тухатмăш тесе айăпласа кăвайт çинче çунтарса янăшăн пĕччен хупăнса ларсах ӳлени халĕ кулăшла ĕнтĕ. Франци халăхĕн харсăр хĕрĕ пекех паттăр пулма ĕмĕтленнĕччĕ ун чухне вăл. Мĕнле майпа? Çавă пачах паллă марччĕ-ха хĕрачашăн.

Генриетта хăй туймарĕ пулин те, çав курав унăн кăмăлне улăштарчĕ. Хăш-пĕр вĕрентекен ытлашши мухтанинчен, район хаçатĕнче пĕр çăмăлттай корреспондент вĕçкĕнле сăмах çаптар-

нинчен килчĕ курăнать чылайăшĕ. Çывăх юлташĕсене ыттисем кӳрентерес пулсан малтанхиллех вĕсен хутне кĕретчĕ-ха, çапах пĕрле вĕренекенсенчен хăйне пĕр пуç çӳллĕрех туя пуçларĕ. Ара, лешсен шăпи паллă, авă кӳршĕри Ленукăн аппăшĕ шкултан лайăх вĕренсе тухрĕ пулин те, амăшĕ патне фермăна çеç ĕçлеме кайрĕ. Тантăшне те çав çулах кĕтет эппин. Жанна д'Арк канăç памарĕ Генриеттăна, анчах вăл ахаль хресчен кил-йышĕнчен тухнине шута илме пултараймарĕ хĕрача.

Амăшне Генриетта сахал аса илет. Вăл ун ачалăхĕнче тарăн йĕр хăвараймарĕ. Бухгалтер çеç пулса ĕçлекенскер лайăх упăшка, художник, тĕлне лексе телейлĕ пулнă. Мăшăрĕ районта хисеплĕ çын-ха, хĕрачине тата пысăкрах, чаплăрах çитĕнӳсем патне туртăнма шахвăртса калатчĕ час-часах. Хăй вара искусствăна чăн-чăн хак памалăх чухлайман-ха. Куçа курăнакан хитрелĕх çеç илĕртейнĕ ялан. Çавăнпа та хăйĕн тĕпренчĕкĕ тунă ӳкерчĕксене йĕри-тавра тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе çавăрса тухатчĕ те киленетчĕ. Е тата, сăмахран, Анатолий Миттов художник Нарспине, ун шучĕпе, чипер ӳкермен. «Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм», — тесе çырнă-çке Константин Иванов. Çавна вăл тӳррĕн ăнланнине пула ăна Петр Сизов иллюстрацийĕсем ытларах килĕшетчĕç...

Ашшĕ питĕ пултаруллă пек туйăнатчĕ хĕрĕшĕн. Ахальтен-и пур çĕрте те Геннадий Николаевич тесе хисеплесе чĕнетчĕç. (Унăн хушамачĕ тахçан Кураков пулнă имĕш, анчах темĕнле майпа кайран Раевские куçнă. Малтанхи арăмĕнне йышăннă-ши?) Ашшĕн «пултарулăхне» ӳссен çеç ăнланса илчĕ Генриетта — вăл художниксен

меслечĕпе мар, эпидиаскоппа усă курнă. Экран вырăнне — пир е пĕр-пĕр хут. Унта ӳкнĕ ӳкерчĕке кăранташпа йĕрлесе тухнă та сăрласа лартнă. Çавăнпа кашни стенчĕ, плакачĕ пĕр евĕрлĕрех пулса тухнă пулин те, тӳленĕ чухне ăна шута илмен. Чăн та, укçа çапма пултарнă Геннадий Николаевич.

Кăвакал кӳлле кура чăмать теççĕ-и-ха? Ашшĕ-амăшĕ хĕрĕшĕн укçа-тенкĕ шеллемен. Апат-çимĕçĕ те ыттисенчен урăхларах, кĕсйинче — хаклă йышши канфетсем. Тумтирĕ тĕлĕшĕнчен те тантăшĕсем хушшинче — чи капăр тумланни. Юлташĕсем хăйне ăмсанса пăхнине, арçын ачасем сăнанине питĕ ир сиссе илчĕ вăл. Ăшра мăнкăмăлланчĕ-ха, анчах уççăнах палăртмарĕ çавна. Арçын ачасем тенĕрен, вĕсем ăна тивĕçсĕр. Юрату пирки шухăшлама вăхăт çитеймен-ха. Генриетта Раевская чăн-чăн чаплă художник пулса тăрĕ. Унăн картинисем куравсене илем кӳрĕç, ӳнер галерейисенче сумлă вырăн тупĕç. Ун чухне... Ун чухнех пулса пĕтеймерĕ çав. Вăл саккăрмĕш класра вĕреннĕ вăхăтра студентсем практикăна килчĕç. Каччăсенчен нихăшĕ те хĕрачан кăмăлне хускатаймарĕ... Пĕринсĕр пуçне.

Ку вăл клубра пулса иртрĕ. Ял халăхĕ умĕнче темĕнле лекци вуларĕç. Унтан йăрăс пӳллĕ чипер студент сцена çине тухрĕ те аллине хăватлăн çĕклесе сăвă янраттарма тытăнчĕ. Поэт иккен ку. Юрату çинчен майсăр хĕрӳллĕн çырать. Сиксе тухасла тапма пуçларĕ Генриеттăн чĕри. Ара, поэтăн чĕрине вĕсен ялĕнчи сенкер куçлă, хура куç харшиллĕ пĕр чипер хĕр тыткăна илнĕ-мĕн. Сăввинче çаплах калană-çке.

Шухăша кайрĕ çакăн хыççăн Генриетта: «Сен-

кер куҫлă, хура куҫ харшиллĕ чипер хĕр кам пулма пултартăр-ха? Пĕр-пĕр ĕне сăвакана поэт савас ҫук. Тантăшĕсем вара пурте тенĕ пекех хăмăр е симĕс куҫлă, кăвак куҫлисен куҫ харшийĕсем сап-сарă, палăрмаҫҫĕ те. Эпех ĕнтĕ вăл».

Чим, Генриетта ăна тивĕҫ мар-и-ха? Поэтпа художник! Тепĕр кунне канăҫĕ вĕҫнĕскер ҫыру тĕрлерĕ. Сăвăсем питĕ килĕшнĕ имĕш ăна. «Ĕмĕрлĕхех ман асра юлтăр эсир», — тесе вĕҫлерĕ хĕрӳллĕ ҫырăвне.

Лешĕ, «поэчĕ», вĕҫкĕнскер кăна пулнă, апăрша. Ҫырăва ял ачисене кăтартнă. Ҫапла вара ку хыпар саккăрмĕш класс арҫын ачисен хăлхине те пырса кĕрет. Пĕри чăтса тăраймарĕ, ҫырури йĕркесемпе Генриеттăна йĕкĕлтесе илесшĕн пулчĕ, анчах ҫамкине циркуль пырса тăрăнчĕ те, шапăрах юн юхса анчĕ... Ҫын ҫăварне хупма меслет пуррине ăнланчĕ хĕрача. Ҫакăн хыҫҫăн ҫирĕп тĕллев лартрĕ: мăнаҫлă пулмалла, пуҫа пĕкмелле мар, сана ыттисем тархаслаччăр. Ҫав «поэт» та манăҫрĕ часах. Кайран, темиҫе ҫултан, вăл ăна фотоательере курчĕ, унта ĕҫлет иккен. Раевская пĕр сăмах та каламарĕ хăйĕн «пĕрремĕш юратăвне».

* * *

Инкек ытла та ир пырса ҫапрĕ Генриеттăна. Вăл саккăрмĕш класран вĕренсе тухас умĕн ашшĕ сарăмсăр вилсе кайрĕ. Кӳрши-арши пуян тесе шутланă ҫемье укҫа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен ытлашши хапсăнмаллах та пулман иккен. Мĕн кĕни пĕтсех пынă. Амăшĕ, ытлашши уҫă кăмăллăскер, укҫа тытма пĕлеймен.

Ҫынсем тĕрлĕрен. Пĕрисен кивҫен илсех

иртет ĕмĕрĕ. Теприсем пус çумне пус, тенкĕ çумне тенкĕ хушса пынипех çырлахаççĕ, виççĕмĕшĕсем вара çĕршер пин тенкĕ тĕрлĕрен майпа тупса пуйса каяççĕ, çынсем умĕнче çука переççĕ. Геннадий Николаевич арăмĕ вара укçа пуç мар, пуç пулсан укçа та пулать тесе ытла та çăмăллăн шутланă. Çакă часах Генриеттăна та пырса çапрĕ. Тăххăрмĕш класран вĕренсе тухиччен те çĕнĕ çи-пуç илсе параймарĕ ăна амăшĕ. Вуннăмĕшĕнче çамрăк хĕрĕн пĕвĕ-сийĕ тумтирне тапса тăра пуçларĕ. Хăйĕн ĕç укçипе упăшкишĕн паракан пенси амăшне çитмерĕ курăнать, çапах та тутлă çиессине пăрахăçлама хал çитереймерĕç-ха вĕсем.

Вăхăт шăвать тетпĕр эпир. Тĕрĕс мар ку. Вăхăт юхать вăл. Пĕриншĕн — лăпкăн, теприншĕн — шавлăн. Хăшĕ ăна хирĕç ишет, хăшĕ май каять. Вăл çынна хăйĕн хумĕсем айне тума е айккине кăларса пăрахма та пултарать.

Генриетта вара вăхăт юхăмне туймарĕ-ха. Вăтам шкулпа та сывпуллашрĕ ĕнтĕ. Аван пĕтерчĕ ăна. Ĕмĕчĕ çавахчĕ унăн — художник пуласси.

Институт умне пухăнса тулнă çăмăл машинăсем те тĕлĕнтермерĕç абитуриенткăна. Вăл илтнĕччĕ-ха, хăш-пĕрин ашшĕ-амăшĕ (хăйсем экзаменсем тытаççĕ тейĕн) аслă пĕлӳ çурчĕ тавра пĕрмай вĕркет. Сочинени çырнă хыççăн тепĕр икĕ кунран институт умне ĕçĕсене хакланă паллăсен списокне çакрĕç. Кĕпĕр! сырса илчĕç ăна. Акă пĕр çамрăк: «Пиллĕк! Пиллĕк!» — тесе кăшкăра-кăшкăра хирĕнсе тухса тăчĕ ушкăн хĕррине. Тĕлĕнчĕ Генриетта: теприн, экзамена ăнăçсăр тытнă хĕр упраçăн, куçĕнче куççуль, ку вара çын инкекĕ умĕнче пĕр именмесĕр яр уççăн çиçсе хĕпĕртет.

Ĕнерхи шкул ачи яла студентка пулса таврăнчĕ. Савăнăçĕ чи çывăх юлташне, Ленăна, курсанах сĕвĕрĕлессе çап-çамрăк хĕр шутламанччĕ те. Вăл та вĕренме кĕнĕ иккен. Хăйсен районĕнчи ял хуçалăх техникумне. Эппин, вĕсем пĕрпĕрне вăрттăнлăхĕсене, шухăш-кăмăлне текех час-часах уçса параймĕç. Çĕнĕ туссем тупма тивет. Ачалăхпа çамрăклăх хушшинчи тĕп чикĕ çав уйрăлу пулать те ĕнтĕ. Çур çĕрчченех çӳрерĕç иккĕшĕ. Уйăх та, çăлтăрсем те тунсăхлă.

— Яла килкелесе кайăн-и? — сасартăк сăмах хушрĕ Лена.

Кунашкал кĕтмен ыйту тĕлĕнтерчĕ курăнать Генриеттăна.

— Мĕн калаçатăн эсĕ? Ара, ман анне кунтах юлать-çке.

— Çук, эпĕ хальхи пирки мар, кайран, вĕренсе тухсан, тетĕп.

Ăçта ĕçлесси пирки Генриетта çирĕп тĕллев тытайман-ха. Ĕмĕчĕ унăн чаплă художник пуласси çеç. Эппин, чăнах та, ялта мĕн тумалла-ха? Çапах та вăл çапла каласа хучĕ:

— Лена тусăм, эпир яланах юнашар пулăпăр.

Юлташĕн кăмăлне хуçас килмерĕ-ши унăн? Тен, çак вăхăтра ялпа яланлăхах сывпуллашма, ăна хулапа улăштарма йывăр пулчĕ малтанласа. Улшăну вăл чун-чĕрере йĕр хăваратех.

Хула ула теççĕ. Кунта шукăль хĕр чылай. Нимĕнпех те уйрăлса тăмасть Раевская. Ун пек вăтам çеç тумланаканни пĕрремĕш курсри студенткăсем хушшинче ытларах-ха, анчах вăл вăтаммисен шайĕпе пурăнма хăнăхман, малта пулма вĕреннĕ ялта. Тин кăна йăлана кĕнĕ япаласене туянма укçа çителĕксĕрри касать. Капăр

каччăсем ăна асăрхамаççĕ авă. Вĕренӳре аранаран ĕлкĕрсе пыракан пикесемех каççерен мăшăрăн-мăшăрăн уçăлса çӳреççĕ. (Тĕрĕссипе, Раевская сăн-сăпачĕ такама та илĕртмелле-ха. Вăл хăй ыттисенчен ютшăнни — пĕчченлĕхĕн сăлтавĕ.) Пурне те тавăрас ĕмĕт тĕвĕленчĕ унăн пуçĕнче. Ан тив, хăш-пĕр тантăшĕ тумтирпе çиçтĕр, вăл пĕлӳпе чапа тухĕ. Кунĕн-çĕрĕн тенĕ пекех кĕнеке вуларĕ, энциклопедисем алран каймарĕç, литературăпа искусствăсăр пуçне наукăпа тата техникăпа кăсăкланчĕ. Мифсен словарĕ уйрăмах килĕшрĕ ăна. Текех вăл урама тухсан паян çил çурçĕртен е хĕвел анăçĕнчен вĕрет тесе калама пăрахрĕ. Вĕсене çапла палăртрĕ: Аквилон, Зефир. Телей те Фортуна уншăн, ăнăçу турри, куçне çыхса янăскер...

Юлташĕсем ăна асăрхарĕç-ха. Кроссворд шутлакансем те ун патне чупа-чупа пыраççĕ. Тĕрлĕ курсран тата. Анчах та Раевскаян чи пысăк тĕллевĕ çакă-им? Çук! Çамрăк художниксен куравне хутшăнмаллах унăн, пысăк шанчăк паракансен шутне кĕмелле. Шел пулин те, ĕçĕсене вара асăрхасах каймарĕç. Юлашки курсра çеç пĕр паллă художник, Аркадий Нилович Тевель, унпа калаçрĕ. Генриеттăн тăван шкулĕнчен питĕ ыйтса çырнине кура хĕр, унта вĕрентме кайма шухăшланăскерех, шăпах вăл сĕннипе пĕр çĕре художник-оформитель пулса ĕçлеме вырнаçрĕ.

Генриеттăн ĕмĕчĕ çитрĕ теме çук-ха. Вăл пĕрпĕр художество шкулĕнче е хаçат-журналта ĕçлеме кăмăл тунăччĕ, анчах хуларах юлайни те паха хальлĕхе. Пултарулăха палăртма çăмăлрах. Ялтан хăпса тухаймăн. Кунта куравсене хутшăнма пулать.

Хӗрӗн кӑмӑлне ал лаппи ҫинчи пекех аван курчӗ Тевель.

— Ан пӑшӑрхан, часах хаҫат-журнал иллюстрацисем тума саккас пама пуҫлӗ, тӑрӑшӑп, — терӗ вӑл.

Хӑйӗн лабораторийӗпе паллашма Раевскаяна Аркадий Нилович мастерскойне чӗнчӗ пӗррехинче. Генриетта художниксем патӗнче пулса курман мар-ха. Тевелӗн ӗҫ вырӑнӗ вара ӑна тӗлӗнтермеллипех тӗлӗнтерчӗ. Ҫав тери хӑтлӑ кунта. Пӗтӗмпех ал айӗнче. Чӑн-чӑн лайӑх хваттер тейӗн. Генриеттӑн пурӑнмалли уйрӑм кӗтес те ҫук. Ҫын патӗнче пӗр пӗчӗк пӳлӗмре тӑваттӑн хӗсӗнсе тертленеҫҫӗ.

Художество галерейисенче тата музейсенче ҫарамас арҫынсемпе хӗрарӑмсемлӗ картинӑсене Генриетта пайтах курнӑ, ҫав чӑн-чӑн искусство хайлавӗсемпе чунтан киленнӗ, анчах Аркадий Ниловичпа пӗр пӳлӗме кӗнӗ хыҫҫӑн Адампа Ева «тумӗллӗ» кӗлеткесене курсан — те ют арҫынпа кунта куҫа-куҫӑн тӑнӑран — хӗр именчӗ, пичӗ хӗрелсе кайрӗ. Ҫавна курмӑш пулнӑ Тевель каласӑва пач урӑх еннелле пӑрса ячӗ:

— Нумаях пулмасть ӳкернӗ картинӑна питӗ хаклӑ туянчӗҫ, малтанхине ӑнӑҫлӑ сутнӑччӗ, — ытарлӑн калаҫрӗ Аркадий Нилович. — Тен, сан тӗллӗн те ҫавӑн пек телей килӗ.

— Ытла, — кӗрхи пан улми тӗсӗ ҫапрӗ хӗр питне, мӗншӗн тесен Тевель ун шухӑшне вулать тейӗн. Ара, Генриеттӑн ҫакнашкал майсем пулсан вӑл чаплӑ картинӑсем тумӗччӗ-ши? Пуҫра мӗн чухлӗ палӑртса хуни!

— Вӑхӑт ҫитет, — Генриеттӑн шухӑшне малалла тӑснӑн пулса тухрӗ Аркадий Ниловичӑн

сăмахĕ. — Эпĕ те сан пекех пуçланă, — терĕ хăй институтра вĕреннĕ чухнех шанчăк параканнисен шутĕнче пулнине пытаранçи туса. — Кирлĕ вăхăтра çынна пулăшма та пĕлмелле пирĕн, — хĕре тинкерчĕ Тевель. Унăн куçĕнче Генриетта ăшă-ăшă туйăм вуларĕ, вĕренекенĕсем кирлĕ-çке пур чаплă художника та.

Асамçă майлах çав Аркадий Нилович. Акă вăл каллех ун шухăшне малалла тăсать.

— Çын çынпа пуян. Искусство ĕçченĕсемшĕн уйрăмах çавă паха. Эсĕ, сăмахран, мана чăрмантартăм пулĕ тесе шутлатăн. Пачах урăхла. Хăшпĕр картина умĕнче эсĕ тăнă чух хамăн вăя та, çитменлĕхсене те уйăрса илтĕм, — кăмăлне уçрĕ Тевель. — Эппин, мастерскоя килсех çӳреме тăрăш. Паллах, мана çеç усă ан пултăр, хăвăн картинусене те кăтарт. Пĕрле сӳтсе явăпăр.

Çунат хушăннă пек таврăнчĕ пӳлĕмне Генриетта.

Çакăн хыççăн вăл çĕнĕ эскизсем тума ларчĕ. Вăрçа хирĕç, вăрçа хытă питлекен картина ӳкермелле унăн. Хăйĕн шухăшне Тевеле пĕлтерме шухăшларĕ хавхаланнă хĕр. «Мĕнле пырса кĕмелле-ха арçын патне? Мĕн шутлĕ вăл?» — çакă канăç памарĕ ăна, анчах тепĕр чухне именчĕклĕхе кăмăл çĕнтерет иккен. Ахаль-и хăш-пĕр çын хăйĕн тĕллевне тӳрре кăларасшăн темĕнле çул çине те тăрать. Сăмахран, пуяс ĕмĕтли вăрра вĕренет. Генриеттăн нимĕнле усал шухăш та çукçке. Вăл художник çеç пуласшăн.

Пĕр кунхине хĕр хăюсăррăн пырса пусрĕ Тевель мастерскойĕн алăкĕ çинчи шăнкăрава. Вăл ăна ăнланса ерипен çеç сасă парать тейĕн, анчах тăр-тăр! хыттăн кĕрленĕн туйăнчĕ çын кил-

нине пĕлтерекен хыпарçă. Ахалех иккĕленнĕ иккен Раевская. Питĕ тараван йышăнчĕ ăна Аркадий Нилович. Сăмах май тенĕ пек, Генриетта хăй вăрçа питлекен картина ÿкересшĕн пулнине пĕлтерчĕ художника.

— Мĕнлерех пулать вăл санăн? Кала-ха хăвăртрах. Питĕ лайăх шухăш, — васкатрĕ ăна Тевель.

— Пĕр купа пуç шăмми ÿкерсе тултаратăп...

— Чим-ха, Верещагинăн «Вăрçă апофеозĕ» картининчи пек-и?

— Чылай урăхла. Сăмахран, унăн картининчи пуç шăммисем çинче çăхансем лараççĕ пулсан эпĕ мĕн те пулин урăххи тупасшăн. Çынсем курсан вăрçă тискерлĕхне тÿрех туйса илччĕр, ăна пурте хирĕç пулччăр.

— Пентагонрисем те-и?

— Пăсмĕччĕ, — хăй ытлашши хĕрсе кайнине хĕр тин туйса илчĕ.

— Лайăх, питĕ лайăх шухăш, — ырларĕ Тевель. Ăшĕнче вара çапла шухăшларĕ: «Анатолий Ананьевăн «Вăрçăсăр çулсем» романĕнчи Митя пекех айван-çке эсĕ. Пĕр-пĕр художник вăрçа пÿлсе лартайсан вĕсем нихăçан та пулас çукчĕ, ĕмĕр-ĕмĕр тăршшĕпех чылай писатель, художник, композитор вăрçа хирĕç вăй хурса ĕçленĕ, анчах вăрçисем çапах кĕрле-кĕрле каяççĕ. Шел», — ăшри сăмахĕсенчен юлашки Генриетта пирки те пулчĕ ĕнтĕ. — Санăн тĕллевÿ питĕ лайăх, — тарăн шухăша кайнăн кăтартрĕ хăйне мастерской хуçи. — Çитет капла пурăнса, яту хаçат-журналта палăрма вăхăт ĕнтĕ. Акă пĕр редакцирен калав илсе килтĕм. Ятарласах сан валли. Иллюстрациле.

— Тавах сире, Аркадий Нилович, — савăнăçне пытараймарĕ Генриетта.

Икĕ-виçĕ кун тертленме тиврĕ унăн ÿкерчĕксемпе. Суда хутсем илсе кайнă пекех пырса кĕчĕ Тевель патне.

— Питĕ аван, питĕ аван, — мухтарĕ Аркадий Нилович ÿкерчĕксене. — Çапах та кăштах юсама тивет-ха. Хамах, хамах. Ан пăшăрхан, чи лайăххи — шухăшне, идейине тупма пĕлнĕ эсĕ. Ытти вăл... «Енчен те художникшăн чи кирли алли пулсан, чăнах, кулăшла пулĕччĕ», — тесе каланă Ромен Роллан.

Темиçе уйăхран Г.Раевская ÿкерчĕкĕсемлĕ калав журналта çапăнса тухрĕ. Художниксем, тантăшĕсем унăн ятне асăрхарĕç, анчах кам аллине те «почерк» тăрăх сисрĕç. Нимех те шарламарĕç, мухтанçи çеç пулчĕç.

— Брюллов «Помпейăн юлашки кунĕ» картининче хăйне те ÿкернĕ, — терĕ пĕррехинче Генриетта.

— Эсĕ те пĕр-пĕр чаплă ĕçÿнте хăвна кăтартма тĕллев тытман-и? — йăпатмăш сăмахсем шыварĕ Аркадий Нилович. — Хăвăнпа çыхăннă япала яланах лайăх. Тĕслĕхрен, Пукирев картина пайтах ÿкернĕ, анчах пĕри çеç, «Тан мар мăшăрлану» ятли, куракана пăлхантарать. Астăватăн пулĕ, пуп умĕнче хÿхĕм хĕрпе юнашар ватă господин тăрать. Хыçалта вара — питĕ хурлăхлă сăнлă яш çын, хăйĕн телейĕпе сывпуллашакан-скер. Çав йĕкĕт — ÿнерçĕн автопортречĕ. Тен, эсĕ качча кайнă чухне эпĕ те çавăн пек кичем пулăп. Эпĕ те телейлĕ пулма пултарнă-çке шăпа пÿрнĕ пулсан тейĕп.

Çак кĕтмен калаçу Генриеттăна аванмарлан-

тарчӗ, пӗр самант вӑл нимӗн те чӗнме аптрарӗ.

— Аркадий Нилович, сирӗн шӳтӗр ытлашширех, — терӗ вӑл хӑйне лӑпкӑн тытма тӑрӑшса.

— Эх, Раевская, ҫавӑншӑн кӳрентӗн-и? Пурнӑҫра мӗн кӑна пулмасть, — ӗнсине хыҫса илчӗ Тевель. — Шӳт вырӑнне хурӑпӑр ӑна.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Генриетта асӑрханулларах пулма тӑрӑшрӗ, мастерскоя та сайрарах ҫӳрерӗ. Аркадий Нилович вара унчченхинчен те сӑпай тытрӗ хӑйне.

* * *

Генриетта паян кунччен те натурщица вырӑнне йышӑнас ҫукчӗ, анчах мӑнкӑмӑллӑх чикки урлӑ вӑл маларах каҫма ӗлкӗрнӗччӗ ӗнтӗ. Пӗррехинче Тевель ӑна ҫав тери хаваслӑн кӗтсе илчӗ.

— Картинӑна лайӑх хакпа сутма пултартӑм. Ҫав ятпа хрансуссен Шампань хули ҫиччӗмӗш ӗмӗртех этемлӗхе парнеленӗ эрехе уҫсан та пӑсмасть пулӗ.

— Хӑвӑрӑн кӑмӑлӑр, — хирӗҫлемерӗ хӗр.

— Пӑх-ха, ҫав хула хӑйӗн эрехӗпе пӗтӗм тӗнчипе палӑрнӑ. Пирӗн провинци вара мӗнпе чапа тухӗ? Тен, эсӗ вӑрҫӑ чӗртме ҫунакансене вӑйлӑ питлесе тунӑ картинӑпа? Вӑл чи пысӑк куравсене ҫитессе шанатӑп. Лувр та ӑна хапӑлласах йышӑнӗ.

Аркадий Нилович тӗртсе илнине сисмерӗ марха хӗр, анчах хаваслӑ кӑмӑлне пӑсас килмерӗ унӑн. «Тепӗр тесен, сӑмахне вӑл ҫилпе вӗҫтерес ҫук. Пулатех ӑмсанмалла картина. Ҫирӗп тӗллев пур-ҫке». Ҫавӑнпа та вӑл шӳтлеме хал ҫитерчӗ:

— Турӑ пулӑшсан, хам тӑрӑшсан...

Тевеле ҫакӑ ҫеҫ кирлӗ пулчӗ тейӗн, пӗтӗм кӑмӑлтан ахӑлтатрӗ.

— Тĕрĕс! Тĕрĕс! — пуç пӳрнине çĕклерĕ вăл. — Пире тăмран йăваласа туман...

Çитĕнӳшĕн юрларĕç хрусталь фужерсем. Мĕнле ырă-çке эсĕ хисеплекен çыннăн савăнмалли сăлтав пурри!

— Генриетта, тен, кăштах хăватлăраххине те тутанма юрать, ĕçсем малашне те ăнсах пыччăр, хăватлă пулччăр, — сĕтел сунтăхĕнчен эрех кăларчĕ Аркадий Нилович.

Калаçу та ытларах çыпăçрĕ паян. Тевелĕн пурнăçра темĕнле инкек те пулнă иккен, сахал мар ура хунă ăна, халь те шăл хăйракансем чылай имĕш. Генриетта та чунне уçрĕ, ытларах ачалăхне аса илчĕ вăл. Вăхăт вăраха кайнине пула çĕр каçма кунтах юлчĕ. Хăйĕн «вăйне» ĕненнĕрентĕр художник ăна шӳтле-шӳтле ыталама, чуптума пуçласан çакăнпах çырлахатпăр тесе шутланăччĕ хĕр. Те арçынни урăхла йышши пулчĕ, те эрехĕ кăмăла çемçетрĕ, те пылак сăмахсем пуça çавăрчĕç...

Пĕртте качча каймасăр ют арçынпа çывăрнă хĕр çеç мар, саккунлă упăшкипе пĕр минтер çине пуçне хурса пĕрремĕш хут çĕр каçнă хĕрарăм та иртнĕ хĕр ĕмĕрĕшĕн малтанласа кулянать те, Генриеттăна вара чăн-чăн хуйхă пырса çапрĕ. Ăшĕ вăркарĕ унăн, ниçта ларас-тăрас килмерĕ. Ĕçрен таврăнсанах вырăн çине кĕрсе выртать, никампа та ытлашши хутшăнсах каймасть.

Пĕррехинче ăна урама чĕнтерчĕç. Аркадий Нилович кĕтет-мĕн. Генриетта ун çумне пырса тăчĕ, анчах куçран пăхма именчĕ. Тевель вара пачах урăхла. Аларан тытрĕ ăна.

— Çĕнĕ хыпар пĕлтересшĕн эпĕ сана, — терĕ вăл аяккалла пăрăнма чĕнсе. — Пĕр-пĕччен ĕçле-

мелли пӳлӗмлӗ вырӑн пулать часах. Халӗ ман пата кайӑпӑр.

Кӑмӑлӗ мар, урисем ҫеҫ ертсе пыраҫҫӗ тейӗн Генриеттӑна. «Аркадий Нилович маншӑн тӑрӑшать иккен. Ҫӗнӗ ӗҫ вырӑнӗ те шыраса тупнӑ, картинӑна та курава хутшӑнтарасшӑн. Эппин, Художниксен союзӗн членне те кӗме май пулӗ пурӑна киле», — шухӑшларӗ вӑл.

Ҫакӑн хыҫҫӑн пӳлӗмне таврӑнман каҫсем тӑтӑшланчӗҫ Генриеттӑн. Ун пек чухне вӑл пӗрле пурӑнакансемшӗн «ҫӗнӗ юлташсем патӗнче ҫӗр каҫрӗ».

Хӑш-пӗр чухне хӗрпе хӗрарӑм хушшинче питӗ пысӑк чикӗ пур иккен. Тевель ӑна пӗррехинче мунча кӗме хатӗрленнӗ пек салтӑнма хушсан вӑл турткаланса тӑчӗ, анчах Аркадий Нилович пӗрикӗ сӑмахпах ҫӗнтерчӗ ӑна.

— Ан вӑтан, эсӗ — художник. Художник вӑл врач пекех. Ҫыннӑн кашни пайне, тытӑмне лайӑх пӗлмелле унӑн, — тесе хӑй те шыва кӗмелли тумпа ҫеҫ тӑрса юлчӗ. — Санӑн та картинусенче тӗреклӗ те чипер арҫынсене кӑтартма тивет ӗнтӗ.

Кунсем иртрӗҫ. Тевельпе Генриетта пурнӑҫӗнче ҫеҫ нимӗнех те улшӑнмарӗ.

— Хӑш художник чипер натурщицӑна качча илсе пӗтӗм юлташӗпе урлӑ пулса пӗтӗ-ха? — ыйтрӗ пӗррехинче Аркадий Нилович.

— Мӗн, эсӗ мана натурщица вырӑнне хуратӑн-им? — хӗрӳленчӗ Генриетта.

Унӑн хивре кӑмӑлне лайӑх пӗлсе ҫитнӗ Тевель ҫак йывӑр лару-тӑруран хӑтӑлма шутларӗ, ҫӑвара кӗрсе ӳкнӗ тутлӑ чӑмлака халех кӑларса пӑрахас килмерӗ пӗртте. Вӑл лайӑх чухларӗ, Раевскаяпа ҫыхӑнӑва татасси питӗ ҫӑмӑл, ӑна

пĕр-пĕр сивĕрех сăмах çеç кала — мăнкăмăлласкер Тевеле шурă куç та кăтартмĕ, хăш-пĕр хĕрарăмла сухăр пек çыпăçас çук, анчах ăна халех алран вĕçертме юрамасть-ха.

— Гета, каçар мана, тăм чĕлхене, — терĕ Тевель, — эпĕ сăмахăма, тепĕр тесен, юриех кӳрентермелле пуçларăм пулас. Пĕлетĕн-и, хăвах сисетĕн ĕнтĕ, санпа тĕл пулма пуçланăранпа мĕн чухлĕ ĕç турăм. Хавхалану паратăн эсĕ. Манăн яланах санпа пĕрле пулас килет.

— Арăму?.. — тĕлĕнчĕ Генриетта.

— Çавă çав, — хаш-ш сывларĕ Тевель. — Вăл маншăн çукпа пĕрех. Манăн картинăсем кирлĕ мар ăна, укçа çеç илĕртет.

Çак калаçу хыççăн Генриетта чĕринче темĕнле çĕнĕ шанăç чĕрĕлчĕ. «Эпĕ ăна хавхалану паратăп пулсан арăмĕнчен уйăрттарса унпа пĕрлешсен манăн нимĕнле айăпăм та çук. Искусствăшăн-çке. Теприсем авă пуянлăхшăн е пĕр-пĕр карьерăшăн ватă çынсенех качча каяççĕ. Ку вара — вăйпитти арçын. Чипер, тĕреклĕ... Мана ăмсанĕç çеç...» — шухăшларĕ вăл.

Малалла Генриетта хăйне тата сăпайлăрах тытма пикенчĕ. Тем тесен те еркĕн мар-çке — пулас арăм. Сахалрах тĕл пулчĕ Аркадий Ниловичпа. Çĕр выртма юлмашкăн килĕшмерĕ. Çакă вара Тевеле пачах çырлахтармарĕ курăнать. Чеелленмех шутларĕ вăл.

— Генриетта, сана эпĕ хамран пĕр самантлăха та вĕçертмĕттĕм. Хальлĕхе арăмран уйрăлма çук-ха. Иртерех-ха. Часах манăн пысăк курав уçăлмалла. Вăл ăнăçлă иртсен журналистсем, куракансем тата, паллах, çӳлтисем пысăка хурса хакласан, хăвах пĕлетĕн, пĕр-пĕр хисеплĕ ят е

преми парса чыс тăвĕç. Хăвах чухлатăн, ун пек чухне лайăх репутаци кирлĕ, мораль енчен çирĕп пулмалла. Кĕт, — терĕ вăл.

Чăнах та, Генриетта Раевская паян кунччеnех кĕтсе пурăнчĕ. «Гетера» сăмахчен. Ăна илтмĕше пеме те пултарнă-ха вăл. Капла йăлтах çухатать-çке: лайăхрах ĕç вырăнне те, картинисене курава йышăнассине те... Çав чăрмавсем те текех тытса чараймарĕç ăна. Унăн малтанхи, тахçанхи мăнкăмăллăхĕ çиеле тухрĕ. Мĕнле аван пулмаллаччĕ мăнкăмăллăхĕ вырăнне мăнаçлăх пулсан!

«Кĕт терĕ», — пăшăлтатрĕ вăл васкаса утнă май. Çак икĕ сăмах пĕрлешсе ун хăлхине «гетера» евĕрлĕ кĕчĕ.

Акă тата икĕ хĕрарăм темшĕн хыттăн калаçса ăна хирĕç килет. Шăп та шай Генриеттăпа танлашсан пĕри: «Ху айăплă!» — тесе хучĕ. Çакă ăна пырса тиврĕ тейĕн. Раевская çул тепĕр енне тӳррĕн каçма тытăнчĕ. Умра кӳлленчĕк ялкăшса выртать. Пушмакĕсене йĕпетес мар тесе Генриетта чĕрне вĕççĕн асăрханса утма пикенчĕ. Хура кӳлленчĕкре самаях тарăн лупашка пулнă, хăрах урине унта чиксе кăларчĕ вăл. Ун хыççăн вара пусмассерен пĕрре сиктерсе лăчăр-лăчăр! сасă илтĕнсе пычĕ.

Кашни хура кӳлленчĕк урлах урана йĕпетмесĕр каçса кайма çук иккен. Чĕрне вĕççĕн те. Тен, çав тери чее, асăрхануллă çын пултарĕ.

Çавăн пиркиех шухăшласа утрĕ пуль Генриетта та.

## КАÇХИ КĔЛЛЕ КАЯС УМĔН

Аш-какай комбиначĕн калинккинчен тухнă хĕре икĕ хĕрарăм хыçалтан пăхса юлчĕ.

— Лена ĕçрен каять, — терĕ пĕри.

— Ара, чиперех ĕçлетчĕ-çке-ха. Эй ухмах, ăçта пырса пуçне чикĕ? Амăшĕ чирлĕ, йăмăкĕпе шăллĕ ура çине тăрайман-ха, шкулта вĕренеççĕ. Килйыш шанчăкĕ... вăл кăначчĕ. Хальхи вăхăтра çĕнĕ ĕç пирĕн хулара ăçтан тупăн? — хĕрхенчĕ тепри.

Лена никама та асăрхамасть, тротуарпа, икĕ енĕпе те юр çӳллĕ купаланăскерпе, пуçне чиксе утать. Хĕрĕн никама та тĕл пулас килмест, айккине пăрăнса кайма майĕ çук.

— Сывлăх сунатăп! — илтĕнчĕ йĕкĕлтешӳллĕ сасă. Тен, ăна çеç çавăн пек туйăнчĕ.

— Сывлăх сунатăп, — пăшăлтатрĕ Лена пуçне çĕклемесĕрех. «Мана ĕçрен кăларса янине пĕлнĕ ĕнтĕ. Ман вырăна ĕçе кĕме васкать», — тарăхрĕ вăл.

«Ăçта кайса пуçа чикес? Тĕнче хĕрне тухса тарăттăм — хĕне кайнă аннеçĕме, хӳтлĕхсĕр йăмăкăмпа шăллăма пăрахса хăвараймăн», — пусмăрларĕ хурлăхлă шухăшĕ.

Чăнах та, вĕсем пĕр çын ĕçлесе илнĕ укçатенкĕпе саплашкаласа пурăнкалатчĕç-ха. Хула хĕрринчи кивĕ çурчĕ çумĕнчи пĕчĕк çĕр лаптăкĕнчен кăларса-татса илнĕ пахча çимĕçне, улмиçырлине хĕссе-пĕссе тыткаланипех хĕл каçаççĕ. Йăмăкĕпе шăллĕ çăвĕпех тăрмашаççĕ пахчара. Аран-аран сывлакан амăшĕ те тухать вĕсем патне. Ĕçрен таврăннă Лена çемçен ятлаçать вара: «Уру çинче аран тăратăн. Мĕн асапланатăн? Сансăр алă çитмест-и пирĕн?» «И-и, ачамсем, манăн хырăм выçмасть-им? Эпĕ çиместĕп-им?

Аптрамастăп, паян аванах туятăп-ха хама», — йăпатать вăл тĕпренчĕкĕсене.

Упăшки вилнĕ хыççăн хытă йăшрĕ çамрăк хĕрарăм. Мăшăрĕпе, сантехникра ĕçлекенскерпе, шăкăл-шăкăл пурăнатчĕç. Тирĕк-чашăк шăкăртатмасăрах пулман ĕнтĕ Ванюкĕпе, анчах килти çӳп-çапа урама кăларман.

Пĕррехинче упăшки ĕçрен таврăнчĕ те карчăкĕ-шăрчăкĕпе сăмах пуçарчĕ: «Сăпани, кунта ĕçленипе нихçан та хваттерлĕ пулас çук эпир. Стройкăна куçмалла пуль. Укçи-тенки те ытларах. Хваттер черетне те тăратаççĕ».

Алхапăл йышăнчĕç ăна, пысăк квалификациллĕ каменщика. Виçĕ çул тăрмашрĕ унта. Ĕçĕ йывăр ĕнтĕ: хĕлле сивĕ çил касать, ытти вăхăтра та çăмăл мар, çумăр ислетет тăтăшах. Хӳтте кĕрсе пытаннипе укçа-тенкĕ ĕçлесе илеймĕн. Анчах вăл ӳпкелешсе калаçнине нихçан та илтмен. Икĕ тĕллевĕ çăлнă ăна. Тĕллев вăл хĕвел пекех çав: ăшăтать çынна, шанчăк парать.

Пĕр тĕллевĕ — çурчĕ йăванса кайиччен хваттер илмелле. Тепри, унран та çывăхраххи, — хĕрĕ, Ленук, студентка пулса тăнине курасси. Шкулта лайăх вĕренекенскер университета кĕресси пирки иккĕленмерĕ.

Çапах та ĕмĕчĕ çитеймерĕ унăн.

Пĕррехинче ашшĕне кĕтсе ывăннă кил-йыш каçхи апата та ларнăччĕ. Калинккене шаккани илтĕнчĕ.

— Аçу килчĕ, Паша, тухса уç, — васкатрĕ амăшĕ.

Ывăлĕ палламан çынпа кĕнине курсан тĕлĕнчĕ хĕрарăм.

Килнĕ çын сывлăх сунас вырăнне:

— Каçару ыйтатăп, — терĕ.

— Нимех те мар, нимех те мар, — лăплантарма тăрăшрĕ ăна хĕрарăм.

— Каçарăр, — илтĕнчĕ хурлăхлă сасă каллех. — Çирĕп тытăр хăвăра. Иван Петрович вилнĕ, — пуçне усрĕ палламан çын.

— Мĕнле вилнĕ?! Ирхине сывах тухса кайрĕçке! — ĕненес килмерĕ мăшăрĕн. Ленăн кашăкĕ урайне чăнкăртатрĕ.

— Çурт тăрринчен ӳксе вилнĕ, — пăшăлтатрĕ палламан арçын.

Çакна илтсен виçĕ ача амăшĕ тĕшĕрĕлсе анчĕ, тăнне çухатрĕ. Килнĕ çын мобильникĕпе «васкавлă пулăшăва» шăнкăравларĕ. Часах çитеймерĕç врачсем. Юр хӳсе кайнипе машина пӳрт патне кĕреймерĕ.

Аптраса ӳкнĕ хĕрарăма укол турĕç, эмелсем парса хăварчĕç.

Вилнĕ çынна пытарассинчен йывăрри çут тĕнчере нимĕн те çук. Пĕтĕм çав харам ĕç хăй çине тиеннине чăтса ирттернĕ Лена çакна никамран та аванрах туять. (Çынсене терт-асап, чăрмав кӳриччен хамах масар çине кайса выртăттăм тесе калать имĕш виле.)

Амăшĕ урама та тухса çӳреймерĕ. Ленăн ăна пăхмалла, шăллĕпе йăмăкне апат пĕçерсе çитермелле, кĕпе-йĕмне çумалла.

— Ах, хĕрĕм, пĕве кĕрсе çитеймесĕрех пуçу çине нуша йăтăнса анчĕ, — пĕрмай хаш-ш сывлать амăшĕ.

— Анне, мĕн эсĕ, анне? Эпир чиперех пурăнатпăр, — лăплантарма тăрăшать амăшне вун çиччĕри хĕр. — Шăллăмпа йăмăкăм шкулта лайăхах вĕренеççĕ. Эпĕ те ыттисенчен кая юлмастăп.

Амăшне йăпатать-ха çапла — хăй вара пĕччен чухне вăрттăн татăлса йĕрет.

Университета вĕренме кĕрес шухăш текех тĕлĕкре те тĕлленмерĕ. Алла аттестат илсенех ĕçе вырнаçмалла унăн. Амăшĕ валли эмел туянма та укçи-тенки пайтах кирлĕ.

— Ан ил-ха çавсене ытлашши, мĕн чухлĕ тăккаланатпăр, — пысăк айăпа кĕнĕн ӳпкелешет амăшĕ.

— Мĕн эсĕ, анне, сан сывалмалла часрах, — калаçăва урăх енне пăрма тăрăшать Лена.

— Тем пекехчĕ те, тем пекехчĕ, — хĕрĕн кăмăлне хуçассинчен хăрать асли.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Амăшĕ сывални сисĕнсех каймарĕ.

* * *

Алла аттестат илмелли вăхăт та çитрĕ. Салхуллă сăн-питпе кайрĕ Лена шкула. Тантăшĕсем савăнаççĕ — хĕпĕртӳ çук хĕршĕн. Салам сăмахĕсем хăлхана кĕмеççĕ.

— Паян уяв каçне килетĕн-и? — терĕ ун умне пырса тăнă Юра.

— Килместĕп, — пуçне усса хуравларĕ хĕр.

— Кил ĕнтĕ, — йăлăнса пăхрĕ каччă.

«Ăçтан пĕлет Юра эп ăна килĕштернине? Ун пирки никама та каласа кăтартман-çке», — шалт тĕлĕнчĕ тунсăхлăскер.

— Çук, килместĕп, — терĕ каллех Лена чунне хытарса. — Эпĕ укçа та паман.

— Мĕнле паман? Санăн хушамату списокра пурччĕ! — васкавлăн пĕлтерчĕ Юра.

Шалт тĕлĕнсе кайрĕ Лена. Кам уншăн укçа хума пултарнă?

— Çук, суя ку, эпĕ укçа паман! — хыттăн хирĕçлерĕ вăл.

— Хам куçăмпа куртăм списока, — ĕнентересшĕн пулчĕ каччă.

— Кам хунă апла? Укçине тавăрса паратăп. Ман укçа пур! — кăшкăрчĕ тарăхнă Лена сумкинчен енчĕк кăларса.

— Пĕлместĕп эпĕ, — куçран пăхма хăймарĕ каччă. — Вĕрентекенсем пухнă пуль. Сана вĕсем пурте юратаççĕ вĕт. Пыратăн-и уява? — килĕшессе шанса каллех ыйтрĕ Юра хĕр кăштах лăплансан.

— Тем тумалла çав, хам та пĕлместĕп, — пăшăлтатрĕ Лена. — Сывă пул, — илтĕнсе юлчĕ хурлăхлă сасă вăл çаврăнса утнă май.

Килне çитсенех хĕпĕртесе амăшне аттестат кăтартрĕ.

— Эх, аçу курса савăнаймарĕ, — куççульне шăлчĕ хавшак хĕрарăм шăкăрин «пиллĕке» асăрхасан.

Çук, каймарĕ уяв каçне Лена. Кайран хĕр юлташĕнчен уяв мĕнлерех иртни çинчен нумай ыйтса пĕлчĕ. Унпа тепĕр тантăшĕсĕр пуçне пурте пулнă иккен унта. Лешĕн хырăмĕ палăрмах пуçланăччĕ çав. Юра вара темшĕн вăййа-кулла хутшăнман тет, таçта кайса çухалнă.

Çав каç çĕрĕпех куç хупмарĕ Лена. Телейсĕрскер... Пӳрт умĕнчи карта çумĕнче такам унталла-кунталла утса çӳренине асăрхарĕ.

* * *

Тепĕр икĕ эрнеренех Лена аш-какай комбинатне ĕçе вырнаçрĕ. Оператора йышăнчĕç ăна. Ĕç тупасси хальхи вăхăтра çăмăлах мар. Амăшĕ-

пе пĕрле чиркĕве çӳрекен хĕрарăм пачăшкă арăмĕпе лайăх пĕлĕшсем-мĕн. Аш-какай комбиначĕн директорĕпе, Борис Владимировичпа, Василий атте кӳршĕсем иккен, пĕр-пĕрин патне кайса килсех тăраççĕ.

Ленăн пурнăçĕ ăнăçса пынăшăн амăшĕ питĕ савăнчĕ. «Тавах Турра пире манманшăн», — пăшăлтатрĕ пĕрмай. Ачисемшĕн чиркӳре кĕлтурĕ ялан, упăшкине тăтăшах асăнтарчĕ. Вăл Çӳлти Патшалăхра пулни пирки иккĕленмерĕ. Çавăн пек ырă çын сăвапа тивĕçлĕ ĕнтĕ.

Лена ĕç укçине пĕр пус юлмиччен амăшне парса пычĕ.

— Хĕрĕм, ху валли тыткалама хăвармаллаччĕ, — текелерĕ лешĕ. — Çамрăкăн хитре тумланас та, тантăшсемпе савăнас та килет пуль.

— Вăхăт çитет, анне, вăхăт çитет, — пăрăнса утрĕ вăл хăвăртрах амăшĕ ăна мĕнле хĕрхеннине курса сасартăк йĕрсе ярасран хăраса.

Пӳрни пӳрт умнех килет теççĕ. Ленăна тӳр килчĕ çак сăмах. Вăл ĕçрен тухнă çĕре комбинат умĕнче тăра парать Юра. Ăна курсан савăнса кайрĕ хĕр. Иккĕшĕ пĕр-пĕрин патнелле утрĕç. Юрăн кунтан инçе мар юлташĕ пурăнать имĕш. Темĕнле ĕç пуçарнă иккен вĕсем. Çавăнпа кунталла тăтăшах килсе çӳреме тивет. Лена сисмерĕ те: хĕрпе каччă юнашар утаççĕ. Ăна килне ăсатса янăнах туйăнчĕ. Шкулти пурнăçа аса илчĕç. Тепĕр кунне те Юра тăра парать комбинат умĕнче. Каллех ĕнерхи пекех шăкăл-шăкăл калаçрĕ икĕ çамрăк чун. Эрне иртсе кайрĕ — алран та çавăтăнмарĕç-ха. Хĕрне кашни кунах ĕçрен куç пек кĕтекен амăшĕ чӳречерен асăрхарĕ-асăрхарех çакна. Лена хăйне нимĕн те пулса иртмен

пек тытма тăрăшрĕ пулин те, чĕри тĕпренчĕкĕн пысăк савăнăçне сисрĕ, туйрĕ. Каччи те килĕшрĕ ăна. Сăпай тумланать вăл, çӳçĕ-пуçĕ те тирпейлĕ.

«Тавах Турра, тăлăха пăрахмасть», — пăшăлтатрĕ хĕрĕн телейĕ пирки ĕмĕтленекен хĕрарăм.

— Мĕн эсĕ ĕç хыççăн кăштах та уçăлса çӳреместĕн? — ним пулман пек каларĕ вăл Ленăна пĕррехинче.

Хĕр шикленӳллĕн амăшне кăн-н пăхрĕ. Унăн куçĕнче нимĕн те сисĕнмерĕ, çавăнпа тӳрех лăпланчĕ.

Тĕлĕнмелле, юрату никамран ыйтмасăрах капланса килме пултарать иккен. Юра уншăн çут тĕнчере никампа танлаштарма çук тĕлĕнтермĕш çын пулса тăчĕ: вăл чун савни те, телей те, шанчăк та...

Кам пĕлнĕ тепĕр темиçе кунтанах унран тарса çӳреме шăпа пӳрнине? Çапла, ĕçрен тухсан Юрăна асăрхарĕ те çынсем хушшипе пытанса иртсе кайрĕ. Тепĕр кунне те çаплах турĕ. Виççĕмĕшĕнче килĕнчен инçех мар кĕтсе илчĕ ăна каччă.

— Лена, мĕн пулнă сана? — асăрханса ыйтрĕ вăл.

— Нимĕн те, нимĕн те! — кăшкăрчĕ хĕр. — Урăх ан кил ман пата! Юратмастăп сана!

Лена килне чупса çитрĕ те кравачĕ çине лап йăванса кăшкăрса йĕрсе ячĕ.

— Хĕрĕм, мĕн пулчĕ? — хыпăнса ӳкрĕ амăшĕ. — Мĕн пулчĕ-ха, вăрçăнса кайрăр-им? Пулкалать вăл ун пекки çамрăк чухне, — ачашларĕ пуçран тĕпренчĕкне.

— Пĕтнĕ ман йăлтах, пĕтнĕ! — икĕ чăмăрĕпе минтере тӳрĕ хĕр.

Çапах та тепĕр кунне чиперех ĕçе кайрĕ. Вăхăт самаях иртрĕ. Ăсатма килнĕ каччă текех курăнмарĕ.

* * *

Ĕнер аш-какай комбиначĕн директорĕ Борис Владимирович фельдшера хăй патне чĕнтернĕ.

— Нина Николаевна, — тенĕ вăл, — ĕçлекенсен медицина амбулаторийĕн кĕнекисене тĕрĕслес пулать ыран.

— Пуринне те-и? — ыйтнă фельдшер.

— Хĕрарăмсенне çеç.

— Мĕншĕн апла? — шалт тĕлĕннĕ Нина Николаевна.

— Вĕсем хушшинче аборт тунисем çук-и? Çавна пĕлес пулать. Аборт туни чи пысăк çылăх шутне кĕрет. Вĕсенчен хăтăлмалла. Унсăрăн пирĕн патра пĕр-пĕр инкек пулма пултарать.

— Унашкал хăтланни пачах тĕрĕс мар, — хирĕçлеме тăнă Нина Николаевна, анчах пуçлăха ăçтан хирĕç тăрайăн хальхи вăхăтра? Профсоюза та тахçанах салатса янă. Пур пекки те ячĕшĕн кăна.

Чăнах та, çылăхлă виçĕ хĕрарăм тупăнчĕ. Пурте упăшкаллă. Тăваттăмĕшĕ Елена Ивановна Завьялова пулчĕ. Вун саккăра пуснă хĕр.

Шалт тĕлĕнчĕ унран Нина Николаевна.

Хĕре смена вĕçленес умĕн директор патне чĕнтерчĕç.

— Ĕçрен тухма ыйтса çыр, — терĕ хаяррăн Борис Владимирович.

— Мĕншĕн? — тĕлĕнчĕ Лена.

— Мĕншĕнне пĕлместĕн-им? Пĕлмесен калатăп. Намăссăр, хĕр пуçăн хырăм пăрахнă, — лач! сурчĕ урайне пуçлăх.

Ним калама аптранă Лена питне аллипе хупларĕ те хăвăрт тухса кайрĕ.

Ун чухне тухса кайрĕ те-ха — тепĕр кунхине ирех таврăнма тиврĕ.

— Борис Владимирович, тархасшăн, ĕçрен кăларса ан ярăр, — чĕркуçленсе ларчĕ вăл. — Йăлăнатăп сире. Эпĕ çеç тăрантарса пурăнатăп кил-йыша. Анне чирлĕ, йăмăкпа шăллăм пĕчĕккĕ. Атте вилнĕ манăн.

Директорăн чунĕ кăштах çемçелчĕ туйăнать:

— Юрĕ, юрĕ, тăр ура çине, — хистерĕ вăл. — Чиркĕве кайса çылăхна каçарттармалла, — тесе хĕре алăкран кăларса ячĕ.

* * *

Борис Владимирович мĕнлерех çын вăл? Лайăх-и, начар-и — ăна никам та татса калама пултараймасть. Ашшĕ-амăшĕ ăна валли йăлтах хатĕрлесе хунă, çул уçса панă.

Ашшĕпе амăшĕ, Владимир Никитичпа Нинель Николаевна Сухановсем, ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухас умĕн çемье çавăрнă. Совет саманине ятлатпăр-ятлатпăр та — лайăххи те чылай пулнă ун чухне. Çамрăк специалистсене тĕрлĕ енне уйăрса яман, пĕр çĕреллех ĕç тупса пама майне шыранă.

Иккĕшĕ те парти членĕ маррине пула васкавлăн кандидата йышăннă. Уççăнлăх вăхăчĕ пуçланнăччĕ ĕнтĕ, çапах та партире тăманнисене пысăк должность шанса паманнине пăрахăçламанччĕ-ха.

Çапла вара вĕсем хула хĕрринчи яла çакланчĕç. Владимир Никитича колхоз председательне лартрĕç. Çакăншăн темех савăнмалли

çукчĕ ун чухне. Колхозĕ юхăнса кайнă, халăхĕ хулара ĕçлет, уй-хирте çум курăк ашкăрать.

Нинель Николаевна валли чипер ĕçех тупăнчĕ. Ял çумĕнчи асфальтпа цемент завочĕн директорĕ пулса тăчĕ вăл.

Икĕ çамрăк чиперех пурăнчĕ, укçа-тенкĕ енчен те аптрамарĕ. Ара, çирĕп шалу вĕсен нимех тумасан та пырать. Лайăх çурт пачĕç ялта. Партие те хăвăртах йышăнчĕç. Карьера çулĕ уçăлчĕ çамрăк çемьешĕн.

Кам шутланă пурнăç сасартăк арăш-пирĕш улшăнса каясса? Хăшне-пĕрне пысăк мул кӳрессе, чылайăшне çуклăха хăварасса тĕлленмен те.

Халăх пурлăхне вăрлама-çаратма патшалăх шайĕнчех ирĕк пачĕç. Чее те намăса çухатнă çынсем йăлтах хăйсен аллине çавăрса илме пуçларĕç. Пĕтĕмпех саккунлă. «Эсĕ ăслă пулсан мĕншĕн чухăн?» — çакăн пек реклама янăратчĕ кунĕн-çĕрĕн радиопа, телевиденипе. Май килнĕ таран «çын пуçне кассах» пуйса юлас текенсем çакăншăн пачах кӳренмерĕç, савăнчĕç çеç.

Колхозсене пĕтерсе лартни Владимир Никитича малтанласа хăратрĕ. Çирĕп шалу пыратчĕçке унăн.

— Пирĕншĕн ку аван та, — лăплантарчĕ ăслă арăмĕ. — Йĕри-тавра мĕн чухлĕ пушă çĕр, хула çывăхĕнчех. Йĕрке çук чухне усă курса юлмалла, сутса ямалла коттеджсем тума.

Алла ал çăвать тени кама-кама та — Сухановсене тӳр килчĕ. Каварлашрĕç. Кирлĕ çынсем, туссем нумайланчĕç таçта та. Колхоз садне те, кӳлле те çавăрса илчĕç.

Коттедж валли çĕр лаптăкĕ туянма пыракансене, таса сывлăша юратакансене, юнашарах

асфальтпа цемент завочĕ пулни килĕшсех каймастчĕ.

— Паян пур та вăл — ыран çук, — куç хĕссе систеретчĕ чее Нинель Николаевна. — Хальлĕхе питĕ кирлĕ. Часах стройка пуçлатăр вĕт.

— Тĕрĕс! — ăнланса илетчĕç «ăслисем».

Ăнăçупа пуçĕ çаврăнса кайнă упăшки ĕçке те ярăнма тытăннăччĕ, анчах мăшăрĕн çирĕп алли çăварлăхларĕ ăна:

— Çынсем авă майлă самантпа усă курса ытларах пуйса юласшăн — эсĕ пур, пырна çеç çăвасшăн. Чарăннă пултăр! — чăмăрĕсемпе юнарĕ вăл.

Ялти çурчĕ кермен пек курăнса ларать пулин те, хулара чаплă виçĕ хваттер туянчĕç: икĕ ывăлне те ура çине тăратмалла вĕт. Кусем шкулта аран-аран ĕлкĕркелесе пыратчĕç. Çапах та лайăх институтри юридически факультетне вĕренме кĕрейрĕç. Юрист профессийĕ ун чухне чи пахи шутланатчĕ. Çавăнпа конкурсĕ те унта кĕме питĕ пысăкчĕ.

Асли пирки мухтансах калаçаймасть ашшĕ-амăшĕ. Арăмĕпе те уйрăлнă вăл, ĕçкелет те. Кĕçĕнни вара, Борис Владимирович, «ылтăн чăмакки» вĕсемшĕн: аш-какай комбинатне миçе çул ĕнтĕ ăнăçлă ертсе пырать, йăлтах унăн аллинче.

Ача-пăча ӳстерсе вĕсене çын тăвасси никамшăн та çăмăл мар, паллах. Борис Владимирович та ашшĕ-амăшĕн ăшне самаях çунтарнă хăй вăхăтĕнче.

Чăннипех те, Борис Владимирович пирки халĕ никамах та усал каламасть. Вăл следстви изоляторĕнче çур çула яхăн ларса тухнине те пĕлекен çукпа пĕрех. Тĕрмене лартман, кăларса янă.

Эппин, айӑпӗ ҫук, ҫынна ахаль асаплантарнӑ. Тӗрӗслӗх ҫиеле тухнӑ.

Ӑна милицие илсе каясси вара...

Ҫамрӑк чухне ытларах юрату айӑплӑ ҫав. Виҫкӗтеслӗх хӑйӗн ҫивӗчӗшӗпе пырса тӑрӑнать чылайӑшне.

Борис юнашар класра вӗренекен Алевтинӑна кӑмӑлларӗ. Кӑмӑлларӗ ҫеҫ мар, юратрӗ те. Хӗр те унпа ӑшшӑн калаҫрӗ. Ҫапах та Богдан вӗсем патне пырса тӑрсан ун енне туртӑнатчӗ. Иккӗшӗн хушшинче уйрӑмлӑх ҫукпа пӗрехчӗ. Богдан пӗр пилӗк сантиметр ҫӳллӗрехчӗ ӗнтӗ. Ҫав пилӗк сантиметр та хӗршӗн пӗлтерӗшлӗ-ши?

Богдан — шанчӑк паракан спортсмен. Боксер. Хула чемпионӗ шутланать.

Борис вара гитара лайӑх калать. Тантӑшӗсене илӗртме те майсем ытларах: килти кинотеатр, музыка центрӗ, видеокамера...

Борис юлташӗн савнийӗ Алевтинӑпа пӗр ҫӑвартан пурӑнать. Ҫавӑнпа усӑ курма шут тытрӗ те каччӑ. Ун чухне студентсемччӗ пурте.

Ҫуралнӑ кун ӑмсанмалла иртрӗ: сӗтел тулли апат-ҫимӗҫ, хаклӑ эрех. Савӑнчӗҫ, юрларӗҫ, ташларӗҫ. Кайран пӳлӗмсене мӑшӑрӑн уйрӑлчӗҫ.

— Мансах кайнӑ, — темӗн аса илнӗ пек турӗ Борис. — Манӑн президентсемпе корольсем ҫеҫ ӗҫекен сипетлӗ эрех пур. Тен, тутанса пӑхатпӑр?

— Ытлашши пулмасть-и? — тӳрех килӗшмерӗ Алевтина.

— Ан шиклен, унӑн хӑвачӗ те ҫук, — тесе икӗ бокал тултарчӗ каччӑ.

Кӗленчери тутлӑ шӗвеке шурӑ эрехпе хутӑштарнине пӗлмен пике ӑна сыпа-сыпах ӗҫсе ячӗ.

Каччӑ хӗре ыталаса илчӗ, чуптума пуҫларӗ, ӑна

вăл мĕнле хытă юратни çинчен ăшă-ăшă сăмахсем пăшăлтатрĕ. Алевтинăна ыră-ыră пулса кайрĕ. Пуçĕ темшĕн диван çине тĕршĕнчĕ. Борис сĕтел лампине сӳнтерчĕ, ăна Алевтина çутрĕ... Малалла «Мускав куççуле ĕненмест» кинофильмри пекех пулса иртрĕ.

Çакăн хыççăн Борис хăйĕн çĕнтерĕвне ăнланчĕ. Чун савниййĕ Богданпа ăнсăртран тĕл пулсан та калаçмарĕ. Боксерăн çăмăллăн парăнас килмерĕ, паллах, хитре хĕре вĕçертме шутламарĕ. Килĕшсе татăлнă пекех пĕр вăхăтра пырса тухать икĕ каччă Алевтина пурăнакан çурт умне. Темиçе хутчен те тытăçса илчĕç. Юрать-ха, хĕр вĕсене уйăрса ярать. Пĕрре мар систерчĕ вăл Богдана кунта текех килме кирлĕ маррине. Лешĕ çавах тăна кĕмест, Бориса Алевтина çурчĕ патне çитиччен кĕте-кĕте илме пуçларĕ. Ăна çапса та ӳкерчĕ. Мĕн тумалла? Атте-аннерен пулăшу ыйтаймастăн-çке кун пек чухне. Кĕсйинче çĕçĕ илсе çӳреме тытăнчĕ аптранă енне. Анчах унпа çынна епле чикейĕн?

Борисран инçех мар Рудольф пурăнать. Çапăçма тесен ăна кăна хуш. Эрех-сăра ĕçме укçатенкĕ ыйтать яланах. Çак çапкаланчăка тара тытма шутларĕ кӳреннĕскер.

Богдан икĕ çынпа тытăçасса шутламан та вăл. Рудольфа пĕрре çапсах урараан ӳкерчĕ хайхи. Унтан юратушăн тупăшакана тапа-тапа хĕнеме пикенчĕ.

— Хăравçă, çынна тара тытатăн! — кăшкăрчĕ хыттăн боксер.

Çав вăхăтра Рудольф тăчĕ те ун çине ыткăнчĕ. Каллех тĕшĕрĕлсе анчĕ вăл. Богдан «кăварçă» енне хаяррăн утрĕ. Лешĕ кнопкăллă çĕççине

кӗсйинчен туртса кӑларчӗ те унпа хӑратасшӑн сулкалашма пуҫларӗ. Ҫав вӑхӑтра боксер ҫӗҫҫе пырса тӑрӑнчӗ. Ури ҫине ҫӗкленнӗ Рудольф Богдана хыҫалтан ҫапнӑ иккен. Аманнӑ каччӑ сылтӑм аллипе кӑкӑрне ярса тытрӗ. Юн сӑрхӑннине асӑрханӑ Рудольф хӑвӑртрах тарчӗ. Борис «васкавлӑ пулӑшӑва» шӑнкӑравларӗ. Ҫийӗнчех милици машини те персе ҫитрӗ. Аманнӑ ҫамрӑка «васкавлӑ пулӑшу» машинине хучӗҫ.

— Мӗн пулнӑ? — ҫирӗппӗн ыйтрӗ лейтенант.

— Ӑнсӑртран пулса тухрӗ ку, ӑнсӑртран, — теме ҫеҫ пултарчӗ Борис.

Милици машини ӑна следстви изоляторне лартса кайрӗ.

Рудольф таҫта кайса ҫухалнӑ, темиҫе эрнерен ҫеҫ тытайнӑ ӑна.

Амӑшне Алевтина Борисран ача юлнине пӗлтерет. Каччи текех пурнӑҫра шанчӑк паракан ҫын мар ӗнтӗ. Богдан халь-халь чунӗ тухас пек выртать. Вӑл вилсен Бориса хупаҫҫех. Хӗрӗн кунҫулӗ ан пӑсӑлтӑр тесе вӑхӑт иртсе кайиччен аборт тутарма килӗшсе татӑлать ашшӗ-амӑшӗ.

Нинель Николаевна, пур ҫӗрте йӑрӑскер, пачах тӗлӗрмен. Малтанхи кӑтартӑвӗсенчен шарт та март тунма хушать ывӑлне, следователь хистесе калаттарнӑ имӗш йӑлтах. Пӗтӗмпех Рудольф ҫине йӑвантармалла. Вӑл ҫапӑҫса темиҫе хут та милицие ҫакланнӑ. Ҫӗҫӗпе чикни те пулнӑ, ҫулӗ ҫитменнипе ҫеҫ тӗрмере ларассинчен хӑтӑлса юлнӑ.

Богдан ашшӗпе те чиперех килӗшсе татӑлаҫҫӗ. Бориса ларттарнипе ним усси те ҫуккине ӗнентереҫҫӗ, ывӑлне сыватса ҫитерме укҫа-тенкӗ пайтах кирлине аса илтереҫҫӗ. Килӗшет сусӑрланнӑ каччӑн

ашшĕ. Çапла вара пĕтĕм айăпа Рудольф çине йăвантарма шутлаççĕ. Ывăлне те ӳкĕте кĕртеççĕ.

Богдан малтан Борис чикнĕ тесе мĕншĕн кăтартнине сăлтавлама чеелĕх тупнă-мĕн. Вăл савнине туртса илнĕшĕн тавăрасшăн пулнă имĕш. Çамрăк çыннăн пурăнас та килчĕ ĕнтĕ. Пурăнас килет çеç мар, чаплă спортсмен пулас ĕмĕчĕ те сӳнмен-ха, паллă юрăçа тухас шанчăкĕ те хĕмленме пăрахман. Ӳпки çав-çавах тӳрленмест, пӳр тулать унта, пĕрмаях тасатма тивет.

Рудольф тĕрĕссине каларĕ, ăна ĕненменнишĕн питĕ тарăхрĕ. Çапах та никам та тăнламарĕ çапкаланчăка — хупса лартрĕç.

Борис тепĕр çур çултан Алевтинăна качча илчĕ. Çав тери чаплă туй турĕç. Халăх калашле, телей шăл çĕмĕрсех кĕчĕ. Çапах та пĕр хуйхă пур вĕсен. Ача çуралмасть те çуралмасть. «Ачасăр кил-çуртăн телейне ăçта куртăн? Кил-çурт пепкесĕр чухне пулмасть ӳпкевсĕр», — теççĕ.

Акă юнашар хваттерте пурăнакан Василий аттенех виçĕ ача. Ăмсанать çак кил-йыш телейне Борис Владимирович. Килĕштереççĕ вĕсем, пĕрпĕрин патне кайса-килсе тăраççĕ. Пачăшкă — илемлĕ сăн-сăпатлă, хĕрлĕрех сухаллă çуткам çын, арăмĕ те çынна питĕ тарават.

Борис Владимирович таса аттепе калаçнă май çакна пĕлчĕ: Турă каçарман çылăх çук-мĕн. Çакă питĕ килĕшрĕ ăна. Ӳкĕнмелле çеç. Чиркĕве, кĕлле çӳремелле. Çылăх каçарттармалла...

Малтан хваттерне, унтан аш-какай комбинатне тасаттарчĕ Борис Владимирович. Паллах, тӳлевсĕр мар ĕнтĕ — укçине те ытларах сĕнме тăрăшрĕ.

Ачасăр çамрăк çемье мĕн çеç тумарĕ-ши?

Алевтина ăçти чиркĕве кăна çитмерĕ, ăçта кăна сипленмерĕ — Турри памасть те памасть ачине. Хальхи вăхăтра суррогат меслечĕпе та ачаллă пулма май пур-ха. Анчах та ку Турра хирĕçле ĕç иккен.

Пĕр калаçура Борис Владимирович тата çакна пĕлчĕ: аборт туни — чи пысăк çылăхсенчен пĕри. Вăл çын пурнăçне татниех шутланать. Акă мĕншĕн халĕ те ача пулмасть вĕсен. Анчах Турă каçарман çылăх çук-çке. Ӳкĕннĕ, çылăха каçарттарнă, миçе чиркӳ уçма укçа хывнă...

Аптранă кăвакал кутăн чăмать тет. «Тен, ашкакай комбинатĕнче аборт тунă хĕрарăмсем ĕçлеççĕ? Вĕсенчен, çылăхлăскерсенчен, хăтăлмалла!» — çиçсе илчĕ шухăш Борис Владимирович пуçĕнче. Çавăнпа та вăл фельдшера кунта ĕçлекен хĕрарăмсен медицина амбулаторийĕн кĕнекисене тĕрĕслеме хушрĕ...

Акă халĕ Ленăн çылăх каçарттармалла чиркӳре, таса аттене йăлтах каласа памалла. Калама çеç канас теççĕ. Мĕнрен пуçламалла? Пуçламăшне хăй те йĕркеллĕ пĕлмест.

Иккĕмĕш сменăран таврăнатчĕ вăл. Уйăхсăр тĕттĕм каçчĕ. Килне çитеспе тĕмсем хушшинче чăшăл! тунă пек илтĕнчĕ ăна. Урăх астумасть. Тăна кĕчĕ — пуçĕ кашлать. Ура çине упаленсе тăчĕ. Унăн туфлисене, колготкине... хывса илнĕ иккен. Инкек! Хуйхă! Юратнă Юра аса килчĕ тӳрех. Килне аран-аран çитрĕ вăл. Пӳрте кĕриччен картишĕнчи мунчара сивĕ шывпах çăвăнчĕ. Унтан пӳрте кĕчĕ, çутă çутмасăрах кайса выртрĕ.

— Хĕрĕм, апат та çиместĕн-çке, — хăйăлтатрĕ амăшĕ.

— Хырăм выçман, эпĕ лайăх çинĕччĕ, — суйрĕ Лена.

Вырăн çине выртрĕ те ӳлесе ярасран хăраса минтере çыртрĕ. Пăтранчĕ, пăтранчĕ пуçĕ. Юра асĕнчен тухмарĕ. «Вилмелли çеç юлчĕ-шим?» — пăталарĕ пуçне усал шухăш.

Ирхине те тăмарĕ. Юрать-ха, канмалли кун.

— Тăрса апат çи ĕнтĕ, — тархасларĕ амăшĕ.

— Канам-ха, çывăрас килет, — лăпкăн калама тăрăшрĕ Лена.

— Çывăр, эппин, çывăр, хĕрĕм, — ырма-канма пĕлмен тĕпренчĕкне хĕрхенчĕ амăшĕ.

Лена питне хыпаласа пăхрĕ — суран тавраш алла лекмерĕ. Пуçне çеç мăкăль тухнă. Темле хытах мар япалапа çапса тăнне çухаттарнă иккен ăна.

Мĕн пулса иртнине никама та систермерĕ вăл. Хăй çине алă хурассинчен амăшне, шăллĕпе йăмăкне хĕрхенни çăлса хăварчĕ. Ĕçре яланхиллех тимлĕ те тăрăшуллă пулчĕ.

Çапах та çакăн хыççăн вăл Юрăран тарса çӳрерĕ ĕнтĕ. Тарса çӳреме çӳрерĕ те, пуçĕнчен шухăш каймарĕ: «Мĕншĕн? Мĕншĕн? Мĕншĕн? Мĕн айăпа кĕчĕ Юра? Мĕншĕн вăл асап тӳсет? Мĕншĕн суйма тивет ăна юратмастăп тесе?»

Тĕлĕнмелле çак пурнăç. Пĕр çын çылăхĕ, инкекĕ теприсене арифметика прогрессийĕпе пырса тивет. Мĕншĕн пĕр çын сăвапĕ, телейĕ çĕр çын сăвапĕ, телейĕ пулаймасть-ши?

Çав шухăшпа, ыйтупа сĕмленсе çӳрерĕ Лена. Çак кунхине те вĕсемпех пăтрашăнатчĕ. Хуллен утаканскере палламан арçын ятран чĕнни шартах сиктерчĕ. Ăна вăл хулăн конверт тыттарчĕ те хĕр ним каласа ĕлкĕриччен тĕмсем хушшине кĕрсе çухалчĕ.

Лена конверта уҫрӗ. Ҫыру ҫапла пуҫланать: «Савнӑ Елена! Эсир мана пӗлместӗр...» Аптраса кайрӗ хӗр. Ҫавӑнпа чи хыҫала ҫавӑрса пӑхрӗ. Ҫыру ҫапла вӗҫленет: «Сана чунтан юратакан Артур».

Шалтах тӗлӗнчӗ хӗр. Ҫак ятлӑ ҫынна вӑл ӗмӗрте курман. Улахрах вырӑна кайса тӑчӗ те ҫырӑва йӗркипе вулама пуҫларӗ.

«Савнӑ Елена! Эсир мана пӗлместӗр. Пӗрпӗринпе тӗл пулнӑ эпир. Халӗ мана маньяк тесе шутлаҫҫӗ. Тӗрӗссипе, эпӗ маньяк мар. Пурнӑҫӗ хӑй ҫапла пулса тухрӗ.

Эпӗ ачаран ӗмӗтленме юрататтӑмччӗ. Ирӗклӗ темӑпа ҫырнӑ сочиненисем класра чи лайӑххисемччӗ. Вӗсене пурин умӗнче вуласа паратчӗҫ. Телейлӗ пулас килетчӗ манӑн. Телей тенине эпӗ юратура курнӑ. Хытӑ килӗшекен хӗрача патне улттӑмӗш класра ҫыру ҫыртӑм. Куҫран калама хӑюлӑх ҫитеймерӗ. Манран еплерех кулма пуҫларӗҫ шкулта. Артуртан Ромео пулса тӑтӑм. Тепӗр хӗрачана аслӑрах класра куҫларӑм. Пӗррехинче ӑсатма тӑтӑм. «Ху ҫине тӗкӗр умӗнче пӑхса ил», — касса татрӗ вӑл. Манран нимӗнпех уйрӑлса тӑман тантӑшсенех юрату фронтӗнче ӑнӑҫу хыҫҫӑн ӑнӑҫуччӗ. Хӑйсем хӗр тутине... тахҫанах тутанса пӑхнипе мухтанатчӗҫ. Манӑн та вӗсем умӗнче намӑса юлас килместчӗ. Суяттӑм. Пӗррехинче алран алла ҫӑмӑллӑнах куҫаканскерпе килӗшсе татӑлма шутларӑм. Мана куҫран пӑхрӗ те вӑл ахӑлтатса кулса ячӗ. «Санпа вараланас кӑмӑлӑм ҫук, уттар хӑвӑн ҫулупа, айванкка!» — тесе кӑшкӑрса тӑкрӗ.

Кулянаттӑм, пӑшӑрханаттӑм питӗ. Мӗнпе катӑк-ха эпӗ ыттисемпе танлаштарсан? Куҫ-пуҫӑм

та йӗркеллех темелле, чӑлах мар. Пӗррехинче ҫӗрле таврӑнакан хӗрарӑма кӗтсе илтӗм тӗттӗм кӗтесре. Вӑл ытлашши хирӗҫлемерӗ те. Тен, вӗлересрен хӑрарӗ. Кайран тупӑнкаласах тӑчӗҫ юххасем. Анчах чун канӑҫне пурпӗр тупаймарӑм. Таса юрату илӗртме тытӑнчӗ. Сана асӑрхарӑм. Шухӑшлӑ ҫӳреттӗн пӗрмай. Килне ҫитичченех вӑрттӑн йӗрлесе ӑсатса яраттӑмччӗ. Темӗнле каччӑпа та куркаларӑм. Юнашар утаттӑр калаҫса. Эсир алӑран ҫавтӑннине те пӗртте курман. Сана юратас килчӗ манӑн. Пӗррехинче эсӗ темӗскер нумай туяннӑ та йывӑррӑн йӑтса таврӑнаттӑн.

— Пулӑшма юрать-и? — пырса тӑтӑм санӑн умна.

— Тавах, хамах йӑтса ҫитеретӗп, — терӗн те ман ҫине ҫаврӑнса пӑхмасӑрах малалла утрӑн.

Тепрехинче ӑсатса яма ирӗк ыйтрӑм.

Ман ҫине пӑхса илтӗн те ним каламасӑрах утса кайрӑн. Йӗрӗннӗн туйӑнчӗ. Самантрах тавӑру туйӑмӗ хыпса илчӗ. Ыттине хӑвах пӗлетӗн. Сана каҫпа кӗтсе илтӗмех. Питӗ ӑнӑҫлӑ пулса иртрӗ. Никама та ниҫта та пӗлтерменни тӳрех паллӑ пулчӗ. Хӗрлӗхӗре ҫухатнӑ хыҫҫӑн санпа пӗр чӗлхе тупас шанчӑк амаланчӗ. Ӑсатма тесе темиҫе те хӑтлантӑм. Яхӑнне те ямарӑн мана. Шӑпам ӑнманшӑн хӗрарӑмсене тата хытӑрах тавӑрас килчӗ. Ҫӗрле пӗр хӗрарӑма тапӑнтӑм. Резина тукмакпа пуҫӗнчен ҫапнӑ хыҫҫӑн та вӑл тӑнне ҫухатмарӗ, пулӑшу ыйтса кӑшкӑрма пуҫларӗ. Мана полици нарядӗ ҫийӗнчех ярса тытрӗ.

Халӗ эпӗ следстви изоляторӗнче ларатӑп. Мана айӑплама вӗсен пӗртен-пӗр ӗҫ кӑна — тапӑнни. Эпӗ ӑна пусмӑрласа ӗлкӗреймен. Эсӗ вара ниҫта та пӗлтермен. Анчах ытти ӗҫсене ман ҫума

çыпăçтарма пултараççĕ. Ĕççене хупмалла-çке вĕсен. Эп туман айăпсене çеç мана ан тиеччĕр. Ун чухне тепĕр темиçе çултан ирĕке тухас шанчăк та пур. Ĕмĕрлĕхех хупса лартмаççĕ. Ирĕке часрах тухас тесен стерилизаци е кастраци тунипе килĕшмелле. Ун хыççăн ача пулмасть çав арçыннăн. Манăн пĕтĕм пурнăç тĕллевĕ те пĕтет вара. Пирĕн ăрăва тăсакан мана питĕ кирлĕ. Аттем вилес умĕн тархасланăччĕ йĕркеллĕ авланса ача-пăча çуратма. Шанчăкĕ те эпĕ кăначчĕ. Пиччем капанри йĕп пек таçта çухалчĕ. Анне те яланах аса илтерсе тăрать аттен пилне. Ман шутпа, тем тесен те сан çие юлнă. Интуици мана нихăçан та улталаман. Çурат çав ачана. Уншăн эсĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттерлĕ пулăн. Анне ăна сан çине çыртарать. Машинăна та, гаража та, дачăна та парнелĕ. Килĕшсе татăлнă. Кай ун патне çак адреспа... Эсĕ нимĕн те çухатмастăн, выляса çеç илĕн. Кĕске самантрах пуйса кайăн. Мулпа, укçапа халь тем те тума пулать...»

Çырăва вуласа тухма ĕлкĕреймерĕ Лена — аса илех кайрĕ: «Ара, манăн тахçантанпах хĕрарăм йăли пулман. Юратман арçынран та ача пулма пултарать-им? Мана вăл тискеррĕн пусмăрланă — эпĕ пур, унăн... — аптрарĕ мĕнле каламаллине, — чĕре патĕнче йăтса çӳретĕп!»

Çырăва вăл татăкăн-татăкăн çурса тăкрĕ.

«Нихçан та, нихçан та, нихçан та!» — пăшăлтатрĕ хаяррăн.

* * *

Çав кунтанпа вăхăт самаях иртнĕччĕ ĕнтĕ. Хĕрĕпе мĕн пулса иртнине амăшĕ пачах пĕлмерĕ. Паян та тĕпренчĕкне яланхи пекех ĕçрен кĕтсе

илесшӗн. Ҫук та ҫук вӑл. Чӳрече каррине те темиҫе хутчен сире-сире пӑхрӗ. Каҫхи кӗлле кайма та вӑхӑт ҫитет. Чӑтаймарӗ — урама тухсах кӗтсе илме шутларӗ.

Почта ешчӗкӗнчи конверта асӑрхарӗ хӗрарӑм. Ӑна кӑларса илчӗ те пӳрте кӗчӗ.

Мӗншӗн тытрӗ-ши ҫав усал хутсене? Артур ҫырӑвӗн тепӗр экземплярӗ-ҫке вӑл. Хурав кӗтсе ывӑннӑскер «курьерпа» татах ӑсатнӑ ӗнтӗ.

Амӑшӗ ҫырӑва вулама тытӑнчӗ те ахлатса ячӗ.

— Ачамсем, ачамсем, чӑлана-мӗне тухса тӗрӗслӗр-ха, — терӗ те тӗшӗрӗлсе анчӗ.

— Анне, анне! — чупса пычӗҫ ун патне тӗпренчӗкӗсем.

* * *

Лена вара ун чухне чиркӳ картишӗнче тӑратчӗ...

## «ВАСКАВЛӐ ПУЛӐШУ»

Шӑнкӑрав сасси илтӗнсенех Николай Константинович тӗпелтен васкаса тухрӗ. Вӑл алӑка уҫнӑ май вӑрах ҫӳрерӗр-ҫке тесе каласшӑнччӗ ҫеҫ — умра шурӑ халатлӑ ҫынпа полици капитанӗ тӑнине курсан шӑпӑрт пулчӗ, куҫ-пуҫӗ чарӑлсах кайрӗ. Вӗсем хыҫӗнче тӑракан ашшӗпе ывӑлне те асӑрхарӗ-ха вӑл.

— Эсир Курганов пулатӑр-и? — ыйтрӗ йӗрке хуралҫи.

— Ҫапла, — хуравларӗ кил хуҫи пурне те хваттере кӗме сӗнсе.

— Сирӗн ывӑлӑр иртӗхме ӑста иккен, — терӗ хулпуҫҫийӗсем ҫинче тӑватшар ҫӑлтӑрлӑ ҫын.

— Йӑнӑшатӑр пуль, вӑл тепӗр хӗрачаран та

йӑвашрах. Ҫапах та мӗн тунӑ? Вӑл пӗччен те пулман-ҫке — аслашшӗпе, — тӗлӗнчӗ ачан ашшӗ.

— «Васкавлӑ пулӑшу» суйса чӗнсе илнӗ. Уншӑн явапне сирӗн тытма тивет.

Ҫак калаҫӑва илтсе Ангелина Эдуардовна та вӗсем патне хыпаланса пычӗ.

* * *

Ӗҫ-пуҫӗ вара ҫапларах пулса иртрӗ...

Ҫитмӗл ҫулти Константин Кузьмич алӑка уҫса хваттере кӗрсе тӑрсан ывӑлӗпе кинӗ хытӑ тӗлӗнни сӑн-пичӗсенченех сисӗнчӗ: ват ҫынна паян кӗтмен вӗсем.

— Халех кӑларчӗҫ-и? Мӗншӗн шӑнкӑравламарӑн? Машинӑпа пырса илеттӗм, — пӑшӑрхананҫи пулчӗ ывӑлӗ, Николай Константинович.

— Уксахламастӑн та. Йӑлтах сывалса ҫитнӗ курӑнать. Епле аван ку, — куҫран пӑхма именнӗн калаҫрӗ кинӗ, Ангелина Эдуардовна. — Апат пиҫрӗ. Аллусене ҫу та, ларса ҫиер, — терӗ вӑл.

— Тин кӑна апатланнӑ хыҫҫӑн тухса килтӗм, — лӑпкӑн пӗлтерчӗ ӑна хуняшшӗ.

Аслашшӗн сассине илтсе пӳлӗмӗнчен вуннӑри Борис сиксе тухрӗ те ӑна мӑйӗнчен уртӑнчӗ. Константин Кузьмич икӗ аллипе тытса вӑшт ҫӗклерӗ арҫын ачана.

— Икӗ эрне хушшинче епле ӳссе тӗрекленсе кайнӑ, йӑтма та йывӑр, — чӑн-чӑнах хӗпӗртерӗ ҫулланнӑ ҫын мӑнукне антарса ури ҫине тӑратнӑ май. Унтан ҫурӑмӗнчен лӑпкарӗ ӑна.

— Ывӑнман пулсан иксӗр уҫӑлса ҫӳрӗр. Парках кайса килме пултаратӑр. Карусельпе ярӑнӑр, — сӗнчӗ ывӑлӗ ашшӗне. — Борис сансӑр урама та тухасшӑн мар.

— Çапла-çапла, уçӑлса çӳрӗр, — укçа тыттарчӗ кинӗ. — Кафене те кӗрсе сӑйланӑр. Ан васкӑр, ан васкӑр киле килме, — темшӗн хытарсах çакна каларӗ Ангелина Эдуардовна. Вӑл питӗ йӑпӑлтатнине пула темӗн ырӑ мара туйрӗ хуняшшӗн чунчӗри.

Аслашшӗпе мӑнукӗ урама тухрӗç. Ӑпӑр-тапӑр пӑрахмалли контейнерсем патне çитсен Константин Кузьмич çӳçенсе илчӗ.

— Пӑх-ха, — аллине тӑсса кӑтартрӗ вӑл, — мӗн чухлӗ кӗнеке кӑларса пӑрахнӑ. Больницӑра вара вулассишӗн тунсӑхласах çитеççӗ çынсем. Унта кайса памалла ӗнтӗ пӗрех хут хӑйсене кирлӗ маррисене, — пӑшӑрханчӗ вӑл. — Кашни стационартах библиотека пекки ним те мар уçма пулать халь. Тӑрӑшакан çын çеç кирлӗ, — мӑнукӗпе калаçса пычӗ Константин Кузьмич.

— Асатте, эсӗ ача чухнех вулама юратнӑ-и? — ыйтрӗ Борис.

— Ачаллах. Эпӗ, ялта çуралса ӳснӗскер, приключениллӗ япаласене вуламан. Мана çутçанталӑк илемӗ, чӗрчунсен тӗнчи çинчен çырнисем килӗшетчӗç. Пӗрремӗш класра Михаил Пришвинӑн «Ылтӑн çаран» кӗнекине вулама илсен библиотекӑна, ах, тавӑрса парас килмерӗ. Миçе хут шӗкӗлчемерӗм-ши ӑна! Унти сӑнарсемпе пӗрле вӑрмана, улӑха, шурлӑха та хам тухса çӳренӗн туйӑнатчӗ.

— Библиотеки пуянччӗ-и?

— Мухтанмаллиех çукчӗ. Эпир кӗнекесене тирпейлӗ тытма тӑрӑшаттӑмӑр. Унсӑр пуçне «Васкавлӑ пулӑшу» текен операци ирттереттӗмӗр. Мӗн-ха вӑл? Эсир, хальхи ачасем, пӗлместӗр ӑна. Кивелнӗ кӗнекесен хуплашкисене, страницисе-

не çыпăçтараттăмăр. Кăмакара хуппипе пĕçернĕ çĕр улмипе усă кураттăмăр малтанласа. Каярах çилĕм алла лекме пуçларĕ. Паянхи кун çав пархатарлă ĕçе тума ним те мар. Скотч ил те — çыпăçтар. Эх, Боря, халь кĕнекесене кăларса пăрахаççĕ, — ассăн сывларĕ Константин Кузьмич. — Тепĕр чухне Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедийĕнчи Скалозуб полковник йышшисем ĕрчесе кайнăн туйăнать. Вăл пĕтĕм инкек кĕнекесенчен килет тесе шухăшланă-çке. Çавăнпа вĕсене пухса çунтарса яртарасшăн хыпăннă, — калаçса пычĕ çулланнă çын. — Çапла, мăнукăм, халь кĕнекесене кăларса пăрахаççĕ. Хăй вăхăтĕнче еплерех бум, ажиотаж пулсаччĕ. Илемлĕ хуплашкаллă, лайăх хутпа кăларнă кĕнекеллĕ пулма блат кирлĕччĕ. Спекуляци тăватчĕç унпа. Лавккана çĕнĕ кĕнекесем илсе килессине пĕлсен çынсем çĕр каçипех черет тăнă. Кĕнекеллĕ çын культурăллă шутланнă. Хитре хуплашкаллăскерсем шкапсенче каçăрăлса тăнă. Никам уçса пăхманскерсемех тепĕр чухне. Чаплă пухусене çеç сутма илсе тухнă вĕсене. Блат çуккисем макулатура пухса парса кĕнеке туянма талонсем илнĕ. Ăпăр-тапăр пăрахмалли вырăнсенче кивĕ хут хальхи пек туп-тулли выртман. Ман ĕмĕртех мĕнмĕн кăна пулса иртмерĕ! «Кĕнеке те пулĕ халăх мулĕ», — тенĕччĕ пĕр классик. Çук иккен. Кăларса пăрахаççĕ халь. Ашшĕ-амăшĕ вилнĕ хыççăн ачисем çапла хăтланаççĕ. Çĕнĕ хваттерĕсене те куçарса каймаççĕ. Ют çынсемшĕн вĕсем çӳп-çап çеç, — пăшăрханма нимĕнле те пăрахаймарĕ Константин Кузьмич.

Паркра çӳренĕ май кăмăлĕ уçăлнă пек туйăнчĕ унăн. Кашни йывăçа çулçисенчен паллама

вĕрентрĕ мăнукне. Кунта ятарлă пĕр кĕтес пур: çăка, вĕрене, хурăн, йĕлме, ăвăс, каврăç, юман, хыр, чăрăш пĕр-пĕринпе килĕштерсе ӳсеççĕ. Кайăк-кĕшĕк ăмăртмалла юрлать. Аслашшĕ пурин сассине те уйăрса илме пултарать иккен.

Килнелле вĕсем килнĕ çулпах утрĕç. Акă ăпăртапăр пăрахмалли контейнерсем патне çитеспе кĕнеке купи пысăкланнине асăрхарĕç. Патнерех пымасăр аслипе кĕçĕннин чунĕсем чăтаймарĕç.

— Ку ман кĕнеке-çке! — кăшкăрса ячĕ Константин Кузьмич купа çинче чи çӳлте Пушкин юмахĕсен пуххи выртнине курсан. — Хĕреснатте çуралнă кун ячĕпе панă укçапа туяннăччĕ эпĕ ăна пĕчĕккĕ чухне. Сана та, Боря, çак кĕнекери юмахсене вуласа панă, — ниçта кайса кĕреймерĕ Константин Кузьмич.

Лермонтов, Толстой, Тургенев, Некрасов... кĕнекисем хăяккăн выртаççĕ тата. Чăнах та кивелнĕ вĕсем, алран алла çӳренĕ-çке, кӳрши-аршине те вулаттарнă. Хĕрхенмен.

Чехов томне илчĕ те Константин Кузьмич «Ванька» калав патне уçрĕ. Ача чухне мĕн чухлĕ вуламан-ши ăна? Кашнинчех куççуль тухнă. Шкул кĕнекине иллюстрацисемпе кăларатчĕç. «Ванька» калав тĕлĕнче Константин Егорович Маковскин «Тĕлпулу» картиниччĕ. Çак тата хытăрах шухăшлаттаратчĕ йывăр шăпа пирки. Ванька епле асапланнине тата витĕмлĕрех туйтаратчĕ. Авă мĕскĕн ывăлĕ патне амăшĕ пынă. Хывăнман-салтăнман та. Пӳлĕмре тĕксĕм. Урайĕнче кутамкки выртать. Хĕрарăм питĕ хурлăхлă. Ачи çĕтĕк-çурăк тăхăннă. Çара уран. Амăшĕ илсе пынă кукăле антăхса çиет. Çапла, çак калава вуншар хут вуланă. Кашнинчех куççуль тухнă унăн. Вăл кĕнекесен купи çине

ларчĕ те каллех вулама тытăнчĕ. Ĕсĕклерĕ, ĕсĕклерĕ чунĕ.

Борис вара айккинелле пăрăнчĕ те кĕсье телефонĕпе «васкавлă пулăшăва» шăнкăравларĕ. «Кĕнекесене тиесе унта парса ямалла», — шухăш çиçсе илчĕ пуçĕнче. Лере тĕлĕнчĕç, паллах, ачан сассине илтсен.

— Асаттене питĕ йывăр, — терĕ вăл.

Ăçта пымаллине, хушаматне... ыйтрĕç. Миçе çултине тата. Ватă çыншăн питĕ хыпăнсах кайманнине илтнĕ вăл. Çавăнпа та аллă саккăрта тесе улталарĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ — «васкавлă пулăшу» машини килсе çитрĕ.

— Эсир-и чирлĕ çын? — пырса тăчĕ Константин Кузьмич патне тăваткал чăматан йăтнă врач.

— Çук, — пуçне силлерĕ ку.

— Апла, мĕншĕн «васкавлă пулăшу» чĕнтертĕр? — тарăхса кайрĕ шурă халатли. — Эпир ĕçсĕр аптранă-им?!

— Эпĕ шăнкăравларăм, — йышăнчĕ Борис. Урăх нимĕн те каласа ĕлкĕреймерĕ вăл. Çумранах утса иртекен полици капитанне врач чĕнсе илчĕ те суя шăнкăрав пирки пĕлтерчĕ.

Çапла вара иккĕн кайса тăваттăн тан кĕрсе тăчĕç хваттере.

Ангелина Эдуардовна çуйхашма пуçларĕ. Николай Константинович ăна лăплантарса пурне те тĕпеле иртме сĕнчĕ. Вырнаçса ларсан Борисран мĕншĕн çапла хăтланнине каласа пама ыйтрĕ.

Ку ăнлантару полици капитанне нимĕнле те тивĕçтерейменрĕ. Ашшĕ-амăшне явап тыттарма тивнинех пĕлтерчĕ. Шурă халатли вара ачана шеллерĕ курăнать.

— Стационарăн тĕп врачĕпе калаçса пăхатăп, — терĕ вăл. — Тен, кĕнекесене тиесе пыма ирĕк парĕ вăл, — чееленчĕ ĕнтĕ полици капитанĕ умĕнче.

Ют çынсем тухса кайрĕç.

Константин Кузьмич, Ангелина Эдуардовна, Николай Константинович тата Борис питĕ шăрăх çанталăкра вăйлă çил-тăвăл илсе килес хура пĕлĕт пекех курăнчĕç. Тепĕр чухне вăл инкек-синкек кӳмесĕр иртни пулаканччĕ те...

## КАЮ

«...Ывăлăм, сывлăхăм кăçал темскер япăхлансах çитрĕ. Утă та тăваймарăм, шăп çав вăхăтра чирлесе ӳкрĕм те...» — Шултăра саспаллисемлĕ çак йĕркесене Петĕр виççĕмĕш хут вулать ĕнтĕ. Ку çырупа ăна хăйне ӳпкеленĕн туйăнать.

«Кану çуртне кайма илнĕ путевкăна тавăрса парас та ыранах киле, тĕрĕсрех, атте-анне килне, тинех анне те çук ĕнтĕ, атте патне тухса вĕçес», — шухăш çиçсе илчĕ ун пуçĕнче.

Утçие яла пыма чĕнсе янă пулин те, каяйманччĕ Петĕр. Ĕç тупăнчĕ. Тупăшли... Вăлах пăтăрмах кӳчĕ-ха ăна.

Çыру вуланă хыççăн пулни-иртнине аса илсе ларма вăхăчĕ Петĕрĕн сасартăк хĕсĕнчĕ. Кăмăлĕ те пулмарĕ. Çула пуçтарăнчĕ вăл.

Яла çитиччен икĕ-виçĕ çухрăм юлсан çуранах утма тиврĕ. Кирек мĕнле çын та çуралнă енре вăрах пулман хыççăн таврăнсан куçĕ умне унта иртнĕ кун-çул тӳрех тухса тăрать. Петĕрпе те çавах ĕнтĕ. Чи малтан ачалăхĕ сиксе тухрĕ. Çапла, сиксе тухма сăлтавĕ те пур. Хăй те юлташĕсемпе

пĕрле кунта сахал ĕрĕхтерсе çӳренĕ-и? Тепĕр чухне район центрне каяс тесен вунă çухрăм çуранах танккама тиветчĕ. (Халĕ авă ялтан инçех те мар асфальт çул.) Ывăнсан çул хĕрринчи çаран çине канма ларатчĕ. Шухăша каятчĕ вара: «Эх, çакăнта машина пулсан...» Машина шухăшĕ унăн кайран та сĕвĕрĕлмерĕ, хăйĕнпе пĕрлех ӳссе пычĕ темелле...

Петĕр çаран çине паян темшĕн тинкерсе пăхрĕ. Курăк çуркуннехи пекех çемçе пулас. Каю шăтнă.

Акă çуралнă ял ытамĕнче вăл. Тăван кил. Калинкке сасси пулсанах ашшĕ хыпаланса тухрĕ.

— Килтĕн-и? — аллине тăсса васкавлăн утрĕ ватă çын.

Йăлтах улшăннă иккен вăл. Унччен ун пек марччĕ. Сăмахран, ывăлĕ курма таврăннă. Тен, ăна вăл, картишĕнче çӳрекенскер, сиснĕ те, çук, пӳрте часах кĕместчĕ-ха.

— Ашшĕ, ашшĕ, — тухса чĕнетчĕ амăшĕ, — Петĕр таврăнчĕ.

— Аван, аван, — хуравлатчĕ вăл.

Татах хыпаланмастчĕ-ха. Ачасен пулăшăвĕсĕр те аптрасах каймастпăр-ха теесшĕн пулнă-ши çапла?

Тепре тухса чĕнетчĕ амăшĕ, çав тери хĕпĕртенĕскер.

— Юрать, юрать, — лăпкăн хуравлама тăрăшатчĕ ашшĕ.

— Эсĕ килнĕ-и? — тетчĕ пӳрте кĕрсен.

Çапла, халь йăлтах урăхланнă. Унччентхи мăнаçлăх юлманпа пĕрех. Эх, ватлăх. Пули-пулмишĕнех вăл савăнтарать, хурлантарать иккен.

— Утă тăваймарăм, — аса илтерчĕ вăл.

— Атте, каю кайнӑ унта, — пӗлтерме васкарӗ Петӗр.

— Хам та ҫавна каласшӑнччӗ-ха. Маттур. Хула ҫынни пулса тӑнӑ пулин те, асӑрханӑ.

Ҫамрӑкпа ватти пӗр чӗлхе тупсах каймаҫҫӗ теҫҫӗ те, ҫӗрӗпех калаҫса выртрӗҫ — сӑмах пине ҫитмерӗ. «Аннӳ ҫапла калатчӗ, аннӳ ҫапла тӑватчӗ...» — тенисем пачах та йӑлӑхтармарӗҫ Петӗре, ашшӗ ӑна манайманни савӑнтарчӗ те, кулянтарчӗ те.

Икӗ ҫывӑх ҫын тепӗр кунне ирех ҫава йӑтса улӑхалла утрӗ. Ватӑ ҫыннӑн сӑмахӗ тупӑнсах пычӗ. Петӗрӗн экскурсовочӗ тейӗн: кашни ҫурт умӗпе иртнӗ майӑн ҫак кил-йыш ҫинчен хыпарлама тӑрӑшать.

Кивелсе чалӑшнӑ ҫурт тӗлӗнче ашшӗ сасартӑк салхуланчӗ.

— Альтук аппу та пӗчченех тӑрса юлчӗ, — ӳпкевлӗн тухрӗ сасси.

Петӗр чӗнмерӗ. Сарлака хулпуҫҫийӗсем ҫеҫ хӑй сисмесӗрех сиксе илчӗҫ.

— Атте, ҫынсем мӗншӗн ку курӑка ҫулмаҫҫӗ? — кӑсӑкланчӗ ывӑлӗ улӑха ҫитсен.

— Кӑҫал утӑ лайӑх пулнӑ. Вӑхӑтра ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Кайӑва ӑна выльӑх апачӗ хӗсӗкрех чухне ҫеҫ ҫулаҫҫӗ. Унӑн усси те, сӗтекӗ те сахалтарах, — ӑнлантарчӗ ватӑ ҫын. — Ӗнене сутӑп. Пӗр качака усрамалӑх ҫуласчӗ хӑть.

— Атте, эпӗ кунта чылаях пурӑнатӑп. Тен, ӗне хӗл каҫармалӑх та хатӗрлӗпӗр уттине.

— Эй, ачам, каю вӑл кайӑвах. Ҫулнӑ чухне нумай пек, типсен ним чухлӗ те юлмасть. Ахальтен мар ӗнтӗ кая юлсан каю шӑтать теҫҫӗ.

Ашшӗ сӑмахӗ ӑна самантрах шухӑша ячӗ.

Хăйĕн кун-çулне тепĕр хут çаврăнса пăхрĕ вăл. Вĕлт-вĕлт вĕçсе иртеççĕ пуçра пурнăçĕн уйрăмах асра юлнă тапхăрĕсем.

...Петĕр салтакран таврăнсан ялтах пĕр хĕл каçрĕ-ха. Колхоза ĕçе çӳрерĕ. Ăна хула туртман мар-ха. Пĕр çын çеç чăрмантарчĕ. Верук ку. Вăл, ял хуçалăх техникумĕнче кĕретсĕр вĕренекенскер, тем тесен те уй-хиртен уйрăлас темерĕ. Юрататчĕ ăна Петĕр. Çапах та пысăк ĕмĕчĕ çĕнтерчĕ-çĕнтерчех: çăмăл машина хăвăртрах туянас килчĕ.

— Кунта ĕçленипех часах алла кĕмĕ вăл, — çине тăчĕ каччă.

Хула тарават йышăнчĕ ăна. Пурăнасса общежитинче пурăнчĕ. Вĕр çĕнĕ самосвалпа ĕçлерĕ. Хăйне чăннипех те лайăх енчен çеç кăтартрĕ-ха вăл. Малтанхи вăхăтра канмалли кунсенче тăтăшах яла çӳретчĕ. Ăна ĕçрен хваттер шантарни пирки те Верук умĕнче пĕрре мар сăмах хускатнă. Анчах хулана пыма яхăнне те ямастчĕ хĕр. Пулас агроном-çке. Юлашкинчен вăл Василий Самойловăн сăввине кăштах урăхлатса татăклă хурав пачĕ ăна:

— Тĕлĕнтеретĕн-çке, тăванăм, эсĕ,
Мĕн-ма пӳлетĕн эсĕ ман çула?
Ялти уйра-хирте пĕр ĕçлемесĕр
Епле-ха лайăх агроном пулам?

Ял кулли тăвасшăн-им манран? — терĕ. — Пĕррехинче чипер майра, ял хуçалăх наукисен докторĕ, уя тухса курнă тет. «Ах, тулă сирĕн кăçал ăнса пулнă», — савăннине пĕлтересшĕн пулнă çынсене. — «Тулă мар вăл — урпа», — хуравланă механизаторсем, — каласа кăтартрĕ Верук юлашкинчен.

Пурӑна киле Петӗрӗн яла ҫӳреме вӑхӑчӗ сахаллансах пычӗ. Ара, тепӗр чухне канмалли кунсенче те ӗҫлемелле пулса тухать. Вӑл хапӑлласах килӗшет: ун пек чухне икӗ хут тӳлеҫҫӗ-ҫке.

Яла ӗҫлеме пынӑ учитель Верука куҫ хывнине те илтнӗччӗ. Ҫуралнӑ кӗтесе хӑвӑртрах таврӑнас килчӗ унӑн. Пысӑк ӗмӗчӗ каллех ҫӗнтерчӗ-ҫӗнтерчех.

Хӗре алран вӗҫертрӗ вӑл. «Лайӑх кин пулатьха пирӗн тесе пурӑнтӑм-пурӑнтӑм та...» — пӑшӑрханчӗ амӑшӗ. «Шаннӑ йӑвара кайӑк ҫук теҫҫӗ», — хӗрхӳллӗн хуравларӗ ывӑлӗ, хӑй айӑпне йышӑнман пек.

Чӗре суранӗ сипленчӗ ерипен. Петӗрӗн пысӑк ӗмӗчӗ тата амаланчӗ. Хальхинче вӑл тавӑрупа хутӑшса кайрӗ. Яла ҫӑмӑл машинӑпа килсе ҫӳрӗ. Вӗсен умӗнчен ярӑнса ҫеҫ иртсе кайӗ ун чухне. Мӗн тери ӑмсанӗ Верук, анчах чавса ҫывӑх та — ҫыртма ҫук.

Часах ӑна пӗлӗшӗ газ турттарма вырнаҫтарчӗ. Пурнӑҫӗ чылай ҫӑмӑлланчӗ. Пушӑ баллонсене тултаракан слесаре хӑй ҫумне кабинӑна лартать те Канаша вӗҫтерет. Лешӗ, Тит, хӗрӗх ҫулсенчен иртнӗ арҫын, сӑмах ытла ваклама юратмасть. Пӗррехинче вӗсем Шупашкара таврӑнатчӗҫ. Ҫул кукрине ҫывхарас чухне:

— Машинӑна сулахай еннелле тыт, — хушрӗ вӑл Петӗре.

— Мӗншӗн? — нимӗн те ӑнланмарӗ шофер.

— Сулахай еннелле пӑрӑнса кӗр теҫҫӗ сана. Каланине итле, — сассине хӑпартрӗ слесарь.

Петӗр хӑраса ӳкекен ҫынах мар-ха, анчах ӗҫре Титӑн авторитечӗ пысӑккине аван чухлать. Тепӗр тесен, ҫынпа мӗншӗн вӑрҫӑнмалла? Вӑл машинӑ-

на сулахаялла пăрчĕ. Кăштах кайсанах чарăнма хушрĕ слесарь. Унтан икĕ баллон газран виçшер тума пикенчĕ. Çавăн валли туллинчен пушшине яма ятарлă механизм (резина пыршă) ăсталанă иккен вăл. Çакăн хыççăн ялалла çул тыттарчĕ «хуçа». Кунта ăна аван пĕлеççĕ-мĕн. Халăх тӳрех çавăрса илчĕ машинăна. Ку çынсен пушă баллонĕсене илет те «туллисене» вĕсене тыттарать. Укçине кĕсйине вăр-вар чикет.

— Ме, тыт, — темиçе тенкĕ сĕнчĕ Петĕре слесарь машина шоссе çине тухсан.

Ку илесшĕн пулмарĕ.

— Тыт! Çынсенчен уйрăм ан пул! — хыттăн хушрĕ вăл.

Çапла вĕсем тăтăшах çула май кĕре-кĕре тухрĕç ялсене. Петĕр слесаре пултарулăхĕшĕн хисеплеме те пуçларĕ, хăйĕн ĕмĕчĕ часах çитессе — çăмăл машинăллă пуласса — шанчĕ. Анчах вăрăм вĕренĕн те вĕçĕ пур-çке.

Хуларан килнĕ ывăлĕ умĕнче ватă амăшĕ газ баллонĕсем темшĕн хăвăрт пушаннă пек туйăнни çинчен калană. Ку виçтерсе пăхсан тӳрех палăрнă — ултав, темĕнле махинаци. Кирлĕ çĕре хыпар çитнĕ вара.

Ĕçре сӳтсе яврĕç вĕсене. «Юлташĕ» пĕтĕм айăпа ун çине йăвантарчĕ. Унччен пĕр асăрхаттару та пулманни, Хисеп грамоти илни çеç çăлса хăварчĕ.

— Çамрăкăн пурнăçне пăсса хурар мар, — хутне кĕчĕ пуçлăхĕ.

Вăл слесарьпе пĕр çăвартан сурса пурăннине Петĕр пĕлсе те юлмарĕ. «Çăхан куçне çăхан сăхмасть», — текелерĕç чухлакансем. Ĕç шаларах кайсан чăнлăх çиеле тухма пултарнă-çке.

Çавăн хыççăн ĕнтĕ вăл çынсем умĕнче пите пĕçертни кăштах сивĕнтĕр тесе тӳрех отпуск илме шутларĕ. Тăван ялне хăй кунта чылай пулман хыççăн килсе тухма тиврĕ акă.

Çакăнпа шухăшĕ те татăлчĕ Петĕрĕн.

Ашшĕпе ывăлĕ кунĕпех утă çулчĕç. Чунтан хĕпĕртенĕ ватти киле таврăннă чухне каллех çул тăршшĕпех калаçса пычĕ:

— Пирĕн, ял çыннисен, тыр-пул ӳстермесен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмесен, утă-улăм тумасан кама шанмалла? Хула çыннисем хулана хăнăхнă...

Пуçарнă калаçăва тĕл пулакансем чăрмантарнине пула темиçе хутчен те татма тиврĕ унăн.

— Пуçĕпех таврăнтăн-и? — тĕпчет хăнана хăшĕ-пĕри.

— Хветут мучи, ывăлна текех килтен ямастăн пуль. Авлантар, — сĕнӳ параççĕ хĕрарăмсем.

— Хăйĕнне хăй пĕлтĕр. Ку чухне пиртен ыйтмаççĕ, — тесе çеç хурать ашшĕ.

— Аçуна шел, — ӳпкелеççĕ Петĕре. — Хуçалăха пĕччен тытса пурăнать-çке. Ĕни, сурăхĕсем те пур. Вата пуçупа мĕн асапланатăн тесен пĕрпĕр ачи киле таврăнĕ те, йăлтах çĕнĕрен туянма тивет ун чухне тет. Авлан та пурăн килтех. Ялта та пурнăç япăх мар халь.

Вĕсенчен уйрăлсанах каллех малтанхи калаçăва тăсать ашшĕ:

— Ĕнине те усрасах килет çав. Пăру пăхса çитĕнтерсе çулсерен патшалăха панă. Ара, парăмлă мар-и эпĕ? Эсир манăн миçен хулара! Пурте какай çиетĕр вĕт... Яла килсен сире те кучченеç парса ярас килет.

Киле çитсен шăкăл-шăкăл калаçса яшка çакса ячĕç. Апат аннишĕн питĕ савăнчĕ ашшĕ:

— Пĕччен — пăтă çиме, йышпа авăн çапма аван теççĕ те. Çук, тĕрĕсех мар пуль ку. Пĕр çыншăн пĕçерес те килмест тепĕр чухне. Хăнăхнă эпĕ эртеле. Хамăр та саккăрăн ӳснĕ. Эсир те сахаллăн пулман пирĕн. Халĕ авă пурте кайăк чĕпписем пек саланса пĕтрĕр. Аппупа йăмăку качча кайрĕç ĕнтĕ. Хĕрсене ӳпкелеймĕн. Ĕмĕртен пыракан йăла.

Каçах выртса çывăрас килмерĕ каччăн. Вăл урама тухса кĕме шутларĕ. Никамах та курас килменрен тăкăрлăка пăрăнчĕ. Пысăках мар пĕччен çурт умĕнчи сак çинче çынна асăрхарĕ Петĕр. Ялта йăли çапла: çынна чĕнмесĕр иртсе каймаççĕ.

— Ларатпăр-и? — терĕ вăл.

— Ларатăп-ха. Салам, Петĕр. Хăçан çитрĕн? — илтĕнчĕ çепĕç сасă.

— Маруç-çке, курманни чылай пулать.

Вĕсем калаççах кайрĕç. Малтан сăмах вылятса çеç, кайран пурнăç çинчен те.

Петĕртен хĕр самай кĕçĕн. Фермăра ĕçлет иккен.

Темшĕн ку хĕр килĕшем пекки пулчĕ ăна. Кунашкал туйăм тахçантанпах пулманччĕ-ха унăн. Килĕшнĕ пек те, анчах юрату мар-ха ку. Çук, юрату мар. Верукшăн епле хыпса çунатчĕ. Ăна тĕлĕкре тăтăшах куратчĕ. Çапах та темĕнле туйăм тĕлкĕшни те юрĕ-çке.

Çав вăхăтрах ун ăш-чикне вĕчĕрхенӳ те кăшларĕ: «Маруç Анна Элекçейĕпе çӳренĕ теççĕ. Лешĕ питĕ шухăскер. Тем... Куçран кулмĕç-ши манран? Эх, Верукпа ачаран пĕрле выляса-кулса ӳснĕччĕ те...»

Çапах та тепĕр каçхине те Маруçпа тĕл пулма тăрăшрĕ вăл.

— Мĕн туса пурăнатăн ялта? Атя манпа пĕрле хулана, — шӳтленçи пулчĕ каччă.

Хĕр пĕр хушă нимĕн те чĕнме аптрарĕ. Тĕлĕнчĕ-тĕр.

— Çу-ук, эпĕ ниçта та каймастăп. Анне пĕчченех. Вата, — татăклăн каларĕ вăл.

Ашшĕ-амăшне хăй пăрахса тухса кайнăшăн Петĕре тĕртсе илнĕ пекех туйăнчĕ ун юлашки сăмахĕ.

Килне каччă пусăрăнчăк кăмăлпа таврăнчĕ. Алăкăн-тĕпелĕн утса çаврăнкаларĕ. Унтан сасартăк хавасланнă пек пулчĕ те тирĕк-чашăк çăвакан ашшĕ патне пырса тăчĕ:

— Атте, ĕнене сутмастпăр. Утă илĕпĕр. Укçи пур манăн...

Ывăлĕ çине ашшĕ кăн-н пăхса илчĕ те, пичĕ тăрăх куççуль юхса анчĕ.

— Кĕтӳ хăвалана чухне илтнĕччĕ çав хĕрарăмсенчен эсĕ каçсерен тăкăрлăкалла утнине, — шахвăртрĕ вăл. Унтан калана-каланах терĕ пуль, хавхалансах кайрĕ: — Аннӳ епле савăннă пулĕччĕ, ачам. Пирĕн килте вучах сӳнет пуль тесе пĕрмай кулянатчĕ...

## ÇУР ĔМĔР СӲНМЕН ПУШАР

Манăн пĕр тус пур. «Саккун вăл — турта, туртатăн ăçта — тухатăн унта», — теме юратать пулипулмишĕнех. Тепĕр юлташăм ăна паян тӳрех хирĕçлерĕ: «Ĕç-пуç мĕнле çаврăнса тухасси ытларах чухне лару-тăруран килет. Пĕр çын та пĕтĕм пăтăрмаха сирсе яма пултарать», — ĕнентерме тăрăшрĕ вăл. Сăмахне ерипен те лăпкăн пуçларĕ çак çын, Андрей Германович Вазанов: «Редакци

сётелӗ ҫинче ман ятпа килнӗ ҫыру выртатчӗ. Пӗр-пӗр шкул ачи хӑйӗн сӑввине ярса панӑ пуль терӗм почеркне тинкерсе. Шкулсенче час-часах пулма тиветчӗ-ҫке. Хаҫат-журналта манӑн поэзи ярӑмӗсене вуланӑ вӗрентекенсем пултарулӑхӑмпа ҫамрӑк ӑрӑва паллаштарма ыйтатчӗҫ. Кӑмӑлтанах килӗшеттӗмччӗ ӗнтӗ. Кашни шкултах литература кружокӗ йӗркелеме сӗнеттӗм. Ачасенчен вара сӑвви-калавне редакцие ярса пама пӗрре мар ыйтнӑ. «Ман ятпах та юрать», — тесе асӑрхаттарса хӑвараттӑм час-часах. Ун пек чухне ҫавӑн пек ҫырусемпе усӑ курмах тӑрӑшнӑ. Пӗр-пӗринпе ҫыру ҫӳретме пуҫлани те пулкаланӑ. Ӑсталӑхӗсене аталантарма пулӑшмаллах-ҫке камӑн та пулин. Малалла сиксе ӳксех каласа хӑварам-ха. Ҫав ачасем хушшинче ҫитӗнсе ҫитсе лайӑх ҫыравҫӑ пулса тӑни те ҫук мар. Журналиста вӗренсе тухса тӗп редактор пулса тӑни те пур. Кашнинченех тав сӑмахӗсем илтме кӑмӑллӑ халь.

Ҫавӑн чухне ҫырӑва уҫрӑм та — алра сӑвӑ та, калав та мар, ӳпкелешӳ. Эпӗ вӑтам пӗлӳ илнӗ шкултанах.

«Хисеплӗ Андрей Германович, Сиртен пулӑшу ыйтас терӗм, — йӗркесем тӗл пулчӗҫ куҫа. — Пирӗн физкультура учителӗ Алыков Николай Ильич питӗ хаяр. Йӗпе-сапара та пире пылчӑк ҫинче чуптарать. Итлемесен хӗнет, пырса хыҫалтан тапать...» Ҫыру ҫапла вӗҫленет: «Чӑрмантараканӗ — Олег Мишин». Апла, аноним та мар.

Ай тур-тур, учителӗ эпӗ паллакан ҫынах, манран пӗр ҫул кӗҫӗнрех. Ун ҫинчен шкулта никам та усал каламанччӗ-ҫке. Директор та мухтанӑччӗ. Шкул команди районти ӑмӑртусенче малти вырӑнсене пӗрре мар йышӑннӑ. Ҫырури хыпара

таҫта пӗлтерсен ӑна шкултан ҫеҫ кӑларса янипе ҫырлахмӗҫ — айӑплама та пултараҫҫӗ.

Ҫырӑва регистрацилеттермерӗм, никама та пӗр сӑмах та каламарӑм. Вара сӑлтав тупса ҫав шкула командировкӑна кайса килме шут тытрӑм. Тӑван ялӑмран сакӑр ҫухрӑмра вырнаҫнӑ вӑл.

Вӑтам пӗлӳ илме вӑрман витӗр ҫӳренӗ эпӗ. Ют ҫынсем патӗнче пурӑнасах килместчӗ, ҫавӑнпа кунсерен каллӗ-маллӗ вунултӑ ҫухрӑм хутлама тиветчӗ. Ытла та вӑйлӑ ҫил-тӑманлӑ вӑхӑтра хӗреснанне патне кӗрсе ҫӗр каҫкалани пулкаланӑ ӗнтӗ. Пӗррехинче ирхине чӳрече патне кӑчӑк туртрӗ кил хуҫи, унӑн упӑшки. Эпӗ ӑна хӗреснатте тесе чӗнеттӗм. «Ҫакӑ ӗнтӗ ҫур яла кӗллентерекенни», — терӗ вӑл хирӗҫри ҫуртӑн калинккинчен тухса шкулалла утакан арҫын ача енне пӳрнипе тӗллесе кӑтартса.

Каярах унран акӑ мӗн илтрӗм: ҫак ача, Миккуль, пӗчӗккӗ чухне шӑрӑх ҫанталӑкра лупас айӗнче ҫӑмарта пӗҫерме пуҫланӑ-мӗн. Утӑ-улӑм пӗрчисем тӑрӑх кайса ҫулӑм витене хыпса илнӗ. Пушар вӑхӑтӗнче яланах вӑйлӑ ҫил тухать. Ҫав кунхине тӑвӑлах ҫавӑрттарма тытӑннӑ. Кӳршӗаршӑн ҫурчӗ-хуралти ҫинче самантрах хӗрлӗ автан ташлама тапратнӑ. Ҫур ял кӗлленнӗ ун чухне.

Ман пӗр юлташӑм, Анатолий Кашкаров, ҫав пушара пулах гроссмейстер ятне илеймен-мӗн. Инкеке вӑл яланах хытӑ кулянса аса илет.

Ашшӗ-амӑшӗ ҫӗнӗ ҫурт хӑпартса лартнӑ, мунчаран унта пурӑнма куҫнӑ. Ҫулла лупас ҫинче ҫывӑрса та рехетленнӗ-ха. Шӑпчӑк сассипе киленсе выртатӑн та ирхине ун юррипех вӑранатӑн.

Ĕне кавлени илтĕнет. Йытăсем вĕреççĕ çын иртсе каймассерен. Кӳршĕ-аршăран нимĕнле вăрттăн ĕç те тăваймастăн. Хăвăр йыттах систерет. Ялта вăрласси йăлара пулман-ха. Хăш-пĕр чухне пахча юпи валли хăрнă юмана вăрман хуралçи асăрхиччен çĕрле касса-сыпăласа нуша урапипе турттарса килнисем пулкаланă ĕнтĕ. Çынсем ялйышпа чипер пурăнма тăрăшнă. Кӳршĕ тăванран та хаклă тесе ахальтен каламан çав. Ырă çынсем пĕр-пĕрне яланах пулăшасси йăлара питĕ çирĕп.

Лупас çинче выртнă чухне утă-улăм шăрши ӳт-пĕве кантарать. Хăма хушăкĕсенчен çăлтăрсем курăнаççĕ, куç хĕснĕн туйăнаççĕ. Çапла Толя пачах та ӳпкелешмен çулла лупас çинче çывăрнăшăн. Пĕчĕккисем вара çурт хăпартса лартнă вăхăтра каçсерен вут хутакан мунчара çĕр каçнă. Ара, вĕсем тапкалашса утияла сирсе пăрахма, шăнса пăсăлма пултараççĕ-çке.

Çапла вара вĕсем çу иртиччен çĕнĕ çурта кĕме ĕлкĕрнĕ. Ку вăл кĕçĕннисемшĕн те, çитĕннисемшĕн те савăнăç сапаки, сарă хĕвелĕн шевли тейĕн. Хыр-чăрăш шăрши сарăлнă кунта, сывлас та сывлас килнĕ тутлă сывлăша. Хăйне лăсăллă вăрманти пекех туйнă кил-йыш. Кашнин ĕмĕчĕ çунат сарнă. Ашшĕ-амăшĕшĕн пепкисене ыра-сывă ӳстерсе ура çине чипер тăратасси тĕп вырăнта. Ачисене вара малашлăх ытамĕн туйăмĕ вĕçертмен. Пĕчĕк Толя пуçне ăçтан пырса кĕнĕ-ши чап шухăшĕ? Ку тĕнче курса çӳрес ĕмĕтпе çыхăннă-тăр. Паллă шахматистшăн таçта та çул уçă-çке. Турнирсем тĕрлĕ çĕршывра иртеççĕ.

Арçын ача шахмат фигурисем епле хитре пул-

нипе киленнĕ. Вĕсене вăл клубра çеç курнă-ха. Çитĕннисем çеç çав асамлă вăййа вылянă, шăкăр-макăра хутшăнтарман, сĕтел хушшине яман. Толя юнашар пырса тăрса фигурăсене мĕнле куçармаллине хăвăрт ăнкарса илнĕ, вылякансемшĕн чăн-чăн пăшăрханаканĕ пулса тăнă. «Урăх фигурăна куçармалла», — асăрхаттарас килнĕ хăшне-пĕрне. Хăй сисмесĕрех персе яни те пулкаланă, уншăн хăлхине пăрнишĕн те кӳренмен.

Вара вăл фанерăран шахмат хăми тăвать, çемçе йывăçран, пушăт шăччинчен, фигурăсем касса кăларать. Вĕсен çурчĕ умĕнчи сак çине тантăшĕсем çеç мар, аслисем те иленеççĕ, кĕçĕннисем ура пусма памаççĕ. Пурте шахматла вылясшăн. Толя — урам чемпионĕ, тренер тейĕн. Шкулта та çĕнтерӳçĕ пулатчĕ-тĕр çав çулах, анчах ĕмĕтне пушар татнă.

«Эх, шахмат çунса кайрĕ», — пăшăрханнă пĕчĕкскер. Вăл ĕнерен те хаклă тейĕн. Юратьха, Маняшка çунса кайман, кĕтӳре пулни çăлса хăварнă. Шĕвĕ яшкана унăн сĕчĕпе шураткаласа тутă кĕртнĕ. Чăххи-чĕппи, пăрушĕ, сысни самантрах вутра çухалнă. Çуртсăр-хуралтăсăр юлнă пысăк кил-йыш пахчари мунчана куçнă. Унта ларма-тăма та вырăн пулман, çĕрле кĕпер пĕренисем пек хĕсĕнкелесе çывăркаланă улăм тӳшек çинче.

Шар курнă вуншар çемье çапла тертленнĕ. Инкек кăтартнă пĕчĕк Миккуль пысăк ялăн чĕлхинчен татăлман пачах. Ăна ылханакан та тупăнман мар ĕнтĕ.

Анатолий Кашкаров гроссмейстер пулайманнишĕн кулянать терĕмĕр. Вăл çапах та шкул чысне хӳтĕлесе район чемпионĕн ятне илейнĕ. Мух-

танмалли тепĕр сăлтав та пур унăн. Раççей чемпионĕ пĕр вăхăтрах çирĕм икĕ çынпа паркра выляна чухне унпа çеç «ничья» тума килĕшнĕ.

Çав пушара аса илнĕ вăхăтра Кашкаровсен кĕçĕнни, Екатерина, кашнинчех çапла каламасăр тӳсеймест: «Гроссмейстер пулайманнишĕн кулянатăн, ун чухне эсĕ йăмăкна çухатма пултарнă. Эсĕ мана пăрахса хăварсах вăрмана тарнă вĕт. Эпĕ хăранипе пахчари мунча лапки айне пытаннă. Юрать-ха, аслă пичче шыраса тупса туртса кăларчĕ. Мĕнле ăс çитернĕ вăл мана унта шырама? Туртса кăларчĕ те мана çавăтрĕ. Эх, чупатпăр вăрман еннелле. Унта та кунта çунакан утă-улăм хĕлхемĕ вĕçет, мала та, хыçа та ӳкет. Пĕри пуç çинех çакланчĕ, çӳç тивсе илчĕ. Юрать-ха, пичче кĕпине хăвăрт хывса унпа хуплаласа сӳнтерме ĕлкĕрчĕ», — ĕсĕклет тепĕр чухне Екатерина çав хăрушă пушар инкек-синкекне аса илсе.

Малтан каланине манса кайнă пек каллех:

— Эсĕ гроссмейстер пулайман пирки пăшăрханатăн, йăмăкна çухатма пултарнă вĕт! Мана мĕнле пăрахса хăварма пултарнă эсĕ?! — айăпланăн тухаççĕ сăмахĕсем.

— Хам та пĕчĕккĕ пулнă, — тӳрре тухма тăрать пиччĕшĕ. — Турра тав ту, сана пăрахман вăл, — тет яланхи пекех.

Екатеринăн юнашарах итлесе ларакан упăшки Валентин вара çапла каласа хурать:

— Юратнă пулас арăмсăр юлма пултарнă-çке эпĕ, — тесе мăйĕнчи хĕресне аллипе тытса чуптăвать.

Каларăм ĕнтĕ: Миккуль манран пĕр çул кĕçĕнччĕ. Ача-пăча чĕлхине чарак лартса хуплаймăн.

Кăштах урлă пулсан та витлесси пĕтмест. Кĕçĕннисем кăштах çилленсенех ăна çапла кăшкăратчĕç шкулта: «Яла кĕллентерекен! Вут чĕртекен!» Пĕрле вĕренекенсем ун хутне кĕрсе, эх, хăвалатчĕç шăпăрлансене.

Намăс пулнă ĕнтĕ Миккуле. Таçта тухса тарас килнĕ-тĕр тăван ялтан. Кур, вăл аслă пĕлӳ илсе кунтах таврăннă. Шкулта ĕçлет, ачасене вĕрентет Николай Ильич...

Темиçе çул каялла хĕреснаннен упăшкипе курса калаçрăм. Вăл мана сăмах май Миккулĕн ашшĕ çылăхне каçарттарнине пĕлтерчĕ. Пушаршăн ывăлĕн айăпĕ пачах та çук-мĕн.

Вĕсем çĕнĕ çурт лартма хатĕрленсе хыр-чăрăш пĕренисене те турттарса килнĕ. Ялта ниме тăваççĕ. Анчах халăха лайăх пăхмалла, ĕçтермеллеçитермелле. Платниксен кăмăлне юрама пĕлмелле тата. Унсăрăн вĕсем пăтăрмах кăтартма та пултараççĕ. Çĕнĕ çурта кĕнĕ хыççăн савăнса ĕлкĕреймесĕрех тухса тарас килни те пулкалать ялта. Ара, тепĕр уйăхранах хăрушă шăршă тапса тухать. Тахăшĕ пĕрене хушшине çăмарта хурса хăварнă ĕнтĕ. Ăçтине тупма питĕ кансĕр.

Ĕмĕрхи йăла çапла: платниксене питĕ лайăх пăхмалла, кăмăлĕсене юрамалла. Çавăнпа каçсерен сăйлама «хан шывĕ» кăларма тивнех.

Кусем лаçра хуран çакса кăвайт чĕртеççĕ. Алăкне хупса хăварман тахăшĕ. Çил тухса картишĕнчен утă чăмаккине лаçça вĕçтерсе кĕрет. Хап! кăна хыпса илет ку — ăпăр-тапăра, милĕксене çулăм çулама пуçлать. Типĕ пĕренесем шатăртатса çунма тытăнаççĕ. Пĕтĕм çурт-хуралтă сасартăк тĕтĕм-сĕрĕм ăшне путать.

Ун чухне «хан шывĕшĕн» питĕ хытă айăпланă,

тĕрмене лартнă. Хăраса ӳкнĕ ашшĕ-амăшĕ ункун шухăшласа ĕлкĕреймен ĕнтĕ: «Миккуль лупас айĕнче çăмарта пĕçерме пуçланă», — тесе персе янă çынсем умĕнче. Çав суя сăмах ывăлне, айăпсăр çынна, ĕмĕр тăршшĕпех намăслантарассине ун чухне чухланă пулсан ашшĕ тĕрмене ларма та килĕшетчĕ пуль. Анчах чавса çывăх та — çыртма çук.

* * *

Çапла эпĕ шкула çитрĕм. Шăв-шав тăвас килмерĕ манăн. Чи малтан çыру авторĕпе калаçса пăхма шут тытрăм. Ырă мара никам та ан систĕр тесен урокран мĕнле чĕнсе кăлармалла ăна? «Олег Мишин ребуссем тума ăста тесе пĕлтерчĕç мана. Вăхăтлăха ман пата тухма ирĕк памăрши?» — тĕрĕссине каламарăм вĕрентекене. «Эпир пĕлмен, тархасшăн, тархасшăн», — савăнчĕ ку.

Арçын ачаран çакна пĕлтĕм: çумăр хыççăн çĕр типсе те ĕлкĕреймен-ха. Николай Ильич ачасемпе шкул картишĕнче урок ирттернĕ.

— Эпĕ пылчăк çинче чупмастăп, — хирĕçленĕ ку.

— Шампа хырăм пулса каятăн капла, — йĕкĕлтенĕ вĕрентекен.

Олег ăна ачасем çавăн пек мăшкăллама тытăнасран хăранă та:

— Яла çунтаракан пулни мар-ха ку, — тесе хунă.

— У-у, Çтаппан вăрă ывăлĕ, чуп! — ачана малалла вăйпах тĕртсе янă Алыков. Ку пылчăк çине шуса ӳкнĕ.

Чăнах та, Олегăн ашшĕ пĕчĕккĕ чухне кӳршĕсен сĕтелĕ çинчен пĕр тирĕк пыл вăрласа

тухнă-мĕн. Çавăншăн ăна çав ят çыпăçнă. Ачисенчен те хăпмасть. Ял — хула мар. Манмасть. Яла ан култар тесе ахальтен каламаççĕ.

Вĕрентекенĕн, Николай Ильичăн, икĕ пысăк йăнăш пур кунта: ачана тĕкĕнме юраманнисĕр пуçне ăна ашшĕн айăпĕшĕн кӳрентерме нимĕнле ирĕк те çук унăн.

Астăватăп-ха, çак шкултах Юлия Юрьевна ĕçлетчĕ. Çилли килнĕ чухне ачасене вĕсен ашшĕ-амăшĕсен айăпĕсене аса илтерсе вăрçатчĕ. Халь пулсан ăна çапла калăттăм: «Хаяр çулпуç та ашшĕ-амăшĕшĕн ачисем явап тытмаççĕ тенĕ». (Пĕлетĕр ĕнтĕ, çакă çăлса та хăварнă хăшне-пĕрне. Вĕсен йышĕнче паллă çынна тухнисем те пур. Сăмахран, Чингиз Айтматов, Василий Аксенов çыравçăсене тĕнче пĕлет...)

Эпĕ Олегпа чылай калаçрăм, çав пушаршăн Николай Ильичăн айăпĕ çуккине хыпарларăм. Ача çав тери тĕлĕнчĕ. Вăл çеç мар, ытти тантăшĕсем те пĕлмеççĕ иккен çакна. Вĕсен хăлхине те чăнлăха çитерме пулчĕ Олег. Асапланнă-тертленнĕ чухне вăхăт питĕ вăрăма тăсăлнăн туйăнать: çапла вара çын ăшĕнче çур ĕмĕр çунакан пушара сӳнтерме вăл та пулăшасса шанассăм килчĕ.

Николай Ильича та ăнсăртран пек курма тăрăшрăм. Эпĕ мĕншĕн кунта килнине чухларĕ вăл, Олегпа тĕл пулса калаçнине такам систернĕ ăна. Сăмахне хăех пуçарчĕ. «Явап тытма та хатĕр», — терĕ. Каçару ыйтасшăн иккен арçын ачаран...

Студентсене, пулас юристсене, вĕрентнĕ чухне çак пăтăрмахлă ĕç-пуç çинчен пĕрре мар каласа кăтартнă эпĕ.

Вĕсенчен пĕри те çын айăпне пытарса хăварнăшăн ӳпкелемерĕ», — çапла вĕçлерĕ сăмахне Андрей Германович Вазанов.

* * *

Çак калаçу хыççăн хамăн пысăк айăпăм аса килчĕ. Юратнă вĕрентекенĕмех инкеке кĕртсе ӳкерме пултарнă-çке эпĕ. Ку çапларах пулса иртнĕччĕ.

«Шурă хурăнсен юрри» хайлавĕпе уйрăмах палăрнă çыравçă, Виссарион Георгиевич Ильичев, манпа, хăйĕн ентешĕпе, ăшшăн калаçатчĕ. «Шăллăм» сăмахпа савăнтаратчĕ чылай чухне. Витя тесе те чĕнетчĕ хушăран.

— Сирĕн ялта ачалăхри тусăм пурăнать, — пĕлтерчĕ вăл пĕррехинче.

— Геронтий Порфирьевич мана вĕрентнĕ, — савăнăçлăн каласа хутăм ăна.

— Чăнах-и? — тĕлĕннĕ пек пулчĕ вăл. — Мĕнлерех çынччĕ?

— Питĕ лайăх! — хавхаланăвăмпа ăна та хĕпĕртеттерес килчĕ-тĕр. Ачалăхри тусĕ-çке!

Эпĕ унăн куçĕнче хаваслăх туймарăм-ха. Çавăнпа хамăн сăмаха юлташĕн ĕçĕ-хĕлĕпе çирĕплетсе парас килчĕ:

— Вăл пирĕн яла пырса директор пуличчен шкулта йĕрке çукчĕ. Ачасем уроксенче алхасатчĕç. Вăрман варринчи ялта, кинори пек каласан, «саккун — тайга, упа — прокурор» майлăрах пулнă, — терĕм.

Унтан тахçанхи директор аса килчĕ.

Таçтан ярса панă çынччĕ. Вăл аслă пĕлӳ те илмен-тĕр. Уксахчĕ. Лупас çине çăмарта вăрлама хăпарсан ӳксе урине хуçнă тесе кулатчĕç

унран куç хыçĕнче. Истори вĕрентетчĕ, тахçанах кивелнĕ кĕнекинчен вуласа паратчĕ. Ăна хисеплемен çеç мар, унран ачасем хăрамастчĕç те. Вăл, уксахскер, витлесен те хăваласа çитеймест-çке.

Темшĕн эпĕ çав çынна ытла та усалпа аса илетĕп. Мĕн каласси, сăлтавĕ те пулнă çав. Мана юратсах каймастчĕ вăл. Сакăр класс пĕтерни çинчен панă ĕнентерӳ хутĕнче унăн предмечĕпе — «виççĕ». Ман атте тăванĕн ывăлне унăн хĕрĕнчен сивĕтнĕ имĕш. Утне çитмен — туртине тенĕ пек, мана тавăрма шут тытнă. Пăхать — манăн пĕтĕмпех «тăваттă» та «пиллĕк». Тата биологи вĕрентекенне хăйĕн майлă çавăрма пултарнă. Лешне, таçта завхозра ĕçленĕскере, кунта ĕçе илме  май килнĕ-çке. Унăн предмечĕпе пĕрре те «виççĕ» илнине астумастăп. Мĕнле майлаштарма пултарнă иккĕшĕ?

Камăн-камăн та — вĕрентекенĕн чунĕнче курайманлăх, тавăру пулмалла мар. Вĕренекен — паян ача, кайран — çитĕннĕ çын. Ырă тунине çын манать, усал тунине манмасть теççĕ. Кунта тĕрĕс марри те пур-ха ĕнтĕ.

Тепĕр путсĕрлĕх халь те асрах. Шкул картишĕнче вылянă чухне ман мечĕк пĕр хĕрачана пырса лекрĕ. Çакна пирĕн уксах директор асăрханă иккен.

— Куянов! — кăшкăрчĕ вăл мана. — Кил-ха кунта!

Ун патне пытăм та, кап! ярса тытрĕ çухаран, çăт-çат! çупса ячĕ питрен.

Ыратнинчен ытла намăс пулчĕ. «Айван эсĕ, тĕртсе ямаллаччĕ», — ӳпкелешрĕ çывăх юлташăмах. Çавăн çинчен эпĕ атте-аннене пĕлтермен. Пурпĕрех хута кĕместчĕç. Ун чухне йăли çапла

пулнӑ. «Ача хыҫҫӑн каякан вакка сикнӗ», — тетчӗҫ.

Тата тепӗр ӗҫ-пуҫ вӑл таса чунлах пулманнине аса илтерчӗ. Каснӑ вӑрман вырӑнне йывӑҫ калчисем лартса ҫитӗнтернӗшӗн ҫаранӗпе усӑ куртаратчӗҫ пире. Ушкӑнпа утӑ ҫултӑмӑр, типӗтсе капмар купасем турӑмӑр. Унччен те пулмарӗ — директор арӑмӗ лавсемпе килсе ҫитрӗ те иккӗшне тиеттерсе кайрӗ. Эпир ҫӑвар карса юлтӑмӑр. Кайран сӑмах тухрӗ: пирӗн бригадирӑн ывӑлне улттӑмӗшӗнчен ҫиччӗмӗшне куҫарман иккен. Тантӑшӗсемпе пӗрлех вӗрентес тесен икӗ купа пама ыйтнӑ. Пирӗнне, халӑхӑнне, вӑрланиех-ҫке ҫакӑ.

Эпӗ асаилӳпе шухӑша кайса вӑрахлӑх шӑпланнӑ курӑнать.

— Геронтий Порфирьевич йӗрке турӗ-и вара? — ыйтрӗ манран Виссарион Ильичев.

— Турӗ, — терӗм эпӗ.

— Мӗнле майпа?

— Вӑл йӑрӑс пӳллӗ, вӑйлӑ. Спортсмен.

— Виталий Герасимович, эсӗ темӗскер йӑлтах каламастӑн пек туйӑнать, — мана куҫран хыттӑн тинкерчӗ ентешӗм, хальччен Витя е шӑллӑм ҫеҫ тесе чӗнекенскер.

— Хӑлхинчен камӑн турттарас килтӗр? — шӳтлем пекки турӑм эпӗ, айванскер.

— Чӑнах-и? — йӑл-л ҫиҫсе илчӗҫ Ильичевӑн куҫӗсем.

Сӑмахӑмсем юратнӑ вӗрентекенӗме пӑтӑрмах кӑтартасса кӗтме те пултарайман, пуҫа та пырса кӗмен унашкал шухӑш.

Виссарион Ильичев районти вӗренӳ пайне ҫӑхав ҫырса янӑ: «...Васькин Геронтий Порфирь-

евич ачасене çапать. Çакна ун патĕнче вĕреннĕ Куянов Виталий Герасимовичăн сăмахĕсем çирĕплетеççĕ...»

Сĕтĕрме пуçлаççĕ шкул директорне. Ара, анонимка мар, паллă çын çырнă. Пулман ун пекки тенипех тӳрре тухаймăн.

Мĕнле-ха капла ачалăхри чи çывăх тусĕсенчен пĕри ăна ура хурасшăн?

Укçа вăрçтарать тесе ахаль каламаççĕ çав. Геронтий Порфирьевичăн пĕррехинче хулара килте питĕ кирлĕ япала туянас килнĕ. Çумра ун чухлĕ укçа пулман. Вăл вара унран тахçанах Виссарион Георгиевич кивçен илнине аса илнĕ те ун патне кайнă. Лешĕ хăй те хĕссе-пĕссе пурăннине пĕлтернĕ.

— Журналта тин кăна пысăк япала кăлартăнçке. Гонорарĕ ăçта? — чăтса тăрайман Геронтий Порфирьевич, юлташне кăштах тăна кĕртме те шухăшланă. — Эсĕ ресторана тăтăшах çӳренине илтрĕм. Сахалрах ут унталла.

— Эсĕ мана ăс вĕрентесшĕн-и? Манăн чапа ăмсанатăн. Ху та çырса пăхрăн та — пиçмерĕ, — хĕрсе кайнă Виссарион Георгиевич.

— Эпĕ çыравçă пулаймарăм-ха. Уншăн ӳкĕнместĕп — ачасене çын тăвассишĕн тăрăшатăп. Эсĕ мĕн, хăвна классик вырăнне хуратăн-им? — тарăхса хуравланă Геронтий Порфирьевич.

— Кĕлмĕç эсĕ! — кăшкăрса тăкнă юлташĕ. — Эпĕ сана ача чухне пĕремĕк сахал çитернĕ-и? Шăнса пăсăлсан сана сыватассишĕн атте сахал тăккаланнă-и?

Тĕрĕслĕх пурах ун сăмахĕсенче. Предприяти директорĕн ывăлĕ Виссарион нуша курман. Çипуçĕ те питĕччĕ. Кĕсйинчен пĕремĕк татăлман.

Ашшĕсĕр юлнăскере те хăналакалатчĕ шкула юнашар утнă май.

Шăнса пăсăласси вара çапларах пулса иртнĕччĕ. Шыв-шур тапрансан вĕсен ялĕнчи çырмана пысăк пулăсемех хăпараççĕ. Вĕсене тытма икĕ тĕрлĕ варинккене пĕр-пĕрин çине майлаштарнă пек сĕке* çыхса ăсталаççĕ хăваран. Ăна вара юхăма хирĕç вырнаçтараççĕ. Унта кĕрсен пулăсем каялла çаврăнса тухаймаççĕ. Тепĕр чухне мăн çăрттансемех çакланаççĕ.

— Атя çынсем лартнă сĕкесене тĕрĕслеме каятпăр, — сĕнчĕ пĕррехинче Герăна Виссарион.

— Çыннăнне вăрлама аван мар, — килĕшмерĕ ку, тăраниччен çисе курма ĕмĕтленекенскер.

— Мĕн аван марри, никам та сиссе юлмĕ, — хистерĕ тутă юлташĕ.

Çапла вара ял хыçĕнчи çырма хĕррине анчĕç. Юр кайса пĕтмен-ха. Шыв сиксе юхать. Виссарион çыранран сĕкене ярса тытас тесе пĕшкĕннĕччĕ — пăр лăшт! ишĕлчĕ те, — шыва чăмрĕ. Юхăм сĕтĕрсе кайрĕ ăна. Мĕн тумалла Герăн? Вăл малалла чупса шыври тĕмсем хушшине анса тăчĕ те хăрах аллипе хăваран çирĕппĕн тытрĕ, теприпе Виссарион ун патне çитсенех ăна туртса кăларма хатĕрленчĕ. Чăнах та, вăл юлташне хăтарчĕ-хăтарчех. Лачкам йĕпескерсем килĕсене тапса сикрĕç.

Виссариона амăшĕ тӳрех сипленĕ, Герăн амăшĕ килте пулман. Вăйлах чирлесе ӳкнĕ ача. Ӳпки шыçăннă терĕç. Сывлама та кансĕрччĕ. Арçын ача сываласса никамах та шанман. Виссарионăн ашшĕ хаклă эмелсем тупса пани çеç çăлса хăварчĕ пуль. Çавна аса илтернĕ ĕнтĕ юлташĕ.

---

* Сĕке — пулă тытмалли хатĕр.

— Ачалăхри чи çывăх тусăм тетĕн. Ху тӳрех усала аса илетĕн, — питĕ тарăхнă Геронтий Порфирьевич. — Эсĕ ман пек кĕлмĕç çеç мар, сутăнчăк! — тесе хунă çак танлаштару кунта вырăнсăррине шута илмесĕрех. Вĕсемшĕн, вăрçă вăхăтĕнче ача пулнăскерсемшĕн, унран хăрушăрах сăмах та тупаймăн.

Çав «сутăнчăк» сăмах Виссарионăн чунне питĕ хытă ыраттарнин тепĕр пысăк сăлтав та пур. Герăн ашшĕпе пĕртăванĕн хĕрĕ Верук чиперук камăн чунне кăна çунтарман-ши? Ăна хăйĕнчен аслăраххисем те, кĕçĕнреххисем те куç хывнă. Виссарион сумлă çамрăк шутланнă пулин те, хĕр ăна килĕштерсех каймастчĕ курăнать. Вăл урăххине кăмăллани сисĕнетчĕ. Виссарион Герăпа меллĕ усă курма пултарчĕ. Вĕсем патне Верук пынине чӳречерен курсанах персе çитетчĕ. Ара, туслă пулма сăлтавĕ пур: иккĕшĕ те илемлĕ литературăна юратаççĕ. Калаçса ларатчĕç виççĕн. Кайран вара çула май тенĕ пек Виссарион Верука ăсатса яратчĕ. Ăна килĕштернĕ каччă тӳссе ирттерейменĕ çакна: лайăх вĕренекенскер çичĕ класс пĕтерсенех ялтан таçта тухса кайрĕ те йĕп пек çухалчĕ.

Виссарион институтра вĕреннĕ чухне профессорăн пĕртен-пĕр хĕрĕпе паллашнă та часах туй кĕрлеттернĕ. Чаплă хваттере пурăнма куçнă вара.

Верукăн ăнман шăпишĕн Гера хăйне айăплă туйнă. Çавăнпа пĕррехинче Виссарионпа ӳпкелешсе калаçнăччĕ. «Сутăнчăк» сăмахăн сĕмĕ сисĕннĕ-ши? Арăмĕпе вăл чиперех пурăнманни те каярах хăлхана кĕнĕччĕ.

Çапла, ăнсăртран персе янă сăмаха пула икĕ тус тăшман пек уйрăлнă ун чухне. Кайран Ге-

ронтий Порфирьевич хытă ӳкĕннĕ-ха. Каçару ыйтса çыру яма шут тытнă — пĕрмай ыранран ырана хăварса пыни пĕтерет-çке çынна...

Ильичев каçарма шутламан та иккен, çилли иртсе кайман унăн.

Пирĕн, виççĕмĕрĕн, çырăва тĕрĕслекенсем умĕнче куçа-куçăн тăма та тиврĕ.

«Хăлхинчен камăн турттарас килтĕр тесе çеç каларăм», — çинех тăтăм эпĕ. Турра тавах, Виссарион Георгиевич хăй те ман сăмаха çирĕплетрĕ.

Çапла вара Геронтий Порфирьевич тата темиçе çул директорта йĕркеллех ĕçлерĕ. Кирек мĕн калăр та, лайăх шкул вăл — ял илемĕ те, чапĕ те. Унăн пуласлăхĕ те...

## АСЛАТИ ЧЕЧЕКĔ

*Асанне халапĕ*

Пĕр ялта ытарайми пике çитĕннĕ тет. Ăна кӳршĕри маттур йĕкĕт питĕ килĕштернĕ. Пĕр-пĕрне савнă вĕсем.

Çак урамрах хаяр тухатмăш пурăннă. Сĕм тĕттĕм каçсенче иртĕхме тесен ниçта кайса кĕреймен. Çур çĕрте шăртлă сысна е хура кушак пулса тăма та пултарнă. Çав вăхăтрах чипер хĕре çаврăнма та ăрăм çитернĕ.

Йӳтенĕскер маттур йĕкĕте юратса пăрахнă. Тĕп йӳтĕмĕсенчен пĕри çакă пулнă: енчен те яш каччă ăна савниçĕм тесе аллине тытсан вăл çамрăкланать имĕш. Анчах кунта ун пек хăтланма май килмен. Ку тăрăха ырă Пӳлĕх хӳтĕленĕ. Çынсене пирĕштисем упранă. Ăна хăватлă та хатарлă Аçа-çиçĕм те пăхăннă, итленĕ. Вăл тĕттĕмре те усал-тĕселе йĕрленĕ, хăваланă.

Тухатмăш чееленме шухăшлать. Пикене çав тери хытă чирлеттерет, чунĕ тухас патнех çитерет. Никам та сыватаймасть ăна.

Куçран чиксен курăнми тĕттĕм çĕрле вупăр карчăкĕ йĕкĕте тĕлĕнмелле тĕлĕк кăтартать: улах çĕрте, сĕм вăрманти çичĕ тарăн вар-çырма леш енчи уçланкăра, çав тери хитре чечек ӳсет иккен. Ăна татса килсе пикене парнелесен вăл тӳрех сывалать имĕш.

Йĕкĕт вăранса каять те сĕм çĕрлех çав вырăна тĕшмĕртсе тухса утать. Çитет унта. Пĕлĕтсем хушшинчен уйăх сасартăк çутатсан ăна хирĕç «пике» çывхарнине асăрхать.

— Эсĕ те, савниçĕм, чечек татма килтĕним? — тет аллине тăсса.

— Çапла, тусăмçăм! — кĕрет каччă хăлхине пылак сăмах.

Йĕкĕт «хĕрĕн» аллине тытас тенĕ самантра Аçа-çиçĕм йăлтăр-йăлтăр çиçет те вăйлăн кĕрĕслеттерсе çапать. Чее тухатмăш тарса хăтăлма ĕлкĕрет, анчах унăн ăрăмĕ путланать. Йĕкĕт вара ĕмĕрлĕхех куçне хупать.

Сасартăк сывалса тăнă пикене пирĕштисем унăн савнине аçа çапса вĕлернине хыпарлаççĕ ир-ирех. Ырăсем çул кăтартса пынипе вăл çав инкеклĕ вырăна çитет те савнийĕ çинче татăлса йĕрет.

— Халь мĕн пурăнни? Манăн яланах санпа пĕрле пулас килет. Сансăр пуçне никам та, нимĕн те кирлĕ мар. Эй, Пӳлĕхĕм, савнине манран уйăрма мĕншĕн пӳртĕн? Мана унсăр пурнăç кирлĕ мар, унсăр пурăнни — пурăнни мар, чĕр вилĕм, — тесе хӳхлет. — Ан уйăр пире, — тархаслать, йăлăнать вăл.

Пӳлĕх ҫав тери хĕрхенет пикене: каччăпа хĕртен пĕр тĕпри-вулăри икĕ юплĕ хитре чечек туса хурать: уҫланкăра, улăхра е уйра ӳсекен фиалка (Анюта куҫĕсем, чăпăл куракĕ) евĕрлĕрехмĕн вăл, анчах чылай паркарах та хитререх иккен. Ăна куракансем те пулкаланă. Пĕр тĕпри чипер чечекĕн икĕ юппи пĕр-пĕрин ҫине ытараймасăр пăхать тет. Унта ҫывхарма тытăнсанах Аҫа-ҫиҫĕм кĕр! кĕрлесе сехрене хăпартать иккен. Ҫавăнпа ҫынсем тĕлĕнтермĕше аслати чечекĕ тесе ят панă.

Ăна тирпейлĕн кăларса тăван килне куҫарса килсе лартаканăн кил-йышĕ ĕмĕрех телейлĕ пулать тет. Ҫавна тума пултараканăн чун-чĕри таса та питĕ вăйлă, нихҫан сӳнми юратуллă пулмалла-мĕн. Ун йышши этем паян кунччен тупăнайман имĕш. Ҫавăнпа уҫланкăри илем хальчченех ятне улăштарса Телей чечекĕ пулса тăраймастьха тет.

## КИЛĔШМЕН ХĔРАРĂМ

Аля тӳлеккĕн ҫывăракан упăшки ҫине ăшшăн пăхса илчĕ. «Епле лайăх вăл паян таврăнни», — савăнчĕ чунтан. Унтан ҫутта сӳнтерсе хăй те кĕрсе выртрĕ ун ҫумне.

— Эх, радиона чарма мансах кайнă, — ăнсăртран сасăпах каласа ячĕ вăл сиксе тăнă май. Тен, ятарласах та пуль, упăшкинчен пĕр-икĕ сăмах та пулин илтесшĕн. Ара, икĕ эрне пĕрпĕччен пурăнса ăна шăплăх тарăхтарсах ҫитернĕччĕ. Килте никампа та ҫăвар уҫса калаҫма ҫук.

— Эсĕ уншăн хыпăнса ӳкнĕ, — мăкăртатрĕ

Олег арӑмӗ пырса выртсан. — Пирӗн инке радиона юриех ярса ҫывӑрать.

(Вӑл ашшӗпе пӗртӑванӗн арӑмне, Кулине ятлӑ хӗрарӑма, ҫапла чӗнет.)

Упӑшки ыйхӑ тӗлӗшпе ытахальтен ҫапла мӑкӑртатать пуль тесе шухӑшларӗ Аля, анчах тӗрӗслесе пӑхас килчӗ:

— Мӗншӗн?

— Пӗччен пурӑнать те — шӑплӑх йӑлӑхтарнӑ... Ҫын калаҫнӑн туйӑнать тет радио ярсан, — ҫул ҫинче ӗшеннӗ упӑшки ҫак сӑмахсене каларӗ те урӑх чӗнмерӗ.

«Ҫав хӗрарӑма эпӗ килӗштерменнине сиснӗ ӗнтӗ», — тавҫӑрса илсе ӑшӗнче кулчӗ ҫамрӑк арӑм. Ҫапах та тепӗр ыйту памасӑр чӑтаймарӗ:

— Вӑл мӗншӗн пӗччен пурӑнать?

— Туй хыҫҫӑн темиҫе ҫултанах мӑшӑрӗ вӑрҫа кайнӑ та вилнӗ, — кӗскен хуравларӗ Олег.

— Пӗр ача та пулман-и вӗсен? — хӑйсем тӗллӗнех килчӗҫ Альӑн чӗлхи вӗҫне ҫак сӑмахсем.

— Малтанхи вилнӗ. Иккӗмӗшне ҫуратайман. Вӑрман каснӑ чухне йывӑр йӑтни юраман. Вӗсем тӗп килтен уйрӑлса тухса хӑйсем валли мӑн ҫурт лартма тытӑннӑ. Упӑшкин ашшӗ-амӑшӗ ытлӑ-ҫитлӗ пурӑннӑ. Кил-йышӗ те пысӑк пулнӑ: пилӗк ывӑлпа виҫӗ хӗр. Ҫавӑнпа вӑтаммине, Илюка, тата кинне ҫапла хавхалантарнӑ: «Пурпӗрех пӗр тӑкак, пӗр чӑрмав. Пысӑк ҫуртах лартӑр. Авӑ пирӗн ҫурт пысӑк та — сакӑр ача хӗсӗнсе пурӑнмасӑрах ҫитӗнчӗҫ. Пире пӑхсан ачине эсир те сахалах ҫуратас ҫук-ха. Хамӑр та пулӑшӑпӑр ҫурт лартма. Ачасем те айккине пӑрӑнса юлмӗҫ», — хӗтӗртнӗ хунямӑшӗ. Каласси кӑна — канас, ҫынна шаннипе нимех те пулмасть. Хӑйсенех

тертленме тивнĕ. Пулăшман мар ĕнтĕ тăванĕсем. Ниме те чылай янă. Унпа та çăмăлах мар — çынна пăхмалла: ĕçтермелле-çитермелле. Çапла Илюк тетепе инке тăри ыйхипе çеç пурăннă. — Олег шăпланчĕ. Чухларĕ-ха вăл Аля çак сăмахсемпех çырлахас çуккине.

— Çуртне, чăнах та, питĕ пысăк лартнă. Пĕрле чылай пурăннă-и унта? — ыйтмасăр тӳсеймерĕ арăмĕ.

— Тепĕр çулах вăрçă тухнă. Илюк тете вăрçа кайсан çулталăкран хыпарсăр çухалнă. Пысăк кил-йыша телей пӳрмен. Пилĕк ывăлтан ман атте çеç килне таврăнайнă.

— Аслаçупа асаннӳ епле чăтса ирттернĕ-ши? — хаш сывларĕ Аля.

— «Чул та вĕрине чăтаймасть те, шарт! туса çурăлать. Чĕре чултан та çирĕпрех пуль çав», — тесе йĕретчĕ пĕрмай асанне. Мĕн виличчен çав сăмахсем чĕлхи вĕçĕнчен каймарĕç.

— Инкӳ мĕнле пурăнчĕ? Эсир ун патне тăтăшах çӳреттĕр-и?

— Эпир ун патĕнчен тухма та пĕлмен. Пĕртенпĕр йăпанăçĕ шутланнă. Кĕркуннерен çуллаччен чиперех кăштăртататчĕ. Пирĕн ялти шкула вĕрентме янă хĕрсем хваттерте ун патĕнче пурăнатчĕç. Кам кăна унăн ăшшине туйман-ши? «Ачамсем, ачамсем», — тесе çеç тăратчĕ вăл çамрăксене. Апат пĕçерсе çитеретчĕ. Çуллахи кĕске каçсем вара питĕ йывăрччĕ уншăн. Ара, тăр пĕчченех тăрса юлатчĕ-çке: ун патĕнче хваттерте пурăнакансем каникул вăхăтĕнче ялĕсене саланса пĕтетчĕç.

Эпир вăйăран каярах юлса таврăнсан анне мăкăртататчĕ: «Ыйха вĕçтерсе çӳретĕр». Ку пур — çур çĕр-и, тин кăна тул çутăлать-и, пӳртӳм алăк-

не майӗпен шаккасан та йӑпӑр-япӑр сиксе тухатчӗ. Хапӑл кӗтсе илетчӗ, калаҫса пӗтерейместчӗ. Эпир вара минтер ҫине пуҫа хурсанах хуп турттарма пуҫлаттӑмӑр пуль. Тепӗр чухне шарт! вӑранса кайкалаттӑм. «Ах, Илюк, мӗн турӑн эсӗ? Мӗншӗн ҫак анкартинче пӗччене тӑратса хӑвартӑн мана?» — тесе ахлататчӗ вӑл.

Ара, упӑшки вӑрҫӑра ҫухалнӑ. Чӗрӗ-и, вилнӗ-и — паллӑ мар. Ҫавӑнпа тӑлӑх арӑм тесе те хисеплесе калаймӑн. Пӳрчӗ, ху пӗлетӗн, чӑнах та, пысӑк. Ӑна вӑл анкарти тет. Хутса ӑшӑтма та мӗне тӑрать! Халь ав ун патӗнче хваттерте пурӑнакан та ҫук.

Упӑшкине Аля текех ыйту памарӗ. Тӗрӗссипе, вӑл сӑмах та чӗнме пултараймарӗ. Унӑн пырне темӗнле чӑмакка кӗрсе ларнӑ тейӗн. Вӑл хальхаль ӗсӗклесе ярасран та хӑрарӗ. Паянхи тӗлпулӑва аса илсен чӗри йӗппе чикнӗ пек ыратрӗ.

...Ӑна килте пӗччен пурӑнса икӗ эрне хушшинчех йӑлӑхтарса ҫитернӗччӗ. Олег таврӑнасса чӑтайми кӗтрӗ вӑл. Ҫавӑнпа чӳречерен час-часах пыра-пыра пӑхатчӗ. Сасартӑк ҫав сӳпӗлти хӗрарӑм килнине асӑрхарӗ. Вара лавккана каянҫи пулса урама тухма васкарӗ. Ку карчӑк темиҫе кун маларах килнӗ тӗк унпа ӗҫсӗр аптранӑран палкаса ларма хирӗҫех марччӗ-ха, анчах паян Олег таврӑнмалла. Шӑп та шай ҫак вӑхӑтра упӑшки ҫитсе кӗрес пулсан иккӗшне те сывлӑх ҫеҫ сунать-ҫке, инкӗшӗ умӗнче ӑна ыталамӗ те. Альӑн вара тӳрех ӑна мӑйӗнчен уртӑнас килет. Мӑшӑрӗ валли вӑл «сюрприз» хатӗрлесе хунӑ-ха.

Хӑй шутланӑ пек пулса тухмарӗ ҫав: кӑштах канма тесе диван ҫине выртнӑччӗ те — тӗлӗрсех кайнӑ. Упӑшкин ытамӗнче вӑранса кайрӗ...

Олег паçăрах ыйха путнă ĕнтĕ. Аля çаплах канăçлăх тупаймасть-ха. Куçĕ умне хăйсен туйĕ тухса тăчĕ.

Пурте савăнаççĕ. Пĕр хĕрарăм çеç йĕрет. Килĕшмерĕ вăл Альăна, хăй ун кăмăлне кайман пек туйăнчĕ. «Авалхисен йăлипе Олег валли хĕр пăхса хунă пуль-ха. Халь ăна итлеменшĕн кулянать-тĕр», — тарăхрĕ вăл.

Авă мĕншĕн чунĕ хурланнă иккен: карчăк хăйĕн телейсĕр кун-çулне аса илнĕ.

Çапла, çавăн чухнех килĕшменччĕ ку хĕрарăм. Анчах, тĕлĕнмелле, вĕсем патне çӳреме пуçларĕ вăл. Тăтăш тата. Мĕн чуль тарăхман-ши Аля! Ара, упăшкипе шăкăл-шăкăл калаçса, кулса-выляса савăнас вăхăтра хайхискер персе çитет. Ларать вара сӳпĕлтетсе. Ун калаçăвне Аля хăлхана та чикмен-ха. Хăçан тухса кайĕ тесе çеç шутланă.

Çав карчăк пĕрре хăнана чĕнсен хăйсем кайманнине аса илчĕ тата. Акă мĕнле пулса иртнĕччĕ ку. Пырăпăр тесе юлчĕ Олег. Альăн вара вăхăта усăсăр ирттерме кăмăлĕ туртмарĕ. Хирĕçлеме малтанах хатĕрленнĕн сăлтавĕ те тупăнчĕ:

— Олег, эпир кинона кайма килĕшсе татăлнăччĕ-çке.

— Пулин.

— Епле, ара? Ахаль те килте питĕрĕнсе ларнă пекех ялан, — тутине тăсрĕ Аля.

Арăмĕн кăмăлне хăварма хăюлăх çитерейменрĕ Олег.

«Мĕн тери пысăк йăнăш тунă эпĕ, мĕн тери!.. — пуçне икĕ аллипе тытрĕ Аля. — Ватă çын, тен, хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлĕпе кинне (вĕсене вăл çаплах чĕнет) килĕнче курасшăн пулнă, çынсем пек хăналасшăн çуннă».

Ырă çыннăн епле-ха çын пек пулас килмĕ? Çынсенчен вăл мĕнпе катăкрах? Чăлах-и? Катăк çав, ирĕксĕрех катăк. Пĕр ача та пăхса ӳстереймен те.

Малтанласа пĕрмай мăшăрне кĕтнĕ Кулине кинемей. Кайран та ятне яма шутламан.

Олег вăранчĕ те хăй кравать варринче выртнине асăрхасан Альăна айккинелле хĕснĕ-тĕр тесе хăвăртрах хĕрринелле куçрĕ.

Арçын питĕ ырă кăмăллă. Тепĕр чухне Аля ăна тарăхтарас тесе юриех ыйхă тĕлĕшпе харлаттарнă пек тăвать. Пĕлет вăл Олег унашкал çывăрнине юратманнине. Лешĕ вара хăвăртрах пуç çинчен витĕнсе выртать. Тепри пулсан тăнк! кăна чавсипе тĕксе вăратĕччĕ. Тен, инкĕшех ăна ырă кăмăллă пулма вĕрентнĕ. Вăл ача чухне пĕрмай тенĕ пекех ун патĕнче пурăннă тет. Японире авă харлаттаракан арăмне тӳрех уйăрса яма саккунпах ирĕк панă.

Аля упăшки çине тĕттĕмре куçне чарсах тинкерчĕ. Тунсăхласа çитнĕ-çке икĕ эрне хушшинче. Епле ярасшăн марччĕ ăна командировкăна. Вăл пур, айванскер, ăнланмарĕ — тухрĕ те кайрĕ. Шута илмест Аля упăшкин те ăна пăрахса хăварма кăмăл пулманнине. Турткаланса та пăхрĕ ĕçре. Йĕплесе илекенсем те çийĕнчех тупăнчĕç: «Çамрăк арăмĕнчен епле хăпасшăн мар. Тен, Ромик (темиçе авланса уйрăлнăскер) ун патне пырасран шикленетĕн? Ан иккĕлен, халь ун вăхăт çук. Вăл нумаях пулмасть çĕнĕ хĕрарăм тупса янă. Темиçе уйăх иртмесĕр ăна пăрахмастех. Унччен эсĕ те таврăнса ĕлкĕретĕн».

Шӳчĕ шӳт те — Олегран шанчăклăраххи тупса инçе çула яма кансĕртерехчĕ. Аллисем ылтăн унăн. Ĕçмест...

Епле-ха нумай вăхăт хушши çилленсе пурăнма тата çав вăхăтрах чунтан кĕтме пултарайăн?! Май çук. Мăшăрне мĕнле те пулин лайăхрах кĕтсе илесси çинчен çеç шутлама пуçланăччĕ юлашки кунсенче çамрăк арăм.

«Эпĕ икĕ эрне хушшинчех вилес пек тунсăхласа çитрĕм. Вăл пур — ĕмĕрлĕхех çухатнă», — Альăн чунĕ тата хытăрах кӳтсе килчĕ.

Çав хĕрарăмăн телейне çамрăклах туртса илнĕ вăрçа чĕререн ылханчĕ. «Ан пултăр вăрçă нихăçан та, — пăшăлтатрĕ вăл, — вăрçă çеç мар, харкашу та, хирĕçӳ те, курайманлăх та, çынна хисеплеменни те... Ыранах каятăп ун патне. Ирех».

Тул çутăлмасть-ши тесе темиçе хутчен те пуçне çĕклесе пăхрĕ вăл.

— Епле тунсăхланă иккен ватă çыннăн чĕри ăшă сăмахшăн. Мĕн илсе каяс-ши, мĕнле парне? Пĕр-пĕр тутăр парас — карчăк çыхмĕ ăна.

Лавкка уçасса кĕтесси те йывăр пек туйăнчĕ çамрăк хĕрарăмшăн. Каять вăл. Ирех. «Шел те, нимсĕрех».

Аля ӳкĕнсе асапланнă чухне эпир те ирех мĕн пулса иртесси çинчен шухăшласа пăхар-ха.

— Инке! Инке! — алăка шакканă май чĕнет ĕнтĕ Аля ăшшăн.

— Кин килнĕ-çке! — хăпăл-хапăл пырса уçать карчăк. — Ай тур, çемьере инкек-синкек siксе тухмарĕ пуль те? — хыпăнса ӳкет вăл Альăна, тахçантанпах ун килне ура ярса пусманскере, курсан.

Пĕтĕмпех йĕркеллине пĕлсен мĕн тери хĕпĕртет ĕнтĕ. «Ытла та хытă çĕмĕрттерет-ха ку», — тесе радиона тӳрех пырса чарать...

Шăп та шай çакăн пек пулса иртессине ĕнен-

терсех калама пултараймастпăр, анчах пĕлетпĕр: Аля ун валли парне илсе каятех. Хăй сисмесĕрех — питĕ хаклине. Ку вăл — ăшă сăмах. Карчăкăн чĕри мĕн тери тунсăхланă уншăн, ăшă сăмахшăн. Ырă çыннăн епле-ха çын пек пулас килмĕ? Вăл та халь ытти çынсем шутĕнчех-çке: ăна инке тесе чĕнекен тепĕр тăван пур.

## САМАНТ

Килне çитме çывăхах мар пулин те, çуранах утрĕ Галя. Кăмăлĕ питĕ пăсăк. «Паян юлашки татăклă сăмахăм пулĕ. Уйрăлатпăр унпа. Чунра капланса килнине йăлтах калатăп. Уйрăлатпăр. Унпа пурăнса ахалех çулталăк усăсăр irттертĕм. Ку мĕн? Çамрăклăх çухалчĕ! Çамрăклăхах мар та ĕнтĕ, анчах тепĕр хут хĕр пулаяс çук», — питĕ пăшăрханчĕ вăл.

Чунĕ тăвăлнăçемĕн тăвăлса килчĕ.

— Пĕтĕм айăпĕ Тольăра, — тарăхрĕ çамрăк хĕрарăм. — Ăçтан килсе тухрĕ-ха ку ăнман пурнăç, инкек?

Пулас упăшкипе паллашнине аса илчĕ. Ун умне вара тӳрех урăххи тухса тăчĕ.

Галя ĕçе вырнаçни уйăх та çитменччĕ-ха. Вăл Гена ятлă йĕкĕте куç хыврĕ. Тĕрĕсрех каласан, лешĕ хăй ăна кăмăлларĕ пулас. Яланах мĕнле те пулин ăшă сăмах каласа хăвaратчĕ-хăвaратчех. Çапах та вĕсем куçа-куçăн калаçманччĕ-ха. Пĕррехинче Гена çула май тенĕ пек ун патĕнче чарăнса тăчĕ те: «Паян пирĕн клубра çамрăксен каçĕ пулать, пыма тăрăшăр», — терĕ. Хĕр епле хĕпĕртерĕ ун чухне. Унта кайма хавхаланса, тулли кăмăлпа хатĕрленчĕ, маларах çитме те тăрăшрĕ.

Верӑна пӗрле пыма чӗнчӗ, иккӗшӗ клуба кӗчӗҫ. Гена ҫук-ха. Сасартӑк вӗсем патне Толя пырса тухрӗ те Галя ҫумне пырса ларчӗ, калаҫма пуҫларӗ. Вӑл мӗн пакӑлтатнине Галя халь астумасть ӗнтӗ. Халь кӑна-и, ун чухне те ӑна питех хӑлхана чикмен. «Гена киличчен хӑвӑртрах кайинччӗ», — чӑтӑмсӑррӑн кӗтрӗ вӑл. Тӗртсе яраймастӑн-ҫке ҫынна. Кӗтсе илеймерӗ — Гена пырса кӗчӗ. Гальӑн пичӗ-куҫӗ пӗҫерсе кайрӗ. Ку хӗрӗн савниийӗ пур иккен тесе каччӑ хӑйсем патне пымасран шикленчӗ.

Гена пӑрӑнса утмарӗ, Галя юлташӗпе, Верӑпа, ҫумӑн ларчӗ. Вӗсем пӗр-пӗрне унчченех пӗлнӗ иккен.

Кайран вара пӗрле урама тухрӗҫ. Тӗрӗссипе, Гена унӑн юлташне, Верӑна, ҫавӑтса утрӗ. Килне Галя пӗчченех каясшӑнччӗ — Толя юлмарӗ.

Генӑпа Вера часах мӑшӑрланчӗҫ. Галя та (чун туртмасть пулин те) Тольӑпа пӗрлешме килӗшрӗ. Мӗн тӑвас тетӗн, Гена пурпӗрех уншӑн ҫук ӗнтӗ.

— Ҫапла, пӗтӗм инкекӗм Тольӑна пула сиксе тухрӗ. Вера авӑ хӑтлӑ хваттерте пурӑнать, эпир — ҫын патӗнче, — тарӑхрӗ вӑл. — Ыйткалакана ҫил хирӗҫ тесе ахаль каламан ҫав. Акӑ тата ҫак инкек сиксе тухрӗ.

Паян ӗҫрен киле кайма пуҫтарӑннӑ ушкӑна пӗр хӗрарӑм пычӗ те хӑйӗнпе юнашар ӗҫлекеннине йӑлӑнчӗ: «Ҫак укҫана темиҫе кун упра-ха. Телевизор туянасшӑн юри пухкаланӑччӗ. Киле илсе кайма шикленетӗп. Тупӗ те ӗҫсе ярӗ».

— Ҫук-ҫук! Ҫын укҫине тетӗн, хамӑнне те ҫухатасран хӑратӑп, — хирӗҫлерӗ лешӗ.

Никама сӗнме аптрарӗ хӗрарӑм.

— Кӳр, эппин, мана, — терӗ Галя.

Çула май пасара кĕрсе апат-çимĕç туянма шутларĕ. Тахăш вăхăтра укçана çухатнă. Те кăларса илнĕ, те тухса ӳкнĕ.

Вăхăтра тавăрса памасан намăс курать. Пĕрре кĕсйине персе чикесшĕн тейĕç, тепре хуçи те хытă пăшăрханĕ.

Галя ĕçе вырнаçсанах темиçе кунтан гардеробра пĕрин сехечĕ çухалнăччĕ. Ун чухне те çĕнĕ çын çине шанчăксăррăн пăхкалани сисĕннĕччĕ. Халь укçана вăхăтра тавăрса параймасан тӳрех çавна аса илĕç.

Йӳнĕ телевизор та пулин пӳлĕме лартар-ха тесе пухкалани пурччĕ-ха та.

Мĕн тумалла? Толя, ахаль те хытăскер, пĕтерет ĕнтĕ. «Санăн пăртак ман аннерен вĕренмелле. Укçа тытма пĕлсех каймастăн. Кăмакара кăвар пур чухне аттене чикарккă тивертме те шăрпăк чĕртме хушмастчĕ вăл», — аса илчĕ Тольăн сăмахĕсене.

Галя, ытлă-çитлĕ пурăнакан çемьере çуралса ӳснĕскер, çитменлĕхе курманччĕ. Çавăнпа, паллах, ăна хальхи пурнăç питĕ йывăр пек туйăнчĕ.

— Çапла, çакăн хыççăн текех унпа килĕштереес çук. Чунра капланса килнине калатăп та тухса каятăп. Кивçен илсе тӳлесе татăп-ха.

Килне çитрĕ. Вăл хăйĕнпе пулса тухнине ним пулман пек каласшăнччĕ упăшкине — пултараймарĕ. Çапах та çулталăк хушши пĕрле пурăнса ирттернĕ çынран уйрăлса кайма çăмăлах мар иккен. Ăна вăл халь çеç чухларĕ.

— ...Укçа çухатрăм... — йăлтах лăпкăн каласа пама тăрăшрĕ вăл. — Çывăх вăхăтрах тӳлесе татмалла, — тени питĕ чĕтренсе тухрĕ.

«Ху çухатнă — ху майлаштар», — хаяр сăмахсене кĕтнĕччĕ çамрăк хĕрарăм.

— Мĕн эсĕ, Галя? Галя, лăплан. Çăлăнăç тупăпăр. Эпĕ ĕçре рационализаци сĕнĕвĕ панăччĕ. Çывăх вăхăтрах тӳлемелле-ха уншăн. Преми те илмелле пек. Костюм туянма укçа пухнăччĕ авă. Майлаштарăпăр.

Çак сăмахсем Гальăн чунне пырса тиврĕç. Вăл питне хăвăрттăн аллипе хупларĕ. Пулни-иртнишĕн хăйĕнчен хăй вăтаннипе-тĕр.

Галя упăшки пирки ĕçре нихăçан та ырăпа асăнмастчĕ. «Мăшăру сан аван, е лайăх упăшка тĕлне пулнă», — тенине хирĕç: «Хыткукар вăл», — тетчĕ.

Унпа пурăнса пĕтерессĕн туйăнмастчĕ ăна. Çавăнпа та уйрăлас пулсан айăпа хăйĕнчен сирме маларах хатĕрленсе упăшкине яланах хурлама тăрăшатчĕ. Толя вара арăмĕн ĕçре усал ят каясран епле хыпăнса ӳкрĕ. «Театра-мĕне кайма та йĕркеллĕ туму çук», — тесе хăртнăччĕ Галя. Авă вăл пур, тен, тарăхсах костюм илме хĕссепĕссе пухнă укçине те ун парăмне парса татма сĕнет.

— Пĕлменччĕ... — теме çеç ĕлкĕрчĕ Галя, ытти сăмахĕсем пырне капланчĕç. Çак самантра унăн куç тулли куççуль тапса тухрĕ.

## ТАВЛАШУ

Антуан де Сент-Экзюпери «Пĕчĕкçеç принц» аллегориллĕ юмахне çитĕннисем те тахçан ачасем пулнине асра тытса çырнине палăртнă. Ачалăх, çамрăклăх, ватлăх... Никам та хирĕçлеме пултарайман тĕрĕслĕх çакă. Эпĕ те çавнах шута илес терĕм.

«Шывра ишессипе тата эрех ĕçессипе тавлаш-

ма мана анне хушман», — тенĕччĕ пĕррехинче пĕлĕшĕм.

«Атăл урлă кирек мĕнле çанталăкра та ишсе каçаятăп», — тесе миçе çын инкек-синкек тӳсмен-ши чăнах та. Çакланса юлса çăлăнма шывăн турачĕ çук. Эрех кĕленчине «путса» леш тĕнчене çап-çамрăклах уйрăлса кайни те йышлă. Пĕчĕк пичче пĕтĕрет, пурнăçа пач пĕтерет.

Çав икĕ пăтăрмахĕ те манран пăрăнса юлнăха. Анчах хăш-пĕр килпетсĕр тавлашу халь те асрах...

Тантăшсемпе урамра вăрçălла выляна чухне куçа патак лекрĕ. Суккăр юласран шикленнипе пичче инçетри сыватмăша хăвăрт леçсе ячĕ.

Тĕрлĕ пăтăрмах пулкаласа иртнĕччĕ. Те çавна шута илсе, вăл мана, купăсшăн юншăхлакансене, ăна туянса пама пулчĕ. «Хăвна чипер тыт», — тесе асăрхаттарса хăварчĕ.

Чирлисем хушшинче шӳтлеме юратакансем пурччĕ. Уйрăмах вĕсем кĕçĕн çулхисене астаратчĕç. «Икĕ хăюлли, юнашар пахчаран пан улми татса çитерĕр-ха», — хушрĕ пĕри, чĕлхи-çăварĕпе те тыткаларăшĕпе пурне те килĕшекенскер. Кĕскен каласан, авторитет. Камăн хăравçă пулас килтĕр? Ăмăртмалла сиксе тухрăмăр ун умне. Мана тата кĕçĕнреххине суйласа илчĕ вăл. Эпир иксĕмĕр вĕçнĕ пек чупрăмăр пахчана. Темиçешер пан улми çеç татнăччĕ — усал йытă сиксе тухрĕ. Эпĕ решетке хӳме урлă каçса ĕлкĕртĕм, леш ачин вара пижами таçтан çакланса чăр! çурăлчĕ, хăй çĕре ӳксе çамкине шăтарчĕ. Ай лекрĕ мана, ханттара, тухтăрсенчен. Камсем хушнине каласа параймастăн-çке: пĕлтерсен сутăнчăк пулса тăратăн.

Тепрехинче çерем çинче пире кĕрешме хĕтĕртрĕç. Эпĕ пурне те çĕклесе çапрăм. Çакă та сахал пулчĕ пĕриншĕн. Çапăçса хăшĕ çĕнтерессине пĕлесшĕн. Пĕр арçын ача çеç, манран икĕ çул аслăскер, «паттăрпа» çыхланма хăрамарĕ — килĕшрĕ.

Пуçĕ унăн тĕвен курпунĕ пекчĕ е ту хысакĕ евĕр курăнатчĕ. Хăлхана кĕчĕ — вăл унпа çапăçусенче ăста усă курма пĕлет-мĕн: вăйлă чышса антăхтарать е тăна çухаттарать. Çавăнпа та хăшĕ-пĕри пире пуçсемпе сĕкĕштересшĕн. Эпĕ килĕшмерĕм. «Чăмăрпа усă куратăп», — терĕм. Сăлтавĕ те пурччĕ манăн. Хăма хапхана чыша-чыша чул пек хытарса çитернĕччĕ чышка.

— Хăравçă, хăравçă! — кăшкăрма пуçларĕç «тĕве» майлă пулнисем. Çапах та ман хута кĕрекенсем те тупăнчĕç.

«Ту хысакĕ» янахран пуçĕпе чышма тăчĕ — чăмăрăм ăна пырса тăрăнсан вăл, вăкăр юман юпана çамкипе хыттăн пырса çапăннă пек, чĕтренсе илчĕ. Çакна курса пире хăвăртрах уйăрчĕç. Лешĕ темиçе кун вырăн çинче йăраланчĕ, пуçĕ çаврăнать иккен, кăмăлĕ пăтранать. Каллех пĕçерккĕ лекрĕ мана.

Тепĕр темиçе кун иртсен пичче илме килчĕ. Усал хăтланăвăмсене такам каласа кăтартма та ĕлкĕрнĕ ăна. «Купăс пирки ан асăн та», — терĕ хытă çилленнĕскер.

Шел, вăйăçă пулаймарăм, каярах вара пач урăх киленĕçсем илĕртме пуçларĕç. Эх, халĕ те тепĕр чухне купăс тăсса ярса кăмăла уçас килет те — тин ăна калама вĕренме каярах юлтăм пуль.

Хăш-пĕр килпетсĕр тавлашăва каçарма та юрать-тĕр. Айван ача пулнă. Анчах çитĕнсе çит-

сен тунă йăнăшшăн хальччен ӳкĕнетĕп. Мĕнле тавлашнине калама та именетĕп ĕнтĕ. Эй, вĕçкĕн яшлăх!

— Çав хĕре çавăрма пултараятăн-и? — терĕç мана пĕррехинче.

— Пачах иккĕленместĕп, — пулчĕ хуравăм.

— Ан каппайлан. Ун тавра авă яштака та хитре каччăсем явăнаççĕ — вăл яхăнне те ямасть. Сана çумне те лартмĕ.

— Куратăр ак, — парăнмарăм вĕсене.

Пысăк çĕнтерĕве хатĕрленнĕ пек пĕтĕм ăсталăха, чеелĕхе пухрăм. Тĕлĕнмелле, вăл мана тĕртсе ямарĕ. Каçсерен уçăлса çӳреме тытăнтăмăр. Юрату сăмахĕ те чĕлхерен вĕçе-вĕçе тухрĕ.

Ман çитĕнĕве асăрханă пĕр юлташ тавлашу çинчен ăна темĕнле систернĕ-мĕн. Ку хĕр мана ырă та, усал та каламарĕ.

— Маттур-çке эсĕ, — тесе салхуллăн çеç йăл кулса илчĕ.

Нумай та вăхăт иртмерĕ — эпĕ ăна чăн-чăнах юратса пăрахнине ăнлантăм. Нимскер те тăвайман, уншăн яланах çухалнипе çырлахмах тиврĕ. Йывăр чула халь те чун-чĕрере йăтса çӳретĕп тейĕн...

## ТĔЛĔНМЕЛЛЕ ĂСЛĂ ШĂНКĂРЧ

*Чăн пулни*

Эпĕ мĕн пĕчĕкрен вĕçен кайăксене, чĕрчунсене юратнă. Хам вăрман варринчи ялта çуралса ӳснĕрен килнĕ ĕнтĕ ку. Çуркунне çитнĕ-çитменех шăнкăрч вĕлли çакаттăм. Атте те пулăшатчĕ мана. Çерçисем хуçаланма пуçлатчĕç унта. «Эсĕ çерçисене кăна юрăхлă йăва тунă!» — тесе те

кулатчĕç тантăшсем. «Курăпăр-ха, кам вĕллине маларах йышăнĕç хаклă хăнасем!» — тесе шутлаттăмччĕ вара ăшра.

Пӳрт патĕнчи йăмрасем, çăкасем е уйрăм шалча çине вырнаçтараттăм шăнкăрч вĕллисене. Шкул валли те тăваттăмăр вĕсене, ачасемпе вăрмана кайса çакаттăмăр.

«Шăнкăрчсем хăçан вĕçсе килеççĕ?» — тесе чăтаймасăр аннерен шав ыйтаттăм. «Пăлхавăшнине», — хуравлатчĕ вăл. Нихăçан та йăнăшмастчĕ.

Çав кунхине ир-ирех тăраттăм та тӳрех чӳрече патне чупса пыраттăм. Чăнах та, анне сăмахĕ чăна килнĕ! Малтан пĕр шăнкăрч çеç-ха вĕлле çинче. Кайран вара тепри те вĕçсе çитет. Эпĕ туса панă пӳрт тăрринче — мăшăр шăнкăрч. Кайăксем черетпе çунат çапса юрлаççĕ. Хăйсем йăм хура. Йăлтăртатса тăраççĕ. Юррисем мĕнле илемлĕ! Мана тав тунă евĕрех туйăнать. Итлесе тăранма çук.

Кашни ирех вĕсен юрри-кĕввипе вăранаттăм. Кăнтăрлаччен тăсăлатчĕ вĕсен концерчĕ. Унтан кайăксем апат шырама вăрмана вĕçсе каятчĕç. Темиçе кун çапла тăсăлатчĕ. Кайран ами пилĕк-ултă çăмарта тăватчĕ те пусма ларатчĕ. Аçипе ылмашăнса ăшăтатчĕç çăмартисене. Чĕпписем тухсан вара ăшталанмалли вăхăт çитетчĕ. Вĕсене тăрантарма мĕн чухлĕ хурт-кăпшанкă сĕтĕретчĕç!

«Ачисене» ӳстерсе кăларса ярсан шăнкăрч вĕллисене çерçисем иленеççĕ. Вĕсем çу каçиччен икĕ хутчен те чĕп кăларса çитĕнтерме ĕлкĕреççĕ.

* * *

Пирĕн пахча кĕтессинчи шалча çинче шăнкăрч вĕлли хура кĕркуннеччченех çакăнса тăчĕ. Пĕррехинче ир-ирех чӳрече патне пытăм. Пăхрăм çӳлелле — тӳпе курăнми кайăк вĕçет. Пинĕ-пинĕпе пуль. Шăнкăрчсем кăнтăралла пуçтарăннă иккен. Акă пĕлĕт пек явăнакан ушкăнран пĕри уйрăлчĕ те аялалла чул пек вирхĕнчĕ. Çак кайăк пирĕн шăнкăрч вĕлли çине анса ларчĕ. Унтан йăвине йăпăрт кĕрсе кайрĕ, пуçне кăларчĕ те виçĕ хутчен шăхăрчĕ. Вара çӳлелле вĕçсе хăпарса ушкăнне хăваласа çитме васкарĕ.

Пĕлĕтрен, çав çӳллĕшĕнчен мĕнле асăрхама, паллама пултарнă шăнкăрч хăйĕн тăван килне?

Çавăн чух хам мĕн курнине çынсене пĕрре мар каласа кăтартнă. Çакă чăнах та пулнине ĕненекен вара сахал. Эй çутçанталăк! Пĕчĕк кайăкăн та ăс-тăнĕ пысăк иккен. Вăл савăнма та, тунсăхлама та пĕлет.

* * *

Тĕлĕнмелле тата: шăнкăрчсем (ытти вĕçен кайăксем те) аташса каймаççĕ, яланах хăйсем çăмартаран тухнă вырăна вĕçсе килеççĕ. Кунта чĕп кăлараççĕ вĕсем. Çав тери пысăк тĕнчере вăрман варринче вырнаçнă пирĕн пĕчĕк яла ним мар шыраса тупаççĕ.

Мĕнле савăнтарать çакă. Эсĕ çуралса ӳснĕ ял — вĕçен кайăксемшĕн те тăван ял!

Эпĕ ӳссе çитĕнсе тахçанах тĕнчене тухса кайнă ĕнтĕ. Ватлăх енне те сулăнтăм. Тăван ялта çуралса ӳснĕ кил те çук ĕнтĕ текех. Çапах та эпĕ туса панă çуртра чĕпписене ӳстернĕ шăнкăрчсен ăрăвĕсем çав-çавах пирĕн яла вĕçсе килеççĕ-ши?

Вĕсене ман пекех хапăл кĕтсе илекен ачасем пулсан питĕ савăнăттăм.

Ырăлăх ан таталтăр, ан çухалтăр тĕнчерен, ырлăх патăр çынсене. Тĕнче вара çынна, Çĕр çинчи пур чуна та ырăлăх кӳтĕр.

Çутçанталăка, вĕçен кайăксене, чĕрчунсене юратни — çав тери пысăк пархатарлăх. Вăл пурнăçа хаклама, упрама вĕрентет.

## «ХĔРЕСНЕ ЫВĂЛ»

«Вăйăран вăкăр тухать», — тесе ашкăнакан ачасене асăрхаттарнине тăтăшах илтме пулать. Ку вăл, сăмахран, вылянă чухне алхасса кайсан пырса çапănса пуçа мăкăль кăларассине пĕлтерет-ха. Анчах ман тĕле пĕррехинче чăн-чăнах вăкăр тухрĕ.

Мыскари çапларах пулса иртрĕ. Пирĕн пата кӳршĕ хĕрарăмĕ Униççе аппа хашкаса чупса каçрĕ.

— Валера, — терĕ вăл, — ĕне пăрулама тапратрĕ. Ури те тухнă пăрушĕн, туртса кăларма вăй çитмест. Кирук тетӳ, хăрах алăллăскер, пулăшаймасть.

Вăр-вар тумлантăм та кӳрше чупрăм, витене кĕрсе тăтăм. Пăрăва уринчен туртасшăн эпĕ — йĕпескертен алă йăпăрт шуса тухать. Унччен те пулмарĕ — ĕне лап йăванса кайрĕ Униççе аппа çине. Ахлатать карчăк, çухăрать. Мĕнле çăлмалла? Кирук тете ĕнене кĕреçе аврипе çапма тăчĕ. Эпĕ ăна чартăм та Улашка патне пырса: «Тăр, санăн хитре пăрушка çуратса памалла», — тесе пăшăлтатрăм хăлхинчен.

Ĕне чăн-чăнах ура çине çĕкленчĕ те — пăру лăшт тухса ӳкрĕ вите урайне.

Вăкăр пулнă вăл. Хăвăрт çитĕнме тытăнчĕ. «Эсĕ — унăн хĕреснашшĕ», — тесе хавхалантараççĕ кӳршĕмсем. Эпĕ ăна, улăха кăкарма илсе тухаканскере, урамра тĕл пулсан кашнинчех пуçĕнчен ачашлатăп, лăпкатăп. Хăй те мана сĕртĕнет, тепĕр чухне тĕкнĕ пек те тукалать.

«Майракаллă выльăхпа ун пек выляма юрамасть — сĕкме пуçлаççĕ вĕсем», — тесе Кирук тете асăрхаттарнине хăлхана та чикмерĕм.

Самаях пысăкланнă пăру кăкарнă пăявне пĕррехинче темĕнле майпа татнă та — килет мана хирĕç. Пырса пуçĕнчен лăпкарăм, ачашларăм «хĕресне ывăла». Майракисем тухнă иккен унăн. Пуçларĕ ку тĕкме-сĕкме, мана решетке çумнех хĕстерсе лартрĕ. Кăшкăрсан та, алăпа çапсан та хăпмасть. Ăшран та, аяк пĕрчинчен те лектерет, ыраттарать, антăхтарать. Юрать, решетке айĕнче пĕр пĕчĕк шăтăк асăрхарăм. Хăвăрт кăна пĕшкĕнтĕм те хĕсĕнсе çынсен пахчине кĕрсе тăтăм. Пăхатăп — ман енне Хĕлимун карчăкĕ ятлаçса килет, аллинче — вĕлтĕрен. Юпа çине йăпăр-япăр хăпарса тăтăм. Анчах тыткăнран хăтăлма ниепле те майĕ çук: шалта — вĕлтĕрен, тулта — вăкăр.

— Пирĕн пахчана вăрра кĕме шăтăк алтаканĕ эсĕ иккен! — кăшкăрать пахча хуçи.

— Наçтук аппа, эпĕ мар, вăкăр, вăкăр! — ăнлантарасшăн ăна хам кунта мĕнле майпа çакланнине.

— Манран куласшăн-и эсĕ?! — пушшех тарăхрĕ Хĕлимун карчăкĕ. — Вăкăр çак шăтăкран мĕнле кĕрейтĕр?! Апла, хăяра пăру тапăннă-и?! Çитет мана ухмах вырăнне хурса, — вĕлтĕренпе сулкалашма пуçларĕ хĕрарăм.

Эпĕ ниçта кайса кĕрейместĕп. Çакна асăрханă Иван ахăлтатса кулать урамра. Унччен те пулмарĕ — вăкăр çаврăнчĕ те тăринк-тăринк! сиксе пычĕ ун патне. Хӳме çумне хĕстерсе лартрĕ хайхискерне. Пыра-пыра тĕкет ăна хырăмĕнчен, ача антăхсах кайрĕ пулас, чăтаймарĕ — темле майпа çурăмпа çаврăнса тăчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăкăр тĕкмессерен çамкипе çапăнать вăл хӳмене. Тӳсме хал çитерейменрĕм çак инкеке курсан. Мĕн пулать те мĕн килет — сиксе антăм юпа çинчен, унта чупса пырса вăкăра хӳринчен мĕнпур вăйпа сĕтĕрме пуçларăм. Ку мĕкĕрсе ячĕ те тапса сикрĕ айккинелле. Алла вĕçертсе ĕлкĕрейменскер сирпĕнсе кайрăм та çамкапа хытă çĕре пырса тăрăнтăм.

...Пăхатпăр — Иванпа иксĕмĕр те «мăйракаллă».

Çак мыскара пулса иртнĕ хыççăн тĕреклĕ те ашкăнчăк Иван сасартăк улшăнчĕ: мана кӳрентерме пăрахрĕ. Пĕррехинче, Хĕлимун карчăкĕн касу черечĕ çитес умĕн, арçын ача пынă та:

— Наçтук аппа, çылăха каçарттармалла манăн. Ĕне кĕтĕвне сан вырăнна хам тухатăп, — тенĕ.

— Хăяр вăрлаканĕ эсĕ мар-çке, Валера, — шалт тĕлĕннĕ ватă.

— Эпĕ, — йышăннă Иван.

Çывăхланса кайнă тантăшăма пулăшма эпĕ те кĕтĕве кайрăм.

Кăнтăрлахи апата ларсан кĕтӳç хутаççине уçрăмăр та — унта хăяр çеç мар, икĕ баклажан та куртăмăр. Ялта çак çимĕçе те ӳстерме пултарнине никам та пĕлмен. Тен, пахчана ача-пăча вăрра кĕрсе пăлхатса хăварасран хăранипе картишĕнче çитĕнтернĕ ăна? Малашне шикленме

кирлĕ мар ĕнтĕ — никам та тĕкĕнмĕ Хĕлимун карчăкĕн, çук-çук, Наçтук аппан, тулăх пахчине.

Вăкăр мыскари пирĕнпе ăнăçлах вĕçленчĕ-ха. Çапах та ваттин, Кирук тетен, асăрхаттарăвне шута илмеллех пулнă манăн. Вара вăйăран вăкăр тухмĕччĕ.

## ХУРСЕМ ТЕ ПУЛĂШРĔÇ

*Аннене, Зинаида Семеновна Кошкинăна (Кирилловăна)*

Эпĕ ача чухне час-часах чирлекелеттĕм. «Вăрçă вăхăтĕнче тăвата ачапа тăрса юлса нумай тертленме тиврĕ. Сывлăх хавшарĕ. Эсĕ те çавăнпа тĕреклĕ çуралаймарăн пуль», — ӳпкелешетчĕ анне.

Ара, аттене тӳрех вăрçа илнĕ. Аран-аран саплаштаркаласа пурăннă кил-йыш çав çулхине çанталăк йĕпе-сапаллă пулнипе пушшех йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ. Пĕтĕм пахчаран вĕтĕр-шакăррипе (мăйăр пеккисемпе те) мĕнпурĕ вунă витрене яхăн çеç çĕр улми кăларса илейнĕ. «Ура путнипе хăма хурса чаврăмăр», — аса илетчĕ анне. Çитменнине, çав «тупăшран» вăрлăх валли те хăвармалла-çке.

Çур çитеспе шĕшкĕсем йăрăм-йăрăм шерепе евĕр кăчкă кăлараççĕ. Аслă ывăлĕ Митя, çичĕ çултискер, сунарçăн темĕн сарлакăш йывăр йĕлтĕрне сырса ăна татма вăрмана кунсерен çӳренĕ. Типĕтсе тӳнĕ те ыраш çăнăхĕпе хутăштарса капăртма пĕçернĕ. Кайран серте татма пуçланă. (Анне çав ӳсен-тăрана эпĕ ача чухне тутанса та пăхмастчĕ. Йăлăхтарсах çитернĕ ĕнтĕ вăл тахçан.) Юрать-ха, ĕне тытнă. Яшка пеккине

сĕт-турăх кăштах ярса шуратса лĕрккенĕ, хырăма улталанă.

Çаксене каласа кăтартнă май аннен куçĕ яланах шывланатчĕ. Йывăр кутамкка çакса вăтăр çухрăмри пасара каллĕ-маллĕ мĕн чухлĕ хутлаĕ ман-ши вăл? Нуша урапине пайтах кӳлĕнсе туртнă.

Тăвать ачине те чĕрĕ-сывă хăварма пултарнăшăн тĕлĕнетчĕ анне. Савăнатчĕ те.

Эпĕ вăрçă хыççăн темиçе çултан çуралнă. Аслисем часах ӳссе çитĕнсе тĕнче тăрăх саланса пĕтрĕç. Аттепе анне мана хурсем илсе пама шутларĕç.

Малтанласа хĕпĕртерĕм-ха. Кайран кулянма та пуçларăм. Ара, манăн çăвĕпех хур пăхмалла. Тантăшăмсем кӳлĕ хĕрринче выляççĕ, шывра чăмпăлтатаççĕ. Эпĕ вара хурсенчен хăпаймастăп. Вĕсем уй-хире кĕрсен питĕ пысăк штраф тӳлеттереççĕ. Çапах та тепĕр чухне чееленеттĕм. Хурсене çерем çине уй-хиртен чылай аяккарах хăваласа каяттăмччĕ те йăпăртлăх тесе шыва кĕме ыткăнаттăм. Таврăнатăп вирхĕнсе — кусем ниçта та çук. Эх, вĕсене шыраса унта-кунта вĕçнĕ пек хутлама тиветчĕ. Çапла вара эпĕ класра чи хăвăрт чупаканни пулса тăтăм. Ăмăртусенче мана хăйсен командине илессишĕн тавлашатчĕç ачасем.

Хурсем тенĕрен, вĕсем сасса уйăрса илсе асра тытма та вĕрентрĕç. Хамăрăннисене таçтанах паллама пуçларăм. Лайăх итлетĕп те тӳрех вĕсем патне пырса тухатăп. Ку çеç те мар — пĕтĕм ялшăн темĕнле локатор пулса тăтăм тейĕн. «Пирĕн хурсем ăçтарах-ши?» — пулăшма ыйтма пикенчĕ ваттивĕтти. Алла хăлха çумне тытса тăнлаттăм та пӳрнепе тĕллесе кăтартаттăм. Нихăçан та йăнăшман.

Пĕррехинче тата çапларах пулса иртрĕ. Пире ун чухне машина-тракторпа ярăнасси илĕртетчĕ. (Хула ачисемшĕн лаша паха.) Прицеп çаклатнă «Беларуçпа» ферма тислĕкне хире турттаратчĕç. Эпир, ачасем, шăрша пăхмасăрах ярăнасшăн ун çине хăпара-хăпара ларатпăр. Çакă трактариста йăлăхтарсах çитерчĕ курăнать. Карт! турттарчĕ прицепне — эпĕ, хыçалта лараканскер, пуç çине лаплатса ӳкрĕм.

Пуç ыратать. Киле утрăм. Хĕвел анман пулин те, çанталăк хăвăрт тĕксĕмленчĕ.

Кил тĕлне çитрĕм — кĕмерĕм. Пĕлетĕп, хур кĕтĕвне ял хĕрринчи кӳлле хăваласа антарнă. Вĕсем унта чăмпăлтатаççĕ ĕнтĕ. Ман кулленхи тивĕçĕм — хамăрăн хурсене илсе килсе картишне хупасси.

Куç хуралсах çитрĕ. Пуç ыратать. Кӳлĕ патне тăкăрлăкпа антăм. Урасем мĕн пĕчĕкрен хăнăхнă, паллана çĕре йăлтах туяççĕ. Такăнмастăп, ниçта та тăрăнмастăп. Куç пачах та курма пăрахрĕ. Кӳлĕри хурсене сассисенчен палласа илтĕм. Вĕсене йыхăртăм. Ман инкеке пĕлнĕ пекех шывран тӳрех тухрĕç.

Киле çитсен хыпашлакаласа пӳрте кĕтĕм те сарлака сак çине ним сармасăрах выртрăм. Тĕлĕрсе кайнă иккен.

— Тăр апат çиме, — теççĕ мана килтисем.

Куçа уçрăм. Пӳрт ăш-чикки çап-çутă. Темĕнпе хĕстернĕ пек пуç ыратать.

— Çиес килмест, — терĕм.

— Мĕн пулнă? — хăраса ӳкрĕ анне. Çамкана тытса пăхрĕ — вĕри иккен.

Мĕн пулнине калама хăрарăм. Питĕ çирĕп тытнă пире. Ачашласах кайман.

Турра шĕкĕр, иртсе кайрĕ пуç ыратни, аптрамарăм ытлашши.

Военкоматра чир-чĕр, ӳкни-аманни çинчен врачсем тĕпчесен шарт та март тунтăм, шарламарăм. Шурă билет тыттарасран шиклентĕм.

Салтака та илчĕç. Сержантсен (кĕçĕн командирсен) курсне те ăнăçлах чăтса ирттертĕм. Дисциплина питĕ çирĕп. Хытă чупмалла, сикмелле, турник çинче вуннăран кая мар çăмăллăн туртăнмалла, вăр-вăр çаврăнмалла. Йывăрах пулмарĕ маншăн. Тавах хурсене. Вĕсем те пулăшрĕç пулмалла.

## ÇĔЛЕНЕ ÇУНТАРНИ

Кил валли ун чухне ял таврашĕнче, уй-хирте утă çулса хатĕрлеме ирĕк памастчĕç. Юрать-ха, вăрман хуçалăхĕ çуллахи вăхăтра çынсене тара тытатчĕ. Ĕçченсен тĕп тивĕçĕ — каснă вăрман вырăнне юман, хыр, пихта калчисем лартасси тата вĕсене курăк е ытти йывăç хупăрласа илесрен тасатса çĕре йĕри-тавра кăпкалатасси. Уншăн утă çулса илме ирĕк паратчĕç. Çав ушкăнра аллă-утмăл çынна яхăнччĕ. Ытларах ача-пăча тата ваттисем çӳретчĕç унта. Вăйпитти çынсен колхоз ĕçне тухмалла-çке.

Пăшăрханмастăмăр эпир, савăнаттăмăр. Ĕçе пĕлсе йĕркелетчĕç аслисем. Ирхине сывлăм типиччен утă çулаттăмăр: çава аван касать ун чухне. Кайран вара тавăрмалла е купа тумалла. Çав çулсенче çанталăк питĕ шăрăх тăратчĕ. Турра шĕкĕр, ваттисем пире, ачасене, хĕрхенетчĕç. (Мĕн каласси, пиллĕкмĕш-саккăрмĕш классенче вĕренекенсене çитĕннисен шутне кĕртнĕ ун

чухне.) Кăнтăрла темиçе сехет канма ирĕк паратчĕç. Йывăç сулхăнне лараттăмăр та шӳтлесе, кулса, шăкăл-шăкăл калаçса апат çиеттĕмĕр. Кайран аслисем канма выртатчĕç: вĕсем кăвак çутăллах тăнă-çке, выльăх-чĕрлĕхне, чăххи-чĕппине пăхнă, апат пĕçернĕ...

Пирĕн, ача-пăчан (хăшне-пĕрне хĕр е каччă шухăшĕ те кĕнĕскерсен), çывăрас килет-и? Пуçлатпăр выляма-кулма. «Канма ан чăрмантарăр», — тесе хăваласах яратчĕç пире.

Çапла пĕррехинче эпир темиçе хĕрачапа лапамри кӳлленчĕк патне юмахлама кайса лартăмăр. Пĕри, айккинерех пăрăнни, сасартăк:

— Çĕлен! — тесе кăшкăрса ячĕ.

Эпĕ васкавлăн сулмак патак тытрăм та унта йăпăр-япăр чупса пырса çĕлене пуçĕнчен питĕ вирлĕн çапрăм. Вăл çăмха пек пĕтĕрĕнчĕ-пĕтĕрĕнчĕ те ерипен шăпланчĕ. «Мĕн тумалла унпа? — шухăш çиçсе илчĕ пуçра. — Капла хăварас — вăл шăрăх çанталăкра шăршланса каять. Ун çине ларакан шăнасем эпир апатланакан çĕре те вĕçсе пыма пултараççĕ». «Çунтарса ярас», — шут турăмăр эпир. Аслисенчен шăрпăк кайса илтĕм те, кăвайт чĕртсе çĕлене унта пăрахрăмăр.

«Тăмалла!» — илтĕнчĕ Ястук тетен, пирĕн бригадирăн, сасси. Эпир кăвайта тапта-тапта сӳнтертĕмĕр те чĕннĕ çĕре чупса кайрăмăр. Кĕрепле-сенĕксене илсе купасем тума пикентĕмĕр. Ваттисем утта пухса валемсем тăваççĕ, эпир, çамрăксем, кам ытларах çĕклеет тесе ăмăртмалла вĕсене йăтатпăр. Пархил тете, вăрçăран аманса таврăннине пула хăрах урине хуçлатайманскер, ăçта çавăрса хумаллине пире вĕрентсе çеç тăрать, хавхалантарать. «Маттур, маттур», — сăмахĕ унăн

темрен те хаклă. Киле таврăннă чухне çула май вăл атте-аннене: «Ачу хастар», — тесе хăварат-чех-çке.

Унччен те пулмарĕ:

— Авă темĕскер çунать! — кăшкăрса ячĕ тахăшĕ.

Чупса кайрăмăр унталла — темĕн пысăкăш лаптăка çулăм ярса илнĕ, çĕр çунать, торфлă вырăн пулнă иккен. Юнашарах вăрман — хыпса илме пултарать. Юрать-ха, çывăхрах кӳлленчĕк пур. Тата пысăк бидонсене ĕçмелли шыв тултарса лавпа турттарса килнĕччĕ. Çулăма сӳнтерме шыв йăтса кӳлленчĕке йăлтах типĕтрĕмĕр. Мĕскĕн кайăк-кĕшĕк валли шăрăхра ĕçме те хăвармарăмăр.

Типĕ çанталăкра вут чĕртме юраманнине чухламалла пулнă. «Çулăмăн чĕлхи вăрăм — йăлтах çуласа яма пултарать», — тесе ахальтен каламаççĕ.

Тата çĕлене мĕн тума тĕкĕнмеллеччĕ? Çӳретĕрччĕ хăйĕн çулĕпе. Вăл никама та сиен кӳмест. Çутçанталăк хăех шайлаштарса тăрать. Пĕлетĕр-и, çĕленсем шăшисене тытаççĕ, хĕлле вара шăнса хытнăскерсене кăшлаканнисем хăйсем çиеççĕ. Çуркунне хӳресĕр çĕлене курнă-и эсир? Пĕлĕр — шăши кăшланă ăна хĕлле.

Тĕрлĕ пăтăрмахсене пăхмасăрах ачаран аслисемпе тан ĕçленине ăшшăн аса илетĕп. Вăрман уçланкисенче ушкăнпа тар тăкни сая кайман, вăл чи малтан тăн кĕртнĕ: туслăх — пуслăх укçа мар, вăл капмар утă лавне те тăп-тăп тытакан пуслăх пек, йывăр пурнăçа та сапаланса кайма памасть.

Шел пулин те, час-часах вăрмансем çунаççĕ. Ун чухне чунăм ыратать. Тен, хам та пархатарлă

йывӑҫсене — ҫутҫанталӑк ӳпкине, илемне — ҫитӗнтерме мӗнле кансӗррине ачаранах чухланӑран килет ҫакӑ. Чӗрем хытсах ларман пулин те, вутҫулӑмпа вылякан пуҫтахсене вӑрман лартса ӳстернӗ ҫӗрте пилӗк автарас килет манӑн. Анчах ку ӗҫре усси пулас ҫук вӗсенчен, аллисем йывӑр — йывӑҫӗсем чӗрӗлмӗҫ. Ӳсен-тӑранпа та пӗр чӗлхе тупма пӗлмелле...

## ХЫТТИПЕ ҪЕМҪИ

Эпӗ ачаллах ватӑ ҫынсен калаҫӑвне итлеме юрататтӑм.

Пӗррехинче хура кӗркунне шкултан таврӑнтӑм та:

— Мӗн ҫием-ши? — тесе ыйтрӑм аннерен.

— Хыттипе ҫемҫи, — тесе хучӗ пирӗн пата каҫнӑ, аннепе шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса ларакан Праски кинемей.

Хыттипе ҫемҫи. Мӗн вӑл?

Ӗлӗк килсерен ҫӑкӑр пӗҫеретчӗҫ. Ятарласах ҫав кун кӑмакана ытларах хутнӑ, хурӑн вуттипе усӑ курма тӑрӑшнӑ. Хырпа чӑрӑшран сухӑр шӑрши юлать. (Капӑртма, икерчӗ пӗҫернӗ чухне вӗсене яхӑнне яман: шартлатса ҫунса кӑмрӑк сирпӗтме пултараҫҫӗ.) Хурӑнӑн шӑрши те техӗмлӗ.

Вӗрире ҫӑкӑрӑн ҫиелтипе аялти пайӗ хытать. Ҫавӑнпа ӑна кӑмакаран кӑларсанах ҫӗвепе (тӑпӑрчӑ шывӗпе) сӗрсе таса пирпе витсе хуратчӗҫ. Ӗмсе ҫиес килетчӗ ӑна.

Ҫӑкӑр ӗнтӗ вӑл — ҫемҫипе хытти.

— Турӑх пур, яшка пӗҫериччен ҫырткала, — сӗнчӗ анне.

— Кĕрхи турăха кĕрӳшĕнчен хĕрхеннĕ тет, — каласа хучĕ кинемей.

Юр-вартан ял çынни татăках тăман-ха. Тĕрĕссипе, унăн пĕлтерĕшĕ пирки шухăшласах та кайман. Ĕне сума пăрахсан çиме тăварланă турăх кастрюльпе е кĕленче савăтпа хатĕрлесе хунă. Çавăнпа эпĕ:

— Мĕншĕн? — тесе тĕлĕнтĕм.

Вара вăл мана çак халапа каласа кăтартрĕ:

— Хĕле кĕрес умĕн хунямăшĕ патне кĕрӳшĕ хăнана пынă тет. Тарават хĕрарăм икерчĕ пĕçернĕ, унсăр пуçне сĕтел çине пĕр чашăк турăх пырса лартнă. Кашăкне паман. «Кĕрӳ, турăх вăл кĕркунне хăймаран та тутлăрах. Эсĕ ăна икерчипе пуç та чашăкĕ çине силлесе çи», — ăс панă хайхискер, питĕ перекетлĕскер. Кӳреннĕ кĕрӳшĕ икерчине çапларах çиме пуçланă: силле-силле пĕтĕм сĕтеле вараласа пĕтернĕ.

...Халăхăн кашни каларăшĕн чăнлăхĕ е мыскари пур. «Нуша кулач çиме вĕрентнĕ», «Шалчи тулчĕ», «Хур ури питĕ тутлă тет» халапсем епле çуралнине пĕлетĕр ĕнтĕ. Çапах та тепĕр хут аса илтерем-ха.

Пĕр çын аякри пасара каяс-тăвас пулсан хĕвне яланах хура çăкăр чĕлли чикнĕ, кулач туянса укçа тăккалас темен. Пĕррехинче вăл ăна çухатнă, таçта ӳксе юлнă. Пĕтĕм пасарĕпе хура çăкăр шыраса выçсах çитнĕ — ниçта та тупайман. Хайхискерĕн кулач илсех çиме тивнĕ.

Иккĕмĕшĕ вара чылай хурлăхлăрах. Кил-йыш хуçи вăрра çӳренĕ имĕш. Ăнăçлăн тупăшпа таврăнмассерен ятарлă шалча çине карт лартса пынăмĕн. «Çак тулсанах вăрра çӳреме пăрахатăп», — тесе пĕлтернĕ арăмне. Юлашкинчен пĕр карт

лартмалăх çеç вырăн юлнă тет. Ку хутĕнче ăна тытнă та çапса пăрахнă. Арăмĕ вара: «Шалчи те тулнăччĕ ĕнтĕ», — тесе хӳхленĕ имĕш.

«Хур ури питĕ тутлă тет» хыççăн тӳрех: «Хам çисе курман та — улпут çинине кукка курнă», — тесе калаççĕ. Сăмах мĕн пирки пыни йăлтах паллă: ĕненсех пĕтерме юрамасть ку çынна.

«Тетĕн тетĕшĕ (Тюменьти темĕнле) тĕрмере (тертленет) тет», — тĕртсе илеççĕ суя хыпар саракана. Чăваш сăмахлăхĕ аллитераципе ассонанса (пĕр пек хупă тата уçă сасăсем черетленнине) кăмăллать, çакă ăна пысăк пĕлтерĕшлĕ тăвать.

Акă «сĕм вăрманта сĕт вĕрет» тупмалли юмаха тепĕр чĕлхене тӳрремĕн куçарсан ку кăткă тĕмĕ иккенне никамах та чухлаймĕ.

Çапла, пирĕн сăмахлăх питĕ пуян. Çапах та çынсенчен çырса илмеллисем, чĕлхе вĕççĕн çеç çӳрекеннисем, чылай-ха. Çухатас марччĕ вĕсене.

## ШĂРКАЛЧĂН ТА ЧУНĔ ПУР

*Аттене, Гаврил Кириллович*
*Кошкина (Кириллова)*

Атте мана мĕн пĕчĕкрен вăрмана илсе çӳретчĕ. Пуртăпа пăчкă илетчĕ те: «Кайрăмăр», — тетчĕ. Хĕл каçма вут-шанкă пайтах хатĕрлемелле. Унсăрăн ăшă пӳртре ĕрехетленеймĕн, кăмака çинче хĕртĕнеймĕн. Хĕл хырăмĕ аслă теççĕ, çулла янтăланине йăлтах çăтса ярать.

Эпир йывăça тĕпрен касса яни сахал пулнă. Вăйлă çил тухать-и — мĕн чухлĕ хăрăк йăвана-йăвана каять. Çавсене татса сыпăлаттăмăр.

Тепĕр чухне атте мана таçта та илсе çитеретчĕ. Курса çӳреме ятарласа тухнă тейĕн. Вĕçĕ-хĕррисĕр вăрманта ĕшнесем те йышлăччĕ.

«Курăс кӳллине çитсе курар-ха», — терĕ мана пĕррехинче атте. Тухрăмăр вĕтлĕхе. Çĕрсе пĕтеймен тункатасем лараççĕ. Çăкасеннисенчен хунав йăвă тапса тухнă. Вĕсенчен ĕретлĕ йывăç пулас çук ĕнтĕ. Çапах та пушăтлăх ӳсме пултараççĕ, çăпата тума пулать, анчах ăна сыраканни те ялта темиçе çын кăна юлнă. Вĕсенчен пĕри — ман атте. Унпа вăл вăрмана çӳрет. «Урана çăмăл, тарлаттармасть», — тет хăй. Хĕлле кĕрт ашма аван — юр кĕмест. Акă кунта вĕтĕ ăвăссем те ăмăртмалла тенĕ пек ĕрченĕ. Ун-кун çамрăк хурăнсемпе вĕренесем пур. Тахçан кунта хутăш вăрман кашласа ларнă ĕнтĕ. Халь юман, чăрăш, хыр пачах та тĕл пулмаççĕ.

Умра уçă вырăн курăнса кайрĕ. Пăхатăп та — пысăках мар кӳлĕ. Унта шыв çийĕ палăрми пĕр ушкăн кайăк кăвакал хĕвĕшет.

— Эх, кунта йĕтрепе авăрланă пăшалтан персен пĕр пăт аш тума пулать, — терĕм аттене.

— Шăркалчăсем кусем. Вĕсене те çиеççĕ-ха. Анчах тивмелле мар — тĕнчене илем кӳччĕр, — ăнланса илсе шухăша тӳрлетрĕ вăл. — Таврара ниçта та кӳлĕ юлман. Çакна та пулин шыраса тупнă мĕскĕнсем, çитĕннĕ чĕпписене кунта ертсе килнĕ, — пăшăрханса калаçрĕ атте.

Эпĕ тавçăрса илтĕм: йĕри-тавра кӳлĕ нумай пулнă тахçан. Çăкасене сӳсе курăс хутнă та мунчала туса илнĕ çулсерен. Хупписене вара çавăнтах хăварнă. Вĕсем çăлсен çулĕсене пӳле-пӳле лартнă. Çапла майпа кӳлĕсем ăшăхланса юлнă. Ыранхи пирки шухăшласах кайман çав. «Пирĕн мар, патшалăхăн», — тенĕ пуль. Тĕрĕссипе, халăх пурлăхне хăванни пекех упрасси çинчен чылай калаçатчĕç-ха ун чухне. Кашнин чунне пырса

тивеймен çавă. Пĕр хăлхаран кĕнĕ те тепринчен тухса кайнă. Иван Тургеневăн Бирюкĕ çитеймен пире. Вăл улпут вăрманне те хăйĕнни пекех сыхланă авă.

Çирĕммĕш ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсене асăнма та намăс: халăх тар тăкса тунă патшалăх пурлăхне тата ытти çынсене чеен çаратса пуяс текенсем ĕрчесе кайрĕç ун чухне. Тавах Турра, атте çав кунсене курса ĕлкĕреймерĕ. Чунĕ хыпса çунса тухатчĕ пуль. Ытла та вăйлă упратчĕ-çке халăх пурлăхне. Хăшĕ-пĕри лашана колхозăн тесе ураран ӳкересле хăвалатчĕ ытларах усă курса юлассишĕн. Атте вара пĕр кунлăха çыртарса илсен те хамăр выльăх-чĕрлĕхпе танах пăхатчĕ ăна, шăвaратчĕ, çитеретчĕ. Çулла утă турттарнă вăхăтра эпĕ утма вĕренсенех мана хире е вăрмана лартса каятчĕ: тĕп тивĕçĕм — лашана шăна-пăван çыртасран сыхлассиччĕ. Милĕкпе çапса хăвалаттăм сĕмсĕр юн ĕçенсене.

Атте кĕреçе аври валли те чĕрĕ йывăç касмастчĕ — хăрăк шыраса тупатчĕ. «Вăрман тăрри тикĕс», — текенсем ун чухне те тупăнатчĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче ача пулнă çынсем аттене питĕ хисепленинчен тĕлĕнеттĕм. Сăлтавне ун чухне пĕлсех кайман-ха, каярах çеç чухларăм. Ара, вăрçăран сывах таврăннăскер, ашшĕсĕр тăрса юлнă апăршасене лаша кӳлме, лав çыхма, капан хывма... тата нумай-нумай ĕçе вăлах вĕрентнĕçке. Хăйĕн тивĕçĕ тесе шутланă çакна. Ашшĕсен вырăнĕнче пулнă.

Тăлăха юлнă хĕрарăмсене пулăшма та килти ĕçе пăрахсах каятчĕ. Анне ӳпкелешнине пĕрре те илтмен. «Таврăнтăрччĕ çеç вăрçăран — ваттивĕттине, тăлăхсене пулăшма нихçан та чар-

мăттăм», — тесе кĕлтунă иккен пĕрмай. Тупа сăмахне тытнă та.

Каллех Курăс кӳллинчи шăркалчăсем аса килеççĕ. Вĕсем хăйсен чĕпписемпе шывра хаваслăн йăр та яр ярăннине епле савăнăçлăн сăнанăччĕ атте.

Кашниех хăйĕн тĕпренчĕкне юратнипе тытăнса тăрать-ши тĕнче? Çук, унпа çеç мар, пĕрпĕринпе килĕштернипе пуль ытларах. Авă пĕчĕк кӳлле çав кайăксен пĕр-пĕр кил-йышĕ тупма пултарнă малтан. «Ку — пирĕн, ыттисене кунта ямастпăр», — темен. Пурри — пĕрле, çукки — çурмалла ырă чĕрчунсен тĕнчинче.

Аттене аса илсен тӳрех шăркалчăсем куç умне тухаççĕ, çав кайăксене курсан хаклă çыннăм каллех куç умне тухать. Куйкăрăш* çумранах вĕçсе иртсе асамлă çунаттипе чун-чĕрене ăшă варкăш парса хăварнăн туйăнать вара.

«Пуян вилет — мул юлать, эпир вилсен мĕн юлать? Мĕн калаçни — çав юлать», — тесе юрлатчĕç ĕлĕкрех. Тĕрĕсех ĕнтĕ çакă. Çапах та тĕнчене чи малтан ЫРĂЛĂХ юлать. Çавăн чух тепĕр кунне эпир пăшал йăтса кӳлĕ патне пырса тухнă пулсан тĕнчене тĕксĕмрех сĕм çапатчех...

## ÇЫННА ÇУНАТ ПАМАН ТА...

Энтри тетене пытарма ăнсăртран лекрĕм. Вăл пире нихăш енчен те тăван тивмест. Кӳршĕ пулнă ĕнтĕ. Яла таврăннăччĕ те — килтисем хурлăхлă хыпарпа шалт тĕлĕнтерсе пăрахрĕç. Харам ĕç тума

* Куйкăрăш — юмахри телей кайăкĕ, пурлăх управçи.

вара эпĕ те масар çине кайрăм. Унтан таврăнсан асăнтăмăр.

— Мĕншĕн хам вилмен-ши? — хӳхлерĕ унăн арăмĕ, аран-аран утса çӳрекенскер. Куç хыçĕнче ăна эпир, ачасем, Татюк аппа тесе нихçан та чĕнмен. Пирĕншĕн вăл Уксах Энтри арăмĕ пулнă. Энтри тете вара, эп астăвассах, пур ĕçе те хăех тăватчĕ: ĕнине те сунă, урайне те çунă. Нимле ĕçрен те, нихăш нимерен те юлман.

«Икĕ-виçĕ çыншăн ĕçре хуçăлсах çĕре ир кĕрсе выртрĕ», — терĕç масар çинчен таврăннă чухне хĕрарăмсем.

Асăннă хыççăн эпĕ киле васкамарăм, улăха, вăрмана çитсе курма туртрĕ кăмăлăм. Çанталăкĕ питĕ лайăх. Çавăнпа та ытларах та ытларах тунсăх пусрĕ. Çын вилме пултарнипе чун-чĕрем нимĕнле те килĕшесшĕн мар.

Çурхи тапхăр ытла та тĕлĕнтермĕш. Авă сивĕ хĕл хыççăн пĕрремĕш хут шăна курсан та хĕпĕртететĕн. Тĕнче чĕрĕлнине пĕлтерекен хыпарçă пекех туйăнать вăл, çуллахи вăхăтра йăлтах йăлăхтарса çитерекенскер. Шăна пĕр çĕртен тепĕр çĕре вĕçе-вĕçе çӳренине сăнаса киленнĕ самантра хăлхана тунсăхлă сасă пырса кĕчĕ: ки-как! ки-как! ки-как! Тӳрех пуçа каçăртрăм. Кайăк хур карти иккен. Кусем вара — чăн-чăн çуркуннен ырă хыпарçисем. Мана темшĕн çав çунатлă туссем чуна ытла та çывăх пек туйăнаççĕ. Ахальтен мар пулĕ пирĕн халăх хамăр Галактикăна та Хуркайăк Çулĕ тесе ят панă. Хĕрсем акăш пулса тăни çинчен темĕн чухлĕ юмах-халап çӳрет. Юрăсем тесен тата... хаваслисем те, хурлăхлисем те пайтах. Çунат пирки этем ĕмĕрех ĕмĕтленнипе çыхăннă-ши çакă?

Лайăх çын хăй те унсăр мар-ха. Унăн чун çуначĕ пур. Малаллах талпăнма.

Хам сисмесĕрех эпĕ: «Кайри — мала, хур кайăксем!» — тесе кăшкăрса ятăм. Вара чĕлхе вĕçне «Салтак юрри» килчĕ тӳрех:

Кайăк хурсем вĕçеç ай картипе,
Кайри — мала тесе ан калăр.
Кайри — мала тесе ай каласан
Кайăк хур карти ай саланать.
Ялти яшсем каяç ай салтака,
Кайччăр — пĕтчĕр тесе ан калăр.
Кайччăрах та пĕтчĕр тесессĕн
Пирĕн çамрăк чунсем хурланать.

Авалхи юрă ку. Тахçанхи. Сехмете кайнă чухнехи. Эпĕ хам та салтак пăтти çинĕ çын. Çав юрра аса та илмен. Хурланма мар, хам салтака юрăхлă пулнишĕн савăннăччĕ çеç. Ача чухне эпĕ хавшакрахчĕ. Шкула та эрни-эрнипех çӳреймен. «Вăрçă вăхăтĕнче тăвата ачапа пĕччен нушаланса сывлăха ир пĕтертĕм», — тетчĕ анне. Çавăнпа эпĕ те тĕреклĕ çуралайман имĕш. Салтака улталаса кайнă пекех пулчĕ. Комиссире врачсем чирчĕр пирки ыйтсан шарт та март тунтăм. Малтанхи тапхăрта йывăр килчĕ-ха, çапах та пĕтĕмпех йĕркеленчĕ кайран. Салтакран мана анне çапла каласа кĕтсе илчĕ:

— Эй, ачам, çак куна курасса сунман. Салтака юрăхлă пултăр тесе Турра мĕн чухлĕ кĕлтуман-ши эпĕ? Патшалăх умĕнчи парăма татрăн, ывăлăм.

Иртнине аса илсе шухăша кайнă май хур кайăк карти те самаях инçете ăсанчĕ. Çавна кура тепĕр юрă чĕлхе вĕçне килчĕ-килчех:

Çӳлелле те пăхрăм, ай тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем картипе вĕçнинчен.
Шухăшласа пăхрăм, ай тĕлĕнтĕм
Çамрăк ĕмĕр иртсе те пынинчен.

Çамрăк ĕмĕр иртсех кайман пулин те, ачалăх самаях хыçала юлни шухăшлаттарать. Ара, кайăк хурсемпе те çыхăннăччĕ-çке вăл... Тахçан-тахçан...

Пĕррехинче çапла картишне тухрăм. Кайăк хурсен сасси илтĕнет пĕлĕтрен. Унччен те пулмарĕ, пирĕн хур аçи тунсăхлăн темиçе хутчен кăшкăрчĕ те çунаттисемпе çатăлтатса хапха урлах вĕçсе каçрĕ. Эпĕ картишĕнчен чупса тухиччен урам вĕçнех çитсе пӳртсем çийĕпе ярăнса куçран çухалчĕ. Çавна никамах та ĕненес çукчĕ, юрать-ха, урамра ман юлташсем пулнă. Вĕсем çăварĕсене карсах пăхса тăраççĕ. Хамăр хур аçипе мухтанмалли çитрĕ маншăн. Аттепе аннене те каласа кăтартрăм. Ĕненмерĕç малтанласа. «Хапхана хупса хăварма ху манса кайнă та...» — терĕç. Каç енне хур аçи таврăнманнине кура ăна шырама кăларса ячĕç мана. Ял йĕри-тавра темиçе çаврăнтăм пулĕ — ниçта та çук хайхискер. Тепĕр кунхине те таврăнмарĕ. Юлташăмсем умĕнче ытларах каппайланма тытăнтăм.

— Пирĕн хур аçи кайăк хурсемпе пĕрлешсе кайса вĕсене ертсе çӳрекенни пулса тăнă. Акă вăл хамăр ял кӳллине е картишне пысăк ушкăн илсе анĕ, — тетĕп.

Çапла тата чылай кĕвĕçтереттĕм пуль юлташсене, анчах тепĕр эрнерен кӳршĕ ялти инке, куккан арăмĕ, пирĕн хур аçине кунтăка хупса килсе пачĕ.

Вĕсем патне кайма килти кайăкăн сăлтавĕ те пулнă çав.

* * *

Пĕррехинче, хура кĕркунне, эпĕ шкултан таврăннă çĕре инке ларатчĕ килте. Хăнана килмен иккен — ĕçпе.

— Кăçал хурсене пĕтерес терĕмĕр, — сăмах пуçарчĕ вăл. — Вĕсене пăхакан текех çук. Кĕçĕн ывăл та ӳссе çитĕнчĕ. Сирĕн вара, — ман еннелле кăтартрĕ вăл, — шăпах кĕтӳ ачи пур. Аçипе амине пусса çиме шел. Питĕ лайăхскерсем. Тен, эсир хур усрама пуçлатăр?

Аттепе аннене сăмах хушма та памарăм эпĕ:

— Илмелле! Илмелле! — тăпăртататăп хаваслăн. Ара, ман юлташсен кашниннех хурсем пур. Вĕсене тантăшăмсем çаран çине е улăха çитерме хăваласа тухаççĕ те — эпĕ урамра пĕрпĕччен тăрса юлатăп. Сулланса çӳреме те намăс. Ĕççĕр аптранăскер ку теессĕн туйăнать. Тепĕр чухне юлташсемпе пĕрле çаран çине е уя тухатăп ĕнтĕ, анчах çакă эпĕ ĕçленине пĕлтермест-çкеха каллех. Юлташсем хур пăхаççĕ, эпĕ вара йытă хăвалакан пек çеç пулса тухать. Йытă тенĕрен, вăл мана питĕ-питĕ кирлĕ. Сунара çӳреме. Хур усрама тытăнсанах аттепе анне анчăк илсе парасса шанатăп. Ара, вăл аван кĕтӳçĕ-çке, хурсене тилĕ тапăнасран сыхлать.

* * *

Инке пирĕн пата килсе кайнă хыççăн темиçе кунранах аннепе иксĕмĕр юнашар яла çул тытрăмăр. Пире апат çитерме лартасшăн тăвансем. Ман вара хурсене часрах киле илсе таврăнас килет. Кĕтнĕ самант çитрĕ-çитрех. Инке пире картишне ертсе тухрĕ.

— Акă аçи, — кăтартрĕ вăл.

Чăнах та, чиперскер иккен. Мана хăйсен килйышĕ патне яхăнне те ямасть. «Епле тĕреклĕскер, пирĕн урамри пур хура та çĕнтерекенни пулать ĕнтĕ», — савăнатăп эпĕ.

— Акă ами, — терĕ инке хуçăк çунатлăскер çине кăтартса.

Кăмăлăм тӳрех пăсăлчĕ. Ара, чăлах-çке ку. Ял кулать.

— Ку кирлĕ мар, урăххине парса ярăр, — хирĕçлерĕм эпĕ.

— Юрамасть. Ыттисем — вĕсен чĕпписем, — ăнлантарчĕ инке. — Ан пăшăрхан, вăл лайăхскер. Кашни çулах вун пилĕкшер çăмарта тăвать, пĕри те тăрă пулмасть.

Ним те тăваймăн, килĕшмех тиврĕ манăн. Аçипе амине хупăрласа тытрĕç те кунтăка лартса çиелтен çӳхе тутăрпа çыхрĕç. Парса ячĕç çапла. Аннепе иксĕмĕр икĕ енчен йăтса пыратпăр. Кăшкăраççĕ кусем. Хамăр яла çитнĕçемĕн вĕсен сасси мана темиçе хут ытларах савăнăç кӳрет: эпир те хур усрама пуçланине пĕлсе юлташсем ăмсанаççĕ-çке.

— Усранă-усранах, — терĕç килтисем, — тепĕр икĕ ама илер. Пурпĕрех пĕрре чăрманмалла.

Мана çав шухăш питĕ килĕшрĕ. Ара, хуçăк çунатлипе намăс çеç куратăп-çке.

Кӳршĕсенчен çăвăр хур амисем илме шутларĕç пирĕннисем. Аннепе иксĕмĕр каçрăмăр юнашара. Амисене кăтартрĕç мана. Чи чиперрисене, шап-шуррипе чăпаррине, суйлама тăрăшрăм эпĕ. Илсе каçрăмăр — чăлаххи вĕсене яхăнне те ямасть. Аçи те çамрăккисен хутне кĕмест тата. Апатне те уйрăмшар пама тивет.

— Хăнăхĕç-ха пĕр-пĕрне, — терĕ анне.

Хурсене эпĕ ят пама шутларăм. Аçи валли çийĕнчех тупăнчĕ: Тĕпек. Пуçĕ çинче вăл пурçке. Çăвăр амасене те илемлĕ чĕнес килчĕ манăн. Пĕри — Шап-шур, тепри Чăпаркка пулса тăчĕç. Ватă хур ами валли çеç ят шыраса чăрманас килмерĕ. Мĕн пуçа ватмалли пур тата? Йăлтах куç умĕнче — Чăлах.

* * *

Ерипен çур çывхарчĕ. Пирĕн хурсем — аслисем — çамрăккисемпе çав-çавах килĕштереймеççĕ-ха. Иккĕшĕ çеç...

— Капла пулмасть, — терĕ атте. — Ватă амине пусмалла. Унсăрăн çамрăккисене усранин усси çук, çăмартисем тăрă пулаççĕ.

Чăнах та, пĕр ирхине куçа уçрăм та — кăмака умĕнче анне хур тĕкĕ иртет. Питĕ-питĕ шел пулса кайрĕ чăлах хура. Анне унăн хырăмне çĕçĕпе касса уçрĕ часах.

— Мĕн чухлĕ тĕвĕленнĕ çăмарта! — тĕлĕнчĕ вăл.

Пирĕн хур аçи хапха урлă вĕçсе каçасси амине çухатнинчен пуçланчĕ те ĕнтĕ. Мĕншĕн вăл малтанхи кунах тармарĕ? Мĕншĕн хур кайăксем вĕçсе иртнине курнă хыççăн çеç çав ăнтăлу амаланчĕ унра? Тен, темĕнле сĕм авалхи йăхĕсен инстинкчĕ чĕрĕлчĕ чĕринче? Кайăк хурсен юрри, чăнах та, вăйлă юрату çинчен-ши? Мăшăрăн-мăшăрăн, çирĕп йăлапа, пĕр-пĕрне улталамасăр пурăнаççĕ имĕш вĕсем... Икшерĕн чĕпписене çитĕнтереççĕ. Пĕрне вилĕм пырса çапсан тепри те хăйне хăй тĕп тăвать-мĕн. Çакна акăшсем çинчен каланине пĕлетпĕр-ха, анчах эпир хамăр хурсене хытă юратнăран сăмахне вĕсемпе те çыхăнтарасшăн.

* * *

Кӳрше паян пытарса таврӑннӑ пирки асӑнтӑм ӗнтӗ. Унӑн мӑшӑрне вара куç хыçӗнче Уксах Энтри арӑмӗ тесе калаççӗ. Капла упӑшки уксах пулнӑ пек туйӑнать. Темшӗн çавна шута илместпӗр. Тӗрӗссипе, Энтрин уксах арӑмӗ темелле. Усал япала ырӑ çумнех çыпӑçать час-часах. Эпӗ те, ачапча, Тӗпеке хытӑ кӳреннӗскер, çав меслетпех усӑ курма шутларӑм ун чухне. Ӑна Чӑлах аçи теме пуçларӑм.

Халӗ шутлатӑп та, мӗн туртнӑ-ха ӑна тӑван кӗтесе? Тен, юратнӑ мӑшӑрне шыранӑ унта? Пӗрле чӗп ӳстерсе савӑннине аса илесшӗн çуннӑ пулӗ.

Пиллӗкмӗш хут ӑна инкесем патӗнчен илсе таврӑнсан атте çапла каларӗ:

— Капла пулмасть. Вӑрмана-мӗне анса ларсан кашкӑр е тилӗ çӑварне çакланӗ. Çунаттисене иртсе ярас пулать.

Атте Тӗпек çунаттисене хачӑпа кӑчӑрт-кӑчӑрт каснӑ чухне Энтри тете шӑпах пирӗн пата каçнӑччӗ.

— Эх, ухмах, — терӗ вӑл хур аçине. — Çамрӑк арӑмусемпе пурӑнма пӗлместӗн. Чӑлаххишӗн нуша куратӑн.

Çынсен сӑмахне ӗненес пулсан Энтри инкекӗ çакӑн пек пулса тухнӑ иккен. Юнашар ялти тӑванӗсем патӗнчен çӗрле туйпа таврӑннӑ чухне кӗпер çинче лаши чӗвен тӑрса сасартӑк кутӑн чакать те, Татюк, Энтрин пулас арӑмӗ, урапа айне пулса сусӑрланса юлать. Ун хыççӑн чупса çӳренӗ пӗр йӗкӗт ӑна тавӑрасшӑн çырмара кӗтсе ларнӑ имӗш. Лашана вӑл хӑратнӑ та ӗнтӗ. Вырӑнпах чылай выртса та тӗрӗс-тӗкел сывалса çитеймен Татюк.

Сусăр хĕре (ун чухне вăл арăм пулса ĕлкĕреймен-ха) пăрахма сĕннĕ Энтрие. Пиччĕшĕ те çаплах тума хистенĕ, çурта сутса хулана куçма илĕртнĕ. Хăй вăл, ялти çурма тăлăх хĕре ача çураттарса тухса тарнăскер, кунта та çухалса кайман, анчах хальхинче чылай ăслăрах пулнă, «çара çерçипе» çыхланман, самай пысăк пуçлăх кĕрӳшĕ пулса тăма пултарнă. Шăллĕне те хăйсен кантурĕнчи чипер пуян майрапа паллаштарасси пирки сăмах хускатнă пĕрмай.

— Атте-анне вучахне сӳнтерместĕп, — касса татнă Энтри.

«Эх, ухмах, чăлаххишĕн инкек куратăн», — тени аса килет халĕ. Тĕпекпе Энтри тете хушшинче пĕрпеклĕх чылай. Куккапа инкен кĕçĕн ывăлĕ, выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке юратаканскер, хăй пăхнă хурсем çинчен темиçе çул каялла çапларах каласа кăтартнăччĕ мана: хур амине пĕчĕк чĕпписемпе пĕрле витене лартсан çĕрле вĕсене пăсара тапăннă, унпа çапăçса чăлахланнăмĕн сап-сарăскерсен амăшĕ.

Пĕлетĕр ĕнтĕ, вырнă ана çинче кĕркунне енне тĕрекленнĕ çăвăр хурсем çунат вăйне туйма тытăнаççĕ, тепĕр чухне самаях инçе вĕçме пултараççĕ. Сăртран ярăнса анасси вĕсемшĕн уйрămах ансат. Çак кил-йышпа та çаплах пулса тухнă час-часах. Чĕпсем çӳле вĕçсе хăпарса кайсан хур аçи, вăйлăскер, хăйĕн маттур «ачисене» хавхалантарса чи малта ертсе пыма пултарнă, анчах мăшăрĕ хуçăк çунаттипе вĕсем хыççăн лăкăштатнине курса вăл тӳрех анса ларнă. Айван чĕпĕсен вара çунаттисен вăйĕпе мухтанас килет. Тепĕр

ушкăн патнех вĕçсе анса лараççĕ йăнăшпа. Юттисем хӳтлĕхсĕр юлнăскерсене тĕпĕртеттерме, сăхма, хăвалама тытăнаççĕ. Хур аçи, вĕсен ашшĕ, çавна аякранах кураканскер, ниçта кайса кĕреймен. Мăшăрне пăрахса хăварас — ăна ыттисем кӳрентерĕç... Мĕн чухлĕ пăшăрханман-ши Тĕпек, сахал нуша курнă-ши чăлах мăшăрĕпе, анчах ăна пăрахма шутламан, манайман-мĕн...

Унтанпа вăхăт самаях иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Тĕпек ятлă çавăн пек хур аçи пулнине, вăл хур кайăксемпе тан вĕçме пултарнине çын каласа парсан, хам куçăмпа курман пулсан, нимĕнле те ĕненес çукчĕ. Ача чухне татса паман ыйту, хуçи шăтăка пĕрле илсе кĕнĕ вăрттăнлăх мана канăç памасть халĕ: «Эх, ухмах, çамрăккисене юратма пĕлмесĕр чăлах арăмушăн инкек куратăн», — тесе Энтри тете, Татюк аппа упăшки, Тĕпеке ятласа е ырласа каларĕ-ши?..

Вăл пирĕн пата каçса ларсан çакăн пек сăмах час-часах пуçарнине астăватăп: «Медицина çултан-çул аталансах пырать, касăлса татăлнă алурана сыпăнтараççĕ те — Татюка сыватĕç-ха», — тетчĕ. Йывăр тăпри çăмăл пултăр. Кĕтсе илеймерĕ Энтри тете мăшăрĕ сываласса, хăйсем те çынсем евĕрлĕ чипер пурăнасса.

Юлашкинчен хуçăлмарĕ-ши унăн чун çуначĕ? Çын инкекне пĕрле пайлама пултаракансем яланах телейлĕ пулаканччĕ те...

«Тепĕр тесен, юрать-ха, çынна çунат паман. Ăна хапсăнса касакансем тупăнатчĕçех», — тесе шухăшлани те хушăран пуçа пăтраштарнă. Çапах та чун çунатлă пулнине нимĕн те çитеймессĕн туйăнать хальхаççăн.

## ТĂРНА ЁШНИНЧИ ТУНСĂХ

Ача чухне эпĕ çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те вăрмантан тухма пĕлмен. Сăмахран, çуркунне юр кайса та пĕтмен-ха — аттен вăрăм кунчаллă аттине тăхăнса яраттăмччĕ те юхан шыв тăрăх çул çӳреме тухса каяттăм. Çуркунне вăл кĕрлесе юхать, çулла хухать, ăшăхланса юлать.

Çапла пĕррехинче çула тухрăм. Пур çĕрте те — кӳлленчĕксем. Кайăк кăвакалсем пăрлатса вĕçе-вĕçе тухаççĕ. Вĕсене хăратас килмест-ха манăн. Пăшал та çумра çук. Пулсан та пеместĕм ĕнтĕ.

Сасартăк тăрлик-тăрлик! сасă илтĕнме пуçларĕ. Çывăхрах та мар. Ăнлантăм: Тăрна ёшни текен уçланкăран илтĕнет.

Тĕлĕнмелле пирĕн халăх. Кашни вырăна ят пама пĕлет. Пултăран ёшнинче çав ӳсен-тăран ӳсет, Вĕри шыв ёшнинче хĕлле те юр ирĕлет, шыв шăнмасть...

Тăрнасене ман питĕ çывăхран курас килчĕ. Хăвалăх хыçĕпе вăрттăн пырса вĕсем патнех тухрăм. Асăрхамарĕç мана. Ачашлас килсе кайрĕ вăрăм мăйлăскерсене, анчах хăрарăм. Хамран та çӳллĕрех пек туйăнчĕç. Çапах та вĕсем патнелле пĕр-икĕ утăм турăм-турăмах. Хама тапăнма пуçласан çăра хăвалăха тарса ĕлкĕрессĕн туйăнчĕ.

Çук, манран, пĕчĕк ачаран, шикленмерĕç, хăваламарĕç те. Чупса кайрĕç те çунаттисене сарса ерипен çĕкленсе вĕçсе хăпарчĕç.

Тăрна ёшни. Ахальтен çапла каламан ĕнтĕ халăх. Тăрнасем кунта чĕпĕ кăларса ӳстернĕ пуль авалрах. Темĕнле туйăм ăруран ăрăва юлайнă-тăр. Çуркуннесенче халĕ те килкелеççĕ, анса лараççĕ, тунсăхлă юррине юрлаççĕ. Анчах юлаш-

ки вăхăтра вĕсем кунта чĕпĕ кăларса çитĕнтернине илтмен.

Хамăрах сивĕтетпĕр тăван тăрăхран кайăк-кĕшĕке, çунатлă туссене.

Тăрна тытас йăла çук-ха пирĕн таврара. Ăна çимеççĕ, тăрнана тытакан çынна инкек пулать теççĕ. Çапах та мĕншĕн сивĕннĕ-ха вĕсем хитре ĕшнерен? Айăпĕ çынсен те пурах-тăр. Кайăк кăвакалсене, хур кайăксене, пăчăрсене, ăсансене тустарса вĕсен сехрисене пĕрре мар хăпартнă пуль...

## «КУКĂР УРАЛЛĂ» АЧАСЕМ

Эпир лайăх тăвата тусчĕ: Шуркка, Санюк, Вавик тата эпĕ, Ванюк. Пирĕнтен ялти пур ача та тĕлĕнетчĕ: пĕрне-пĕри кăна мар, ыттисене те нихçан та улталаман. «Нихçан та» тени кунта çапах та ытлашширех пуль. Пулнă ун пекки те. Пĕррехинче...

Эпир ача чухне вылямалли теттесем хальхи пек йышлă пулман. Лавккарисем те мар тата. Пĕчĕклех хамăр ăсталама тăрăшнă. Ытларах чухне аттесем тăвакан çăпатаран юлнă пушăт таткисем хута каятчĕç, лашасем вĕсенчен уйрăмах хитре пулатчĕç. Урхамах теттĕмĕр эпир çав чумансене. Алла тытаттăмăр та, вĕсем ĕрĕхнĕ пек, тăпăр-тăпăр сиксе çӳреттĕмĕр, хамăр утланса таçта вĕçтернĕ евĕрлех туйăнатчĕ. Ун пек чухне пирĕн «лашасем» юмахри çил çунат та пулса тăратчĕç, унпа таçта-таçта çитсе курас килетчĕ.

Тепĕр чухне урăхларах япаласем те çакланатчĕç-ха алла.

Пĕррехинче Шурккасен пуканлă сехечĕ çĕмĕрĕлнĕ иккен. Ăна «юсама» ачисене тыттарнă

ашшĕ-амăшĕ. Самантрах «ăш-чиксĕр» тăрса юлнă хайхи. Вылямашкăн шалти механизмĕ вара питĕ шеп. Хăма тăрăх шутаратăн та — илемлĕн чăкăр-чăкăр тăвать. Манăн та, Вавикĕн та унпа чун каниччен выляс килет. Иксĕмĕр тавлашсах кайрăмăр. Шуркка вара кăткăс ыйтăва çапларах татса пама шутларĕ:

— Иксĕр те кайса тăрăр çав юпа патне, — кăтартрĕ вăл çул хĕррине. — Эпĕ команда парсан хăшĕ маларах кунта чупса çитет — çав вылять сехетпе.

Килĕшрĕмĕр унпа.

Эх, чупатпăр ăмăртмалла. Вавик манран иртсе кайрĕ. Çитсенех «теттене» ярса тытасшăн пулчĕ.

— Çук, ăнланман эсир мана, — терĕ Шуркка. — Иккĕмĕш чупса çитекене выляма пама пултăм эпĕ, — тунчĕ хайхискер, мана ытларах килĕштерекенскер. Юпа патне тепре кайса тăма хушрĕ.

Вăл команда парсанах каллех ăмăртмалла тапса сикрĕмĕр. Вавик ятарласах мана ирттерсе ячĕ курăнать. Чупса çитрĕм те çав «чăкăр-чăкăра» ярса тытрăм. Вавик тĕрĕсмарлăха курса хĕрелсе кайрĕ, анчах нимĕн те тăваймасть. Шуркка ман майлах çаптарать.

Çакна çывăх юлташăмăн пиртен виçĕ çул аслăрах Миккуль ятлă пиччĕшĕ асăрханă:

— Кунта кукăр ураллă ачасем пур иккен, — терĕ вăл.

Эпир шанк хытса тăтăмăр. Камăн кукăр ураллă пулас килтĕр?

— Кам кукăр ураллă?! — кăшкăрса ятăмăр харăссăн.

— Шурккапа Ванюк, — терӗ вӑл ҫирӗппӗн.

Эпир урасене тӑсса кӑтартрӑмӑр.

— Хе-хе-хе, — кулса илчӗ вӑл мӑн ҫын пекех. — Кукӑр уараллӑ пулас килмест-и апла?

— Ҫук, — пуҫсене силлетпӗр эпир.

— Лайӑх тӑнлӑр, апла: «Ултавӑн ури кукӑр — йӑнӑш ҫулпа уттарать», — теҫҫӗ халӑхра. Мӗншӗн юлташӑра суятӑр?

— Вӑйӑ кӑна-ҫке ку, — тӳрре тухма тӑтӑмӑр эпир.

— Суя вӑл ҫум курӑк пекех, ӗрчесе кайма пултарать, — асӑрхаттарчӗ Миккуль.

Эпир Вавикрен каҫару ыйтрӑмӑр.

Юрать, пирӗн пурнӑҫра ӑслӑ аслӑ юлташ тупӑнчӗ. Вӑл йӑл кулса, тӗрӗсмарлӑха курмӑш пулса пӑрӑнса иртме те пултарнӑ-ҫке, анчах унашкал хӑтланман, тӑна кӗртнӗ пире...

## ХӐРАТАЙМАРӖҪ

Ырӑ туни ҫӗре ӳкмест теҫҫӗ. Ҫакӑ чӑннипех те тӗрӗс пулӗ. Пурнӑҫри тӗрлӗ инкек-синкеке ҫавӑ ҫеҫ темиҫе хутчен те сирсе янӑн туйӑнать.

Пирӗн ял еннелле ҫирӗммӗш ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсен варричченех асфальт ҫул пулмарӗ. Ирирех Шупашкартан тухса Патӑрьелне ҫитеттӗмӗрха — малалла кайма питӗ кансӗрччӗ. Уйрӑмах кӗрхи ҫумӑрлӑ ҫанталӑкра чӗр вилӗмччӗ. Вӑтӑр ҫухрӑм ытла пылчӑк ҫӑрма ҫуран тиветчӗ. Чунтан юратнӑ тӑван яла вӑл «тӗнче тӗпне» вырнаҫнӑшӑн ҫул ҫинче мӗн чухлӗ тарӑхман-ши?

Ҫав ҫулхине кӗр йӗпе-сапаллӑ килчӗ. Чӳк уйӑхӗн варриччӗ. Телеграмма ҫитрӗ: анне йывӑр чирле-

се ӳкнӗ иккен. Ялта аттепе иккӗшӗ ҫеҫ пурӑнатчӗҫ.

Ҫула ир-ирех тухрӑм. Паллах, резина атӑ тӑхӑннӑ. Хура кӗркуннехи кунсем питӗ кӗске. Ҫерҫи сӑмси тӑршшӗ ҫеҫ теҫҫӗ вӗсем пирки халӑхра. Юнашар яла аран-аран сӗтӗрӗнсе ҫитейрӗм-ха — тавралӑх тӗттӗмленсе ларчӗ. Малалла вӑрман витӗр сакӑр ҫухрӑм тухмалла. Шиклентерет ҫапах. Кашкӑрсем ҫеҫ мар, хир сыснисем те ҫул ҫине тухни ҫинчен калаҫкалатчӗҫ. Тӑвансем патне кӗрсе ҫӗр каҫас — манӑн тепӗр кунхине хулана таврӑнмалла, ӗҫе каймалла.

Мӗн пулать те мӗн килет тенӗ пек ялах тапаҫланма шутларӑм. Акӑ вӑрмана кӗтӗм. Сӗм тӗттӗм, куҫран чиксен те курӑнмасть. Ҫулне лайӑх пӗлетӗп-ха. Вӑтам шкула куллен кунтан ҫӳренӗ: лапрара та, ҫил-тӑманра та сахал мар тертленме тивнӗ ун чухне. Хӗлле часах тул ҫутӑлмасть-ҫке. Уроксене ӗлкӗрес тесен ир-ирех, сӗм тӗттӗмлех, тухса танккама тиветчӗ.

Акӑ ҫул айккипе, вӑрман хӗрринчи ҫерempе, пыратӑп. Ҫулпа утма май ҫук — тракторсем ҫӑрса пӗтернӗ, пӗҫ кӑкӗ таран путса ларатӑн. Юратьха, алӑра патак пур — суккӑр ҫын пек унпа хыпашласа утатӑп, ҫавӑнпа ҫумӑр шывӗпе лӑк тулнӑ путӑк-шӑтӑкран та пӑрӑнса иртетӗп, йӑваннӑ йывӑҫсенчен те такӑнса ӳкместӗп.

Хӑлхана сасартӑк нӑрик-нӑрик тунӑ пек илтӗнчӗ. Шикли шикленнӗ — кӗрӗк пӗркеннӗ темеҫҫӗ-и-ха? Чӗре кӑлт-кӑлт тума пуҫларӗ. Ахаль кӑна илтӗнчӗ пуль тесе хама лӑплантартӑм.

Ку вӑрман ҫулӗ пирки темӗнле халап-юмах та ҫӳрет. Кашкӑрсем ҫеҫ мар, кунта усал-тӗсел те тухкалать имӗш. Ҫавӑнпа эпир, ачасем, шкула кайма пӗрле тухма тӑрӑшаттӑмӑр.

Акă темĕнскере патак тиврĕ. Алпа хыпашласа пăхрăм. Темĕнле тимĕр карта алла лекрĕ. Пĕчĕк чартак пекскер. Тĕлĕнтĕм. Кунашкал япала кунта çукчĕ-çке.

Вăрмантан тухас çĕрти кĕпер патне çитрĕм. Пĕлетĕп, вăл яланхи пекех шăтăк-шатăк. Урана ăнсăртран чиксе ярса хуçма пулать кăнтăрла та. Патакăмпа хыпашла-хыпашла чиперех каçайрăм. Умра масар кĕперĕ кĕтет тата. Вăл çĕмрĕккине те аван чухлатăп. Çуллах машина-тракторсем таçтан çаврăнса çӳретчĕç. Урлă хунă икĕ пĕрени çеç упранса юлнăччĕ. Типĕ çанталăкра аптраманччĕ, халĕ, йĕпе-сапара, мĕнле каçмалла? Ура шуса кайсан юшкăна шаплататăн. Урлашкана патакпа хыпашласа тупрăм та чиперех каçрăм.

Киле çитсен, аттепе аннен савăнăçне курсан пĕтĕм ывăнни иртсе кайрĕ.

Тепĕр кунне каялла çула тухрăм. Масар кĕперĕ патне çитрĕм — нимĕнле те каçаймастăп: ура йăр та яр шуса çеç тăрать. Аран-аран майлаштаркаласа тепĕр енне çиткелерĕм. Сĕм çĕрле ним курмасăр ун урлă мĕнле каçма пултарнă — шалт тĕлĕнмелле!

Вăрмана кĕтĕм. Ĕнерхи йĕрпех пыратăп-ха. Мана тимĕр чартак тĕл пулчĕ. Варринче — тимĕр хĕрес. (Кайран çеç пĕлтĕм, вут тиенĕ машина тӳнсе кайнă-мĕн кунта, пĕр çын вилнĕ. Ăна асăнса лартнă иккен вĕсене.) Çĕрле кусене курайнă пулсан ăшра темĕскер йăш туса илетчех. Вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнă вĕрентекен вара тăтăшах çапла калатчĕ: «Вилнисенчен хăрамалла мар, чĕррисем тепĕр чух хăрушă».

Кăштах малалла утсан пăхрăм та тепĕр енне — куç чарăлса кайрĕ, çӳç вирелле тăчĕ. Ара, хир

сыснисем ҫереме сухаласа пĕтернĕ. Ҫĕрле ҫав енĕпе пырас тăк — тем пулса тухатчĕ. Инкеке темĕскер сирнĕ!

Ачалăхăм аса килчĕ тӳрех. Ун чухне эпĕ редакцисене ҫырма пуҫланăччĕ ĕнтĕ. Пĕррехинче Каппай, манăн тăванах-ха вăл (икĕ ҫул аслăскере ҫапла чĕнеттĕмĕр), хăйсем нихҫан та аш-какайсăр тăманнине пĕлтерчĕ пире.

Тетĕшĕсем ҫĕрле сăпкаллă мотоцикл ҫине ларса вăрмана каяҫҫĕ имĕш. Хайхи ҫул ҫине тухнă хир сыснисем фара ҫутинчен ҫул айккине пăрănма чухламаҫҫĕ тет, тӳп-тӳррĕн малаллах тараҫҫĕ. Кусем вара вĕсене пăшалĕсемпе ҫăмăллăнах пере-пере ӳкереҫҫĕ.

Манăн чун ыратса килчĕ. Илтнĕччĕ-ха, хир сыснисене ятарласа ĕрчетнĕ кунта. Капла йăлтах пĕтме пултараҫҫĕ-ҫке вĕсем.

Ҫав тискерлĕх ҫинчен редакцие ҫырса ятăм. Часах тĕрĕслеме килчĕҫ. «Сунарҫăсем» патĕнче ҫĕр выртсах хăналаннă терĕҫ.

Кусем чухланă кам хыпарланине. Манран кулчĕҫ ҫеҫ. Тата темиҫе хутчен те хĕнессипе хăратрĕҫ. Ун чухне мана Павлик Морозов ят памарĕҫ-ха. Хисепĕ пурччĕ-ҫке, ҫав вăхăтра вăл героях шутланнă, ун ячĕпе пионер дружинисем, отрячĕсем хисепленнĕ. Ҫирĕммĕш ĕмĕрĕн 90-мĕш ҫулĕсенче ҫеҫ ăна сутăнчăк теме пуҫларĕҫ. Тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и ҫакă, эпĕ хальччен те ун ҫинчен тĕплĕн шутласа пăхман.

Хăрамарăм, ҫав «сунарҫăсене» ним те туманнине кура тепĕр хутчен редакцие ҫырса ятăм. Хальхинче вара вĕсен пăшалĕсене те туртса илчĕҫ.

Ҫапах та эпĕ хир сыснисен хутне кĕрсе сутăнчăк

пулма пултарайманах. Çĕршыва юратасси çутçанталăкран пуçланать.

Ырă туни çĕре ÿкмест тени те тĕп-тĕрĕсех пек туйăнать. Çав ĕнерхи хир сыснисем те эпĕ упраса хăварнисен ăрăвĕсемех пулма пултарнă.

## ЯЛТИ ЧИ ХИСЕПЛĔ ÇЫН

Эпир ача чухне ялта пирĕншĕн чи хисеплĕ çын кам пулнă тетĕр? Шкул директорĕпе вĕрентекенсем те, агроном-бригадир та мар. Кам вара? «Açăр-аннĕр ĕнтĕ», — тÿсеймесĕр шухăшлĕ тепри. Ку тĕрĕсех-ха. Çывăх тăвансене çеç мар, аякрисене те хисеплеме вĕрентнĕ.

Тепĕр ыйту: ял çыннисемшĕн чи кирлисенчен пĕри мĕн шутланнă? Хамах хуравлам-ха ăна: выльăх-чĕрлĕх. Вĕсенчен чи хакли — ĕне. «Ĕне — çур пурнăç», — тенĕ. Чухăн кил-йыш юр-варпа çеç чĕре сури тăвайнă. Ăс парса каланисем тата мĕнлерех! Ĕне тата арăм (упăшка) тĕлне пулма йывăр тени мĕне тăрать! Тупмалли юмахĕсем те епле хитре. Акă вĕсенчен пĕри: пуçĕ — сенĕк, хырăмĕ — пичке, çилли — ырçа, хÿри — милке.

«Ĕнен сĕчĕ чĕлхи вĕçĕнче», — ăс пана пире аслисем. Çăрман, çупман, çатмапа пĕçермен, çупа сĕрмен, тăвар яман, ăна çимен çын та çук. Çак тупмалли юмахăн тупсăмне тÿрех чухласа илтĕр ĕнтĕ. Сĕт вăл!

Çапла, ĕнен сĕчĕ чĕлхи вĕçĕнче. Çавăнпа ăна лайăх çитермелле. Çăвĕпех ăна пăхаканĕ кам? Паллах, кĕтÿçĕ.

Эпир ача чухне касу çукчĕ пирĕн ялта. Ятарласах кĕтÿçĕ тытатчĕç. Тăваттăн-пиллĕкĕн те

пулнă вĕсем. Кашни урамăн пĕрер темелле. Кĕтӳçĕ тытни чылай тĕрĕсрех ĕнтĕ. Касуçă кам вăл? Черет ирттерсе пултăр уншăн. Кĕтӳçĕ вара ĕнесемшĕн çăвĕпех яваплă. Ĕнесем сĕт мĕн чухлĕ парасси унран килет-çке. Пĕтĕмпех паллă. Çавăнпа вĕсем кĕтĕвĕсене тулăх курăклă çĕрсене илсе çӳреме, вăхăтра шăварма тăрăшнă.

Эпир, Вавикпе иксĕмĕр, хире-хирĕçех пурăнаттăмăр. Манăн аттепе анне кĕтӳçĕсенчен Кушак Милюкне суйласа илетчĕç, юлташăн вара — Шăккăм Çеркейне.

Вĕсенчен хăшĕ лайăхрах пирки тавлашса каяттăмăр икĕ тус.

— Милюк тете сĕм вăрмана та ĕнесемпе кĕме хăрамасть, — теттĕм эпĕ. (Вăл çап-çамрăклах вăрçăра пулнă. Хăрах алли чăлахчĕ, пĕтĕрсе лартнă пекчĕ. Çапах та вăрăм пушшине пăшал майлах хыттăн шаплаттарма пултаратчĕ.)

— Çеркей тете каснă вăрман уçланкине суйласа илет те çӳллĕ тунката çине хăпарса ĕнисем тулăх курăка епле çинине сăнаса тăрать, — парăнмастчĕ Вавик.

Çеркей тете Улатăрта ШКМ (школа коммунистической молодежи) текеннинче вĕреннĕмĕн. Çавăнпа ăна Шăккăм теме пуçланă. Ачаллах асат хуçнăскер лутраччĕ. Хăй вăхăтĕнче хутла лайăх пĕлекенсенчен пĕри шутланнă. Каярах çеç аслă пĕлӳ илейнĕ пирĕн ялсем.

Ял кĕтӳçĕсене мĕнле хисепленине пĕлесчĕ сирĕн! Кăнтăрлахи апата та чи тутлине парса яма тăрăшнă. Каçхине вара хисеплĕн кĕтсе илнĕ ăна, яшкапа пĕрле чи техĕмлине сĕтел çине кăларса лартнă. Ăшшăн калаçнă унпа. Кĕтӳçĕ килтен киле çӳретçке апата. Çапла майпа ырă ят та ялта сарăлать.

Эпир мăнаçланаттăмăр хамăр ĕнесен кĕтӳçисемпе. Тăван çĕршыва юратасси килтен, урамран, çуралнă вырăнтан пуçланать теççĕ. Ачаран хамăр пĕлнĕ çынсенчен те. Пирĕншĕн вара кĕтӳçе хисеплеме пĕлнинчен те килнĕ пулас. Манăн çывăх юлташăм ахальтен мар çар училищине вĕренме кайрĕ, офицер пулчĕ...

## МАЧЧА КАШТИНЧИ КАРТСЕМ

Шухă ачаччĕ Санюк. Пулаççĕ-çке лара-тăра пĕлменскерсем. Вĕсене усал тесе те калаймăн, тепĕр чухне ырласах та килмест. Кĕтмен çĕртен темĕскер туса хуратчĕ. Хăй те тĕлĕнетчĕ çавăншăн, пăшăрханатчĕ. Хĕрхенес те килетчĕ ăна ун чухне.

Ашшĕ, Партас Раманĕ, питĕ çирĕп кăмăллă çынччĕ. Кил-йыш пуçĕ нихăш ачине те иртĕхтерместчĕ. Вĕсем вара сахаллăнах марччĕ: виçĕ ывăлпа пилĕк хĕр! Ĕçе кашнинех пĕчĕклех хăнăхтарнă. Çырла, çĕмĕрт, мăйăр, кăмпа, палан татма вăхăт çитсен кил хуçи хăйĕн «командине» тӳрех вăрмана ертсе каятчĕ. Хĕл каçмалăх вăрман кучченеçне яланах хатĕрлетчĕç.

Санюк килĕнче шăпчăк чĕппи пекех шăпăрт пулсан та, каларăмăр ĕнтĕ, урамра е шкулта ăнсăртран мĕн те пулин туса хуратчех.

Акă класра пĕр хĕрача аллипе хупласа темĕскер çырса ларатчĕ лăпкăн. Санюк пычĕ те вăшт! туртса илчĕ ун умĕнчи хута. Эпĕ тавăрса пама ыйтрăм. «Савнийӳ-им вăл?» — витлерĕ мана. Çырăва эпĕ вăйпах туртса илме тăтăм. Санюк ман алла хăвăрт пăрса лартрĕ, хытă ыратнипе эпĕ кăшкăрса ятăм. Юлашки урока аран-аран чăтса

ирттертĕм. Вĕрентекен мана стена хаҫачĕ кăларма юлма ыйтрĕ.

— Пултараймастăп, паян пуҫ ыратать манăн, — суйрăм ăна.

— Ҫук, Санюк унăн аллине пăрса лартса ыраттарчĕ, — тĕрĕссине каларĕҫ хĕрачасем.

— Аҫупа калаҫмах тивет, — пулчĕ вĕрентекенĕн татăклă сăмахĕ, мĕншĕн тесен ăна каҫара-каҫара йăлăхсах ҫитнĕччĕ пулас вăл.

Ҫакăн хыҫҫăн Санюк питĕ пусăрăнса ҫӳрерĕ. Ашшĕ ăна темĕнле пысăк парне шантарнă пулнă иккен. Халĕ ун ҫинчен ĕмĕтленни те харам ҫеҫ.

* * *

Эпир пĕр-пĕрне хăвăрт каҫартăмăр, ним пулман пекех унчченхиллех туслăн ҫӳрерĕмĕр.

Пĕррехинче Санюк пирĕн пахчари тĕлĕнмелле лапсăркка улмуҫҫине асăрхарĕ, ăна кĕрсе курасшăн пулчĕ.

— Юрĕ, — килĕшрĕм унпа.

Кĕтĕмĕр пахчана.

— Пан улми кăҫал нумай пулать сирĕн, — ман пекех хĕпĕртерĕ вăл.

Сиссе те юлаймарăм — улмуҫҫин тураттинчен уртăнчĕ, туртăнса янах хума тытăнчĕ. Шатăрт! хуҫăлса анчĕ мăн турат. Ҫакна илтнĕ анне кĕҫĕн алăкран тухни курăнса кайрĕ. Санюк хăвăрт тарса ҫухалчĕ, йĕрĕ те юлмарĕ унăн. Ах, хытă лекрĕ мана.

Питĕ кӳрентĕм юлташа. Кӳрентĕм ҫеҫ-и? Ҫиллентĕм. «Капла пулмасть, тавăрмалла ăна», — шухăш ҫиҫсе илчĕ пуҫра.

Яланхи пекех тепĕр кунне шкула капăр ал туйипе пычĕ юлташăм. Питĕ хитре вăл, эрешлĕ.

Парта айĕнче выртаканскере вăрттăн илтĕм те икĕ тенкел çине урлă хутăм, унтан хăпарса сикрĕм. Шатăрт! хуçăлчĕ хӳхĕм патак. Санюк чĕкĕнтĕр пек хĕрелсе кайрĕ.

— Эпĕ сирĕн улмуççи тураттине юри хуçман, эсĕ ятарласа тĕп турăн манăн туяна! — кăшкăрчĕ вăл.

Унтан такам кĕнекине ярса тытрĕ те ман енне вăркăнтарчĕ. Эпĕ пĕшкĕнсе ĕлкĕртĕм, чăл-пар! ванчĕ чӳрече кантăкĕ. Ниçта кайса кĕреймест Санюк. Ара, хăйĕн пысăк ĕмĕчĕ çитесси çинчен нумаях пулмасть мана систернĕччĕ. Тулĕк мĕнши вăл — ăна пĕлтерменччĕ, вăрттăнлăх-мĕн ку.

Шăнкăрав янăрарĕ те, класа вĕрентекен кĕрсе тăчĕ. Ваннă кантăка курсан тӳрех хаяррăн çапла ыйтрĕ:

— Камăн ĕçĕ ку?

Эпĕ ура çине тăтăм.

Пĕтĕм класс çăварне карса пăрахрĕ. Санюк вара тутине çатăрт çыртнă. Хаь-халь юн пĕрĕхсе тухас пек.

— Мĕнле пулса иртрĕ ку, Ванюк? — ыйтрĕ сассине йăвашлатса Мария Дмитриевна. Эпĕ хальччен йĕркене пăсманпа пĕрехчĕ-çке. Тата ăна стена хаçачĕ кăларма тăтăшах пулăшатăп.

— Класа кайăк вĕçсе кĕчĕ. Ăна кăларса ярас тесе чӳречене яри уçса ятăм та ăнсăртран кантăка ватса пăрахрăм, — тĕрĕссине каламарăм вĕрентекене.

— Юрĕ, — терĕ вăл. — Вениамин Михайловича калатăп, килсе лартса парĕ, — лăплантарчĕ пире Мария Дмитриевна.

Урок хыççăн Санюк хăйсем патне пыма чĕнчĕ мана. Ним пулман пекех уттартăмăр ун патне.

Килĕнче никам та çук иккен. Мана тĕпеле иртме сĕнсе каялла тухрĕ. Унччен те пулмарĕ — пуртă илсе кĕчĕ хайхискер. Унтан ăна ман пата йăтса пычĕ те:

— Çивĕч-и? — терĕ.

Эпĕ ним калама аптрарăм, шанк хытса тăтăм.

— Аттен платник хатĕрĕсем яланах йĕркеллĕ, — мухтанчĕ вăл.

Унтан урай варрине тенкел лартрĕ те ун çине хăпарса тăрса пурттипе мачча каштине касса карт турĕ. (Унпа юнашарах тата темиçе паллă пур иккен.) Кĕç пурттине чăлана кăларса хучĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку? — чăтаймасăр ыйтрăм унран.

— Хăçан та пулин пĕлĕн-ха, — тесе сăмаха урăх енне пăрчĕ вăл.

* * *

Унтанпа вăхăт самаях иртнĕччĕ ĕнтĕ. Пирĕн пӳрт умĕнче шăв-шав илтĕнчĕ. Чӳречерен пăхрăм та тĕлĕнсех кайрăм: Санюк икĕ урапаллă, пирĕн çулхисене шăп та шай юрăхлă велосипед çавăтса утать. Ун тавра ачасем хĕвĕшеççĕ.

— Мана ярăнтар-ха, мана ярăнтар-ха! — янăрашаççĕ вĕсем. Аслăраххисем туртса илме те хăтланаççĕ. Санюк яхăнне те ямасть, кăйкăр хăйĕн йăвине хӳтĕлет тейĕн.

Эпир пурте çитĕннисен велосипечĕпе çӳресе курнă-ха. Урлашки урлă ура çитменнипе хăяккăн ярăнаттăмăр. Ку вара — шăп та шай пире валли-çке!

— Ваню-ю-юк, тух урама! — илтĕнчĕ Санюк сасси.

Эпĕ вăр-вар çитсе тăтăм тĕркĕшекенсем пат-

не. Юлташăм ыттисене сирсе ячĕ те мана велосипед çине лартрĕ. Çапла вара эпĕ ялта чи пĕрремĕш, хуçирен те маларах, унпа ярăнса куртăм.

* * *

Тантăшăм çав велосипедлă пулнинче ман тӳпем те пур иккен. Ашшĕн татăклă сăмахĕ çапларах пулнă: ывăлĕ çинчен усал сăмах никамран та илтмелле мар. Кантăка çĕмĕрнине хам çине илсе тĕрĕсех тунă апла. Суйни аванах мар-ха та...

* * *

Иксĕмĕр те тĕрĕс-тĕкел çитĕнтĕмĕр. Пирĕн вăхăтра салтака кайман çамрăка ялта çын вырăнне хумастчĕç. Санюка çара маларах илчĕç, чире пула мана сиктерсе хăварчĕç. Вăл çур çултан курма таврăнсан эпĕ унăн тумтирне ăмсанарах пăхнине асăрхарĕ ахăр: «Атя-ха улшăнса тăхăнатпăр. Сана салтак тумĕ килĕшет-и?» — терĕ вăл. Эпĕ самантрах симĕс тум тăхăнтăм. Хуп-хура атти те çăмăл пек туйăнчĕ.

— Каснă лартнă çар çынни, — мухтарĕ тусăм, хам та туйрăм çавна.

Эпĕ çине тăрсах салтака кайма хатĕрленме тытăнтăм. Сывлăха тĕрĕсленĕ хыççăн мана кĕçĕн командирсен шкулне яма йышăнчĕç çар комиссариатĕнче. Çур çул курсант ятне илтсе пурăнтăм. Тата темиçе уйăхран яла курма таврăнтăм.

— Кулянаттăн çара каяймасран. Эпĕ авă ахаль салтак çеç пултăм, эсĕ — командир, — савăнчĕ маншăн юлташăм. — Тумтире улăштарса тăхăнарха, — сĕнчĕ вăл мана. Тĕкĕр умне пычĕ те пакунсем çинчи хăюсене тĕкĕнсе: — Илемлĕрех иккен вĕсемпе, — терĕ манпа мăнаçланса.

* * *

Ĕмĕр тăршшĕпех иксĕмĕр туслă пурăнтăмăр. Эпĕ хулара тĕплентĕм, вăл шахтăран таврăнсан ялта вăрман хуралçине кĕчĕ. Тăван тăрăха таврăнмассерен Санюк патне çитеттĕмех. Вăл мачча каштинчи паллă çине пӳрнипе тĕллесе кăтартатчĕ. Çав пĕчĕк карт пирĕн туслăха хӳтĕлекен пысăк пĕлтерĕшлĕ те питĕ асамлă паллă евĕр туйăнатчĕ.

* * *

Партасовсен килĕнче мачча каштинче картсем лартасси йăлана кĕнĕ иккен, ăруран ăрăва пынă: кам та пулин ырă тунине асра тытма хистенĕ çакă. Йĕрки пирĕнех-ши? Калама пултараймастăп. Ялта çапларах сăмах-юмах çӳретчĕ: «Пăртас ятлă вăйлă халăх пулнă тахçан. Пĕррехинче вăл хаяр тăшмансене çапса аркатма пултарнă. Лешсем вара хирĕç тăракансене çав тери курайман, вĕсене тĕппипех пĕтермесĕр те лăпланайман. Çапла вара çăлăнса юлайнисем кӳршисемпе хутăшса кайнă. Çавăнпа тĕрлĕ халăх хушшинче Партасов, Буртасов, Бурдасов, Бардасов хушаматсем хальччĕнех тĕл пулаççĕ...»

## ЧАВСА ÇЫВĂХ ТА...

Санюкпа иксĕмĕрĕн те пиччесем пурччĕ. Манăн Витюк ятлă, унăн — Аркаш. Питĕ туслăччĕ. Вĕсем пĕр çăвартан пурăнни те пире çывăхлатнă. Хăйсемпе пĕрле шăллĕсене таçта та илсе çӳретчĕç. Темĕскер курса çӳрессиех пулманха. Вăрман çеç кăчăк туртнă пурсăмăра та.

Пĕррехинче сасартăк чирлесе ӳкнине пула

килтех юлма лекрĕ манăн. Виççĕшех çула тухрĕç: Санюк мана тĕлĕнмелле хитре кайăк йăви курнине каласа кăтартрĕ кайран.

— Илсе кай-ха унта, — йăлăнтăм ăна хам сывалсах çитейменнине те пăхмасăр.

— Юрать, — килĕшрĕ вăл. — Анчах никама та ан кала. Çăмартисене тĕкĕнме юрамасть. Кайăксем йăвинчен сивĕнме пултараççĕ, — асăрхаттарчĕ юлташăм.

— Çук-çук, — тупа турăм эпĕ.

Çапла тĕлĕнмелле хитре кайăк йăви патне иксĕмĕрех çитсе килтĕмĕр.

Пирĕн урамрах пĕр çул кĕçĕнрех Павлик пурччĕ. Тус-юлташĕ çукчĕ унăн темшĕн. Кам та пулин кăшт кӳрентерсенех Николь ятлă пиччĕшне элеклесе панăшăн юратсах каймастчĕçши ăна тантăшĕсем? Лешĕ вара шăллĕпе выляма илĕртме тĕрлĕ меслет шыраса тупатчĕ. Усалли усалччĕ те — алли килетчĕ унăн, темĕн те пĕр ăсталатчĕ.

Акă Николь тĕрлĕ кĕвĕ кăларакан шăхличĕ тунă. Манăн ăна пĕр кунлăха киле илсе кайса чун каничченех шăхăрас килчĕ.

— Уншăн мана мĕн паратăн? — тӳрех ыйтрĕ Павлик.

Нимпе улăштармалли те тупаймарăм. Вара çапла каласа хутăм:

— Эпĕ тĕлĕнмелле хитре кайăк йăви тĕлне пĕлетĕп. Çавна кăтартатăп сана. Анчах çăмартисене алăпа тĕкĕнме юрамасть, — асăрхаттартăм ăна.

Хаваспах килĕшрĕ Павлик.

Тепĕр икĕ кунтан çав йăва патне Санюкпа пырса тухрăмăр. Кайăксем унта вĕçсе пыни па-

чах та курăнмарĕ. Пырса пăхрăмăр — йăвасем пуш-пушă.

Каярах çакă паллă пулчĕ: Павлик кайăк çăмартисене килне илсе килсе пусма ларнă чăх айне хунă иккен. Килĕнче илемлĕ кайăксем ĕрчетсе çынсене хапсăнтарасшăн пулнă-мĕн. Чăххи, паллах, черчен çăмартасене йăлтах çĕмĕрсе пĕтернĕ.

— Эх, мăнтарăн... — ÿпкелешрĕ тусăм. — Шаннă йăвара кайăк çук теççĕ те... Юлташа та ĕненме юрамасть-им? — лăшт сулчĕ аллине.

«Чавса çывăх та — çыртма çук», — ÿкĕнтĕм эпĕ. Сăмах патăн пулсан ăна тытмаллах çав...

## СĔМ ÇĔРЛЕ, ТĔТТĔМРЕ

*Ачалăхри тусăма, А.А. Купцова*

Пирĕн çурт çумĕнче тăкăрлăк пурччĕ. Пралук теттĕмĕр ăна. Çавăнтан пĕр кил урлă манăн чи çывăх юлташ Шуркка пурăнатчĕ. Çемйи йышлăччĕ вĕсен. Çăкăр татăкне те унпа çурмалла пайласа çиеттĕмĕр темелле. Унăн пиччĕшĕ Миккуль ÿкерме питĕ ăстаччĕ. Хам та пĕчĕкренех сăрăкăранташ енне туртăннă пулин те, ăмсанаттăмччĕ ăна. Мулкач, пакша, пăши, тилĕ хитре пулса тухатчĕç унăн. Эпир, вăрман варринчи ялта пурăнакансем, вĕсене тăтăшах курнă-çке. Чĕрĕ упакашкăр таврашĕпе тĕл пулмах тивмен ача-пăчан. Вĕсем таврара йышли çинчен час-часах илтнĕ-ха.

Ун чухне телевизор пулман. Атте-аннесем хăнана е ĕçпе кайсан пĕр-пĕрин патне «улаха» çÿреттĕмĕр. Ирĕкчĕ пире. Выляттăмăр, кулаттăмăр.

Пĕррехинче, хура кĕркуннехи каçхине, Миккуль манăн тетраде чĕрчунсем ÿкерсе ларатчĕ.

Хам та сётел хушшинче унпа юнашарах. «Пакшана — юман ҫине, мулкача хӑвалӑх ҫумне ӳкер», — тесе сӗнӳсем паратӑп ӗнтӗ. Сасартӑк ҫутӑ лап сӳнчӗ. Ун чухне вунӑ сехетчен ҫеҫ лампочкӑсене ҫунтаратчӗҫ. Таврари ялсенчи ҫынсем краҫҫын лампипех тертленетчӗҫ-ха. Электричество пулман. Пирӗн колхоз ял халӑхне питӗ йывӑр ӗҫе кӳлнӗ: вӑрман кастарса мунчала хутса илнӗ тупӑшпа хӑйӗн валли двигатель туянма хал ҫитернӗ ҫапла. «Ҫутӑ курма килтӗмӗр-ха», — тетчӗҫ вӑрман варринчи яла таврaран пынисем.

Краҫҫын лампи йӑпӑр-япӑр ҫутрӗҫ юлташӑмсем.

— Урамра хӑрушла тӗттӗм. Хунар ҫутса ӑсатса ямалла мар-и? — сӗнчӗ Миккуль, манран виҫӗ ҫул аслӑскер. Шуркка та пушмакне тӑхӑнма тытӑнчӗ.

— Ял варринчех хӑрама эпӗ пӗчӗккӗ-им? — килӗшмерӗм паттӑрланса.

Киле шӑхӑркаласах тухса утрӑм.

Пӗтӗм яла, таврана тӳпепе пӗрлех темле тӗттӗм шӑтӑка чиксе-хупса хунӑ тейӗн. Ниҫта пӗр ҫутӑ та ҫук. Куҫран чиксен те курӑнмасть.

Тӑкӑрлӑк тӗлне ҫитеспе ман тавра темӗскерсем явӑнса йӑр-йӑр чупма пуҫларӗҫ. «Сурӑхсем ӗнтӗ», — тесе шухӑшлатӑп. Хура кӗркунне вӗсен киле таврӑнма пӑрахас йӑла пур. Шырама та тухаттӑмӑр. Ара, курӑк типсе ларнӑ ӗнтӗ, тӑранаймаҫҫӗ. Вара ҫимелли шыраса ял тӑрӑх аташнӑ пек чупса ҫӳреҫҫӗ.

Сурӑхсенчен хӑрама эпӗ пӗчӗкех мар ӗнтӗ. Сӗкекен такасем те тупӑнкалаҫҫӗ-ха. Пӗрисен ачи, кахалскер, пиллӗке ҫитсе те утма вӗренмен иккен. Кусем ӑна сурӑх кӗтӗвӗ яла кӗрес умӗн ҫул варрине лартса хӑварнӑ. Ҫӗре ҫӗмӗрес пек

çухăрса килекен сурăхсене курсан ача ура çине сиксе тăнă та хыçне вут чĕртнĕ пек кăшкăрса килне пырса кĕнĕ тет.

Çĕрлехи сурăхсем манран хăпманнине сиссех çурт тĕлне чиперех çитрĕм. Тĕрĕссипе, урасем ертсе пычĕç, тĕттĕм пӳрте алăпа хыпашлакаласа кĕтĕм те вырăн çине хăпарса выртрăм...

...Ир-ирех аттепе анне калаçнипе вăранса кайрăм. Пӳртре яр çутă, урамра çав-çавах тĕттĕмха. Кăмакари вут-шанкă шартлатса çунни хăлхана кĕрет.

— Кĕçĕр кашкăрсем укăлча çумĕнчи Миккисен пушмак пăрăвне, тăхăр сурăхне, хур-кăвакалне йăлтах пăвса кайнă, — тет хурал çуртĕнчен усал хыпар илтсе таврăннă атте.

— Ай тур-тур! — тĕлĕнет анне.

«Ак тамаша, çĕрле ман тавра сурăхсем мар, кашкăрсем явăнса çӳренĕ иккен!» — пуçа пырса кĕчĕ тӳрех. Вĕсене сĕм тĕттĕмре уйăрса илеймен эпĕ. Тавах Турра! Курнă пулсан — чĕре çурăлса каймалла. Е хăранипе килелле тапса сикнĕ пулсан вылямаллах мана пăвса пăрахма пултарнă! Кашкăрсем куç умне килсе тухнăн хăранипе пуç çинченех витĕнтĕм утиялпа.

Кăнтăрла çакна пĕлтĕмĕр. Кашкăрсем картишне хӳме урлă сиксе кĕнĕ. Ватă сурăхсене йăтса каçарайманнипе пăвса юнĕсене çеç ĕçнĕ, путеккисене çĕклесех кайнă. Асси çеç вут-шанкă хушшине тарса кĕрсе çăлăнса юлнă имĕш.

Çакăн хыççăн Миккисем ураланаймарĕç. Çав тери чухăн пурăнатчĕç. Юр-варсăр, аш-какайсăр. Вăл вăхăтра ял çыннисем Çĕпĕре куçса каяс йăла çĕнĕрен тапраннăччĕ. Пирĕн ялтан та вунă-вун икĕ çемье «телей шырама» кайма кăмăл тунă.

Çапла пĕр кунхине ялĕпе вĕсене ăсатма тухрăмăр. Шкул ачисене те ирĕк пачĕç. Кашни класран пĕр ача та пулин пурах инçе çула ăсанакан. Пирĕн класран та Нинук ятлă хĕрача каять. Ашшĕ ăста платникчĕ. Тем çитмен.

Темиçе машинăна япаласем тиенĕ. Çынсем ыталашса сывпуллашаççĕ. Хĕрарăмсем уласа йĕреççĕ. Ваттисем пĕлеççĕ ĕнтĕ тăванĕсемпе урăх тĕл пулаймасса.

Айккинче манран икĕ-виçĕ çул кĕçĕнрех хĕрача тăрать. Çурхи янкăр тӳпе пек кăн-кăвак куçлă. «Эпĕ мĕнпе айăплă, мĕншĕн манăн сирĕнтен уйрăлса таçти çĕре каймалла?» — тенĕн туйăнчĕ вăл тинкерсен. Чĕре хĕссе килчĕ. Мана тĕкĕнмен кашкăрсем мĕскĕнĕн çемйине пысăк инкек кӳнĕ. Çавна пула вĕсен тăван çĕре пăрахса таçта «телей шырама» тухса каймалла. Пуйма каякан вилсе килнĕ — çак каларăша пĕрре мар илтнĕ эпĕ ача чухнех.

Питĕ хĕрхентĕм хĕрачана. Манăн та темĕнле айăп пур пек. Вĕсене тăван ялта хăварма пĕр путеке, чи юратнине, парас килчĕ. Чи çывăх юлташăм Шуркка та ашшĕ-амăшне ӳкĕте кĕртессĕн — хур-кăвакал сĕнессĕн — туйăнчĕ.

Машинăсем çула тухрĕç. Аслисем ачи-пăчипе автобуса ларчĕç. Халăх питĕ кулянса ăсатрĕ вĕсене.

Тепĕр темиçе çултан «телей шырама» кайнисенчен хăш-пĕр çемье каялла таврăнчĕ. Çӳрен каска якалать, выртан каска мăкланать теççĕ. Пуйса килниех сисĕнмерĕ. Микки çемйи каялла таврăнмарĕ. «Питĕ кулянса, татăлса йĕрсе юлчĕç Çĕпĕрте», — тетчĕç вĕсем пирки.

Çав çурхи янкăр тӳпе пек сенкер куçлă

тунсăхлă хĕрачана пĕрре çеç мар тĕлĕкре курнă эпĕ, халĕ те аса илкелетĕп. Ăçта-ши вăл? Шăпи мĕнлерех килсе тухнă-ши?

Мана тĕкĕнмен кашкăрсем вĕсен кил-йышне инкек кӳмен пулсан йăлтах урăхла çаврăнса тухмаллаччĕ.

Шухăшлама, шутлама вăхăт ытларах пула пуçларĕ ĕнтĕ. Тепĕр хут аса илетĕп те тĕлĕнетĕп: çав «сурăхсем» мана сĕртĕннĕ пекех явăнса çӳрерĕç-çке. Ăнсăртран пĕрин ури çине таптасан вăл хăрлататчĕ ĕнтĕ. Чĕре çурăлса каятчĕ пуль. Е «аташнăскерсене» хăратса килĕсене хăваласа ярас тĕллевпе тăрья! тесе хыттăн кăшкăрас — тапăнатчĕçех ĕнтĕ мана... Çав чăн пулнине те каласа кăтартаяс çукчĕ эпĕ сире...

* * *

Çакă чăн пулнине хăшĕ-пĕри ĕненесшĕн мар. Йытăсене асăнмастăп-мĕн, вĕсем хытă вĕрсе çынсене вăратмаллахчĕ имĕш. Ĕç-пуçĕ тахçанах пулнăран халĕ тин çирĕплетсех калаймастăп: сасă панă-и тăватă уралла туссем? Ун чухне йытă тытсах каймастчĕç. Кирлех те пулман вăл: вăрăпа аппаланасси ялта йăлана кĕменччĕ. Çуртсене те çăрапа питĕрмен. Чуна йăпатмалăх пĕчĕк йытăсем усракаланă ĕнтĕ, анчах вĕсем çавăн чухлĕ кашкăр шăршинчен хăранăран хĕсĕнсе ларнă пуль пĕр-пĕр кĕтесе. Кантур ятлă хăюллă та тĕреклĕ йытă пурччĕ пирĕн касра. Ăна хуçи, Юман тете, утар хураллама илсе кайнă-тăр.

Çав йытă çинчен каласа кăтартмалли вара питĕ нумай. Вăрманта капкăна çаклансан урине кăшласа татса килне таврăннăччĕ вăл, ун хыç-

çăн та кашкăрпа тулашнă, хуçине тапăнма тăнă упана та хăратнă, хăваласа янă...

* * *

Çакă чăн пулнине ĕненекенсенчен те тепĕр чухне ырă сăмахах илтмен эпĕ. «Кашкăрсем те тиркенĕ сана — кама кирлĕ çын эсĕ?» — тесе каланăччĕ мана килĕштерпнĕ хĕрех. Тен, эпĕ ăна ачалăхра çухатнă сап-сарă çўçлĕ те сеп-сенкер куçлă хĕрача çинчен ытла та вăйлă кĕвĕçтермелле юратса каласа кăтартнă-ши?..

## ВĂРТТĂН ЙĂВА

Канма яла таврăнтăм. Аттепе анне савăнсах кайрĕç. Ара, шăп та шай кĕтў черечĕ çитнĕ иккен.

Пирĕн енче ĕнесене вăрманта çўреттеретчĕç. Уй-хире çулла кĕртмен. Пур çĕрте те тыр-пул акнă е пахча çимĕç лартнă. Трактор сухалама кĕреймен вырăна е электролини юписен çумне кĕреçепе чавтарнă. Çĕрпе питĕ перекетлĕ усă курнă.

Çапла çўретĕп кĕтўре. Вĕтлĕх, хăвалăх хупăрласа илнĕ пĕчĕк çеç кўлĕ патне пырса тухрăмăр. Ĕнесем шыв ĕçме унта кĕрсе кайрĕç. Эпĕ хăвалăх патне çывхарсан кайăк кăвакал шăв-шав туса вĕçсе хăпарчĕ. Ăнлантăм: кунта унăн йăви пур. Курха, ĕнесем ун тавра çўренĕ — хăраман вĕсенчен. Выльăх-чĕрлĕх ăна тĕкĕнмессине чухлать. Çăткăнсем — кашкăр, тилĕ, сăсар, пăсара — вĕсемшĕн хăрушă, хăйсене те, çăмартисене те кăпăр-капăр хыпса çăтма пултараççĕ. Эй мĕскĕн кайăк кăвакал, этеме те эсĕ вĕсен шутне кĕртетĕн-çке.

Пĕр енчен, тĕрĕсех. Мĕн чухлĕ пĕтермен-ши вĕсене çын тени? Пăшалпа пере-пере ӳкернĕ.

Кӳлĕ хĕрринчи тĕмеске патне пырса пăхрăм та йăва асăрхарăм. Унта — çичĕ çăмарта.

Кĕтӳрен таврăннă чухне кӳрше тĕл пултăм. Кайăк кăвакал йăвине тупнине каласа кăтартрăм ăна. Ăçтине тĕпчеме пуçларĕ вăл. Аса илех кайрăм, пирĕн ялта кайăк кăвакалăн çăмартисене чăх айне хурса чĕп кăларттараççĕ. Вĕсем вĕçсе ан кайччăр тесе çунаттисене пĕрмай кассах тăраççĕ.

— Йăви Укçа çырми тĕпĕнче, — суйрăм кӳрше.

Вăл питĕ тарăн, унта анса хăпарасси те теме тăрать. Кайса шыраса пăхрĕ-ши?

Кайăк кăвакал чĕпписене чиперех кăларса çитĕнтернĕ пулсан тем пекехчĕ. Вĕçсе çӳреччĕр ирĕкре. Савăнăç кӳччĕр.

## ПӲРТРЕ ШĂХĂРСАН...

Артур — хăйне евĕрлĕ арçын ача. Ун çине пăхсан вăл вун улттăра тесе нимĕнле те калаймăн. Кĕлетки тепĕр çитĕннĕ çыннăнне аса илтерет. Хулпуççийĕсем усăнса тăмаççĕ. Чăнкă. Утти яланах вăш-ваш.

Тепĕр уйрăмлăхĕ унăн — вăл хăш-пĕр тантăшĕ пек кунĕн-çĕрĕн компьютер умĕнче лармасть. Çапах та ваввракурăмĕ юлташĕсеннинчен чылай анлăрах. Кĕнеке вулать, ăна ытларах илемлĕ литература илĕртет.

Такам хĕтĕртнипе астрономие тĕне хирĕç дисциплина тесе шкул программинчен кăларса пăрахнăччĕ. Вăл Çут тĕнче епле пулса кайнине

Библире çырса кăтартнă пек ăнлантармасть имĕш. Çавна пула çамрăк ăруран çуррине яхăн Хĕвел Çĕр тавра çаврăнать тесе шухăшлама пуçланăччĕ те. Пĕр паллă спортсменăн мăшăрĕ «Чи лайăх мăшăр» конкурсра ыйтăва çавăн пек хуравласа çынсене култарнăччĕ те ĕнтĕ.

Тĕнчери пĕрремĕш хĕрарăм космонавт, Валентина Терешкова, мăнукĕсене астрономие килĕнче çеç вĕрентме тивнишĕн питĕ пăшăрханса сăмах каланăччĕ.

Артур, ытларах та ытларах пĕлме юратакан ача, ашшĕ шкулта вĕреннĕ кĕнекене алран ямарĕ. Çапла вара вăл çăлтăрсемпе туслашрĕ тесен те юрать. Вĕсен тĕнчине этемлĕх йăлтах халап-юмахпа, мифсемпе çыхăнтарнă-çке. Пĕлме юратакан тантăшĕсем çавсене каласа кăтартма яланах ыйтаççĕ.

Пирĕн Галактика мĕн ятлине пĕлменнисем те пайтахчĕ малтанласа. Сĕт Çулĕ ăçтан тухса кайнине илĕртӳллĕн ăнлантарма тăрăшрĕ Артур:

— Ку вăл, — пуçларĕ сăмахне, — грексен мифĕнчен кĕнĕ. Гера, хĕрарăм турă, хăйĕн ывăлне, Геркулеса, ĕмĕртнĕ чухне кăкăрĕнчен сĕчĕ сирпĕннĕ имĕш. Çавсенчен çăлтăрсем пулса кайнă. Сĕт Çулĕ грекла — Галаксиас. Чăвашсем ăна Хуркайăк Çулĕ теççĕ. — Вара вăл çавăн ятлă сăвва пăхмасăр каласа пачĕ:

— Такам юри, çил вĕрнĕ майăн,
Пăлхатнă пек вучах кĕлне,
Вак çăлтăрсем нумай-нумаййăн
Тӳрех капланчĕç куç тĕлне.

Ăна кунта Хуркайăк Çулĕ
Тесе ят панă авалтан.

Миçе хутчен итленĕ пулĕ
Çав калава чун-хавалтан:

«Хур кайăксем тахçан тӳлеккĕн
Инçе каймашкăн тухнă тет,
Анчах пĕри тем ăншăрт лекнĕн
Сасартăк хавшаса çитет.

Юлташĕсем унран салхуллăн
Вĕçсе иртеççĕ те вăрах,
Имшер çунаттипе ал сулнăн,
Чирли тăрса юлать хăрах.

Тусне çухатнă пысăк ушкăн
Ăна çул кăтартма пĕрмай
Такам темле ӳпкевлĕн хушнăн
Тĕксем пăрахнă-мĕн нумай.

Çапла çиçет Хуркайăк Çулĕ
Паян кунччен чăн тӳпере».
...Çунатлă ĕмĕтрен вăл çӳллĕ,
Çапах çитесчĕ-ха пĕрре.

Инçе çăлтăрсемпе этемĕн
Пур тейĕн çыхăну таçта,
Вăййисене сăнанăçемĕн
Темскер йăшăлтатать шалта.

Артур интонаципе, пысăк туйăмпа вулани юлташĕсене питĕ килĕшрĕ курăнать, вĕсем алă çупрĕç. Вара вăл сăмахне малалла тăсрĕ:

— Галактикăра çĕр миллиард ытла çăлтăр. Вĕсенчен пĕри — Хĕвел. Ун тавра ытти планетăсемпе пĕрле Çĕр çаврăнать. Хĕвелтен çĕршер-пиншер хут пысăкрах çăлтăрсем пур. Хăшĕ-пĕри тахçанах сӳннĕ — çутисем вара кунта тин çитеççĕ, — хавхалансах калаçрĕ арçын ача ыттисем ăна тимлĕн итленине кура.

Хěвел те пăнчăсăр мар теççě те, çитменлěхě Артурăн та пур. Тен, кăлтăк теме те çук ăна. Асламăшне питě юратать пулин те, унпа тепěр чухне пěр чěлхе тупаймасть. Вăл вěрентсе каланисене ытларах тěшмěшлěхпе çыхăнтарать. Акă пěррехинче асламăшě ăна çапларах асăрхаттарчě:

— Кушак хăлхи урлах питне çурě. Хаклă хăна килет.

Артур чухларě-ха ватти теме систернине, çапах ăшěнче тăрăхласа илчě те çакăн пек пěтěмлетӳ турě: «Чěкеçсем çěр çумěпе вěçеççě — çумăра ку» тенине ăнлантарма пулать-ха. Хурт-кăпшанкă хыççăн аяла анаççě ěнтě кайăксем. Кушак ăçтан пěлейтěр такам килессе?»

Вырăнне те пуçтармарě, урайěнче йăвалаканакан япаласене те тěкěнмерě арçын ача. Яланах тирпейлě çӳрекенскерěн тумтирě те ěнертенпех тенкел çинче.

Кăнтăрла сасартăк алăк шăнкăравě янăраса кайрě. Уçрě те — Аля, Алевтина, тăра парать! Гальăпа, чи çывăх юлташěпе. Шалт тěлěнчě Артур. Сюрприз-ши ку? Альăна вăл, астрономи кружокě йěркелес ěмěтпе пурăнаканскер, хăйсем патне чěннěччě, ашшěн телескопне кăтартма шантарнăччě. Анчах лешě нимех те шарламанччě.

Хěрсене Артур хăйěн тирпейсěр пӳлěмне кěртме именчě. Кухньăра чей ěçнипех çырлахма тиврě вара. Лешсем телескоп çинчен ыйтсан атте вăхăтлăха такама парса янă тесе суйма тиврě. Чи килěштернě хěре улталарě. Аван мар.

Çакăн хыççăн Артур шухăша кайрě. Ара, асламăшě кушака курса хаклă хăна килессине тěрěсех каланă-çке. Чăнлăхě — яланах тирпейлě пулмаллинче.

Арçын ача кăштах вăхăт иртсен ашшĕнчен амăшĕ ăна мĕнле пăхса çитĕнтерни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Ăна вăл нихăçан та вăрçман иккен. Çапларах ăс панă: «Пӳртре шăхăрсан — укçа килмест. Урана сĕтел хушшинче сулласа ларсан — унта шуйттан ярăнать». Тĕшмĕш сĕмĕ сисĕнет пек çак сăмахсенче. Анчах тĕрĕсех-çке: пӳртре шăхăрни ырă мар ĕнтĕ, урана силлесе ларни те килпетсĕр.

Асламăшĕ Артура пĕрмаях çапла асăрхаттарать тата: «Çӳçе урама пăрахма юрамасть — кайăк унран йăва тусан пуç çаврăнакан пулать».

Çак сăмах пысăк пĕлтерĕшлине вăл хăех чухласа илчĕ. Тепĕр чухне татăк уралла кайăккĕшĕке асăрхама тивет. Чылай чухне сăлтавĕ акă мĕнре: çӳç йăваланса ларать те, вăл хĕстернине пула юн çӳреме пăрахнăран чĕпĕсен тяпписем татăлса ӳкеççĕ.

Çапла вара асламăшĕ ырра ытарлăн вĕрентме тăрăшни усă кӳнине лайăх ăнланса илчĕ Артур. Паллах, çĕнĕ ăрăвăн ăс парас меслечĕ урăхларах пулĕ-ха. Чи кирли — тĕллевĕсенчи пĕрпеклĕх: ку вăл — ырра вĕрентни...

## КАЛАÇАКАН БРИТВА

Тахçан-тахçан журналта манпа пĕрле Лазарь Якимович Петров художник ĕçлетчĕ. Ячĕпе ашшĕ ячĕ пĕр паллă çыравçăннипе тӳр килнипе питĕ мăнаçланатчĕ. Лешĕ, самаях кăраскер, ăна Лазарь Якимович тесе темиçе хутчен те хулпуççинчен лăпканă иккен, кĕнекисене вăл илемлетессе хытă шаннине те пĕлтернĕ-мĕн.

Сăмах-юмах, анекдот е пулни-иртни çинчен

ӳстерсе, хӑйӗнчен хушса каласа пама питӗ ӑстаччӗ ҫакскер. Сӗтел хушшинче чылайӑшӗ ӑна ҫеҫ кусран пӑхса ларатчӗ. Уйрӑмах хӗрарӑмсем каҫса каятчӗҫ.

Хӑйӗнчен шӳтленине, тепри ҫиеле тухнине тӳсме пултараймастчӗ вӑл. Ҫапах та унпа пӗр пӑтӑрмах сиксе тухрӗ-тухрех.

Пӗррехинче ӗҫре Лазарь Якимовичӑн радио ҫӗмӗрӗлнӗ. Ҫӗнӗ хыпарсем итлеме юратаканскер ниҫта кайса кӗреймест.

— Ыран бритвуна илсе кил те чун каниччен итлесе лар, — сӗнӳ патӑм ӑна.

— Пулма пултараймасть, — ахӑлтатса кулса ячӗ ку.

— Калаҫать, — ҫине тӑтӑм эпӗ.

— Атя тавлашатпӑр, — чӗрре кӗчӗ хайхи.

— Мӗнле? — ыйтрӑм эпӗ.

— Ресторана апат ҫиме илсе каймалла, — сӗнчӗ вӑл.

— Килӗшетӗп, — алла тӑсса патӑм ӑна.

— Юрӗ-юрӗ, — лӑпланам пекки пулчӗ ку. — Пурпӗрех эсӗ выляса яратӑн. Ман сулланса ҫӳреме вӑхӑт ҫукрах, — тесе тухса кайрӗ.

Тепӗр кунхине Лазарь Якимович ман пата Симон Игнатов фотокорреспондентпа пырса кӗчӗ.

— Эпӗ тӗрӗслӗхе юрататӑп. Ҫавӑнпа тавлашмах шутларӑм. Хальхинче хулари чаплӑ ресторанра — «Эверестра» — хӑналамалла! Алӑ татаканни те пур, — ҫине тӑчӗ вӑл.

— Юрать-юрать, — хирӗҫлемерӗм эпӗ.

— Хӑҫан машинӑсӑр килмелле? — ыйтрӗҫ иккӗшӗ те харӑсах.

— Ыранах, — хурав патӑм вӗсене.

Тепӗр кунне хайхисем йӑл-йӑл кулса пырса кӗчӗҫ ман пата.

— Эпир машинӑсӑр килтӗмӗр. Пуҫтарӑн кайма. Укҫуна ытларах чик. Эсӗ сӑмаха тытакан ҫын пулнине пӗлетпӗр эпир, — теҫҫӗ мана. Лӑх-лӑх! кулаҫҫӗ хӑйсем.

Сумкӑран бритвӑна кӑлартӑм та радио розеткине чикрӗм. Вӑл чиперех калаҫма пуҫларӗ.

— Лазарь Якимович, шӑп та шай эсӗ юратакан ҫӗнӗ хыпарсем халӗ. Итле, — йӑл култӑм эпӗ.

— Пулма пултараймасть! — кӑшкӑрса ячӗ вӑл. Хӑй сисмесӗрех вӑрттӑнлӑхне уҫрӗ, ҫур ҫӗрччена юлташӗсем, пӗлӗшӗсем патне шӑнкӑравланӑ мӗн. Тӗрӗслеттернӗ — пӗрин бритви те калаҫман иккен. Ҫавӑнпа хӑй выляса илессе шаннӑ.

— Сан ухмах бритвушӑн эпӗ айӑплӑ мар. Тен, эсӗ ун ӑшне тем ӑсталанӑ-ха, — тесе тухса кайрӗ. Симон Игнатов та килӗшрӗ унпа. «Ҫӑхан куҫне ҫӑхан сӑхмасть» каларӑша персе ямасӑр аран тӳссе лартӑм.

Вӑхӑт самаях иртрӗ. Лазарь Якимович хӑй выляса янине йышӑнасса кӗтсе илеймерӗм.

Ҫапах та ӑна тавӑрмалли самант пӗр кунхине ҫитрӗ-ҫитрех.

— Паян — питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ тӗлпулу! — савӑнӑҫне пытараймарӗ художник. — Командировкӑра паллашнӑ пике пӗр кунлӑха ҫула май килсе ҫитет. Пӗлесчӗ сирӗн, мӗнле чипер вӑл. Пӗр кашӑк пылпа ҫӑтса ямалла! Улттӑра шӑнкӑрав кӗтетӗп.

Ун чухне кабинетсенче икшер телефончӗ: пӗри — хулана тата ытти ҫӗре тухмалли, тепри — вырӑнти — ӗҫрисемпе ҫыхӑнмалли, пӗр-пӗр ҫын килсен вахтер шӑнкӑравласа пӗлтермелли. (Паллах,

кĕсье телефонĕ çинчен ун чухне тĕлленмен те.)

Лазарь Якимович патне шăнкăравлама пуçларăм вăл кĕтнĕ вăхăт çитсен. Хайхискер пĕрне тытсан трубкăна хуратăп та теприне çавăратăп. Нихăшĕнпе те ун патне кĕтнĕ шăнкăравĕ ан çитейтĕр тетĕп ĕнтĕ. Çур сехете яхăн çапла тертлентертĕм. «Алло, алло!» — тесе кăшкăра-кăшкăра çăварĕ типсех ларчĕ пулас. Унтан чăтса тăраймарĕ — чиперккен еркĕнĕ йĕрлет тесе хăранипе хăвăртрах тухса шăвăнчĕ.

Тепĕр кунне ун патне, чăнах та, кĕтнĕ пике шăнкăравласа çитейнĕ.

— Ултавçă эсĕ, йĕксĕк, — тенĕ те тӳрех трубкăна хунă.

Çав сăмахсемпе маншăнах тавăрнă пек пулса тухать.

* * *

Çапах та, юлташсем, камăн та пулин бритви калаçмасан ку суять тесе ан айăплăр мана. Мĕн пулса иртнине тĕрĕссипе каласа кăтартрăм. Чăн сăмахăн суйи çук.

## КРИМПЛЕН КОСТЮМ

Пулнă çав вăхăтсем, пулнă... Кролик çĕлĕкĕ те тупса илме çукчĕ.

Пулнă çав вăхăтсем, пулнă... Укçу пулсан та çын çине тухма тесе йĕркеллĕ тумтир туянма кансĕрччĕ.

Мана шăпа тени пĕр çыравçăпа çывăхлантарнăччĕ. Самаях çивĕч сатира, шӳт, пароди хайлавĕсем çыратчĕ хăй вăхăтĕнче. Шăпах унпа пĕрле ĕçленĕ те эпĕ. Тинĕссенче урлă та пирлĕ

ишсе пурнăç тути-масине чухлаканскер самаях хăюллăччĕ. Тĕрлĕ мыскара сехечĕ-сехечĕпе каласа пама пултаратчĕ.

Самар чăвашĕ таланчĕпе хăвăрт палăрас шутпа Шупашкара парăнтарма килсен Атăл хĕрринчи кимĕсен айĕнче мĕнле çывăрса пурăнни çинчен юптарса кăтартатчĕ. Çапса çăвакан çумăрла та тĕттĕм каçсене сăнарланă пĕр сăввинче вăл çаплах çырнăччĕ: «Кун пек чухне çӳреççĕ хуçасăр йытăсем — тата... хваттерсĕр поэтсем». Эпĕ унпа паллашнă чухне унăн пурнăçĕ чиперленнĕччĕ ĕнтĕ.

«Атя хамăр шутпа виçĕ кунлăх кану илетпĕр те тумтир туянма Мускава вĕçтеретпĕр», — сĕнӳ пачĕ вăл. Хаваспах килĕшрĕм.

Тĕп хула хапăлах йышăнмарĕ пире. Ăна лайăхах та пĕлместпĕр. Çавăнпа вокзалсен çумĕнчи пысăк универмагсенче тĕрткелешетпĕр. Халăхĕ хĕссе лартнă пек. Акă кунта кĕрĕк е çĕлĕк илсе килнĕ имĕш. Черетри вырăна укçалла сутакан та темĕн чухлех. Патне çитетпĕр — япали пĕтет. Аптранă енне урамра ирĕккĕн пыракан çынран ыйтма шутларăмăр. «Пире лайăхрах костюм кирлĕ. Ăçта илме пулать-ши?» — терĕмĕр. «Кунтан инçех те мар пĕр фабрика пур...» — ăнлантарчĕ пире.

Çитрĕмĕр унта — куç-пуç чарăлса кайрĕ. Лавккинче кримплен костюмсем çакăнса тăраççĕ! Ун чухне вĕсем йăлана çеç кĕнĕччĕ-ха. Пĕрне тытса пăхатпăр, теприне... — пурте шалпар. Вĕсене тăхăнса çӳремешкĕн капмар çын та тупăнассăн туйăнмасть. Пирĕн çине кунта ĕçлекен арçын куларах пăхса тăрать. Юлташăм тавçăрса илчĕ: ăна укçа сĕнмелле! Лешĕ хăвăртах килĕшрĕ.

Кайрĕ те икĕ костюм илсе килчĕ, пĕрне мана тыттарчĕ, теприне — тусăма. Тăхăнса пăхатпăр — шăп та лăп пире валли çĕленĕ тейĕн. Укçа паратпăр ăна — алран илмест. «Костюмсен кĕсйисене чикĕр», — тет.

Ун чухне сĕтев тени пысăках марччĕ, пĕр е икĕ-виçĕ пулăштух илмелĕх çеç. Лацкан çине çакнă «СССР журналисчĕсен союзĕ» палла асăрхарĕ вăл сасартăк.

— Ăçта çыратăр? — ыйтрĕ пăлханса.

— Ниçта та. Эпир ача-пăча кăларăмĕсенче çеç ĕçлетпĕр, — лăплантарчĕ юлташăм.

Çырма-и? Кримплен костюмлă тунăшăн пысăк тав. Мускавран пушă алăпа таврăнсан чĕр мăшкăл-çке. Туянмалли татах нумай. Кунĕпех çӳресе ывăннă урасем сĕрлеççĕ. Канас килет. Пĕр хăна çуртне пыратпăр — вырăн çук, тепринче те яхăнне ямаççĕ. Пирĕнпе калаçасшăн та мар темшĕн. Çав вăхăтрах хăш-пĕрин паспорчĕ асамлă тейĕн. Ун ăшне нухрат чикнине эпир чухлама та пултарайман.

Хусан вокзалне таврăнтăмăр. Кунта халăх хĕвĕшет. Ăçта та пулин сĕвенес килет. Аптранă енне кану пӳлĕмĕ текен тĕле пырса тухатпăр. Кунта та черет. Сасартăк икĕ арçын çитсе тăчĕ. Пичĕ-куçĕсем шыçăнса кайнă. Çĕр каçма вырăн пуррине пĕлтерчĕç хайхискерсем. Кĕпĕр-р! çавăрса илтĕмĕр вĕсене.

— Çук, кунтах юлатпăр, — чарчĕ мана юлташăм. — Те çаратма илсе каяççĕ.

Пырас текенсем хушшинче çар çыннисем те пуррине курса шухăшне çийĕнчех улăштарчĕ.

Метроран тухсан нумаях та утмарăмăр — тĕттĕмре темĕнле хуралтă тĕлне пырса тухрăмăр.

Вакунсем юсаççĕ иккен кунта. Пĕрин алăкне уçрĕç те вырнаçма хушрĕç. Çĕтĕк матрассемпе утиялсем те пур-мĕн. Эпир виççĕмĕш яруса (ăпăр-тапăр хумалли вырăна) хăпарса выртрăмăр. Кунта шанчăклăрах. Çывăрса кайсан та пирĕн кримплен костюмсене вăр-вар пĕçертеймĕç: вĕсене пуç айне хунă. Тӳрех укçа пуçтарчĕç «тараватхуçасем».

Эпир, ывăннăскерсем, хытах ыйха путнă. «Васкăр, васкăр, ĕçлекенсем киличчен хăвăртрах пуçтарăнса тухса кайăр!» — кăшкăрашма пуçларĕç ир-ирех. Йăр-япăр сиксе тăтăмăр. Тумланма та кирлĕ мар — салтăнмасăрах çывăрнă. Япаласене илтĕмĕр те вакунран тухма тытăнтăмăр. Тĕтĕм палкаса кĕчĕ алăкран.

— Пушар! — кăшкăрса ячĕ юлташăм.

— Ан хăра, пушар мар, тĕтĕм чаршав ку, — лăх-лăх кулчĕ шыçăннă пит-куçлă хуçа. — Ĕçе килекенсем сире асăрхасран вăл.

Хуралтăран тĕтĕмпе чыхăна-чыхăна тухрăмăр та уçă сывлăшшăн савăнтăмăр. Шăм-шак çапах та каннă.

— Ушкăнра офицерсем пулман пулсан кунта тем парсан та килес çукчĕ. Теменле çынсем-ха. Вĕлерме те пултараççĕ, — йăл-йăл кулать хăюллă юлташăм, «Тĕтĕм чаршав» ятлă кулăшла калав çырасшăн хавхаланса пырать.

Кримплен костюмпа çынсене ăмсантарса çӳрерĕм. Çирĕп иккен вăл. Тĕсне те çухатмарĕ. Йăларан тухсан ялта аттене парса хăвартăм. Уявсенче тăхăнатчĕ. Вăл вилсен пӳрт алăкне çĕмĕрсе кĕрсе такам илсе кайнă ăна.

Юлташăм темиçе уйăхранах сасартăк укçасăр кавсăлса çитсен паха кримплен костюм çинчен

аса илнĕ те сутма вокзала пынă. Туянас текен тӳрех тупăннă. Хаклашса тăнă вăхăтра милиционерсем пырса тухнă та сутаканнине спекулянт тесе хăйсемпе пĕрле вăйпах илсе каясшăн пулнă. Ку турткалашнă. Илме шутлани вара çав вăхăтра костюма хĕстерсе çынсем хушшине кĕрсе çухалса тарма ĕлкĕрнĕ...

## ЮЛАШКИ ЮРĂ

Хăрушă хыпар Шупашкарсене шалт тĕлĕнтерчĕ: Атăл кӳлмекĕн (шыв кукрин) çыранĕнче акăш вилли тупнă. Ăна тĕрĕслесен пырне йĕп тăрăнса ларнине палăртнă. Ку хыпар чылай чунчĕрене пăлхатнă. Такам кула-кулах ăна çăкăр е кукăль ăшне чиксе ывăтса панă ĕнтĕ кайăка. Кам-ши вăл? Ача-ши? Çамрăк-и е ватă? Ку кирлех те мар. Кĕскен каласан, çын ятне мăнаçлăн йăтса çӳреме Çĕр çине килнĕскер. Анчах...

Хăш-пĕр çынна ĕненме те хăрушшине пĕлетпĕр-ха эпир, çынсем. Чĕрчуна, кайăка çавна ăнлантарса параймастăн-çке. Вĕсем этем чĕлхине пĕлмеççĕ, хăш-пĕрин чĕлхи те наркăмăшлине чухламаççĕ. Çав çын та ирĕклĕн ишсе çӳрекенскере каварланса ачашшăн йыхăрчĕ пуль.

Çапла, пĕр хĕрхенмесĕр акăша вĕлернĕ. Чиперскере, çут тĕнчене савăнăç кӳрекенскере. Чылай поэт пике аллине акăшăн хӳхĕм мăйĕпе, уттине вăл ярăнса ишнипе танлаштарнă, танлаштарать те. Çакă пурпĕр йăлăхтармасть.

Çав илем такама килĕшмен, ăна çут тĕнчерен хаяррăн катса илме хуп-хура аллине çĕкленĕ вăл. Çук-çук, алли мар, чунĕ унăн хăрăм пек хупхура!

Акăша çăкăр е кукăль ăшне йĕп парса вĕлерекенĕ çавăн пекех хăрушă усал-тĕсел-ши? Çынна тивмен-иç вăл. Уншăн çавнашкалах кулянма, хурланма кирлех-ши? Кирлех! Вăл çав тери хаяр. Хаяр та чее. Чее хаяр! Çав пĕр йĕппе вăл вуншар, çĕршер, пиншер чун-чĕрене чиксе ыраттарма пултарнине пĕлнĕнех туйăнать.

Йĕп. Йĕп çăрти. Библире те асăннă ăна. Ку ĕç-пуçĕ уйрăм çыннăн çĕрме пуянлăхĕпе çыхăннă пулин те, вăл асах килет халь: «...Вара Иисус Хăйĕн вĕренекенĕсене каланă: чăн калатăп сире: пуян çынна Çӳлти Патшалăха кĕме хĕн; тата калатăп сире: пуяна Турă Патшалăхне кĕрессинчен тĕвене йĕп çăрти витĕр тухма çăмăлтарах, тенĕ...»

Акăш ĕмĕрĕнче пĕрре юрлать теççĕ. Вилес умĕн çеç...

Хĕрӳллĕ туйăм шанчăклăхĕн символĕ, сăнарĕ мĕн çинчен юрланă-ши? Çут тĕнчерен уйрăлса кайиччен мăшăрĕ умĕнче юлашки хутчен юрланă пуль вăл. Унăн юррине савниййĕ чун-чĕри варрине илсе юлнă ĕнтĕ. Сăвăри пек каласан:

> Чи мăнаçли вăл — юрату, пĕлсем,
> Ăна юракансем — телей куракансем.

Çапла, çын çеç мар, чĕрчун та, кайăк-кĕшĕк те юратма пĕлет.

* * *

Пĕррехинче юлташпа çӳллĕ çурт çумĕнчен иртсе пыраттăмăр. Каç пулса килетчĕ. Сасартăк асăрхарăмăр: çерем çинчи кăвакарчăн хурлăхлăн пăхать пире куçран. Ун умĕнче — тепри... Хăяккăн выртать. Хура шăнасем ларнă, явăнса

вĕçеççĕ. Чĕрĕ кăвакарчăнĕ, мăшăрĕ ĕнтĕ, унран хăпмасть. Хăрамасть пирĕнтен. Çаплах пире хурлăхлăн тинкерет. Мĕн шухăшлать-ши, тем пĕлтересшĕн-ши? Хăяккăн выртаканни çинче çаплах хура шăнасем хĕвĕшеççĕ, сĕрлеççĕ. Каç пулса килет. Пĕччен е мăшăрăн-мăшăрăн иртекен çынсенчен сахалăшĕ кунта чарăнса тăчĕ. Ара, мĕн вăл пĕчĕк чун? Мĕн вăл вилни?..

Кайăка пытармаллине чухларăмăр-ха. Çĕртен пулнин çĕрех кĕмелле. Чунĕ çеç çиçсе çӳремелле, вĕçмелле унăн. Кĕреçе таврашĕ çук-çке çумра. Эпир те пĕр хушă пуçа усса тăтăмăр та малалла утрăмăр.

Çумри çуртра пурăнакансенчен кам та пулин тухса çĕре чикрĕ-ши ăна? Тен, чӳречерен шăршă ан кĕтĕр тесе пĕрремĕш хутра пурăнакан çын таçта аяккалла ывăтрĕ кайăка?..

Ӳкĕнетĕп. Ӳркентĕм-ши ун чухне? Килтен мĕн те пулин чавмалли илсе килсе пытармаллаччĕ мĕскĕне. Тен, такамсем айван çын тесе куласран шиклентĕм? Ырă ĕçшĕн именме кирлĕ маррине манатпăр-çке...

## КАТЕТПА ГИПОТЕНУЗА

Лавкка çумĕнчи çынсем таптаса пĕтернĕ лаптăка тирпейлĕн чавнă та торф сапса курăк вăрри акса хăварнă. Никам та унта ура ярса пусманха. Хуп-хура пулин те, çак вырăн халь куçа илĕртет. Часах курăк шăтса тухĕ те, сип-симĕс кавир пек газон сеп-сенкер тӳпепе киленнĕн туйăнĕ. Тем пекехчĕ çапла пулсан! Ан тивтĕрччĕ ăна малтанхи шăпи!

Акă унччен те пулмарĕ, шăкăл-шăкăл калаçса

килекен вун ултă-вун çиччĕри хĕрпе каччă машинăсем чупакан çул урлă каçрĕç те тин чавнă çĕр çине лаплаттарса кĕрсе кайрĕç, тӳрĕрен тухасшăн пулчĕç ĕнтĕ лавкка патне. Кусене асăрханă вăтам çулхи арçын шанк хытса тăчĕ, ним калама аптрарĕ.

— Катет! Гипотенуза! — кăшкăрчĕ вăл.

Ун çумĕнчен иртсе пыракансемшĕн ку çын йӳтенĕн туйăнчĕ курăнать. Айккинерех пăрăнса иртрĕç вĕсем.

— Математиксем! — тата хытăрах кăшкăрчĕ арçын.

Каччăпа хĕр тинех вăшт çаврăнса пăхрĕç ун çине. Сăн-пичĕсенче тĕлĕнни палăрчĕ.

— Эсир пире тем каласшăн-и? — çăварне ӳркевлĕн уçрĕ каччи.

— Çапла. Килĕр-ха кунта, — кăчăк туртрĕ вĕсене пач палламанскер.

Лешсем ирĕксĕрех лӳпперрĕн ун патне пычĕç.

— Эсир математикăна тăрăшса вĕренетĕр иккен, — йĕкĕлтешнĕн калаçрĕ ку.

— Ăçтан пĕлетĕр? — тĕлĕнчĕ хĕр. — Унпа патшалăхăн пĕрлĕхлĕ экзаменне тытма тивет пирĕн. Çапах та ăçтан чухларăр эпир олимпиадăра тăтăшах çĕнтернине? — мăкăртатрĕ хĕр пĕрчи татуировкăллă аллипе куçне сăтăрса.

— Мĕн пĕлесси, тин чавса курăк вăрри акнă лаптăк урлă тӳрĕрен каçатăр эсир.

— Математика мĕн тума кирлĕ кунта? — шалт тĕлĕнчĕ каччă.

— Ара, гипотенуза икĕ катетран кĕске пулнине асра лайăх тытса юлнă.

— Ăна пĕчĕк ача та аван пĕлет, — тутине тăсрĕ чиперкке. — Эпир физикăпа математика

факультетӗнчен вӗренсе тухнисемпе те тупӑшма пултаратпӑр.

— Эсир пӗлӗвӗрпе хӑвӑра ҫеҫ мар, ҫӗршыва усӑ кӳме пултараятӑр-ши? — иккӗленнӗн пуҫне пӑркаларӗ асли.

Ҫак сӑмахсем кӗҫӗннисене тарӑхтарни тӳрех сисӗнчӗ. Эй ку ҫынпа калаҫса вӗҫне-хӗрне тухаймӑн тенӗн утса кайма тӑчӗҫ.

Ҫакна аван туйнӑ арҫын ҫапла хӑвӑрт каласа хучӗ:

— Шкулта этикет вӗрентмен пуль сире.

— Мӗнле?! — хӗрӳленчӗ йӗкӗт. — Унпа иксӗмӗрӗн те «пиллӗк».

— Ёненес килмест. Вӗрентекенӗр йӑнӑш лартса панӑ пуль ҫав палла. Ҫамрӑк тусӑмӑрсем, пӗлетӗп, математикӑпа патшалӑхӑн пӗрлӗхлӗ экзаменне питӗ ӑнӑҫлӑ тытса вӗренме кӗмелле сирӗн. Ку тӗрӗсех ӗнтӗ. Этикет вара — ӗмӗрхи экзамен. Хӑвна тивӗҫлӗ шайра тытасси питӗ йывӑр вӑл.

— Калаҫатӑр те кирлӗ мара, — чӑтса тӑраймарӗ ҫамрӑк каччӑ. — Газоншӑнах таҫта та ҫитетӗр. Йышӑнатпӑр, айӑплӑ. Анчах эпир мар пулсан теприсем таптаҫҫӗ. Кунта паянхи пекех чавса курӑк вӑрри акнӑччӗ. Урӑххисем урлӑ-пирлӗ ҫул тунӑ.

— Ҫапла ҫав, эпӗ мар тӑк тепри тени пӗтерет те пире. «Усал-тӗсел тӑвасси ан пултӑрччӗ» шухӑш пуҫра хуҫаланмалла чи малтан. Каҫарӑр мана, ват ҫынна, нотаци, мораль вулама пиккеннӗшӗн, — хӑйӗнчен хӑй именчӗ асли.

— Ҫук-ҫук, пирӗнпе кунашкал тахҫанах никам та калаҫманччӗ-ха, — хӑрах куҫне хупланӑ ҫӳҫне хыҫалалла сирчӗ пике.

— Калаçнă-калаçнах. Чылай çĕршывра, сăмахран, газона таптанăшăн пысăк штраф тӳлеттереççĕ. Авă асăрхарăр-и, пĕр шофер ним именмесĕр, хăрамасăр пирус тĕпне кабинăран çул çине персе хăварчĕ. Сингапурта, Китайра уншăн тĕрмене лартаççĕ. Пирĕн ун пек саккунсем çук. Хамăрăн намăса туйни пулмалла. Унран ытларах совеç тени кирлĕ. Намăспа совеç пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ха? — ыйтрĕ вăл иккĕшне черетлĕн куçран пăхса илсе.

— Намăсланма санăн лайăх мар хăтланăвна çыннăн курмалла. Совеçе вара çакă кирлех мар. Хăвăн умăнта хăвна намăс пулни — совеç. Вăл — сана пин-пин çын курнă пекех. Усал хăтланнăшăн кăшлать чуна, — хĕрӳленсех кайрĕ çамрăк хĕр.

— Туятăп, этикăна эсир этикетран лайăххрах пĕлетĕр, — тĕлĕннине пытармарĕ арçын.

Çапла калаçса тăнă вăхăтра çул урлă каçса вĕсен тĕлне çулланнă арçынпа хĕрарăм пырса çитрĕç. Кусем лавкка енне тӳрĕрен каçса çӳренĕ вырăна пӳлсе тăнăшăн кăмăлсăрланни палăрчĕ. Вара кăштах пăрăнчĕç те чавнă çĕр çине ярса пусма тăчĕç.

— Юлташсем, каçарăр та, курмастăр-им, лаптăка тин чавса курăк вăрри акнă? Симĕс çерем тухать часах, — чарчĕ вĕсене çап-çамрăк каччă.

Çакна шӳтлесе каламарĕ пулсан тем пекехчĕ!

Лешсем кăн-н пăхса илчĕç те каялла чакса асфальт сарнă тротуарпа кĕтес туса лавкка еннелле утрĕç.

## КАРБОНАДПА КАРБОНАТ

Гастрономра халăх хĕвĕшет. Аш-какайран хатĕрленĕ çимĕçсен витрини патне пырса тухрăм. Кăмăлсăр сасăсем илтĕнчĕç кунта. Тавар туянакансем кăштах пăрăнсанах сăрланса лартнă çамрăк сутуçă тепринпе калаçни хăлхана кĕчĕ:

— Ялтан килнĕ карчăк-кĕрчĕке ăнланма кансĕр. Тем ыйтаççĕ вĕсем, — тет тутине тăсса. — Çирĕм пĕрремĕш ĕмĕрте пурăнатпăр — этем чĕлхипе ĕретлĕ калаçма вĕренсе çитеймест хăшĕ-пĕри. Шкулта грамматикăна вĕрентмен-ши вĕсене?

Çакăн сăмахĕсем мана килĕшмерĕç, ятласа тăкас килчĕ ăна. «Çилленнипе çил арманĕ лартаймăн» каларăш çеç тытса чарчĕ.

Мĕн те пулин туянмалла-çке манăн. Ассортимент питĕ пуян. Миçе тĕрлĕ кăна кăлпасси çук-ши: сервелат, салями, балык, ветчина... Йăнăш çырни сасартăк куçа тăрăнчĕ.

— Мĕн, эсир çынсене минретесшĕн-им? Кунта сутма юраман япалана мĕншĕн тытатăр? — тарăхнăн ыйтрăм сутуçăран.

Кăн-кан пăхса илчĕ ман çине майра. Ун умĕнче тăн-тан çын тăнă пек туйăнчĕ-ши?

— Пирĕн кунта аш-какайран хатĕрленĕ апатçимĕç çеç, урăх нимĕн те çук! — кăшкăрса тăкрĕ вăл.

— Карбонат мĕншĕн кунта выртать?

— Вăл лайăххах, пăсăлман. Паян çеç складран илсе килчĕç.

— Карбонат нихçан та пăсăлмасть-ха. Ăна мĕншĕн кунта тытатăр? — чĕрре кĕнĕн калаçатăп эпĕ.

— Ăçта тытар тата? Унта сивĕ.

— Карбонатшăн температура пĕлтерĕшсĕр. Ун вырăнĕ кунта мар! — чĕлхепе касса татрăм ăна.

— Пурте йĕркеллĕ. Мĕн ĕçсĕр аптраса чăрмантарса çӳретĕн? — тесе кĕсье телефонне кăларчĕ. Те директора, те хурала чĕнсе илме тăчĕ ĕнтĕ...

Çамрăк сутуçа намăса хăварас килмерĕ.

— Мĕн йĕркелли пултăр? Карбонатăн вырăнĕ кунта мар, хуçалăх лавккинче, тимĕр-тăмăр хушшинче. Карбонат вăл — çĕр кăмрăкĕн йӳçекĕн тăварĕ. Вилĕ чĕлхерен, латинларан, кĕнĕ, — тăн пама тытăнтăм чипер майрана. — Тепри, вĕçĕ янăравлă хупă саспаллилли, — карбонад, француз сăмахĕ: çамрăк сысна филинчен ыхрапа тата мускат мăйăрĕпе пĕçернĕскер.

Майра кĕсье телефонне йăпăр-япăр чиксе хучĕ.

— Пирĕн кладовщица ялта çуралса ӳснĕ. Çав йăнăш çырать ĕнтĕ, — тӳрре тухма тăчĕ хайхи.

— Çын çине ан йăвантарăр. Шкулта хăвăрăн вĕренмелле пулнă орфографие, — тĕртсе илтĕм хăйĕн евĕрлех.

Тепĕр темиçе кунтан çав гастронома каллех пытăм. Леш майра карчăксемпе чип-чиперех пуплет, хăр-хар калаçмасть. Хальхинче витринăра «карбонат» ярлăка мар, «карбонад» куртăм. Туянтăм вара ăна. Майра ырă та, хаяр та шарламарĕ. Ăшĕнче тав турĕ пуль эпĕ ăна намăсран çăлнăшăн. Ара, тавар туянакансем кладовщицăна мар, ăна кураççĕ-çке...

## СИСĔМ

Эпир ача чухне телевизор пулман. Компьютер çинчен вара никам та тĕлленмен. Таврари пысăк ялсенче те электричество çукчĕ, краççын лампипех тертленетчĕç. Юрать-ха, пирĕн сĕм вăрман варринчи тĕттĕм ялта çуртсене çутă кĕртейнĕ ун чухне. Халăх йывăр ĕçре тар тăкса пухнă укçапа генератор туянма пултарнă.

Йăпанăçĕ те урăхларах пулнă пирĕн. Ача-пăча сассипе, вăййи-куллипе урамсем янраса тăратчĕç.

Эпир ытларах чĕрчун тĕнчине çывăх пулнă. Кайăк-кĕшĕк, выльăх-чĕрлĕх илĕртнĕ пире. Вĕсене пăхмалла пулнă.

Хĕлле ĕнесем пăрулатчĕç, сурăхсем пăранлатчĕç. Чылай чухне — шартлама сивĕре. Пăру е путек шăнса ан хыттăр тесе çĕрĕпе çывăрмасăр сыхлама, хунар çута-çута витене туха-туха пăхма тиветчĕ.

Те атте-аннене хĕрхенсе пулăшас тенĕрен, манра темĕнле ăнланмалла мар сисĕм аталанчĕ. Ĕне хăçан пăрулассине, сурăх пăранлассине тĕлĕкре курма тытăнтăм. Тӳрех вăранса каяттăмччĕ те атте-аннене пĕлтереттĕм. Вĕсем вара тин çут тĕнчене килнĕскерсене пӳрте йăтса кĕретчĕç.

Çултан-çул вăйлăрах ĕненетчĕç мана аттепе анне, хĕллехи шартлама каçсенче те чунĕсем лăпкăччĕ.

## ЧĂРĂШ ÇЕÇ ХĔРХЕНЧĔ

Çутăлман-ха. Кивĕ Çĕнĕ çул каçĕ иртнĕ. Ăна хăшĕ-пĕри кĕçĕр те сăлтав тупса чаплăн паллă тунă ĕнтĕ.

Акă симĕс чăрăша такам, ирех таçта кайма тухнăскер, урама юр кĕрчĕ çине ывăтса хăварнă. Ёлкăна Кивĕ Çĕнĕ çулччен килтех тытас йăла пур чылайăшĕн. Текех кирлĕ мар ёнтĕ вăл — йĕпписем тăкăнма пуçланă. Кил-йыша икĕ эрне каялла вăйлă (кĕçĕр те кăштах) савăнтарнăскер халь çул айккинчи юр кĕрчĕ çинче тăлăххăн выртать, иртнĕ пурнăçне аса илнĕн туйăнать. Пĕчĕк вăрăран пăхса ӳстерчĕç ăна. Хавасчĕ чăтлăхри савăк ушкăнра. Хĕвел çупăрлатчĕ, çулла кайăк-кĕшĕк юрăкĕвĕпе килентеретчĕ, хĕлле çил-тăман шап-шурă, такам та ăмсанмалла кĕрĕк парнелетчĕ.

Пĕр кунхине сивĕ таса сывлăша пăсса çăварĕсенчен темĕнле тĕтĕм мăкăрлантаракан çынсем касрĕç те тӳрккессĕн тиерĕç лав çине ăна тата тусĕсене. Унтан, ирĕклĕхе юратакан сăнчăрланă чурасене сутнă пек, пасарта хаклашрĕç вĕсемшĕн. Темĕнле çын туянчĕ те çакна тĕттĕм багажника чикрĕ, кăлтăртаттарса пынă хыççăн хваттере йăтса кĕчĕ. Сивве хăнăхса çитнĕскере сасартăк шăрăх пулса кайрĕ, пăчă. Хаяр хĕрарăм (мăшăрĕ пулас) тӳрех ятлаçма тытăнчĕ: хаклăрах панă-мĕн чăрăшшăн. Хĕрачи йĕрмĕшме пуçларĕ тата: пĕр турачĕ хуçăк иккен. Йывăç айăплă-им уншăн? Çапах та лăпланса çитсен теттисене аран йăтса тăмалла капăрлатрĕç. Хурланать вăл, çи-пуçĕ вара йăлтăр-йăлтăр çиçет. Çынсем çĕрĕпе ун илемне мухтарĕç. Чăрăшран ёлка пулса тăнă иккен вăл.

Çапла, çап-çамрăк чăрăш, капăр тумне хывса илсе урама кăларса ывăтнăскер, юр кĕрчĕ çинче выртать халь.

Авă кафе умĕнче чаплă машина тăрать. Тем хĕвĕшеççĕ унта, шавлаççĕ. Итлесшĕн мар-ха кĕрт çинчи йывăç — пурпĕр тăнлама тивет.

— Тасал кунтан, кĕрт йытти! — кăшкăрать арçын.

— Халь çапла-и? Санран лайăх хĕрарăм курман терĕн çĕрĕпех! — йĕрмĕшет хĕрарăм.

— Уншăн эпĕ сана ĕçтернĕ-çитернĕ!..

— Ăçта каяс-ха манăн?! Транспорт та çӳремест хальлĕхе.

— Ме... Такси чĕн, — ахăртнех, укçа тыттарчĕ арçын.

— Çула май лартса кай ĕнтĕ.

— Машинăра сан паккăç шăршу пултăр-им? Арăм сисиччен сирĕлтĕр!

Хĕрарăм çапах машинăна ларасшăн талпăнчĕ.

Кабинăри арçын ăна кăкăрĕнчен хыттăн тапрĕ те, хĕрарăм сирпĕнсе кайрĕ.

Çул хĕрринчи кĕрт çине пăрахса хăварнă чăрăш хĕрхенсе пăхнă пек туйăнчĕ. Ăна çапах та унашкалах тапса ывăтман-çке...

## ХУТА КĔРЕЙМЕРĔМ

Асар-писер 1990-мĕш çулсен варри. Вăрăсем, куштансем пуйса кайнă, ыттисем юхăннă таппăр. Пĕррехинче пĕчĕк хĕрĕмпе иксĕмĕр парка уçăлма кайрăмăр та аттракцион патне пырса тухрăмăр. Халăх йышлă мар. Ашшĕ-амăшĕсем ачисене савăнтараççĕ кунта. Сисетĕп: тĕпренчĕкĕм те карусельпе ярăнасшăн.

Ачалăх çавăн пек вăл: ярăнас килет ун чухне. Хамăр та, ял ачисем, хĕлле сăртран çунашкапа вирхĕннĕ, Мăнкун çитсен чуччу çинчен анма пĕлмен.

Кĕсьерен енчĕке кăларса пăхрăм: шăп та шай пĕрре ярăнтармалăх çитет укçи. Анчах çула май

çăкăр илмелле-çке пирĕн. Çавăн валли çеç чиксе тухнă пур-çук ваккине.

Хĕрачан кăмăлне хуçма тиврĕ. Уншăн халь те пулин ӳкĕнетĕп.

* * *

Нумаях пулмасть çав парка кĕтĕм. «Шуйттан урапи» текен аттракцион патĕнче хĕвĕшекен ачасене хĕрарăм хӳтерет.

«Кусем ярăнасшăн ĕнтĕ — укçисем çук», — тесе шухăшласа илтĕм те унта пытăм. Савăнтарас килчĕ мĕскĕнсене.

— Билечĕсене хамах илсе паратăп. Миçен-ха эсир? — терĕм.

Ачасем кĕпĕр-р! сырса илчĕç.

— Вун виççĕн! — кăшкăраççĕ хăйсем.

Хĕрарăм вара мана ятласа тăкрĕ:

— Вĕсен укçи çук тетĕн-им? Çӳле хăпарса çитсен кутăн тăрса селфи тума пуçлаççĕ. Ӳксен манах айăпла ççĕ.

Намăсланса пăрăнса утрăм вара. Çителĕклĕ пурнăç та çитменлĕхсемсĕр мар çав.

## ПУÇХĔРЛĔ ÇӲРЕКЕНСЕМ

Виçĕ тупмалли юмах аса илтерем-ха: «Чунĕ пур та, юнĕ çук. Пирĕн пуç тăрринче мĕн пуçхĕрлĕ çӳрет? Шăлсăр карчăк шăм кăшлать». Эпир вара çаксем мĕне пĕлтернине тӳрех чухласа илнĕ.

Эпĕ ача чухне çуртсенче таракан-хăнкăла нумайччĕ. Хăнкăли, лапчăкскер те шăршлăскер, йăлтах пĕтнĕ курăнать. Юлашки вăхăтра ун çинчен илтмен. Ай мĕнле хытă çыртатчĕç вĕсем! Юна ĕçетчĕç, çĕрĕпе çывăрма памастчĕç. Çынсем

çуллахи вăхăтра урайне йĕри-тавра вĕлтĕрен сарса çывăратчĕç. Пĕр патша Шупашкарти чи чаплă çуртсенчен пĕринче çĕр каçнă чухне те вĕсем ăна тинкелентернĕ иккен, çавăнпа кунтан ир-ирех тухса тарнă тет. Хăнкăла вăл питĕ чăтăмлă. Шартлама сивве те тӳсет. Шăнса хытать — ăшă çĕре ярсанах чун кĕрет ăна. Темиçе çĕр çул хушши тытман кĕнекере хĕсĕнсе ларнă хăнкăла чĕрĕлсе тăни çинчен те калаççĕ. Юрать-ха, вĕсенчен этемлĕх хăтăлса пырать пулас. Ăçта-ăçта та — Раççейре вĕсем пирки илтмен.

Тараканĕ, ачашскер пулин те, пĕтмест. Вăхăтран вăхăта ĕрчесех каять. Уйрăмах йывăр тапхăра юрататъ вăл. 90-мĕш çулсенче çуртсенче çеç мар, çулла урамра та чупма пуçланăччĕ.

Таракан питĕ авалхи кăпшанкă-мĕн. Этемлĕх пуçлансан ăна кăмăлласа пăрахнă та унран хăпман. Ячĕ те чăваш сăмахĕнчен пулса кайнă теççĕ чĕлхеçĕсем. Чăнах та, ăна тытма питĕ кансĕр: тарать. Е тата питĕ чее: кĕтесе хĕсĕнсе ларать — çапса лектерейместĕн. Чăвашсем питĕ тĕрĕс панă ятне. Апла, пирĕн халăх чи авалхисенчен пĕри-мĕн.

Юрĕ-ха ку. Таракансенчен хăтăласси пирки çынсем яланах ĕмĕтленнĕ. Мĕн кăна шухăшласа тупман-ши! Астăватăп-ха, пĕрре шартлама хĕлле килтисем тĕпсакайĕнчи çĕр улмине ăпăр-тапăрпа, чаппан-кĕрĕкпе лайăх витсе хучĕç те, алăка уçса хăварсах çĕр каçма тăвансем патне кайрăмăр. Ирхине килтĕмĕр — шăкăрин хытнă таракан. Çапла савăнса пурăнтăмăр вĕсемсĕр.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ — ир-ирех пирĕн пата кӳршĕри ватă хĕрарăм каçрĕ. Нимех те кирлине каламарĕ. Мĕн йӳтĕмпе килнĕ çаксĕр кăвак

çутăллах — шалт аптрарĕ анне. Атте кравать айне пăхрĕ те — шăрпăк коробки выртать. Кăштах уçсан йăлăхтармăшсем йăраланни курăнчĕ унта.

Темиçе таракана тытса кӳрше кайса ярсан ыттисем те унта тараççĕ-мĕн. Пĕр-пĕрне темле сигнал парса чĕнсе илеççĕ имĕш. Хытă тарăхрĕ атте, коробкăна вĕсен килне илсе кайса кăмаки çине хунă. «Хăвăр выльăхăрпа хăвăрах ырлăх курăр», — тенĕ. Çакăн хыççăн урлах пулчĕç. Леш хĕрарăмĕ каçару ыйтма пĕр чашăк пыл илсе пычĕ кайран. Эпир, ача-пăча, юратсах çирĕмĕр.

Таракан вăрçтаракан кăпшанкă çав. Василий Песков текен ăста фотохудожник пурччĕ. Вăл чĕрчунсем çинчен питĕ хитре ӳкерчĕксем, тĕрленчĕксем кăларатчĕ хаçат-журналта. Акă мĕн çырса кăтартнăччĕ çакскер пĕррехинче.

Çурçĕрте сивĕ шыв сапса та уйăрайми икĕ тус пĕрле ĕçлесе пĕр пӳлĕмре пурăннă. Тăван тăрăхĕшĕн питĕ тунсăхланă ĕнтĕ. Темĕнле майпа вĕсем патне икĕ таракан çакланнă. Сивĕ çĕрте пурăнма пултарайманскерсем мĕнле лекнĕ-ши кунта? Икĕ юлташ питĕ савăнса ӳкнĕ. Ачалăхĕ аса килнĕ-ши? Хайхи таракансене хăйсен ячĕсенех панă, тутлă апат çитерме тăрăшнă. Пĕррехинче лайăххăн уяв тунă та стаканĕсене çумасăрах çывăрма выртнă. Ирхине вăраннă — сĕтел çинче пĕрин тараканĕ çеç çӳрет. Тепри юлташĕн стаканне пăхнă та — унăн тараканĕ кăнса выртнă иккен. Тарăхса кайнă ку, тусне тем те каласа пĕтернĕ. Ĕмĕрхи тăшман пулса юлнă. Пĕри урăх пӳлĕме пурăнма куçнă. Бригадăри çынсем вĕсене мирлештерме тăни те пулăшман. Тахăшĕ тăван тăрăхне кайсан урăх таракан тупса парнелеме шантарни те усăсăр пулнă.

Манăн вара таракансемсĕрех пурăнас килет. Тек нихăçан та ан таврăнччăр 90-мĕш çулсенчи пек пăтранчăк та урăм-сурăм, питĕ йывăр вăхăтсем. Пирĕн пуç тăрринче пуçхĕрлĕ çӳрекенсем ан пулччăрах.

## «ЭП ТЕЛЕЙЛĔ САНПА ЮНАШАР»

### Пĕр урапа çинче

Чăваш культуринче упăшкипе арăмĕ ĕмĕрĕпех юнашар ĕçленисем тата халĕ те ĕçлекенсем йышлă. Вĕсем савăнăçне те, хурлăхне те пĕрле пайланă, пайлаççĕ те. Чи палăрнисене çеç аса илер-ха. Иоаким Максимов-Кошкинскипе Тани Юн чăваш театрне пуçарса яракансем пулнă. Айăпсăр айăпласа тĕрмене хупса лартни те вĕсене уйăрайман, пĕр-пĕрне шаннă, ĕненнĕ, пулăшнă. Çавăнпа та тăван халăхшăн çав тери нумай ырă ĕç туса хăварма пултарнă, ĕлкĕрнĕ.

Театр тенĕрен, Нинăпа Валерий Яковлевсене тата Нинăпа Николай Григорьевсене сцена çирĕппĕн пĕрле çыхса тĕвĕленĕ. Тавах Турра вĕсене шăпи пĕр урапа çинче лартса пынишĕн. Килĕшӳллĕ мăшăрсем хăйсен ăсталăхĕпе мĕн чухлĕ куракана шухăша яман-ши, пурнăç тĕллевне тупма пулăшман-ши?!

Юрă-кĕвĕпе халăха хавхалантаракан мăшăр та чылай пирĕн. Хальхи вăхăтра вĕсенчен чи паллăраххи — Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Анатолий Никитин композиторпа Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ Надежда Никитина юрăç. Вĕсем çинчен уйрăмшар калаçасшăнччĕ. Анчах «Янташ»

эстрада ушкӑнӗн концертне тепӗр хут кайса курсан шухӑшӑм улшӑнчӗ. Ылтӑнпа кӗмӗле пӗрле ҫатӑ тытсан вӗсем ҫыпӑҫса лараҫҫӗ имӗш. Кусем те ҫавӑн пекех туйӑнчӗҫ.

Концерт хыҫҫӑн хавхалануллӑн пуплекен ҫынсен калаҫӑвне илтме тӳр килчӗ. «Вӗсем ҫулӑмпа сывлӑш пекех», — терӗ пӗри.

Хӑшӗ ҫулӑм, хӑшӗ сывлӑш пулнине пӗлсе юлаймарӑм. Хам чухланӑ пек вӗсене ытарлӑн пайлас терӗм. Йӑнӑшман-ши эпӗ — ҫавна Анатолипе Надежда хӑйсем татса парӗҫ.

## Ҫулӑм сывлӑшсӑр ҫунмасть

Анатолий Никитина икӗ район хӑйӗн ентешӗ теме пултарать: пӗри — Вӑрнар, тепри — Йӗпреҫ. Малтанхинче ҫуралса пӗрремӗш класа кайма пуҫличчен пурӑннӑ, тепринче сакӑр ҫул вӗреннӗ.

Пуҫласа асра юлни ҫынсен тӗрлӗрен пулать. Хӑшӗн куҫӗ умне чи пысӑк савӑнӑҫӗ тухса тӑрать, чылайӑшӗн ҫавӑ вӑйлӑ пӑлханупа ҫыхӑннӑ. Толикӗн вара ашшӗ купӑс каланин кӗввине ытараймасӑр итлениччен пуҫланнӑ тейӗн темӗнле асамлӑ ӑнкарулӑх. Ҫапла, Никита Афанасьевич, Вӑрнар районӗнчи Кивӗ Хирпуҫ хресченӗ, питӗ ӑста ҫын пулнӑ. Колхоз тимӗрҫи суха пуҫ та, лаша таканӗ те тунӑ, ял техникине юсанӑ. Ҫав вӑхӑтрах йывӑҫ та аллинчен кайман: ҫӳпҫе, арча, ал арманӗ, пир станӗ, савӑт-сапа тутарма ун патне ҫӳренӗ ял халӑхӗ. Тавраран та пынӑ. Чи тӗлӗнмелли — хут купӑс, сӗрме купӑс, кӗсле, шӑпӑр хӑех ӑсталанӑ. Купӑс, мандалина, гитара, балалайка каласа ҫынсене савӑнтарнӑ. Финсемпе тата нимӗҫ фашисчӗсемпе ҫапӑҫса хӗн-асап

курни те унӑн кӑмӑлне хуҫса хӑварайман. Вӑрҫӑран таврӑнсан ҫемье ҫавӑрнӑ, ял хӗрнех Марьене качча илнӗ. Паттӑр салтака бригадира суйланӑ. Амӑшне вара ял ҫыннисем валли килӗнче ҫӑкӑр пӗҫерме шаннӑ. Аста ҫыннӑн кил-ҫурчӗ те тирпейлӗ, кӑмаки те вӗри пулнӑ ӗнтӗ.

Тольӑн амӑшӗ, Мария Яковлевна, ырӑ чунлӑ хӗрарӑм пулнӑ, вӑй-халӗпе те палӑрса тӑнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче тракторпа ӗҫленӗ, вут турттарнӑ, уйхир сухаланӑ. Вӑл каласа панине Анатолий Никитин халӗ те ҫӳҫенсе аса илет: амӑшӗ, талӑк куҫ хупманскер, сухара тӗлӗрсе кайнӑ. Вӑранса каять — хурҫӑ учӗ чӑнкӑ ҫыранран пӗр-икӗ утӑмра чарӑннӑ иккен. Мӗн тумалла? Ҫаврӑнма вырӑн юлман. Хӗр вара суха пуҫне алӑ вӗҫҫӗн мекӗрлене-мекӗрлене пӑчӗккӗн хыҫалалла чакарма вӑй ҫитернӗ. Акара вӑл икшер михӗ тырӑ вӑрлӑхӗ хул хушшине хӗстерсе йӑтнине ватӑраххисем пӗрре мар каласа кӑтартнӑ.

Ял ерипен йӑл илсе пынӑ, вӑрҫӑ суранӗсене сипленӗ. Ашшӗ юратнӑ ӗҫне — тимӗрҫе — куҫнӑ, купӑсне хаваслӑрах тӑсма пуҫланӑ. Пӗр туйран та хӑварман ӑна, унӑн чӑвашсен авалхи йӑлипе килрен киле ҫӳреме тивнӗ. «Купӑсҫӑ ӗҫке ерет», — теҫҫӗ тепӗр чухне. Кашни килтех ҫын кӑмӑлне юраса куркарине татса пама та пулин лекет-ҫке. Ҫук, ку арҫын ӗҫсе супса кайма шутламан, хӑйне ҫирӗп тытнӑ. Ял халӑхне тӗрлӗ ӑсталӑхӗпе усӑ кӑтартмаллине тавҫӑрнӑ. Мӑшӑрӗ пӑсӑлманнине кура амӑшӗ Толике купӑс калама вӗренме чарман. Вӑл пилӗк ҫултах кӗвӗсем чиперех кӑларма тытӑнать. Акӑ тата ачашӑн ялта тӗлӗнтермӗш пулса иртет. Ашшӗпе амӑшӗ ӑна ялти концерта илсе каяҫҫӗ. Клуб сцени ҫинче — чӑн-чӑн артист.

Хăйсен ялĕнченех-мĕн, курма килнĕскер. Унăн аллинче — виçĕ рет тӳмеллĕ купăс! (Баян пулнă ĕнтĕ вăл.) Сасси мĕнле янăравлă та хитре! Артисчĕ хăех юрлать тата! Толикĕн чунне вут хыпать. Ун пек ăста пулас килет.

Вăл пĕрремĕш класа каяс умĕн килти хуралтăсем çунса каяççĕ. Çĕнĕрен хăпартса лартма укçа-тенкĕ кирлĕ. Ашшĕ вара тупăшлăрах ĕç шыраса Йĕпреç районĕнчи Спотара поселокне пырса çитет. Кунта йывăçран ешчĕк тавраш (тара) тăвакан завод пулнă. Никита Афанасьевича хапăлласах йышăнаççĕ. Çемйине илсе килме баракра пӳлĕм параççĕ. Никитинсем — амăшĕ, Толик, Юрик, Тамара, Мишша — çĕнĕ вырăна пырса çитеççĕ. Кунта тĕрлĕ халăх çынни — чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ, ирçи — пурăннă. Шкулта вырăсла çеç вĕрентнĕ. Толик, çур çул Хирпуçĕнче вĕренме ĕлкĕрнĕскер, вырăнти шкула çӳреме пуçлать. Темĕнле йывăр килсе тухнинех астумасть. Тен, купăсĕн тӳпи те пысăк ăна ют çĕрте тантăшĕсем хăйсен йышне хăвăрт йышăннинче.

Çемье чăпта çапма тытăнать. Часах çурт лартаççĕ. Людăпа Çеруш хушăнаççĕ кил-йыша. Чиперех майлашса каять пурнăç.

Толя концертсене хастар хутшăнать. Вăрманлă-улăхлă, çырмаллă-кӳлĕллĕ тавралăх чăнчăн ырлăх пулса тăрать ачашăн. Кăмпи-çырлине мĕн чухлĕ татман-ши! Хĕл каçма хатĕрленĕ.

Ашшĕн, вăрçăсенче асап тӳснĕскерĕн, сывлăхĕ хавшаса пырать. Тимĕрçĕ ĕçнех чунĕ туртнă курăнать — Пăкăян ялне куçса каять кил-йыш, унта çурт илет. Вăл вăхăтра Анатолий Çĕрпӳри çутĕç училищинче дирижерпа хор уйрăмĕнче вĕреннĕ. Ăна часах агитбригадăна явăçтараççĕ.

Вĕренсе тухсан пултаруллăскере ăçта кăна ĕçе йыхравламаççĕ. Ун чухне культурăна пысăка хурса хакланă çав. Çамрăк малалла пĕлӳ илес тĕллевпе хавхаланать. Н.К. Крупская ячĕллĕ Мускаври патшалăх институтне оркестр уйрăмне вĕренме кĕме чунĕ туртать унăн. Конкурс пысăк. Баян çав тери ăста калакана тӳрех асăрханă, куçран вĕçертмен. Ярославль хулине практикăна яраççĕ. «Чайка» халăх хореографи ансамблĕнче баян калать вăл. Ăна коллектив юратса пăрахать. Кунтах хăварасшăн пулаççĕ, хваттер парассипе те илĕртеççĕ. Анчах чунĕ тăван енех туртать. Ăнăçлă вĕренсе тухнă хыççăн Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамбльне баянист-концертмейстера йышăнаççĕ.

Часах салтака Куйбышев хулине илеççĕ ăна. Çулталăк хушши Атăл тăрăхĕнчи çар округĕнчи юрăпа ташă ансамблĕн баянист-концертмейстерĕ пулса тăрăшать. Ăçта кăна çитмен-ши? Чăваша та икĕ хутчен килсе кайнă.

Салтакран тăван ансамблех таврăнать Анатолий. 1981 çулта «Çавал» эстрада ансамблĕн илемлĕх ертӳçи пулса тăрать. Шăп çакăнта юрă кĕвĕлес туйăм вăранать те унра. Ĕçĕ хистет.

1983 çулта хăй тахçан вĕренсе тухнă Çĕрпӳри культура училищине баянпа аккордеон класĕн вĕрентӳçи пулма йыхравлаççĕ. Çакăнта паллашать те ĕнтĕ вăл хăйĕн «уçă сывлăшĕпе».

* * *

Юрра юратакан чăваш çыннинчен чылайăшĕ Надежда Ивановна Никитинăн ятне лайăх пĕлет. Вăл Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Утаркассинче çуралнă. Ялĕ ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса

тăмасть темелле. Çук-çук, ку тĕрĕс мар. Кашни ялах пысăк юхан шыв хĕрринех вырнаçайман. Уй-хирте, утăра пиçĕхнĕ ачасене, çамрăксене Сăр хăйĕн ытамне илсе вăй-хал панă. Вăрманĕ мĕне тăрать тата! Çырли, кăмпи! Çĕмĕрте çӳреме юратнă ачасем. Ăна, сĕтпе хутăштарса техĕм кĕртнĕскере, юратса çинĕ. «Пирĕн хĕр пĕрчи çĕмĕрт çырли çие-çиех хуп-хура çӳçлĕ ӳсет», — шӳтленĕ кукамăшĕ мăнукне пусĕнчен шăлса. Хура хăмла çырли тата çав тери нумай пулнă таврара. Ун пекки урăх ниçта та çук пуль. Ахальтен мар кунта çапла юрланă:

Аскасанта, вăрманта,
Хура çырла пит нумай.
Утаркасси ялĕнче
Хура хĕрсем пит нумай.

Çак юрă питĕ пĕлтерĕшлине Надежда Хусанти культура институтĕнче вĕреннĕ чухне Болгарири провинцирен килнĕ фольклор ушкăнне итленĕ хыççăн туйса илет. Кĕвви ытла та çывăх, уйрăмах вокализ (сăмахсăр юрлани) тăван ялĕнчи пекех. Ку ĕнтĕ икĕ халăхăн хăш-пĕр йăхĕ тачă çыхăнса пĕр тымартан тухнинех çирĕплетет. Çавăн çинчен студентка пысăках мар тĕпчев ĕçĕ те çырнă.

Надьăн ашшĕпе амăшĕ вара — Иван Михайловичпа Ольга Андреевна Вазяковсем — кӳршиаршинчен чăнах та нимĕнпех те уйрăлса тăман. Пуçламăш шкулта çеç пĕлӳ илнĕ колхозниксем пулнă. Вĕсем епле килĕштерсе пурăннине пурте астăваççĕ. Пĕр-пĕринпе сасă хăпартса калаçнине ачисем нихăçан та илтмен. Аки-сухи алран кайман пулин те, пилĕк ачине тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерме тăрăшнă. Надя кĕçĕнни пулнă, анчах

ачашши мар. Ачашланса ларма ерçеймен. Николай Ыдарай сăввине Анатолий Никитин кĕвĕленĕ юрăри пекех: «Чăваш ачи чăвашах, чунĕ ĕçре яланах: виçĕ çула çитсессĕн витре йăтма вĕренет...»

Çакă тата ĕмĕрлĕхех Надьăн асĕнче. Мăнкун çинчен калаçаççĕ килтисем. Çав уяв тĕлне йăлтах таса пулмалла иккен. «Урайне ĕçрен таврăнсан çуса кайăпăр-ха», — тесе тухса каяççĕ амăшĕпе аппăшĕ. Каç пулса килет — никам та çук. Хĕрача кӳршĕри тантăшне чĕнсе килет те, урайне иккĕшех çуса каяççĕ. Аслисем таврăнаççĕ — урай йĕп-йĕпе. Вăйĕ çитменнине пула мунчалана хытă пăрайман ĕнтĕ. Анчах вăрçмаççĕ — ырлаççĕ çеç аслисем.

Хĕрача пĕрремĕш класа пырсанах ăна концертсене явăçтарма тытăннă. Ара, музыкăна пĕчĕклех иленнĕ-çке. Кольăпа Санька пиччĕшĕсем купăс каланă, Матрена аппăшĕ халăх юррисем юрлаттарнă. Вĕсем йăмăкне юрăç тăвасшăн ĕмĕтленнĕ ĕнтĕ.

Хĕрача пĕчĕклех юррисемпе кӳрше-арша тĕлĕнтернĕ. «Кукашшĕпе кукамăшнех хывать пулĕ», — пĕççисене шарт! çапнă ватăсем. Энтрипе Анюк лаша кӳлсе ют яла хăнана кайнине сиссе юлнă çынсем кĕтсе илме укăлча умнех тухса тăнă пулать. Вĕсем шăнкăрав сассипе епле хитре юрласа килнине аякранах итлесе киленме юратнă, килне çитиччене ăсатса янă вĕсене.

Надежда Мишеркассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухсан Шупашкарта чăлхапа трикотаж фабрикине ĕçе кĕрет. Манман ăна, хастарскере, тăван шкулĕнче — аслă пионервожатăй пул-

ма ӳкĕтлеççĕ. Пилĕк çула яхăн тăрăшать кунта. Ятарлă пĕлӳ кирлине туйса Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине хорпа дирижер уйрăмне вĕренме кĕрет.

Специалист Мишеркасси ял клубĕнче пултарулăх ушкăнĕн илемлĕх ертӳçинче вăй хума тытăнать. Ĕмĕчĕ малаллах илĕртет ăна. Хусанти культура институтне — каллех хорпа дирижер уйрăмне — вĕренме кĕрет. Аслă пĕлӳ илнĕ хыççăн Çĕрпӳри культурăпа çутĕç училищине дирижер класне вĕрентме чĕнсе илеççĕ ăна. Çакăнта паллашаççĕ те ĕнтĕ Надеждăпа Анатолий.

## Çулсем пĕрлешеççĕ

1983 çул ĕмĕрлĕхех асра юлнă. Уйрăм çулпа çӳренĕ икĕ шăпа пĕрлешнĕ. Чăваш юрри-кĕввине чĕререн юратакансем пĕр-пĕрне тӳрех ăнланнă, кĕçех мăшăрланнă.

Анатолий Никитин ку вăхăталла юрăсем те кĕвĕлеме пуçланă ĕнтĕ. Анчах вĕсене çул уçса пама питĕ кансĕр иккен. Пĕр музыковед ăна куçранах çапла калать: «Эсĕ — питĕ лайăх баянист, юрă çырса ан аппалан-ха». Ăнланса илет çамрăк çын: ăна Композиторсен союзĕн членĕсем хăйсен картине кĕртесшĕн мар. Вăл Ĕпхӳри искусство институтĕнчи композици уйрăмне кĕме тĕллев тытать. Хаваспах йышăнаççĕ ăна. Çав вăхăтрах «Нарспи» фольклор ушкăнне ертсе пыма тытăнать, коллектив кĕçех хисеплĕ ятсем илет. «Нухрат» эстрада ушкăнĕ те йĕркеленет. Вĕсем Пушкăртстанри чăвашсем патне чылай çĕре çитеççĕ. «Тăван яла таврăнсан» юрă та çул çинчех çуралать. Çакăн хыççăн Анатолий Никитинăн ытти-

сеннисенчен урӑхларах хайлавӗсем Чӑвашра та, ытти тӑрӑхра та сарӑлаҫҫӗ.

Упӑшки вӗреннӗ вӑхӑтра Надежда Ивановна, Шупашкарта ачипе юлнӑскер, садика ӗҫе вырнаҫнӑ. Пурнӑҫ ҫапла хистенӗ.

1992 ҫулта Анатолий Никитич Шупашкара профессиллӗ композитор дипломӗпе таврӑнать. Юрӑсем кӗвӗленеҫҫӗ те кӗвӗленеҫҫӗ. Халӑх патне ҫитермелле вӗсене. «Салют» культура керменӗ ҫумӗнче «Янташ» эстрада ушкӑнӗ йӗркелеме шухӑшлать мӑшӑр.

Пуҫласси яланах йывӑр. Нимӗн те ҫук-ҫке. Юрӑҫисем те. Инструментсем илме, тумтир туянма укҫа-тенкӗ кирлӗ. Юрать-ха, ырӑ ҫынсем тупӑнаҫҫӗ — шанаҫҫӗ вӗсене, кивҫен укҫа параҫҫӗ.

Малтанхи ушкӑнра виҫҫӗн пулаҫҫӗ: Елена Османова, Сергей Павлов, Маргарита Туринге. Вӗсем кунта пултарулӑхӗсене аталантарса халӑх хушшинче тахҫанах палӑрнӑ. Ҫирӗм пӗр ҫул хушшинче пилӗк ушкӑн ҫунаттисене тӗреклетсе хӑйсем тӗллӗн вӗҫме пуҫланӑ. Ҫакӑнта хӑйсен тӳпи пурришӗн Никитинсем савӑнаҫҫӗ.

— Анатолий Никитич, эсир — композитор. Надежда Ивановна кам шутланать? — ыйтрӑм эпӗ.

— Унӑн пӗлтерӗшне, вӑл кунта камне калама та хӗн, — шухӑша кайрӗ «Янташ» ертӳҫи. — Кӗскен каласан, мана ашшӗ теҫҫӗ, вӑл — амӑшӗ. Юрӑҫсемшӗн йӑлтах мӑшӑрӑм тӑрӑшать: сассине кирлӗ шая лартассишӗн те, сцена хусканӑвӗсене хӑнӑхтарассишӗн те, хӑшне мӗнле юрӑ сӗнессишӗн те яваплӑ. Малтанхи вӑхӑтра вӗсем валли хӑех каҫсерен кӗпе-тумтир ҫӗлетчӗ вӗт. Халӗ модельерсем, художник-дизайнерсем хатӗрлеҫҫӗ ӗнтӗ.

Çапла вара Никитинсене вун-вун юрăçăн ашшĕпе амăшĕ теме пулать ытарлăн.

Вĕсен тепĕр ырă енĕ — хула ачисем чăваш юрри-кĕввишĕн юншăхланине туйса илни. Мăшăр 50-мĕш вăтам шкулта ĕçлеме пуçланă. Шкул директорĕ Галина Ивановна Петрова чăваш чĕлхишĕн çунса тăракан çын пулнă, юрă-кĕвĕ пулăшнипе ăна вĕрентме çăмăлтараххине ăнланнă. Çавăнпа та уроксенче унпа анлăн усă курассине тĕпе хунă. Чăваш чĕлхи вĕрентекенĕсемпе пĕрлештернĕ уроксене ирттерме Никитинсене сехетсем туса панă. Кунта «Шевле» ятлă фольклор ушкăнĕ йĕркеленĕ. Арçын ачасем сӳрĕкрех теççĕ. Вĕсем те хаваспах çӳренĕ юрлама. Йăла-йĕркепе çыхăннă юрă-кĕвĕ уйрăмах илĕртӳллĕ. Çавăнпа Çăварни, Акатуй, Сурхури юррисене илемлетсе альбомсем те кăларнă. «Чăваш чĕлхи — музыкăра» программăпа ытти шкулсем те усă курма тытăннă ун чухне. 50-мĕш шкул тĕслĕх пулса тăнă. Чикĕ леш енчи çĕршывсенчен те сăнавпа паллашма килсе çӳренĕ. Анатолий Никитин кĕвĕленĕ çĕр ытла юрă — шкулсемшĕн халĕ те пысăк мул.

## Эпĕ кăштах йăнăшнă иккен

«Пĕтĕм тĕнчене юратма пулать, — анчах хăвăн кӳршӳпе килĕштерсе пурăнма кансĕр», — тенĕччĕ пĕр ăсчах. Килте те, ĕçре те ялан пĕрле чухне мăшăрсем пĕр-пĕрне йăлăхтарса çитермеççĕ-ши?

Асăрханса ыйту патăм Никитинсене:

— Концерта пынисем сирĕн çинчен çапларах калаçса тăнине илтрĕм: «Вĕсем хĕрӳ çулăмпа уçă

сывлăш пекех», — терĕç. Ман шутпа, Анатолий Никитич — çулăмĕ, Надежда Ивановна — сывлăшĕ. Эпĕ йăнăшмастăп-и?

Иккĕшĕ те пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлнă пекех мана тӳрех ăнлантарма пуçларĕç:

— Куракансем тĕрĕсех шухăшлаççĕ. Эпир сывлăшпа çулăм пекех. Çулăм сывлăшсăр çунмасть. Çав вăхăтрах сывлăш çулăма сӳнтерекен çил те пулма пултарать. Çавăнпа рольсемпе ылмашатпăр час-часах. Çемье тĕрекĕн вăрттăнлăхĕ — хăвна тытса чарма пĕлнинче.

## Тĕллев вăй-хал парать

— Эсир иксĕр те çамрăк çынсемех мар ĕнтĕ. Лăпкăн пурăнас та килет пуль?

— Эпĕ сцена çине унчченрех тухса кайман, — сăмахне пуçларĕ Надежда Ивановна. — Юрăçсене çул пама, хăтлăх кӳме тăрăшнă. Вăхăчĕ те çитмен. «Янташ» концерчĕсене çамрăксем çеç мар, аслăраххисем те йышлăн çӳреççĕ. Çавăнпа репертуара вĕсем валли те ятарласа юрăсем кĕртме шухăшларăмăр. Малтанхи йывăрлăхсене хамăр çине илес терĕмĕр. Çавăнпа Анатолипе иксĕмĕр юрлама пуçларăмăр. Халăха килĕшни сисĕнчĕ.

— Концертсенче куратпăр-çке юрра-кĕвве мĕнле хакланине, — калаçăва хутшăнчĕ Анатолий Никитич. — Çавăнпа хавхаланса каятпăр, çĕнĕ хайлавсем çырăнаççĕ. Вĕсене каллех куракансене парнелес килет. Юрăсем пирĕн, тĕпрен илсен, туслăха, тăванлăха упрасси, атте-аннене хисеплесси, чăваш халăхне пĕрлештересси, таса юрату çинчен. Вĕсем çынсене кирлине туятпăр. Çакă вăй-хал парать те.

## Пехилĕ те хаклă

«Янташ» ушкăнăн концерчĕ яланах чăваш халăх сăмахлăхĕнчен илнĕ пехиле Надежда Ивановна каланипе вĕçленет. Халăх ăна ура çине тăрса итлет:

— Эй, Турă! Тав сана каç выртма канлĕхне панăшăн, ир тăма çăмăллăхне панăшăн, ырлăх парса, сывлăх парса çутçанталăка кăтартнăшăн. Малашне те ырлăх парса, сывлăх парса кун кунлама кун пар, çĕр çĕрлеме çĕр пар, ĕмĕр ĕмĕрлеме ĕмĕр пар. Юсми-юлми пил пар, çын çинче çын пек çӳремелĕхне пар, ял çинче ял пек тăмалăхне пар. Тăвассине — тумалăхне пар, илессине — илмелĕхне пар. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçлансах пыччăр, мĕн шухăшлани çитсех тăтăр, мĕнтен хăранă — пире унтан Турă сыхлатăр. Пирĕн çумра ырăлăх кăна çӳретĕр. Сутас тавар — хака кайтăр, илес тавар — йӳне килтĕр. Турăран сывлăх пултăр, патшинчен ырлăх пултăр. Тури çырлахуллă пултăр, патши вара ырăнлă пултăр.

— Çапла пултăр, тăвансем! Çапла пултăр, çапла пултăр, çапла пултăр! Паллах, кашнин чун савниййĕ юнашар пултăр! — тет Анатолий Никитич.

— Чăнах та, Анатолий, эсĕ каланă пекех, чун савниййĕ те юнашарах пултăр, — тет Надежда Ивановна. — Кашниех хăйĕн çывăх çыннине: «Эп телейлĕ санпа юнашар», — тесе калама пултартăр. Ырлăх-сывлăх, телей, юрату, ăнăçу сунатпăр! Пурнăç çулĕ кашниннех такăр пултăр! Тавах сире, тăванăмăрсем!

Хăшĕ-пĕри çак пехиле илмех концерта темиçе хутчен килнĕн туйăнать.

# ИНКЕКПЕ ÇĂЛĂНĂÇ

Ай хуп вите, хуп вите, хуп витере шăм вите, шăм витере çӳрен ут, çӳрен учĕ кĕçенет. Тупмалли юмах ку. Тупсăмне пĕлетĕр-и? Пулăшамха: тĕттĕм аслăк айĕнче йĕпе пăру макăрать. Тавçăрса илтĕрех ĕнтĕ. Киева та çитерекен чĕлхе çинчен сăмах пырать. Çут тĕнчере мĕн çивĕч тесе ыйтсан та ăнах аса илетпĕр.

Пĕр поэт чĕлхе ăстиччĕ. «Капкăн» журналта тухакан кулăшла сăввисене, шӳчĕсене вуласа тăранма çукчĕ. Пародийĕсем тата тепĕр тиркевлĕ тишкерӳрен теирттеретчĕç. Шел, пĕтрĕç ун йышши ăстасем. Ĕнтĕ хăйне чаплă сатирик вырăнне хураканни те пит-куçне сăрлакан хĕрарăмсене хĕремесленсе вăрçма, чĕрчунсемпе кайăксене питлеме çеç хăюлăх çитерет. Чăнах та, хальхи пек марччĕ сатирăпа юмор, кулăш самаях çивĕччĕ. Тĕрĕссипе каласан, паян вĕсен вăйлăрах пулмалла, мĕншĕн тесен мĕн шухăшланине калама ирĕк пур пек туйăнать. Анчах шалт аптрамалла.

Ку сăвăç хăюллăччĕ терĕмĕр. Çавна пула вăл университетра кĕретсĕр вĕреннĕ чухне инкек те курнă. Унран хăраман çынсем тупăннă. Сăлтавĕ — курс ĕçне хӳтĕленĕ чухне пĕр паллă чĕлхеçĕн кĕнекине тиркени.

«Самар тăрăхĕнчи Похвиçнĕ таврашĕнче хисеплĕ ăсчах çырса кăтартнă пек калаçмаççĕ...» — касса татнă вăл. Докторсемпе профессорсем ним калама аптранă. «Юрать, юрать», — коридора тухма ыйтнă ăна.

— Пурте санпа килĕшрĕç, «пиллĕк» лартса параççĕ ĕнтĕ, — саламланă юлташĕсем.

«Виççĕ» тесе хакланине илтсен пурте шалт тĕлĕннĕ.

— Тĕрĕссине калама чĕлхӳнтен кам туртнă? — ятланă ăна пĕрле вĕренекен пĕр пике.

Нумаях та вăхăт иртмен, поэт ĕçлекен хаçата леш кандидат персе çитнĕ. Курс ĕçне вăхăтлăха ăна пама тархасласах ыйтнă. Илсе кайнă та — питĕ вăрах тытнă. Филологи наукисен докторĕ пулса тăрсан çеç тавăрса панă. Шел, тав сăмахĕ илтеймен сăвăç.

Тепĕр мыскара пулса иртет унпа. Пĕр экзамена вăл темиçе кайса та тытайман. Юлашки хут комисси али витĕр тухма ирĕк панă. Унта та тытаймасан кăларса яраççĕ. Тĕрĕссипе каласан, унăн вĕренсе ларма майĕ те пулман. Темиçе пӳлĕмлĕ хваттерте комсомол обкомĕнче ĕçлекенсемпе пĕрле кăткă йăвинчи пек пурăннă. Лешсем, карьера çулне суйласа илнĕскерсем, питĕ шава юратнă. Вĕсен ĕçĕ трамплин пекех пулнăçке: е парти çулĕпе çӳле çĕкленетĕн, е ӳкетĕн. Поэт йăлт аптрать. Мĕн тумалла? Чееленме шухăшлать. Пĕр вăйлă сăвă çырмалла та — комисси членĕсене валеçсе тухмалла. Шутланă — тунă. Састашĕсем (рифмисем) питĕ янăравлă. Чаплă чĕлхеçĕсенчен çăлăнăç ыйтнă пекех тата. Çакнашкал йĕркесем асрах-ха:

...Бодуэн де Куртенэ
Çĕклемĕ тетĕп пурттине.

Пуçа, тăванăм, касса çур,
Унта пурах, пурах Соссюр!

Чĕлхе ăстийĕ Рона-таш —
Чунпа чи çывăх хурăнташ.

Хайхи аудитори кĕрет те мăн кăмăллă профессорсене «шедеврĕсене» тыттарать. Лешсем вулама тытăнсанах ахăлтатма пикенеççĕ. Сăвăç

билет илсе ларать, ыйтăвĕсене вуласа пăхсан вара куçĕ-пуçĕ чарăлать: усал сунакан ятарласа суйласа панă тейĕн. Вĕсене хальччен те илтмен вăл. Мĕн тумалла? «Кусен хаваслă кăмăлĕпе усă курса юлмаллах», — пырса çапать шухăш пуçне.

Хăюллăн пырса ларать комисси умне.

— Эпĕ хатĕр! — пĕлтерет хастаррăн.

Лешсем çаплах кулма чарăнаймаççĕ-ха. «Юрĕ, юрĕ», — тесе чăтăмсăррăн кĕтнĕ «виççĕ» паллă лартса кăларса яраççĕ. Федор Павловăн «Судра» камитĕнчи пекех ахăлтатса юлаççĕ профессорсем.

## ТӲРЕ ПУКАНĔ Е УНИКУМ

Вăл питĕ пунктуаллă çын, уникум, пулнине ун таврашĕнчи çынсем лайăх пĕлетчĕç. Пĕчĕк тĕслĕх çеç илсе кăтартар-ха. Пĕррехинче пĕлĕшĕ ун патне ĕçе пынă — ку таçта тухнă иккен. «Эпĕ килтĕм. Эсĕ çукчĕ», — тесе çырса хутне алăк хăлăпĕ хушшине чиксе хăварнă. Шалт аптраса ӳкнĕ хайхи таврăнсан: «Кам ку?» Тытăннă шăнкăравлама хăй тĕшмĕртнĕ çынсем патне. Вĕçнехĕрне тухнах.

— Кил хăвăртрах! — хушнă хайхискерне.

— Мĕн тума? Ахаль çеç пынăччĕ сан патна, — лăплантарма тăрăшнă лешĕ.

— Ĕç пур, халех редакцире пул! — тархасланă ăна пӳлĕм хуçи.

Хăшăлтатса çитнĕ лешĕ. Пӳлĕм хуçи ун умне хăй çырса хăварнă хута кăларса хунă. «Хушаматна, ятна, аçу ятне, датăна, вăхăтне кăтартса çыр та алă пус», — хушнă канăçсăр çын.

— Мĕн тума кирлĕ сана çакă йăлтах? — тарăхса кайнă пĕлĕшĕ.

— Архива пама, — илтĕннĕ çирĕп хурав. — Унсăр пуçне ку — документ. Питĕ пĕлтерĕшлĕ те пулма пултарать. Тен, сан умĕн алăка такам туртса пăхнă? Ĕçрен иртерех кайнă тесе шутлама пултарнă. Эпĕ — питĕ асăрхануллă çын. Апла пулмасăр юрамасть те мана. Эпĕ 1927 çулта çуралнă. Чăваш çыравçисемшĕн çакă — питĕ телейсĕр дата. Сăмахран, тантăшсенчен эпĕ çеç — саккунлă çыравçăсен йышĕнче. Тепĕр çын пурччĕ те такам ура хунипе чыслă çыравçă пулнине ĕнентерекен билета тытса кураймарĕ.

Çак питĕ асăрхануллă çын вăл — Самар тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Венедикт Григорьевич Пурнашкин. Балти флотĕнче хĕсметре пулнăскер — пирĕн малтанхи маринистсенчен пĕри. Ун çинчен нумай сăмах-юмах калама пулать.

Çак çын вара пĕррехинче тимлĕхне çухатса инкек те курнă.

1980-мĕш çулсен вĕçнелле писательсене çĕр уйăрса пачĕç. Ялтан тухнăскерсем хавхаланса кайрĕç. Çуртсем те çĕклерĕç, çĕр чаваççĕ, кăпкалатаççĕ, шăвараççĕ...

90-мĕш çулсен синкерлĕ вăхăчĕ килсе çапăнчĕ часах. Вăрă-хурах ĕрчесе кайрĕ. Пахчасене çаратаççĕ, çуртсене çĕмĕре-çĕмĕре кĕреççĕ, кашăктирĕк таран иле-иле каяççĕ.

Венедикт Григорьевич хăйне тăмран йăвалаcard туманнине вăхăтра аса илет.

Ача-пăча пахчана вăрра ан кĕрейтĕр тесе ун тавра шĕшкĕрен карта тытса çавăрнă иккен вĕсем патĕнче. Миçе шăпăрлан ун урлă каçса кĕрес тесе йĕмне çурман-ши? Венедикт Григорьевич çав меслетпе усă курма шутлать. Ара, юнашарах — вăрман, хĕрринче — шĕшкĕлĕх.

Пуçлать вара вĕтĕ йывăççене касса сĕтĕрме. Картине тытса пĕтернĕпе пĕрех ĕнтĕ — пĕр çын пырса тухать.

— Эпĕ — вăрман хуралçи, — тет хайхискер. — Йывăç каснăшăн сана штраф пама протокол çыратăп. Айăплаччăр тивĕçлипе.

— Юлташăм, эпĕ халиччен тӳре сакки çине ларса курман, намăса ан яр-ха, — йăлăнать Венедикт Григорьевич. — Атя ман пата киле. Арăм хăяр тăварланă. Ыттине те кăларса парĕ.

— Эсĕ манаултав çулĕ çине тăратасшăн. Сана уншăн тата хытăрах çакланать! — хăтăрса тăкать вăрман хуралçи.

— Эй, тусăм, ан хăтлан-ха ун пек. Эпĕ — Чăвашри пĕртен-пĕр маринист. Мана мухтавлă Всеволод Вишневский те хăйĕн кĕнекисене парнеленĕ, — тархаслать ку.

— Эй, Лашин, мĕн çапкаланса çӳретĕн кунта? Атя ман пата. Мунча купалама пулăш-ха, — илтĕнет таçтан хулăн сасă.

— Эп пултараймастăп, — турткаланать штрафпа хăратакан çамрăк çын.

— Эсĕ ахальтен строитель-и? Ăста алли кирлĕ мана, — çине тăрать пулăшма чĕнекен.

— Строитель?! — çухăрса ярать Пурнашкин. — Аферист! Шантажист! Сана хăвна суда паратăп ак!

— Ара, эсĕ халиччен тӳре тенкелĕ çине ларса курман терĕн-çке. Апла хăтлансан ларса курма тиветех, — чееленет Михаил Лашин, «Капкăн» журналăн хастар авторĕ, чылай çыравçăпа çывăх туслашма ĕлкĕрнĕскер.

— Çапла çав, — унпа килĕшсе мăкăртатать Венедикт Григорьевич.

* * *

Унтанпа вăхăт самаях иртнĕччĕ. Кулмалли мар, кулянмалли кунсем çитсе çапăнчĕç. Çыравçăсен туслăхĕ те асар-писер саманана пула арканнăччĕ, пĕр-пĕрин шăпишĕн пăшăрханма та пăрахнăччĕ. Çут тĕнчерен пĕри е тепри кайнине те хаçатра вуласа пĕлме çукчĕ. Çапла пĕррехинче пасара утнă май çӳп-çап ешчĕкĕсен умĕпе иртсе пыраттăм. Пăхатăп — тĕрлĕ çыру таврашĕ, хаçат купи купаланса выртать. Вĕсем хушшинче — Всеволод Вишневский кĕнекисем те. Ăнлантăм вара Венедикт Пурнашкин пирĕнтен уйрăлса кайнине. Çав хут тĕркисем хушшинче, тен, алăк хăлăпĕ хушшине чиксе хăварнă çыру та пурччĕ пуль. Чун хурланчĕ, пĕри тахçан-тахçан çапларах калани тӳрех аса килчĕ: «Чăваш çыравçи пуличчен хăрăк турат пуласчĕ, çурхи шывпа юхса каясчĕ».

Венедикт Григорьевич яланах çынпа ăшшăн калаçатчĕ. «Ленин аллине тытса курнă пӳрнесене чăмăрта», — тетчĕ. Ара, Ленин алă панă пĕр адмиралпа тахçан алă тытнă иккен вăл.

Пурнашкин пахчине тытса çавăрнă çатан карта хальчченех çĕрсе пĕтеймен-ха. Шалта вара никам та нимĕскер те акмасть-лартмасть. Хушăран çеç такамсем ахăрашнă сасăсем илтĕнеççĕ унтан...

## ÇАМРĂК ЧУХНЕХИ СĂНӲКЕРЧĔК

Эй çут тĕнче! Тĕлĕнмелле хитре-çке вăл! Илемлĕ! Уйрăмах çурхи кунĕсем мĕне тăраççĕ! Ахальтен мар аслăран та аслă поэтăмăр Александр Пушкин «Евгений Онегин» сăвăлла романĕнче:

Ыйха сирсе тĕнче йăл кулчĕ,
Çулталăкăн ирне тĕл пулчĕ, —

тесе питĕ хавхаланулллăн çырнă.

Çулталăк ирĕ — çурхи илемлĕ вăхăт! Вăл пĕтĕм чун-чĕрене çупăрлать. Çавăнпа та çамрăклăха унпа танлаштараççĕ. Çапла-çапла, çыннăн яланах çамрăк пулас килет. Ку çеç мар, çамрăкрах та курăнасшăн. Анчах çак туртăм инкек кăларса тăратасса эпир юратса вулакан хайлавсен авторĕ Ангелина Павловская чухлама та пултарайман.

Вăл пĕррехинче литература журналĕн редакцине хăйĕн повеçне илсе пынă. Унран сăнӳкерчĕк ыйтнă. Хайлаври ĕç-пуç çамрăксемпе пулса иртнĕрен вун саккăрти сăнне сĕннĕ. Журнал пĕтĕм çĕршывĕпех саланнăран Çурçĕрте ĕçлекен чăвашсен аллине те лекнĕ. Çепĕç туйăмлă повесть вĕсене питĕ килĕшнĕ. Хайхискерсем хавхаланса калаçнине тăнлакан ытти халăх çыннисем те журнала пырса пăхнă. Питĕ хитре хĕр сăнĕ пурне те тыткăна илнĕ. Пурин те ăна мăшăр тăвас килнĕ. Уйрăмах луораветлан хăйне харсăр тытнă, хăйне чи тивĕçли выранне хунă. Луораветлан камне пĕлекен те сахал пуль. Чукчăсем хăйсене çапла калаççĕ, чăн-чăн çын тени пулать ку. Чăн-чăн çын тивĕçлĕ ĕнтĕ пикене!

Тавлашнă-тавлашнă та йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ мĕскĕнсем çапла килĕшсе татăлнă: пурин те çак пикене хăйсен сăнӳкерчĕкĕсене ярса памалла — суйласа илтĕр.

Хурав кĕтсе илеймесен Шупашкара пурте пĕрле пырса çитессипе хăратнă хулăн çырура. Çурçĕрте пысăк шалу илекенсенчен тем те кĕтме пулать!

Çыравçă, чăнах та, хăраса ӳкнĕ. Ара, ăна пула

бригада — вун пилӗк-ҫирӗм ҫын — ӗҫе пӑрахсах ун патне персе ҫитӗ. Пӑлхав! Кунта пӗлсен пӑтӑрмах пуҫланӗ. Тата пӗр пӳлӗмлӗ хваттерте ҫавӑн пек йыша мӗнле йышӑнмалла?

Вара вӑл укҫи хӗсӗккине шута илмесӗрех Ҫурҫӗре ҫакӑн пек вӑрӑм телеграмма ҫаптарнӑ: «Хаклӑ вулаканӑмсем! Эпӗ пачах та ҫамрӑк мар. Ҫавӑнпа ан килӗр. Ҫитес вӑхӑтрах сире хальхи сӑнӳкерчӗке ярса паратӑп...»

Ҫакӑн хыҫҫӑн та нумай вӑхӑт чӗтресе пурӑннӑ чапа тивӗҫнӗ ҫыравҫӑмӑр. Турра шӗкӗр, инкек-синкек сиксе тухман.

Юлашкинчен ҫакна каласа хӑварма кӑмӑллӑ: Ҫурҫӗрте пурӑнакансем журнала халӗ те вулаҫҫӗ. Кунта паллӑ ҫыравҫӑн тӳпи те пур пек туйӑнать.

## КӐМӐЛ ПӐСӐЛАТЬ ҪӐМӐЛ

Пӗррехинче кӗнеке лавккинче тӗлӗнтермӗш ҫынпа тӗл пулма тиврӗ. Хитре те илӗртӳллӗ ятлӑ романсене вӑл ҫиллессӗн айккине сире-сире хучӗ.

— Ултав ку, ултав, — тарӑхса пӑшӑлтатрӗ ҫакӑ. — Авантюра, — текелерӗ тата.

— Мӗншӗн ҫавӑн пекех ятлаҫатӑн? — чӑтса тӑраймарӑм эпӗ.

Акӑ мӗн пӗлтӗм унран. Вӑл ачаранпах историпе кӑсӑкланнӑ. Ытларах тӑван ен аваллӑхне пӗлесшӗн ӑнтӑлнӑ иккен. Пӗррехинче ялне кайма пуҫтарӑннӑскерех йӑпӑртлӑха кӗнеке лавккине кӗрсе тухма шутлать. Пӑхать — «N хули хӑҫан тата мӗнле пуҫланнӑ» ятлӑ роман выртать. Тинтерех ҫеҫ тухнӑ. Ара, куна вуласа йӑлтах пӗлме пулать-ҫке! Авторӗ архивсенче ларса

чылай тĕпченĕ пулĕ-ха. Йăпăр-япăр туянать ăна. Асăрхамасть те киле кайма билет илме укçи юлманнине. Эх, епле тертленме тивет хайхискерĕн. Çула май темиçе машинăна та сĕкĕнсе кĕрсе ларма лекет, тӳлейменнипе антара-антара хăвараççĕ. Çирĕм-вăтăр çухрăм çуран ланккать. Юрать-ха, хавхалантарса кăмăла хуçма паман кĕнеке пур çумра. Пĕртен-пĕр ĕмĕчĕ — ăна вуласа асамлă аваллăха чăмасси, юратнă хулан кун-çулне тĕплĕнрех пĕлесси.

Тăван килне çитет — тӳнсе каясла ывăннине пăхмасăрах вулать те вулать. Çуррине яхăн çитет — юратнă хула хăçан тата мĕнле пуçланса кайни çинчен пĕр сăмах та çук та çук. Пĕрмай хĕрлисемпе шуррисем хĕвĕшеççĕ. Çаплах кĕнекене алран ямасть-ха ку, шанчăкне çухатмасть...

Ак тамаша! «N хули хăçан тата мĕнле пуçланнă» — хĕрлисен паролĕ имĕш! Ăнланса илет мĕскĕн вулаканăмăр авторĕ пулман япаланах шутласа тупса ăна улталанине. Тарăхнипе вăйĕ пĕтсе каять унăн, куçĕ хуралса килет. Çапах та хал çитерсе ура çине тăрать те чӳречене уçса кĕнекене урама кăларса перет. Аран-аран çывăрса каять тарăхнипе.

Ирхине урама тухса пăхать. Кĕнекен шăршимарши те юлман. Питĕ шел пулса каять ăна. Çук, хăй асап курнишĕн кулянмасть вăл — пĕлӳшĕн çунакан пĕр-пĕр ача вăхăтне ахаль ирттерсе кăмăлне пăсасран чунтан пăшăрханать.

«Çынна вулама пăрахтарма та пулать-çке капла», — тесе хальчченех тĕлĕнме пăрахаймастьмĕн ултав серепине лексе курнă çав çын.

## АЛТĂР ÇĂЛТĂРПА ЮМАН

«Уй варринче лаштра юман...» Çак юрă камăн чунне çеç пырса тивмен-ши?

Пирĕн ял çумĕнче те пурччĕ çавăн пек капмар йывăç. Ача чухне кунта тăтăшах çӳреттĕмччĕ эпĕ. Çĕрле ытларах та илĕртетчĕ вăл мана. Çĕр çултискер çывăхне çитнĕçемĕн ун тăрринчех çиçекен Алтăр çăлтăра сăнама юрататтăм. Юман ăна вăйлă тураттисемпе çавăрса тытнă та аслă уçлăх тăсса панă капăр куркаран сипетлĕ шерпете ĕçнĕн туйăнатчĕ мана.

Пĕрре мар асăрханă: хавшанă арçынсем те утатчĕç ун патне. Темĕскер пăшăлтатнă май ыталаса тăратчĕç ăна. Унтан вĕсем килĕсене патваррăн таврăнатчĕç. Çакна курса эпĕ, пĕлес кăмăллă ача, тĕлĕнеттĕм: чăнах та, юман Алтăр çăлтăртан уçлăх шерпетне ĕçет-шим? «Çакă хăват кӳрет ăна, сипне вăл ырă çынсене те парнелет ĕнтĕ», — теттĕм савăнса.

Салтакран таврăнсан, атте-аннепе калаçса кăмăла тултарнă хыççăнах, чи малтан çав юмана курас килчĕ. Вĕçнĕ евĕр çитрĕм унта. Яланхи пекех патвар иккен вăл. Петĕр Хусанкайăн «Атăл хĕрринчи юман» сăввине хавхаланса вуларăм.

Вăхăт вĕçĕмсĕр васкарĕ. Çулсем тытса чарми ăсанчĕç те ăсанчĕç. Çак вырăна вăрахран тепре пырса тухрăм та — кăмăлăм хуçăлчĕ: юман хăрса ларнă иккен. Юрать-ха, юнашарах çурма çавра катрашкаллă та тăрăхла çулçăсемлĕ хунава асăрхарăм. Юман хунавĕ! Хыпаланса пытăм та пĕшкĕнсе ыталарăм ăна! Çамрăк салтак хăрах ури çине чĕркуçленсе тупа тунă чухнехи евĕр, çулçисене чуптурăм та чуптурăм!

Йывăррăн çĕкленсе тӳрленсе тăрсан ача-пăчан

янăравлă сассисĕр юлнă тăван ялăм куç умне тухса тăчĕ. Чĕрем кăлт туса илчĕ. Çак хунав çитĕнсе çитсе Алтăр çăлтăртан çĕрле шерпет тутаннă пек курăнма пуçличчен çĕр çула яхăн кирлĕ. «Юманăм, сан патна хавхаланса çӳрекенсем пулĕç-ши?» — сăмахсем чĕлхе вĕçне килчĕç... Шанăçăм вара чун-чĕрере йăвари пĕчĕк-пĕчĕк чĕпĕ пек хускала-хускала илчĕ... Аслă тӳпере илĕртӳллĕ Алтăр çăлтăр çаплах çиçет-çке...

## АПТРАСА ӲКМЕН

Литературăпа искусство пайĕн ертӳçи кануран таврăнсан ватă çыравçăн «Ĕненмесен пырса курăр» ятлă калавне хаçатра асăрхать. Чылай аслă çултискер ача-пăча валли çĕнĕрен çырма пуçлани савăнтарать ăна. Вуласа пăхать те шалт тĕлĕнсе каять. Акă мĕн каласа кăтартнă унта.

Ял хĕрринче ик çĕр-виç çĕр çулхи юман ларнă-мĕн. Шăп та шай çавăнтан газ пăрăхĕ иртмелле пулнă. Аптраса ӳкнĕ çынсем. Касса яма шел çутçанталăк палăкне. Вара ял халăхĕ вăйлă техникăпа усă курса тепĕр çĕре чиперех куçарса лартнă ăна. «Халĕ те сип-симĕс. Ĕненмесен пырса курăр», — вĕçленĕ сăмахне çыравçă.

Литературăпа искусство пайĕн ертӳçи, ватă юмана мар, çамрăккине те тепĕр вырăна куçарса чĕртме çуккине хăй вăрманлă тăрăхра çуралса ӳснине кура аван пĕлекенскер, «фантазерпа» шӳтлесе илме шухăшлать, ун патне васкавлăн шăнкăравлать:

— Хисеплĕ çыравçă, шкул ачисем çав юмана курма каясшăн. Эсир экскурсовод пуласса шанаççĕ вĕсем.

— Пӗлместӗп, халь пур-ши ҫав юман? — хӑвӑрт хуравлать лешӗ. — Тен, касса та янӑ.

— Тункатине те пулин кӑтартӑр ӗнтӗ, — йӑлӑнанҫи тӑвать редакцире ӗҫлекен.

— Эпӗ — сӑмаха тытакан ҫын. Тупса парӑр, ертсе каятӑп вара, — аптраса ӳкмест лайӑх кӗнекесен авторӗ.

## ЮРАТӐВА ПУЛА ИНКЕК

Тантӑшӑм чылай хӗрӳ пуҫӑннӑччӗ сӑвӑ ҫырма. Ахальтен мар Мускаври Литература институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. Уйрӑмах юрату ҫинчен кӗвӗлеме кӑмӑллатчӗ ҫамрӑк сӑвӑҫ. Хаҫат-журналта тӑтӑшах тухатчӗҫ хайлавӗсем. Тухатчӗҫ-ха... Анчах тем пулчӗ сасартӑк. Сайрарах та сайрарах курӑнма пуҫларӗ ячӗ. Сӑлтавӗ мӗнре-ши? Пулнӑ ҫав сӑлтавӗ, пулнӑ: чӑн-чӑнах юратса пӑрахнӑ вӑл!

Савнийӗ тӗпчеме пуҫланӑ ӑна:

— Кам ҫинчен ҫыртӑн ҫакна?

— Сан ҫинчен, — тенӗ сӑвӑҫ.

— Суятӑн, уйӑхлӑ каҫхине эпир хурӑн айӗнче пӗрре те тӑрса курман.

— Поэзире кампа мӗн пулса иртнине йӑлтах ҫырса кӑтартма кирлӗ мар. Туйӑмпа сӑнар пулмалла, — тӳрре тухма тӑнӑ хайхискер.

— Мана ухмах вырӑнне ан хур. Лайӑх сӑвӑ чӑн пурнӑҫран илсен ҫеҫ ҫырӑнать, — парӑнман савнийӗ.

Тантӑшӑм аптранӑ енне хӑвӑртрах авланма шухӑшлать. «Ун чухне кӗвӗҫме пӑрахӗ. Пӗрпӗринчен ниҫта хӑпмасӑр пурӑнма тытӑнатпӑрҫке», — ӗмӗтленет вӑл.

Савнӑ арӑмӗ тата хытӑрах тытма пуҫлать сӑвӑҫа. Хаяр цензорах пулса тӑрать.

Пурӑна киле упӑшкин пултарулӑхӗпе кӑсӑкланма пачах пӑрахать вӑл. Ҫапах та пӗррехинче хытӑ тӗлӗнет мӑшӑрӗ ҫырма пӑрахнинчен.

— Мӗншӗн сӑввусем ниҫта та тухмаҫҫӗ? — ытлаҫать ватталла сулӑннӑскер.

— Юрату ҫинчен ҫырма хӑвах чараттӑнччӗҫке, — кӑмӑлсӑрланать упӑшки.

— Ҫыр, чармастӑп текех, — хистесех хушать арӑмӗ.

Сӑвӑҫ хӑпартланса ҫырма хӑтланса пӑхать. Нимӗн те ҫырӑнмасть-мӗн. Юрату туййӑмӗ тахҫанах сӗвӗрӗлсе пӗтнӗ иккен.

## НАПОЛЕОН ПУЛӐШӐВӖ

Александр Пушкинӑн «Эпир Наполеон пуласшӑн» сӑмахӗ халӗ те кивелмен. Ҫакна пӗчӗк тӗслӗхӗм те ҫирӗплетсе парать.

Ыран пысӑк уяв тенӗ каҫхине хула ҫывӑхӗнчи пахчарах ҫӗр каҫрӑм. Сывлӑш уҫӑ, кайӑксем юрлаҫҫӗ... Ирхине тӑтӑм — ҫӑвар типсе ларнӑ. Ӗҫме юрӑхлӑ тумлам шыв та ҫук. Укҫа таврашӗ те юлман иккен. Ӗҫес килни выҫса ҫитнинчен те хӑрушӑрах ҫав. Нимӗнле илем те илӗртеймест авӑ. Пионсем ҫеҫкене ларнӑ...

Хальччен суту-илӳпе аппаланса курман пулин те, пуҫа чӑрсӑр шухӑш пырса кӗчӗ: «Чим-ха, укҫа тума пулать-ҫке!» Инҫех те мар, ҫул хӗрринче, хӑна-вӗрле павильонӗ уҫнӑ. Унта кашни кунах ҫамрӑксем мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн пуҫтарӑнаҫҫӗ. Уяв кунхине ирех унта халӑх хӗссе лартнӑ пек пухӑнать ёнтӗ. Упӑшкисем арӑмӗсене, каччисем

хĕрĕсене чечексем хаваспах парнелĕç... Эх, анчах... пион кĕлчечек те, гладиолус та мар... Тепĕр хут калатăп, ăш хыпни хырăм выççинчен темиçе хут кансĕртерех. Çимесĕр чăтма пулать — ĕçмесĕр вара...

Хальхи çамрăксем кĕнеке вуласах кайманнипе усă курса чееленме шутларăм.

Павильона пĕр карçинкка пионпа пырса кĕтĕм те хыттăн кăшкăртăм:

— Куратăп-ха, кунта Жозефинăсем шăкăрин лараççĕ. Наполеонĕсем пур-и? Пĕлетĕр-и эсир, Наполеон Жозефинăна яланах унăн юратнă чечекне — пион — парнеленĕ. Наполеонсем, килĕр кунта! — тесе чĕнме çеç ĕлкĕртĕм — кăпăр-р! çавăрса илчĕ мана яш-кĕрĕм. Укçисене хĕвех чикеççĕ тейĕн. Пиона йăпăр-япăрах илсе пĕтерчĕç. Çитмерĕ. Сахалтарах илсе килнĕ иккен эпĕ. Çапла вара типсе вилесрен çăлăнса юлтăм...

Тĕрĕссипе, Наполеон Жозефинăна яланах унăн юратнă чечекне — фиалка — парнеленĕ.

Çапах та вĕсем пек пулса курни те мĕне тăрать!

## КУÇÇУЛЬ

Паян ир-ирех инçетри çултан таврăннă пулин те, канас килмерĕ, укăлчари хурăн патнех чун туртрĕ. Вăл мана темле салхуллăн йышăннă пек туйăнчĕ, ăшшăн сĕртĕнсен çӳçенсе илчĕ. Çак самантра пит çăмарти тăрăх темскер йăр кусса анни сисĕнчĕ. Пите шăлса илтĕм те аллăм йĕпеннине асăрхарăм. Мĕн амакĕ ку? Пуçа çӳле çĕклесе пăхатăп. Хурăн çинче пин-пин тумлам куççуль майлă йăлтăртатать.

Куççуль?! Ах, тӳрех уйрăлу каçĕ аса килчĕçке. Ун чухне çап-çамрăк хĕр çак хурăн айĕнче пайтах çĕре унпа шăварчĕ. Тен, ăна çак хурăн çĕр питĕнчен сăрхăнтарса илнĕ те халь ман çине тăкать. «Тутанса пăх-ха, тутлă-и?» — тет пуль.

Темиçе çул каялла хытă чуна хĕр татăлса йĕни те çемçетеймерĕ пулсан паян вара сывлăм та куççуль пек туйăнать...

## КĂМĂЛ

Каллех ĕнерхи пек: «Эй мĕн мĕшĕлтететĕн эсĕ унта?!» — тени халь-халь янăраса каяссăн туйăнать. Ал-ура çыхланать. Хăмасене хыпаланса çыхатăп та кран çекĕлĕнчен çаклататăп. Пуçа хăюсăррăн каçăртса пăхатăп. Чăн-и ку? Паян ман çине хĕр куçĕсем ăшшăн, ним ӳпкевсĕр кулса пăхаççĕ çӳлтен. Йăтма хушса алă сĕлтмелли кăна юлнă ĕнтĕ, анчах çухалса кайрăм пулас. Çук, çав мăшăр çăлтăр ман çине çапла пăхасса нихăçан та шанман. Çавăнпа вĕсене хамран тартас килмест-тĕр.

Эпĕ çаклатнă купа вырăнтан тапранса хăпарма пуçларĕ. Унпа пĕрле ман кăмăл та хавхаланса çĕкленчĕ тейĕн. Крановщица ăна мĕнле йăтать-ши? Анчах кăмăлăма ăнсăртран çавăн çӳллĕшĕнчен ӳкерсе ан хуçтăрччĕ вăл.

## ХУРĂН ТАШШИ

Уçланкă варринчи пĕр-пĕччен çамрăк хурăн сцена çине ташлама чупса тухнă балеринăна аса илтерет. Унăн кĕпи аркине варкăш çил вĕлтĕр-вĕлтĕр хумхатса çĕкленĕ те, халь хăрах ура çинче çаврăннă пек курăнать вăл.

Кирек мĕнле искусствăн та пурнăçа евĕрлени, чăнлăха уçса парас тĕллевĕ пур. Çак хурăн ташши «Тунсăх» ятлă мар-ши? Сĕм пĕччен ӳсекенскерĕн нимшĕн те хĕпĕртемелли çук-тăр. Вăл тапхăр-тапхăр аякри хурăнлăха тĕмсĕлсе тинкерет ахăр. Çав ушкăн картине тăрас килет ĕнтĕ унăн. Хăй, йӳçĕ пĕчченлĕх тути-масине чухлаканскер, çапла пăшăлтататнăн туйăнать: «Туслăха хисеплĕр, ăна ĕмĕр-ĕмĕрех куç шăрçи пек упрăр!»

## УЙРĂЛУ ЧИККИНЧЕ

Авкаланчăк çырма çумĕпе çул тăсăлса выртать. Мĕн чухлĕ çӳремен-ши эп ку тăрăхра! Вĕсем мана яланах алла-аллăн çавтăнса е савăнăçлăн тĕрткелешсе пынăн туйăнатчĕç. Пĕр-пĕринчен нимпе те хăпасшăн мар çав: çырми ăçталла пăрăннă, çулĕ те — унталлах.

Çак çирĕп туслăха ăмсанса сăрт çамки патне пырса тухрăм та — шухăшсем улшăнчĕç. Эпĕ тахçантанпах мухтаса пурăннă туссем уйрăлаççĕ иккен кунта. Мĕншĕн-ши? Çулĕ талпăнса тăвалла хăпарать, çырми вара авкаланса аналла анать. Хăшне айăплас?

Мĕн тăвăн, сивĕ шыв сапса та уйрăлма çук текен юлташран хам та писрĕм-çке. Тен, çав çырма пек çăмăллăн çеç пурăнма юратакан хыççăн кайиччен уйрăлни чылай пахарах?..

## ТУПМАЛЛИ

### Повеҫсем

Йӑмӑкӗ . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Ҫухату . . . . . . . . . . . . . . . . 30
Ҫӑла пӑрахнӑ ҫивӗч ҫӗҫӗ . . . . . . . . 45

### Калавсемпе тӗрленчӗксем

Чӗрне вӗҫҫӗн . . . . . . . . . . . . . 70
Каҫхи кӗлле каяс умӗн . . . . . . . . . 88
«Васкавлӑ пулӑшу» . . . . . . . . . . 108
Каю . . . . . . . . . . . . . . . . . 114
Ҫур ӗмӗр сӳнмен пушар . . . . . . . . 122
Аслати чечекӗ. *Асанне халапӗ* . . . . . . 137
Килӗшмен хӗрарӑм . . . . . . . . . . . 139
Самант . . . . . . . . . . . . . . . . 146
Тавлашу . . . . . . . . . . . . . . . 149
Тӗлӗнмелле ӑслӑ шӑнкӑрч. *Чӑн пулни* . . . 152
«Хӗресне ывӑл» . . . . . . . . . . . . 155
Хурсем те пулӑшрӗҫ . . . . . . . . . . 158
Ҫӗлене ҫунтарни . . . . . . . . . . . . 161
Хыттипе ҫемҫи . . . . . . . . . . . . 164
Шӑркалчӑн та чунӗ пур . . . . . . . . . 166
Ҫынна ҫунат паман та... . . . . . . . . 169
Тӑрна ӗшнинчи тунсӑх . . . . . . . . . 179
«Кукӑр ураллӑ» ачасем . . . . . . . . . 180
Хӑратаймарӗҫ . . . . . . . . . . . . . 182
Ялти чи хисеплӗ ҫын . . . . . . . . . 186

Мачча каштинчи картсем . . . . . . . . 188
Чавса çывăх та... . . . . . . . . . . . . . 193
Сĕм çĕрле, тĕттĕмре . . . . . . . . . . . 195
Вăрттăн йăва . . . . . . . . . . . . . . . 200
Пӳртре шăхăрсан... . . . . . . . . . . . 201
Калаçакан бритва . . . . . . . . . . . . 205
Кримплен костюм . . . . . . . . . . . . 208
Юлашки юрă . . . . . . . . . . . . . . 212
Катетпа гипотенуза . . . . . . . . . . . 214
Карбонадпа карбонат . . . . . . . . . . 218
Сисĕм . . . . . . . . . . . . . . . . . . 220
Чăрăш çеç хĕрхенчĕ . . . . . . . . . . . —
Хута кĕреймерĕм . . . . . . . . . . . . 222
Пуçхĕрлĕ çӳрекенсем . . . . . . . . . . 223
«Эп телейлĕ санпа юнашар» . . . . . . 226
Инкекпе çăлăнăç . . . . . . . . . . . . 238
Тӳре пуканĕ е уникум . . . . . . . . . 240
Çамрăк чухнехи сăнӳкерчĕк . . . . . . 243
Кăмăл пăсăлать çăмăл . . . . . . . . . 245
Алтăр çăлтăрпа юман . . . . . . . . . . 247
Аптраса ӳкмен . . . . . . . . . . . . . 248
Юратăва пула инкек . . . . . . . . . . 249
Наполеон пулăшăвĕ . . . . . . . . . . . 250
Куççуль . . . . . . . . . . . . . . . . . 251
Кăмăл . . . . . . . . . . . . . . . . . . 252
Хурăн ташши . . . . . . . . . . . . . . —
Уйрăлу чиккинче . . . . . . . . . . . . 253

Литературно-художественное издание

*Для детей старшего школьного возраста*

**Василий Кервень**
**(Кошкин Василий Гаврилович)**

**АСЛАТИ ЧЕЧЕКĔ**
**ФИАЛКА – ЦВЕТОК ГРОЗЫ**

Повести, рассказы и зарисовки

*На чувашском языке*

Редактор-составитель *О.М. Иванова*
Художник *А.И. Алексеев*
Художественный редактор *А.В. Семенова*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректоры *О.Л. Федорова, Э.В. Шельтямова, З.И. Гаврилова*
Компьютерная верстка *Е.Ю. Ермолаевой*

16+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции согласно
ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 27.11.18. Формат 84×108$^1/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура
Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 13,44. Учетно-изд. л. 8,87.
Тираж 1000 экз. Заказ № К-5174. Изд. № 73.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428903, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия», 428903, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.